Пĕтĕм тĕнҫери пролеттарисем, пĕрлешĕр!

ТРАКТĂР

ҪĂВАШ ПРОЛЕТТАРИ ПИССАТТĔЛĔСЕН АССОТСИАТСИЙĔН ЛИТТЕРАТТУР, КРИТТĔК, ПОЛИТТĔК АЛМАНАХĔ

ПĔРРЕМĔШ
КĔНЕКЕ
ЙАНВАР--ФЕВРАЛЬ

„КАНАШ" ХАҪАТ ИСТАТТĔЛСТВИ
ШУПАШКАР 1931 ҪУЛ

Уп. Чувашлита № 1202. Заказ № 470
Отпечатано в типографии № 1
ЧУВАШГИЗА
Канашская улица, д. № 16
Тираж 4000 экземп.
10 печатных листов
г. Чебоксары
★

ÇŰЛЕРЕХ СЫПĂКРА

Ђăваш пролеттари литтераттурĕн йухăмĕ çĕнĕ тапхăра кĕрсе карĕ. Ђăваш пролеттари писаттĕлĕсен ассотсиатсийĕн пĕлтĕрхи авкустра пулса иртнĕ 4-мĕш сйесĕ ђăннипех те «ђăваш литтераттурĕн ўсĕмĕн çўлерехри сыпăка хăпарса пынин пуçламĕшĕнђи, литтераттур йухăмĕн историри çĕнĕ тапхăрне пуçласа йаракан сйес пулса тăђĕ» (сйес йышăннинђен).

Комуниссен парттийĕ йертсе пынипе ђăваш пролеттари литтераттурĕ хайар клас çапăçĕвĕнђе сарлакăшпе те, тарăнăшĕпе те ўссех пырат. Ђăваш литтераттурĕ сотсиалисăмшăн хастарлă кĕрешекен ĕçхалăхĕ хушшинђен çĕнĕрен çĕнĕ вăйсем илсе, массăллă йухăм пулса пырат; литтераттур орканисатсийĕ çĕнĕ крушоксемпе тулса пырат.

Çиђĕ çул ĕлĕкрех (1924-мĕш çулхи ийуђре) тухма пуçланă «Сунтал» ку таранђђен пĕртен пĕр литтераттур шурналĕ пулса тăрса, ђăваш пролеттари литтераттурĕн йухăмне ўстерсе, вăйлатса пырас ĕçре пит те пысăк вăй пулса тăђĕ. «Сунтал» йалавĕ—пролеттари литтераттурĕшĕн, комуниссен партти йертсе клас литтераттурĕшĕн, сотсиалисăм тăвас ĕçре çивĕђĕ хĕçпăшал пулса тăракан массăллă литтераттуршăн кĕрешнĕ йалав пулса тăђĕ. «Сунтал» çинђе ђăваш пролеттари литтераттурĕ шăранса пиçĕхсе пырат.

Ђăваш литтераттурĕ сотсиалисăм тăвас ĕçри хăвăртлăхсенђен кайа йулса пырат. Ун çинђен 4-мĕш сйес та уççăнах каласа хăварђĕ. Пирĕн кайайулнăлăх, епĕр пайанхи ыйтусене пĕтĕм сарлакĕшпех çавăрса илейменнинђе те çеç мар, епĕр вăл ыйтусене шухăш йенђен те, илемлĕх йенђен те, çивĕђлĕх йенђен те политтĕкпа культтур тĕлĕшпе ўссе пыракан вулакана кирлĕ пек тарăн çутатса параймаиннинђе. Паллах, халђхи вăхăтра вулакана лăпăр-лапăр, çийелтен шăйăрттарса çырнă происветенисемпе, пуçа çўле каçăртса парнас тăвĕ çинђен «вĕрентсе» çырнă халттурлă йапаласемпе çыхăнтарма çук. Пролеттари итеолокиллĕ, ђăн-ђăнах илемлĕ, ĕçхалăх массине кĕрешĕве ђĕнсе хаваслантаракан происветенишĕн кĕрешесси пирĕн пайанхи тĕп лосăнксенђен пĕри пулса тăрат.

Совет çĕршывĕ сотсиалисăм тапхăрне кĕрсе кайнă вăхăтра пысăк улшăнусене, вăл майпа çивĕђленсе кайнă клас кĕрешўне илемлĕ происветенире ђăн-ђăнах тĕрĕс, тарăн, илемлĕ çутатса парасси, ĕçхалăхне сотсиалисăмшăн кĕрешме хаваслантаракан проис-

ветени парасси—çăмăл ĕç мар, вăл пире пит те тăрăшса тăвас ĕç, пĕтĕм ђĕререн хавасланса, рапођђи класăн пысăк пултарул вăйне ĕненсе ĕçлеме хушат.

Епĕр халђхи вăхăтра çак йăвăр сатађа тума çывхарса çитрĕмĕр. Çакна тума пирĕн вăй-хăватсем çитмеллех, епĕр ђăваш литтераттурĕн çак çӳлерехри сыпăкне кĕске вăхăтрах хăпарса çитсе, вăл креппăçа илмеллех. Ђăваш литтераттурĕ йухăмĕн ку таранђђенхи ӳсĕмĕ епĕр çакна тума пултарассине уççăнах кăтартса парат.

Ђăваш пролеттари писсаттĕлĕсен ассотсиатсийĕн 4-мĕш сйесĕ каласа хăварнине пурнăçа кĕртсе, ЂППА правлени çак хулăм шурнала кăларма пуçлат. Малтанлăха вăл алђманах йађĕпе тухат пулин те, вăл малашне икĕ уйăхра пĕрре тухса тăракан хулăм шурнал пулмалла—вăл Раççейри Пролеттари Писсаттĕлĕсен Ассотсиатсийĕн «Октапĕр» шурналĕ йеверлĕ пулмалла. Çак шурнал, ĕнтĕ, пирĕн çӳлерехри сыпăка куçнă ђăваш литтераттурне тата та сарлакан, таранăн, хăвăрттăн ӳссе пыма çул уçса памалла. Вăл шурнал таврa Ђăваш пролеттари литтераттурĕн пĕтĕм ђĕрĕ вăйсем (ђылайранпа çыракансем те, халђтерех литтераттур ĕçне кĕрсе пыракансем те) пĕрлешсе, пĕтĕçсе пымалла. Вăл шурнал литтераттурăра клас тăшманĕн шухăшĕсемпе (кулакла, вакпуршуаллă, натсионалисла шухăшсемпе) пĕр хĕрхенмесĕр кĕрешсе тăрса, литтераттурăра партти йалавне çӳлте çĕклесе пымалла, парттин тĕп çулĕ çинђе çирĕп тăрса, вăл çултан пăрăнакан сылтăм оппортунисăмпа та,—халђхи вăхăтра ђи пысăк хăрушлăх пулса тăракан сулăнђăкпа тата «сулахай» сăмахсемпе те вирлĕн кĕрешсе тăмалла.

Пирĕн хулăм шурнал тухма пуçлани ђăннипех те епĕр çӳлерехри сыпăка çĕкленнине çирĕплетсе, ђăваш пролеттари литтераттурĕн кайа йулнăлăхне хăвăртрах пĕтерсе пыма, ăна сотсиалисăм тапхăрне кĕрсе кайнă Совет сойусĕн сатађĕсемпе тан ӳссе пыма çул уçса патăр.

А. Солăттăв.

ТĂВАЛЛА

РОМАН

В. И. КРАСНОВ (АСЛИ)

1. Иртнĕ мĕлкесем.

ШУРА сухаллă ватă уйăх пуйан Ухăљванăн вăтăр пилĕк урапаллă ыраш капан тăррине к а р м а ш с а хăпарђĕ те, хăйĕн хĕвелтен вăрланă йалтăрка хĕлхемĕсене уçăлма кăларса йађĕ. Çавăнтах аслă йалăн ђиркӳ çамкисемпе кĕмĕл хĕрессем пĕрпĕринпе куç хĕсмелле выљаса илђĕç.

Çемçе, ăшшăн кăтăкласа вĕрекен лăпкă çил те пахђари йаштака хурăн ăшне канма кĕрсе выртнă пек лăпланђĕ. Тĕлĕк кайăкĕ тăмана та мăн çунађĕсене сарса пĕр сасăсăр, шăппăрт тĕлĕрекен ђăваш йалĕ çине лап-лап вĕçсе анђĕ.

Çӳлĕ ђăнкă пысăк ту...

Ун тӳпинђе—Ухăљван, пĕр пĕђђен. Пуçĕнђе çӳлĕ кăшăллă кăвак пустав картус, çийĕнђе карас пĕрмеллĕ кĕрен пурçăн кĕпепе хура тийакăнаљтен çĕленĕ шалпартарах шăлавар: хулхушшинђе йатн Капкасран кӳртернĕ хура туйа. Вăл йаланхи пекех савăнăçлă. Туйип куçа çисе тăракан сакăр кĕтеслĕ аттине çат-çат çатăлтаттарат Тăрсан-тăрсан тăртаннă мăнтăр аллипе сар пурçăн пек çемçе сухалн йакатса илет. Ун умĕнђе „Ђикан“ йатлă йăм-йăм курнакан йытти хĕвел ăшшипе ађашланса выртат.

Ытла та çӳлĕçке ку ту. Никам та хăпарайми вырăнтан унă çурђĕ курăнат. Ђăн-ђăнах тăвĕ çӳлĕ. Ухăљван умне пилĕк-улт çу рăма тăсăлакан хăйĕн „саккунлă“ уй-хирĕ курăнат. Йепле вă симĕс вăрмансемпе ыталанса сарăлса выртнă...

Акă Ухăљван тăван йалĕ те ун умĕнђех. Ав унăн ђул çурђ алăк пек пысăк 12 ђӳређисемпе хĕвел çуттипе алхашса лара Ав сат пахђи ăшĕнђен ун ерех хупахĕ хуйхă-суйхă пуснă ђăваш сене кăђăк туртат... Ав инçе те мар, итем çинђи тарçăсем хĕр ыраш çапаççĕ...

Тăххăрăн çапакан итем йурри Ухăљвана савăнтарат... Итлет вă

Тăппи-таппи, тăппи-таппи, тăп тап! Хур! Çап-хур! Хуракана ху тукмак, хуманнине ђăх тукмак...

Сарлака итем тарлă ĕç йурри йурлат. Кĕлтесем сиксе ӳк çурмалла татăлаççĕ. Ухăљванăн çупа витĕннĕ ђĕри çӳлел çĕкленет.

Вĕсем тăххăрăн. Вăйне шеллемесĕр ĕçленĕшĕн йун шĕвет пĕрер ђеркке те пулин лешне тыттарасахпулат, тесе шухăшлат вă

Сасартăк пуйанăн çăра хура куç харшисем пысăк сăмси çинђе пĕрлешрĕç. Вăл пĕр тарçи тайкаланса анкарти хыçĕнђи кÿлĕ умне пырса выртнине курђĕ иккен.

— Ах, ку мур Ивана, пĕртте ĕçлесшĕн мар çав, ахалех çемйипе ман ĕнсе çинђе, кÿпсе выртма йуратат... Пĕркун та Анђăкун çинђен, ытти тарçăсен пуçне темĕскерле йурăхсăр шухăшсемпе пăтратат тесе, систернĕђђĕха. Ак кăтартамха епĕ ăна мĕнле канмаллине... канма?!. пăлхав?!

Ухăљван çиленсе ту çинђен аллинђи патаккипе йунат, кăшкăрат. Çук, Иван итлемест. Итлеме мар, хуçи йенне те çаврăнса пăхмарĕ.

Çÿлĕ ту çинђен ĕрлешсе васкаса аннă хуçа туйипе Ивана пуç урлă хуђĕ.

— Пĕрре, иккĕ, тепре!.. Вăт сана!.. Ак, ак сана!..

Хуçа урса кайрĕ. Ытти тарçăсем ĕçе пăрахса хăй тавра пухăннине те курмаст.

— Апла вăл вилме пултарат!

— Иван ђирлĕ.

— Халђ те сасартăк антранипе çеç ĕçне пăрахрĕ.

— Ан тивĕр!

— Мĕншĕн хĕнетĕр!?

— Вăл ђирлĕ!—кăшкăрашрĕçĕ патраксем.

Хĕрарăмсем хăраса йĕме тапратрĕç, хăш пĕрисем „Шел, капла хĕнесен ђирленĕскер вилме те пултарат“ тесе шутларĕç.

Çук, Ухăљван вĕсене курмаст. Нимĕнле сас-ђĕв те илтмест вăл.

— Ак, ан!..

Йывăр туйа пуçĕ хуçăлса ÿкрĕ—вăл çаплах ђарăнмаст. Пушшех çĕнелсе урса кайрĕ...

— Ак, ак сана!..

Йунпа пĕвĕннĕ мĕскĕн Иванăн пуç ђашки çарт çартлатса хурăлђĕ. Вĕри çăра йун палкаса тухрĕ.

— Иван Иванђă, мĕн тăватăн ес?!

— Вĕлерђĕ!

Пĕр хĕрарăм çари кăшкăрса уласа йĕрсе йађĕ. Урса кайнă хуçа пуçне çĕклерĕ те ытти тарçисем çине çаврăнса пăхрĕ.

— Сире мĕн?!

— Сире мĕн кирлĕ? Хăвăр ĕçĕре пĕлĕр!—тесе хайаррăн кăçкăрса йађĕ. Пĕр самантрах çÿлĕ, хĕп-хĕрлĕ, упа пек вăйлă Ђукмар Микулĕ ăна ĕнсинђен ђысша çĕр çумнех çыпăçтарса лартрĕ.

Тĕшĕрĕлсе аннă пуйанăн сарлака çурăмĕ çине çиђ-сакăр писен ђукмарĕ пек йывăр ђышкă ђăмăрĕсем пере-пере анђĕçĕ.

Ухăљван хăраса вăранса кайрĕ. Ђĕтрекен пÿрнисемпе çăмлă ăкăрне ђĕпĕтсе пăхрĕ.

— Ай! тĕлĕкре пулђĕ иккен...

Пуйан ик-виç хутђен ÿпке тулли вăрăмăн сывласа йађĕ, кроват мĕнђи пĕђĕкçĕ çаврака сĕтел çинђе выртакан арăмĕн шур ђĕриттипе кăкăр çинђи тарне шăлма тытăнђĕ.

— Мĕншĕнха кун пек тискер тĕлĕксем курма пуçларăм? Çакăн пек тискер хăрушă тĕлĕке миçе хут куртăм ĕнтĕ кăçал хĕлле те, тата халђ.

Хе! Усала ан пултăрђђĕ? Тĕлĕк? Тĕлĕк — мĕне пĕлтеретши вăл? — Пустуй вăл, мĕн ун çинђен шутлатăпха, терĕ вăл хăй ăшĕнђе.

— Çук, мĕне те пулсан, паллах, пĕлтерет пуђ.

Ухăђван хăй пĕђђен тĕлĕк мĕскере те пулсан пĕлтернипе пĕлтерменни çинђен нумай шутларĕ, анђах тупаймарĕ.

Аптранипе çумĕнђе выртакан арăмне кăлт ђышрĕ.

— Марук, мĕн вара ес вилнĕ пек çывăратăн. Хăна вĕлерсе тухса кайсан та сисмĕн çав есĕ.

— Тăрха, тăр...

Арăмĕ тутлă тĕлĕк курат. Лутра кăна çăра пĕђĕккĕ илемлĕ йешĕл вăрман ăна тĕлленет. Вăрман ăшĕнђи çавра уçланкăра, ђĕркуççи таран çаранра, кăвак, хĕрлĕ, сара ђеђексем лăпкă ăшă çилпе ђўкенсе лараççĕ. Хура мăйăхлă ахвитсер Марука ђеђексем тата-тата парат...

— Тăрха, тăр! Çаврăн ман йенне.

Марук ăйхă пĕркенђĕкĕ витĕр ак упăшки сассине илтет, анђах йывăррăн туйăнакан пуçне çĕклемест.

Хăрах куç хупанкине кĕлт хăпартрĕ, *каллех* хупрĕ, — ытарайми *тĕлĕкне* курса пĕтересшĕн.

— Миçе каламалла *сана*, — упăшки тепĕр хут айăк пĕрђинђен хытăрах ђышкипе тĕртрĕ.

— Ђимха, ђим, кăмăл çукха, — терĕ мамăк тўшек ăшне путнă Марук, пĕђĕк ађа пек ађашшăн карăнкаласа.

— Мĕн ђимлетен, рас тăр тесе каланă сана... Хăна çарамасах хăварсан та туймăн çав ес.

Капла каласан арăмĕ хăраса ўкрĕ.

— Мĕн, мĕн тетĕн? — Пĕтрĕмĕр. Йапаласене илсе кайнă. Ай-ай!..

Ухăђван ахăлтатса кулса йађĕ.

— Çук, ђунăм, ан хăра!... Тĕлĕк куртăм е-е, тĕлĕк куртăм, тĕлĕк

— Мĕнле тĕлĕк?

— Леш. Хăйамат, çав Малттин ашшех... Темĕне пĕлтерĕ ĕнтĕ ку? Çавăнпа тăратрăм сана.

— Тарçă-и? Иван-и?

— Ара, çавă çав. Ђисти çавăн ђухнехи пекех вĕт. Пуçĕ те çаплах çурăлђĕ, хама та тўнкеме тытăнђĕç. Мĕне пĕлтеретши? Ыттине вара тăнсăр пулнипе астумастăп. Тĕлĕнмелле, хăраса вăрантăм

— Малттин, çав Иван ађи, йала таврăннă вĕтха, тата вăл темĕскер айкаштарса ан пăрахтăр. Ăна путсĕре, пĕртте шанма çук... Ех, çавăн ђухнех вĕсене йăхĕ-тĕпĕпех пĕтернĕ пулса-ан, хале пĕр шиксĕр, райри пек пурăнмалли çынсемђĕ вĕт.

— Е-е-х-е-хех!..

— Ашшĕ унăн çавăнтан кайран пуђнитсăра вилђиха çав? — тесе ыйтрĕ Марук.

Вăл та ĕлĕкхишĕн таврасран çўçенђĕ.

— Пуђнитсăра вилђĕ. Арăмне аллинђи ађипе ыйткалама хăвалаcа йатăм. Лешсем, мурсем, тепле çапкаланса пурăннă вара. Амăшĕ выçлăх çул Атраç йенђе вилнĕ, терĕç. Ађи, çак Малттинĕ, пирĕн инкекшĕн ђĕрĕ йулнă.

Вăт, çавă çав. Ку амăшĕ пек мар. Çитменнине самани те урăх, пирĕн мар. Хаљ çавăн пек ĕнтĕ йĕм пыйтисемпе хăмла тăррисем патша пулса пурăнаççĕ. Шупашкарта Рапфак пĕтерсе хаљ Мускава вĕренме кайнă. Вăт хăйамат.

— Ну ку тĕлĕк ырра пултăрђђĕ ĕнтĕ.

— Ей турă, халиђђен сыхланине, малашне те усалтан хăтарсамђђĕ.

Ухăљван малти кĕтессе пăхса йарханах кăкăрĕ çинђе мăнтăр аллисемпе шăна хăваланă пек пăтратса илђĕ...

Кăвак шуçăмăн шăратнă кĕмĕл пек çутти пахђа йенђи ђўређе витĕр çывракан пўлĕме йухса кĕђĕ. Пуйан Ухăљванпа арăмĕ лăпланса канлĕн çывăрса карĕçĕ.

2. Икĕ пит.

КЕНĂ вăранђĕ. Вăрăмăн йăнăшкаласа анасларĕ. Çĕлен пек йавăнса найаннăн карăнса илђĕ те, Кулинене хăй пўлĕмне кăшкăрса ђĕнђĕ.

— Кулине-е!..

— Çиђђас! тенĕ сасă илтĕнђĕ тепĕр пўлĕмрен.

— Миçе каламалла сана. Рас калана—ту! Епĕ тăнă çĕре йаланах ирхи ăшă сĕте куркапа кĕртсе ларт. Хаљхи вăхăтра йăлт пусмăрласа çитертĕнха есĕ. Хăвăртрах тетĕп еп сана, тăмкайăк, ыр çынсене мĕнле пăхмаллине пĕлместĕн. Навус!

Алăк урлă каçнă Кулине пĕр сăмах ђĕнмесĕр вăрт-варт çаврăнса калла кухнĕне ђупса тухсан, Кенă вырăн çинђен тăђе.

— Йемелккене çыру çырмаллађђĕ, шуйттан, унтан интекралсене пăхса тухмаллађђĕ—веç пăсрĕ. Сысна! Пĕтĕм настройенине пĕтерсе йарахрĕ. Хытăрах тыткаламаллаха вĕсене. Йăлтах ађашласа пĕтернĕ усрелле. „Йăвашрах пул, самани çапла“,—кăтартăп вĕсене саманине. Еп хам—самана! Çынна универçитетран кăларасшăн. Суприт тумалла, кунта настроенийе пăсса выртаççĕ. Ех!..

Кенă ђăтаймасăр ђăркăшса пĕр кĕтесрен тепĕр кĕтессе каллемалле утат.

— Вăт, сысна!

Сĕт илсе килнĕ Кулине ђăтаймарĕ.

— Ан вăрç ĕнтĕ, ан вăрç... Кенати, епĕ йури мар вĕт, ĕлкĕреймерĕм,—терĕ тутăр пек шурса кайнă Кулине ун çине пăхмасăр.

— Ĕнине сумалла, кĕтў хăваламалла, апат пĕçермелле, ђĕппиене çитермелле,—ăçтан, ĕнтĕ, пĕђђен пурне те ĕлкĕретĕн.

Кулине аллинђи ăшă сĕт тултарнă пăхăр куркине сĕтел çине артрĕ.

— Тăрантсан ĕлкĕрĕттĕмха еп. Питĕ аван ĕлкĕрĕттĕм...

Унтан Кенă, темĕншĕн каçарнă пек пулса, йăвашшăнтарах калам пек турĕ:

— Йурĕ еппин, ҙорт с тобой, ступай шывпа супăҧ хатĕрлесе хур.

Кулине тухса кайма тытăнҙĕ.

— Асту, алшăлли тытиҙҙен малтан аллуна çу, шăл ваҙҙи лĕппине хатĕрле. Пыр, еп тухăп, терĕ Кенă.

Кулине çав тери хурланҙĕ. Çапах та хирĕç сăмах уçаймарĕ. Супăҧпе пурă çăнăхне илсе те ĕлкĕреймерĕ, каллех ăна хайар сасă ҙĕнҙĕ.

— Харам пыр, аҙа йĕнине илтместним?

Ухăҙванăн хулăм, çăвар тулли сасси малти пӳртре йанăрат.

Кулине ĕçне пăрахса унта ҙупрĕ.

— Сăмавар ĕлкĕрнĕи?! Кенати тăнăиха?—ĕрлешрĕ çав сасах.

Кулине çĕмрен пек çӳресен те, пурне те туса ĕлкĕреймест. Йара куна ура çинҙе, вĕçĕмсĕр ĕç... çĕрле те унăн куçĕ çурçĕрҙҙен хупăнмаст: йе аҙи йĕрет, хăнисене те пăхмалла, ăна-кăна тумалла. Мĕн тĕрлĕ йывăр пулсан та мĕскĕн Кулине ҙăтат.

Ăçта кайас тетĕнха тăлăхăн, латнă тата çитерет, ланҙашкине те пулсан, кĕпе пекки тăхăнтарат, тесе шухăшлат вăл, пурнăç йывăрĕ хытăран хытă çапса хĕстернĕ хушăра.

Хуçасем вĕретсе хатĕрленĕ ҙейе ĕçме ларҙĕç; Кулине çаплах ĕçлет. Вăл, карташ шăлнă хыççăн шыв ăсса килсе лартрĕ те, пӳрте кĕҙĕ.

Пӳртре ăна Марук харах çыпăçрĕ.

— Ăçта ес çӳретĕн? Ав, Аркаш какка тунă. Мĕн ути-утми йăраланатăн. Лӳппер, тăмана!.. Тасат та, кунта пар,—сахăр хыптарăп...

Кулине йăпăр-йапăр çырткаласа сĕтел çинҙен пуçтарҙĕ те, мунҙа хутма васкаса тухса ҙупрĕ...

* * *

Хуçа арăмĕ сăмси айĕнҙе йурлакаласа сĕтел çитти тĕрлеме пикенҙĕ.

Кенă та пахҙари хăва айне сулхăна тухса сарăлса выртрĕ. Ун айĕнҙе мамăк минтер. Çемçе. Сулхăн. Çĕмĕрт йăвăççи çинҙе шăпҙăк хитре йурă шăрантарат. Ун хыççăн, хурăн çулçисем те, ăшă хĕвел тивлетне хапăл туса, хавасланса алă çупса лараççĕ. Сывлăш калама та çук уçă. Кенă савăнат. Тем хак парăн çав ӳпке тулли пĕрре сывласа илме.

Пуйан Ухăҙван çемйи пурăнма пĕлет. Ҙухăн хресҙенсен тарне-йунне сĕлĕх пек сăрхăнтарни ахалех çухалман. Нумай çын тарласа хăшкăлнă ку пахҙара. Анҙах вĕсем хăйсем капла нихçан та канайман. Калăн, хĕвел те вĕсемшĕн çеç пăхат. Çеçкесем те вĕсен хура йунлă ҙĕрисене уçма çеç çурăлнă. Кам çакăн пек илемлĕ пахҙара хĕвел ăшшипе йăпанса, хăвасем ҙелтĕртетсе калаçнине итлесе тутлă ăйха кайасшăн мар?—Пурте çапла. Пурте çавăншăн тапаланса малалла тем-тем ĕмĕтленеççĕ. Анҙах çитмен пурнăç пур вырăнтан та татăлат. Çывăхри йешĕл ҙийе йăвçисем

ђăштăр-ђаштăр турĕçĕ. Унтан лăпсăркка сар ђеђеклĕ аккас, ђар шав пек йар усăлса, çинçе пилĕклĕ пуп хĕрне çурса кăларђĕ.

— Ба-а!.. Нинă Никколайĕвнă! Кил, „Йеркĕн“ пылне ĕмерха. Хамăр çын пекех çырат.

Нинă Никколайĕвнă пĕр вырăнта вăр-вар çаврăнђĕ те стутент патне ђупса пыђĕ.

— Камăнне вулатăн?

— Никколай Васçиљђăнне.

— Кам вăл, астусах каймастăп?—терĕ Нинă кулкаласа.

— Ах, мĕн ес калаçатăн?

— А-а, Шупуççынни! Пĕлетĕп!.. Ун сăнне „Сунтал“ çине ӳкернĕђђĕ. Каçăр, селем кăна çын...

— Нинăђкă, пăхха ак, мĕнле вăл çырат:

„Сарă кăтра çӳçĕме
Епĕ турам-и?
Вăрăм йаштак пĕвĕме
Тӳрĕ тытам-и?
Шурă çамкам сарлаки
Çынна курăнтăр
Ватă çын та çамрăкки
Мана пуç тайтăр.

Пуç тăррине картуса
Ђалăш лартам-и?
Хура пустав сăхмана
Йӳле йарам-и?
Тĕрлĕ умлă шур кĕпи
Капăр курăнтăр,
Сарă хĕрсен кăмăлĕ
Пире пăхăнтăр“...

Кенă аллинђи кĕнекине ђĕркуççи çине çат! çапса хăй умĕнђе авкаланса, кĕçенсе тăракан Нинă çине кăшт кулса пăхрĕ.

— Ну мĕнле?

— Йулашки çинђен каласшăн ĕнтĕ ес. Ай-йай, ес те çав ђейе. Анђах хаљ урăхла калас пулат ĕнтĕ.

— Мĕнле?

— Пĕл,—терĕ Нинă, пуçĕнђи улăм шлепкине кăшт тӳрлетем пек тукаласа.

— Нуу, Нинă Никколайĕвнă, ахаљ те пуç интекралсемпе тулнă. Тата ес те сатађђăсем парса ђăрмантаратăн.

— Ех, ес те çав. Ак капла калас пулат, итле еппин, хамах каласа парам:

„Тĕрлĕ умлă шур кĕпи“ калас вырăнне:
Хура калстăк шур кĕпи
Капăр курăнтăр,
Сарă хĕрсен кăмăлне

Сар кађђăсем парăнђђăр... тесен мĕнле?

— Воон што-о?!...

— Ехĕĕ!...

Нинă ђĕпĕлтетсе илнĕ хыççăн Кенă темшĕн салхуланнă пек пулђĕ.

— Вот, Нинă Никколайĕвнă, мĕнле аван пулнă ĕлĕкхи пурнăç.

— Тааа!...

Нинă Кенă çумне ларђĕ. Йĕс курăк пуçахне татса илсе, Кенăн çемçе ĕнсинђен кăтăкларĕ.

— Мĕн ес кăлăхах рăскална çухататăн?

— Да! Рăскалăм çук.

— Ей, ун çинђен шутласан пурăнасси пĕтрĕ вара. Пайан кун пурăнас пулат. Илтрĕне?

— Ах, Нинă Никколайĕвнă, йепле есĕ ăслă. Санăн çу пек çемçе сăмаххусем манăн тискер кайăк ђĕри пек сикме пуçланă ăшђикĕме лăштах кантарђĕç.

Нинă Никколайĕвнă, мĕнле ман сана тав тăвас. Ак, пăхатăн санăн хĕвел пек çунса тăракан ӳт-пĕвӳ çине. Халех сана тăван йăмăка йуратса ђуп тунă пек ђуптăвассăм килсе кайрĕ.

Нинă кĕçенсе кулса илђĕ: çавăнтах шурă кађа пӳрнине ђуптуса, Кенăн тути çине пырса пусрĕ.

Кенă çумĕнђе ларакан Нинăна ыталаса илсе хăй çумне хĕстерсе лартрĕ...

— Кенати Иванђ, лайăхрах вырăнсене тупха. Вулар.

Кенă „Йеркĕнĕн“ майра патша ђухнехи саманран йатлă пӳлĕмне шыраса тупрĕ те „ак кунта аван вырăнсем пур, итле“ терĕ.

„Çăл куçĕнђи тăрă шыв
Ирхи çилпе йĕрленет,
Çăлтан йухса тухан шыв
Хумханат те тӳрленет.
Çамрăк хĕрĕн таса йун
Тӳлек йухат кĕлеткере:
Тĕл пулат çеç тепĕр ђун—
Иртет канлĕх ђĕрере...
Пурнăçпала паллашсан—
Нимех те мар хумхансан“...

— Ах, сăмахсем. Çăл куçĕнђи тăрă шыв, ăçта есĕ халђ? Хум-ха-нат те тӳрле-нет! Вот çапла пулинђђĕ вăл. Халђхи пурнă маншăн пулсан веçех, веçех ишĕлет.

— Кенати Иванђ, есĕ йулашки виç куплетне астуха? йепл çаптарат. Пăрахха ес политтĕкпа аташма

— Да! Это наш великий поэт! он наш!..

Нинă ура çине сиксе тăрса, пĕр вырăнта сиккелесе ик аллин хире-хирĕç çат! çат! çапса илђĕ.

— Кенати Иванђ, айта кимĕпе йарăнма кайар. Пăхха ес çанталăк йепле илемлĕ. Кӳллĕр йепле фервейĕр пек кулса çутăл выртат.

— Айта! терĕ Кенă.

— Айта!

Иккĕш те пахђари хупахсем урлă сиккелесе кўлĕ хĕррине ђупса анђĕç.

Хĕвел çути кўлĕ çинђе илемлĕ тĕрĕсем тĕрлет.

Кўлĕн пĕр хĕрринђе сарă ылттăн тĕслĕ хăйăр купи хĕвел çине канма тухса выртнă сомă пулă пек сарăлса выртат.

Кенăпа Нинă акăш пуçлă кимĕпе йерипе кўл варринђе ишеççĕ.

Хыçалти шурă ђеђен кăпăксем йĕлђĕре пек хум çинђе сарăлса пĕрĕнсе çухалаççĕ. Нинă кĕреçинђен йыт пулли йевĕрлĕ çул тăсăлса йулат...

Вĕсемшĕн аван. Кунĕ те ырă. Пĕлĕт те уйар... Хĕвеланăç йенђе çеç татăк-татăк мăнтăр тăхлан пĕлĕтсем çакăнкаласа тăраççĕ.

— Килте пĕртте тăрас килмест. Ăçтаха çав ват карђăксемпе пурăнас тетĕн? Сассине илтес килмест. Веçех йăлăхса çитрĕм.

Виçĕ çĕрте пурăнайманшăн та вăрçаççĕ. Ку хут, йулашки, комунис, унпа пурăнни хамăршăн аванђђе, теççĕ. Пурăнăн? Рас килĕштерейместĕнтĕк, йепле пурăнас тетĕнха. Пĕри вăрмана, тепри армана кайсан, мĕнле пурнăç пулат.

Студент ăна итлеменпе пĕрех. Нинăн кĕске кĕпи айĕнђен йăлтăртатса тăракан пурçăн ђăлхи çине пăхса темĕскерле шухăша кайрĕ...

— Есĕ камаха вăрмана кайнă терĕн?—ыйтрĕ Кенă. Нинă ўпкеленнĕ пек пулђĕ. Йусман пек çўхе тутине тăп тытрĕ. Йасарăн кулса тăракан хура куçĕсем пĕр вырăна пăхса хытрĕçĕ. „Хăй йăпалтаттăрха, арçынсем вĕсем ытла йуратсан сăмсисене тавăрма пăхаççĕ. Ђĕнместĕп“ тесе Нинă хăй ăшĕнђе шутларĕ.

— Нинă Никколайĕвнă, тархасшăн ан йăлăнтарха. Кам сана капла ђăхăмçăланма вĕрентнĕ. Мĕн пулђĕ тата, а?

Кенă ђейе, çанталăк пăсăлнине кура тилĕ пек йăпăлтатма пуçларĕ.

— Сођувствăт тумастăн. Çавăнпа та ес ман сăмахсене лайăх итлеместĕн те.

Кĕске вăхăта пĕр-пĕрне нимĕн сăмах та ђĕнмерĕç.

„Ку мана кађђа килесшĕн пулас, вăт ухмах“ тесе шухăшларĕ хăй ăшĕнђе Кенă.

— Çук, Нинă, ан çилен. Есĕ карђăксем çинђен калаçни темĕскерле скуђнă пек, айта луђђă хурлăхан татма пахђана кайар. Йурати?...

Нинă хура куç айĕнђен Кенă çине ăшшăн пăхрĕ. Анђах ним те парламарĕ, кăшт кулан пек туса пуçне айаккалла пăрђĕ.

— Нинăђкă, мĕн ес хăмсаратăн.

Ишме ђарăнса тăвăр кĕске кĕпе виттĕр палăрса тăракан хирĕç парнă Нинăн ик ђăркуççинђен тытса силлерĕ.

Нинă уйартрĕ:

— Ей, йурĕ еппин, Кенă. Ав, çав ватă йăмра айнелле пăхтарамха...

Кимĕ пăрăнђĕ. Йăмра çумĕнђи пысăк симĕс шапа кўлĕри тăрă шыва ђăмпăлт! туса сикрĕ.

— Кенă, санăн тата миçе çул вĕренмеллеха çав?

Нинă çав хушăрах кимĕ çурса пыракан лĕп шыва аллипе ăсса илсе айăккалла сирпĕтрĕ.

— Йулашки çул, вара?

— Çук, ахаљ.

Нинă çĕмĕрт пек хура вăрăм çиттунине тӳрлетен пек туса çурăм хыçне ыватрĕ. Хура куçне кăшт хĕссе хĕвел çине пăхса илђĕ. Кӳлĕри шыва ђавси тăрăх йухтарса тӳртем тăрăхларах сăмси айĕнђен кулам пек турĕ.

— Сан аван, манăн ĕçсем нађартарахха. Опђĕствăлă ĕçре ĕçлемен, теççĕ. Тасатаççĕиха? Атте пупра ĕçлени питĕ кансĕрлет.

— Йалта ĕçлен пекки тукалас пулат. Кайран йалсоветĕнђен тĕслĕхшĕн хут илме тăрăшас пулат,—терĕ унта-кунта пăхкаласа Кенă. Кĕсменсене хытăрах пусрĕ те кимĕ малалла хытăрах шума пуçларĕ.

— Ниђђово, Нинă Никколайĕвнă, ăна епĕ хам тăвăп. Йалсовет пуçлăхĕ Паљук хамăр çын. Ађи пултараканскер, унпала ĕç тума пулат. Клавнăй, епĕр ăçта вĕреннине комсомол йађейккине пĕлтермелле мар.

— Кенăђкă, мĕнле ес пăхатăн çав Малттин çине?

— Пĕртте курас килмест ман ăна. Пирĕн çынмар вăл. Пирĕн ăна такăнтармалла. Ĕçе пăссан та, çав пăсат ĕнтĕ. Ну, ниђђово, пухусене çӳрекелесе опђĕствăллă ĕçре ĕçленине кăтартас пулат...

— Да! Да! Вот, конеђнă, ес тĕрĕс калатăн.

Нинă пысăк тĕмескеленнĕ кăкрисене кисрентерсе, ахăлтатса кулђĕ.

Тăрă шыва хуллен йăр-йăр çурса пыракан кимĕ симĕс-хĕрлĕ пуçахлă хăмăшсене çĕмĕрсе лађакана хĕсĕнђĕ.

Кенăпала Нинă клентăрла çыхăнса пахђари ђăтлăха путрĕç...

* * *

Ухăљван хырăмне лăках тултарнă хыççăн кĕлет пусми çинђе тарăн шухăша кайса ђылайђђен Кенă илсе килнĕ ђĕлĕмне паклаттарса ларђĕ. Пуç ун ĕçлет. Шухăшсем меслетсем шыраççĕ.

— Тырă хакĕ ĕнтĕ ӳссе çитрĕ. Кĕркуннехи виçĕ пăтпа халĕ пĕр пăтта илейместĕн. Ђухăн тыррине пĕтĕмпех леççе тăкнă. Халĕ, ĕнтĕ, манăн пасар килђĕ, тесе шухăшларĕ вăл. Ђĕри савăннипе хытăран хытă шаккат.

— Пĕр 500 пăт леçтеремха стантсăна, пĕр 1000 пăтне Кăрмăша, капансене ыранах çаптарма тытăнасха. Атту-тăк тем пулса тем кайĕ Йалсенђе тырă çĕнĕрен пуçтарма тытăннă сас-хура илтĕнет. Иртнинђе пытарма ĕлкĕрнĕђђĕ, кăçал çывăрсан пытарса ĕлкĕреймĕп Кĕçĕрех Хĕритуна 5 лавпа ăсаттарас. Хамăрăн виçĕ лаша, иккĕшне хунђăкам парĕ...

Ухăљван çак шухăшсемпе ађашланса пыллă сăра тутанма нӳхреп лаççине пĕшкĕнсе кĕрсе кайрĕ.

Тата пĕр çур сехетрен Ухăљван Михетер хунђăкĕш пати хыçалти алăкран йăпшăнса кĕнине никам та курса ĕлкĕреймерĕ...

* * *

Виç ҫӳреҫеллӗ йӑвӑç мунҫа тӑрпинҫен тӗтӗм йӑсӑрланса тухат. Пӗр-ик аршӑн хӑпарсан çӗрелле персе анат, унтан каллех çӗкленет...

Хулӑн сарӑ ҫӑрӑш пӗренинҫен тунӑ мунҫа мӗлки сарӑлса выртнӑ çутӑ кӳлӗ çинҫе ҫӳхенет.

Кулине кӑмакана çатрака вутӑ пӑрахат. Унӑн шурӑ пиҫӗ хӗвел çинҫе пиçнӗ улма пек хӗрелсе кайнӑ. Хушӑран пахҫара кӗçенсе кулнӑ сасӑсем Кулинен хӑлхине пырса йӗп пек тӑрӑнаççӗ.

— Йеплеха çынсем çавӑн пек кулма йуратаççӗ. Вӗсен мӗн?— ахӑрмалли çеç. Ах! çав мурсене, пӗр вӑй çитсен пурне те мӑйӗсенҫен ҫӑмӑрта-ҫӑмӑрта пӑрахӑттӑм. Çук çав.

Кулине темӗнтен те хыт кӳреннипе пулас, ҫукмар йевӗрлӗ тункатине мӗн пур вӑйӗпе кӑмака ӑшне ывӑтрӗ.

— Ех, пурӑнаççӗ вӗт çавсем. Пирӗн атте-анне те телейсӗр пулнӑ çав, турӑ пӳрменнине илме çук çав...

Ай! мӗн пулҫӗ тата?

Кулинен хырӑмӗнҫе темӗскер йӑвашшӑн йӑшӑлтатса кайрӗ. Аҫа? Аҫана ҫун кӗҫӗ?!

Кулине савӑнса кулам пекки турӗ. Анҫах ун кулли тухмарӗ, уласа йӗрсе йаҫӗ. Пӗр кӗске вӑхӑтра ҫип ҫипер ӗçлекен хӗрӗн пуçӗ çурӑлса кайас пек ырата пуçларӗ. Маҫҫана пӑхат—нимӗн те курмаст.

Ун пуçӗнҫе пӗр шухӑш выҫҫат.

— Пӗтрӗм!..

Хӑй урайне пӑталаса хунӑ пек хытрӗ.

— Йеплеха пулҫӗ, йепле, йепле?! Ӑçта епӗ улталантӑм?

Акӑ вӑл татах астӑва пуçларӗ.

Тӑватӑ уйӑх кайалла пулса иртнӗ ӗçсем хуллен хулленех вӗçсе килсе маҫҫан тӳпине ларса — сӑрлана пуçларӗç...

Пӳртре урай çуни, Кенӑ крават çинҫе кӗнеке вуласа выртни... Ухӑҫванпа арӑмӗ хӑнара... Кӑрават çине çӗклесе çапни... „Йуратӑп“... хулана пӗрле тарӑпӑр...

Каллех Кулине хурланса питне куççулӗпе çурӗ.

— Халӗ йыттине те манран хытӑ йуратат... У-у! кураймастӑп епӗ ӑна. Пурте вӗсем, пурте çапла. Пур арçынсем те улталама çеç тӑрӑшаççӗ... Кӗçӗрех ашшӗсем умӗнҫе питне сурам. Хут те мӗн утӑр, хут те ӑçта хутӑр... Хӑйӗн!..

Хӗрӗн ӑшӗ кӑшт лӑпланҫӗ. Пуçӗ çаплах çурӑлас пек ыратат... Мунҫине пултарнӑ хыççӑн ӳсӗр çын пек тайкаланса Кулине киле аврӑнҫӗ.

Аҫине ҫуптуса ларакан Марука „мунҫа пулҫӗ“ терӗ те, шушшилене, хӑй вырӑнӗ çине халтан кайнӑ çанçурӑмне кантарма лӑхса выртрӗ...

3. Саҫукпа Малттин.

Саҫук хăй арăмĕ ҫĕлесе панă лаптакрах тăла пушмакне тăхăнма кăна тытăннăҫҫĕ, Малттин килсе те кĕҫĕ.

— Ну, мĕн ҫĕмĕрттерсе пурăнатăр? Аваниха, Саҫук?

— А-а! Малттин, аванха, аван пурăнатпăр. Кил, ирт. Ак кунта лар. Хăй тунă ҫаврака тенкел ҫине, хулăн пӳрнисемпе тăсса кăтартрĕ.

— Ларасси мĕнĕ ларăп та-ха, епĕ сан патна ĕҫпе килнĕҫҫĕ, терĕ Малттин. Есĕ районран упполномоҫҫĕннăй пулнă, терĕҫĕ... Ку питĕ аван.

— Аванни ҫавăн пек ĕнтĕ. Пустуй мана унта кĕртнĕ.

Малттин куҫне ҫарса пăрахрĕ.

— Мĕн тата?

— Тӳррипех каласан ĕҫлеме йывăр, пулăшакансем сахал, ывăнтăм—куран,—персе хуҫĕ Саҫук.

— Ниҫҫево-о! Канас пулат. Хут те мĕнле ĕҫĕн те хăйне йевĕрлĕ йывăр йенĕ пур.

— Хресҫенсен тырă сахал, Рикран хĕсеҫҫĕ. Ку, ман шутпа, пĕртте тĕрĕс ĕҫ мар пек. Вĕсене ҫӳлте приккас парса ларма питĕ аван, кунта есĕ пур, ĕҫле тарна йухтарса.

— Ăҫта хунăха вара хресҫенсем тыррисене? Ну, ҫухăнсем ҫинҫен калаҫмăпăр,—вĕсем кĕркуннех ытлашши пек тыррисене патшалăх аллине леҫе-леҫе пĕтернĕ. Вăтамсем те нумайĕшĕ ҫухăнсем пекех. Ухăлҫван, Митук, Михетер таврашсем тыррисене ăҫта хунă тенха есĕ? Кулаксем вĕт...

— Ăҫта, паллах ăҫта, ăсатнă, хăшĕ пытарнă. Вĕсем ăҫта хумаллине аван пĕлеҫҫĕ.

— Ăсатнă ҫĕртен калла илсе килтермелле, йал ҫине хунă плана тултармаллах, терĕ Малттин.

Саҫук хĕрсех кайрĕ.

— Ҫĕлхепе калама пит те аван,—пырса тупха. Пуҫна ҫурса пăрахĕҫ. Йахĕ тымарĕпе пĕтерĕҫ. Йулашки ҫуртна та хăвармĕҫ.

Малттин хуллен ҫăтăмлă сассине ҫĕклемесĕр пуҫларĕ.

— А, сут мĕншĕн?..

— Сут?!—сутран хытă хăраҫҫĕ тетнем есĕ? Пĕрик уйăх вуртаҫҫĕ те тухаҫҫĕ. Сут ĕҫне вĕсен йевĕрлисемех пӳрократсем кĕрсе, ларнă. Ана епĕ аван пĕлетĕп ĕнтĕ.

Малттин, Саҫук „пеҫҫимисăм“ тийекен ҫирпе ҫирлерĕ пулĕ' тесе шухăшларĕ.

Вĕсем хушшинҫе тавлашу хускаласситпех хускалҫĕ.

— Ай-ай, Саҫук, есĕ мана пĕтĕмпех тĕлĕнтеретĕн.

— Нимĕн тĕлĕнмелли те ҫук. Кунта кĕнеке ҫинҫи мар, тавариш, практиккă, теҫҫĕ. Ҫакна есĕ кăшт та ан ман.

— Саҫук, мĕн калаҫатăн, епĕ йалта ĕҫлесе пурăнман тетнем вара? Нумайиха епĕ вĕренме кайни?

— Виҫҫĕмĕш ҫулне куҫрĕ ĕнтĕ, сахал вăхăт мар.

— Конеђнă сахал мар, тĕрĕс ку сан сăмахху. Анђах унта та вĕсен йевĕрлисем, пўрократсем лараççĕ, тени тĕрĕсех мар. Епĕ каламастăп пўрократсем çук тесе. Вĕсем пур, сахал та мар, потхалимсем те нумай, анђах партти вĕсемпе кĕрешет. Ун çинђен Ленин та сахал мар çырнă. Пирĕн ун пек ирсĕрлĕхсемпе кĕрешес пулат. Ну санра та пархатар пĕтнĕ иккен. Есĕ те çав кулак йуринех йурлама пуçланă.

— Мĕн калаçатăн?! Калаха есĕ вăт мана, ђăвашла хаçатсене вулатна есĕ?

— Кашни номĕрне вуласа пыман, çав 30 тенкĕпе мĕн илес тетĕ

— „Канаш" хаçат çинђе Клавсутăн сылтăм сулăнђăклă ĕçĕсем çинђен вуламан курнатха есĕ. Вула...

— Ехе! снађђăт, ун çинђен „Канаш" çутатса парат? Совет ап паратĕнђи ĕçсем пролеттари клас йĕрĕнђен пăрăнни çинђен çутатса пани вăл мĕне пĕлтерет? Ирсĕр, кулак ĕçпе кĕрешнине марши? Çавă пулĕ тетĕп епĕ.

— Ну латнă, çавă пултăр еппин.

— Еппин мар, çавах вăл.

— Кăнатăп*). Латнă...

Сађук вăрăм лăпсăркка çўçне пысăк çуркаланса кайнă пўрнисемпе хыçрĕ те, пуçне ђўхентерђĕ. Вăрăмăн сывларĕ.

— А, вçотки йалта нумайха çитменлĕхсем, çав тери нумай. Йалта халĕ револђутси пулманпа пĕрех.

Пăхха. Ухăљван таврашсем мĕнле пурăнаççĕ. Ёлĕкхинђен пĕртте кайа кар. Тарçăпа... Кулине мĕскĕн мĕнле нушаланат.

Кенатийĕ улпутла, ђăваш ĕççынни çине утланса ларма универçиттетра вĕренет. Çавăн пек кулак ађисем аслă шкулсенђе сахали вĕсем вĕренеççĕ...

Малттин тарăн шухăша кайрĕ. Сађукăн ђĕререн çулăмланса тухакан сăмахсем ăна хыпса илђĕç.

Мукава çитсе ўкрĕ. Стутентсен çемљађђĕстви... Çемљађђĕствăра самокриттĕкласа тухса каланисем, хăшпĕр ĕçри çынсем клас йĕрĕнђен пăрăнкаланисем çинђен астуса илђĕ.

Тата хăй çинђен те шутларĕ: „Епĕ патрак ывăлĕ. Малтан пионер, кайран комсомол хуранĕнђе вĕренсе пиçнĕ. Кайарахпа хам хытă тăрăшнипе ВУС, а лекрĕм.

Мĕн ђухлĕ патрак, ђухăн хресђен ађисем вĕренейменнисем?— Çав тери нумай, анђах комуниссен партийĕ патраксене вĕрентес ĕç çине хытă пăхат...

Малттин хăй ăсĕпе тата та урăх сăлтавсем шырама пуçларĕ.

Ку йапала йалти вăгам шкулсенђе ђухăн, патрак ађисене ваљљи пысăк условисем туманнинђен пек туйăнђĕ ăна.

Ку çитменлĕх выранта ĕçлекенсем класла шăнăра çирĕп тытса пыманнинђен килет, тесе шутларĕ.

*) Килĕшетĕп.

— Мĕн ђухлĕ çитменлĕх, мĕн ђухлĕ, мĕнле тĕрлĕ тăшман, çĕлен-калтасем пек ђашкăрса тăраççĕ. Ах! пурте хам пек пулсассăн?..

— Ну, мĕнле?—терĕ Саңук. Саңук Малттинĕн пит-çăмарти çинђи хĕрлĕ йунĕ сирĕлнине курђĕ.

— Ниђђово! Татах вăл 1930-мĕш çулта ђăваш Опкомĕ Рапфака кĕме патраксен курсĕ уçмалла, тесе йышăннине хаçат çинђе сырса пĕлтернине асне илђĕ, хĕпĕртенĕ пек пулђĕ.

— Та! Саңук, йуратнă тантăшăм, йывăр. Манăн ђере вăркамаст тетним?—вăркат, вут пек çунат. Анђах мĕншĕн? Пурне те, пу…ынна та хам пекех çак çĕнĕ пурнăçшăн вут пек çунтарас килет. Пур ĕççынни те пĕр ўпкепе сывласан! Вот вара?.. Тĕрĕс, …улаксем кăкланманха. Ĕлĕкхи кивĕ кулаксен çумне çĕннисем те … 12 çул хушшинђе сахал мар ўсрĕç!

Анђах кунта алла усса тăнипе ĕç тухмаст. Арăслан пек ђăрмаласа, ăмăрт кайăк пек вĕçсе, пăван пек ђăрсăрланса вĕсемпе пирĕн хытă кĕрешес пулат.

Мĕн пур çĕнĕ ĕç, пирĕн малашнехи илемлĕ ĕмĕтсене пурнăçа кĕртесси çакăнтан килет. Туљккă çакăнтан!

Малттин хĕрсе кайрĕ. Çинçе, вăрăм пўрнеллĕ аллисемпе хыçалалла çавăрăннă çўçĕсене сăтăрса илет. Кăшт мăкăрăлса тухнă тути ђĕтрет.

Ун ђĕлхи çăварне револђутси йурри йурлама анђах тунă темелле.

— Ђухăна çийеле кăларас тесессĕн, епĕр комсомолĕссем алăсене усса, ланђашкаланса тăмалла мар. Ђухăнсен крупписене, вĕсен пухăвĕсене авториттетлă тума тăрăшас пулат.

Ђухăнсем хăйсем выçă-тутлă, çарамас, шăнса ĕнтĕркенĕ пурнăçне хăйсен пĕрлешўллĕ вăйĕпе çеç йусама пултараççĕ.

Ленин кăтартнă çул-йĕртен кăшт та пăрăнмасăр, вăл вĕрентнине çивђĕн асăрхаса тăрса, ăна шанса ĕçлесен çеç епĕр кулаксен вăйхăватне пур йенђен те пĕтерсе, ђухăна малта йерссе пыракан вăйхăват тума пултаратпăр.—

Малттин калаçма ђарăнђĕ. Виђкĕн кăвак куçĕсемпе Саңук çине шăтарас пек тĕллесе пăхрĕ. Унтан пĕрре тилмĕрсе, тепре хурланса пăхакан куçĕсем:—„Ну, мĕн калатăн, савнă йулташăм?“ тесе тĕпђесе ыйтаççĕ.

Саңук нимĕн калама аптăрарĕ. Вăрăмăн сывласа ўпкине тăкăлнă иккĕленўллĕ шухăшсене кăларса йађĕ:

— Та-а! Вот пурте сан пек пулсанђђĕ вăл?

— Клавнăй хамăр мĕншĕн кĕрешнине лайăх ăнланса илес пулат. Ана итеолоки теççĕ. Çав пролеттарин итеолокине хытă ĕмес пулат.

Саңук ђикарккă ђĕртрĕ те, ĕмсе илсе, Малттинпе иккĕшĕн хушшине йăсăрлантарђĕ...

— Есĕ питĕ аван калатăн, вçо еттă тĕрĕс, ђухăнсен пуххине кайса пăхха, пурте кулак йуррине йурлаççĕ.

Куçран ўкесшĕн мар. „Пирĕн нађар пурнăça пур çын пурлăхпе сапласа çитерес çук“ теççĕ.

— Стоп!—терӗ Малттин, Саҫук аллинҫен тытса ҫавӑнтах ҫиҫӗмле ҫуталнӑ шухӑшне калама пуҫларӗ.

— Тӗрӗс калаҫҫӗ вӗсем, о-о! самеҫҫаттӗҫнӑ. Ӗҫлес пулат, пӗрлешӳллӗ хуҫалӑха куҫас пулат. Кулаксене колхос вырӑнне ак ҫакна кӑтартас пулат,—терӗ те шурса кайнӑ вӑрӑм пӳрнеллӗ аллине ҫӑмӑртарӗ.

— Сӑмахпа пит те аван. Есӗ каласан ман ҫӗре темӗскерле вӗҫӗлтетсе кайат. Анҫах вара ӗҫ калама та ҫук нумай, йывӑр, пулӑшакан ҫук.

Ав пуп хӗрӗпе Кенати аслӑ шкултан йала таврӑнни икӗ ерне тулса виҫҫӗмӗшне куҫрӗ ӗнтӗ, пӗр токлат туса паманха.

— Ӗҫлемеҫҫим?

— Ӗҫлеме тен-ха, ӗҫе пӑсма тӑрӑшаҫҫӗ.

— Вӗсем ҫинҫен комсомол йаҫейккинҫе сӳтсе йавса пӑхӑпӑр. Вӗсем айакка тараймӗҫ те-ха. Тырӑ пухас ӗҫе ҫипер, ҫасрах майласа йарасҫӗ. Ку вӑл халӗ ҫи пысӑк сатаҫ. Пилӗк ҫуллӑх плана пурӑнӑҫа кӗртесси те ҫакӑнтанах килет.

Кулаксен ытлашши тыррине веҫех совет ампарне тӑктарас пулат. Вӑтамсене те хӑйсен ытлашши пек тыррине ирӗкренех партарма тӑрӑшмалла, вӗсен хушшинҫе сотсиалисӑмлӑ ӑмӑртӑва таппратса йарас пулат. Хӗрлӗ опос туса леҫсен аван пулӗҫҫӗ.

— Райкомол пленӑмӗнҫе ун ҫинҫен Райком ҫекреттарӗ аван каласа панӑҫҫӗ,--терӗ Саҫук.

— Вот, вот! тата мӗн кирлӗ?

— Е-е! вӗсене унта, ҫӳлте, калама пит те аван. Ак кунта, йалта?..

— Ун ҫинҫен калаҫмалли те ҫук. Пур ӗҫре те ҫавах ҫӑмӑл мар, клавни—патраксемпе ҫухӑнсене пӗр ҫӑмӑр тӑвасси.

Пӗтӗм ӗҫ ҫакӑнта. Вара пирӗн йалти ӗҫ те ҫӑмӑлланма пултарат.

— Вӑтамсем ӑҫта?—терӗ Саҫук хӑрах куҫне хӗсерех пӑхса.

— Ун ҫинҫен те калатӑп, манман. Вӗсемпе ҫыхӑну туса, халӑх пуххинҫе кулаксем ҫине лӑк хурас пулат.

— Кивӗ пурӑнӑҫран ҫӗнӗ пурӑнӑҫ ҫулйӗрӗ ҫине куҫнӑ вӑхӑтра ҫухӑнсемпе вӑтамсен ҫыхӑнӑвӗ ҫине хытӑ асӑрхас пулат.

— Комиҫҫи суйламалла терӗҫ. Ӑна лайӑх ӑнланаймарӑм вара. Те ӑна ҫухӑнсен пуххи уйӑрат?

— Ҫухӑнсен пуххипе комсомолсем малтан сӳтсе йавас пулат. Кайран халӑх пуххинҫе ҫирӗплетес пулат.

— Ехе-ӗ!...

— Клавни — пирӗн тӗрӗс ӗҫлес пулат. Ҫак ӗҫе патраксемпе ҫухӑнсене, вӑтам хресҫенсене йертме пӗлес пулат.

Кулакран хӑраса тӑмалли ҫук. Вут тӗртсе ҫунтарат иккен, вӑрттӑн пытанса кӗтесрен ҫапат иккен, пурне те ҫапса пӗтерес ҫук вӑл. Вӑл-ку палӑрсан, кӑшт темскер пулсанах ӑна ваҫҫи вырӑн тупаҫҫӗ. Вӑт, епӗ уйӑх ҫура йалта пурӑнма пултаратӑп, ҫак хушӑра пӗрле ӗҫлӗпӗр...

Саҫук ҫине Малттин тӗллесе пенӗ ҫул пек йывӑр сӑмахсем пере

пере анаççĕ. Йĕп пек вĕçлĕ сăмахĕсем ун пуçне тăрăна-тăрăна ларсан, Саҫук ҫăтаймарĕ.

— Ҫăн, тусăм, ҫăн—епĕ тĕрĕс мар ултавлă çулпа кайма пуçланă иккен.

Сехет майăтнĕкĕ 10 çинҫен 12-мĕш тĕлне çитрĕ.

Саҫук Малттина ыталаса илессе çитрĕ. Вăл хăйĕнҫен хăй тĕлĕнет.—Йеплеха епĕ çав пустуй çĕрĕк Самсун уҫҫитлĕ хыçĕнҫен кайнă... Пуйан аҫи, паллах, ĕлĕкхи саманашăн.—Саҫук Самсун панҫе иртернĕ хĕллехи каçсене аса илҫĕ.

Малтансенҫе парăнмаст. Уҫҫитле хирĕç... Унтан хуçăлҫĕ. Уҫҫитлĕн курăнми атми ăшне кĕрсех ўкнĕ иккен? Саҫук ăшĕнҫе хăйне хăй тепĕр хут айăпласа илҫĕ.

— Ваҫкка, Ваҫкка! кўр аллуна.—Малттин аллине хытăран хытă ҫăмăртат.—Ваҫкка, спаççипă сана, ман хунара çутатса йанăшăн. Епĕ санпа, малашне те санпах. Ан айăпла, хам та хама айăплап.

Малттин те Саҫукăн ҫĕререн палкаса йухса килнĕ, вĕри йунлă аллине хыттăн ҫăмăртарĕ.

Пăлтăрта ура сасси ҫăштăртатни илтĕнсен çеç Малттинпа Саҫукăн аллисем уйрăлҫĕç...

* * *

Пўрте пĕшкĕнерех вăрăм çын килсе кĕҫĕ.

Вăл кăçал çуркунне килнĕ çĕнĕ уҫҫитлĕ. Çўçĕ сарă, вăрăм, сарлака çутă çамкисене кăшт кăтраланса хупласа тăрат. Хĕсĕк куçĕсем сарă куçхарши айĕнҫен кулкаласа пăхса йăмăхаççĕ. Сарă мăйăхпа витĕннĕ çўхе тутисем те унăн, йаланах калаçнă ҫух, кăшт çĕкленерех кулса тăраççĕ.

Вăл çамрăк тĕсĕпе ваттăн курăнат пулсан та, 21 çулта çеç. Çеркуни,—ун йаҫĕ çапла пулнă, вăл выçлăх çулҫҫен кĕту аҫи пулса çўренĕ. Хăрушă тискер 21-мĕш çул ăна Мускава илсе çитернĕ. Пурне те шăнăçтаракан Мускав Çеркунийе те ĕнтĕркенĕ çĕртен ăшăтнă, хапăл тунă...

Çеркуни прийутра тăрăшса вĕреннĕ, кайарахпа технĕккăма вĕренме кĕнĕ. 28-мĕш çул ăна хĕрлĕ уҫҫитлĕ йатне панă.

Çапла вара вăл Кипек шкулне килсе вырнаçнă. Кипек шкулĕ пысăк, йалĕ те аслă—602 кил. Ахаљтен мар çав кунта виçĕ уҫҫитлĕ. Пĕри Самсун, вăл ĕлĕкхи саманара кимнаçи пĕтернĕскер, çĕрме пуйан ывăлĕ. Кипек йалĕнҫенех. Тепри—ватта йулнă хĕр Софйă Павлăвнă. Виççĕмĕшĕ 55 çулхи Никканор пулнă. Никканор кăçалхи çуркунне сасартăк ҫирлесе вилсе кайнă хыççăн, ун вырăнне Çеркунине кĕртнĕ.

Çеркунипе Софйă Павлăвнă ҫасах йулташлă туслашса пĕрпĕрне ăнланнă. Анҫах Самсунпа вăл нийепле те килĕштереймен. Ҫас-ҫасах вĕсем совет влаçĕ, комуниссем çинҫен тавлашнă. Çеркуни Самсун çинҫен РĔК-а хутсем те йаркаланă. Анҫах шкул инçпектăрĕ ку йĕркепе хытах çывăрнă.

Çапла мĕн çăва тухиђђенех Çеркунийĕн Самсунпа харкашса иртерме тӳрĕ килнĕ.

Çеркуни йала килсенех йађейккă ĕçне хутшăннă. Вăл тăрăшнипе Атав ђиркӳне шкул ваљљи хупнă. ОТН йађейкки те Çеркуни ĕçленипех шăтса тухнă.

Йал ђухăнĕ Çеркунийе йуратат. Вăл хаљ те, çулла та ђасђасах Çеркуни токлађĕсене итлеме пухăнат.

— Епĕ те çитрĕм,—терĕ Çеркуни картусне хывса.

Малттин Çеркунийе палламаст. Çавăнпа та Саңук çине ăнланман пекрех пăхрĕ.

— Çĕнĕ, хĕрлĕ уђђитлĕ Çеркуни Йаккăвлĕђ, а ку Малттин,—Мускавра вĕренет,—тесе паллаштарђĕ пĕр-пĕрне Саңук.

— Комсомолĕс?—терĕ Малттин.

— А какш! Мĕнле ăшшă ĕçлет.

— Питĕ аван...

Виçĕ тус пĕр-пĕрне шыраса тупрĕç. Виçĕ пĕђĕк çырма пĕрлешрĕç. Анлă çырма кĕр кĕрлесе анаталла йухрĕ. Ăнсăртран çыранран шыва кусса аннă ђул мĕн вăл ун пек кĕрлекен шывшăн?—Çӳпĕ! Çул çинђен пурне те тасатат, пурне те аркатат хăватлă шыв...

Çапла вăл пысăк шыв. Вăйлă.

Кăнтăрла сулăнаспа виçĕ тус ђĕререн хĕпĕртесе килĕсене саланђĕçĕ.

Мĕн çинђен калаçрĕç вĕсем, мĕн шухăшларĕç?—Тен, хăйсен ђăрмавлă, ланкамаллă çул çинђе пухнă йапалисене кутамккисенђен кăларса пĕр-пĕрне кăтартрĕç. Тен, малалла çул уçса хуђĕç? Кĕрик мĕн пулсан та, вĕсен çулĕ тăвалла.

Тăвалла улăхма нумай вăйхăват, хастарлăх кирлĕ. Нумай, нумай вĕренни кирлĕ. Кивĕ пурнăçпа кĕрешес тесессĕн, унпа кĕрешмелли меслетсене аван пĕлес пулат. Йăнăшсем тусассăн, вĕсене вăхăтра тӳрлетме тăрăшас пулат.

4. Пахђари „ђеђексем".

САМСИ сарлака та курпун, тутисем хулăн, тулалла мăкăрăлса тăраççĕ, ăна мĕн йуратмалли пур,—ахăлтатат Марйе Кулине умĕнђе.

— Ну, пĕр куçĕ пур ĕнтĕ, пысăк сенкер куçĕ ђăнах та илемлĕ. Ваңкка, Ваңкка. Мĕн пур çав Ваңккара? Çук, епĕ тӳрĕ сăмсаллисемпе çӳхе туталлисене çеç йурататăп. Ман Кирука никам та çитес çук.

Кулине ђĕнмест, темĕскерле вăл салхуллă шухăшпа ђĕркеннĕ.

Тантăшĕ аљашшăн вĕлтĕртетсе ларакан шурут тăррине татса илсе йун тăкăнса тăракан пит-çăмартине кăтăкласа пăхрĕ, хăй çаплах тăкăлтатат.

— Пĕлетнеха есĕ, Кулине, виçĕм кун Карукпа Кирук маншăн çапăçнă, тет. Епĕ камсулсем çапăçмаççĕ пулĕ тесе. Вĕсем те тӳрĕ килсен аванах тӳпкешеççĕ иккен.

Карукĕ те мана йуратат, Кирукĕ те. Иртнĕ вырсарни кун Карук вăйăра ман çума кĕнĕҫҫĕ. Ну хушăран калаçкаларăм епĕ унпа. Ху та пĕлен, Карук ҫухăн тавраш, тата, хăйамат, камсул пулсан та кăмăллă çын.

— Карук аван аҫа. Ăслă, йепле вăл сапăр, терĕ Кулине йăвашшăн.

— Хе. Мĕн тумалла ун йăвашлăхĕпе.

— Çук, Марйе, есĕ ытла та шутламасăр калаçатăн.

— Аҫи аванни аван та... Вăйăра та çĕнĕрен çĕнĕ такмак пуçласа кăна тăрат. Ахаҫ мар çав ытти камсулсем ăна вăйă калама суйласа хунă, тет. Унăн сарă кăтрине те епĕ çамрăкранпах йуратап. Унпа та ларнă пулăттăм та, ну-у, намăс, ытла ҫухăн, праçниксенҫе те çине тăхăнма кĕпи çук та, йепле унпа ларас тен.

Кирук мĕнле ҫаплă. Труйски кунĕ çаранра пулсан ун уринҫе çап çутă атă, атти çинҫен çутă тарăн калуш тăхăнса йарат; йуратман çинҫен йуратăн.

Кулине ҫатаймарĕ.

— Марйе, тĕлĕнетĕп епĕ санран. Çынна кăмăл тăрăх виçес пулат. Теприн çи-питти темĕн пек йăлтăркка, анҫах ун ăшҫиккине кĕрсе пăхсан ес мĕн курăн?

Çапăçнипе çапăçманни çинҫен нимĕн те калама пултараймастăп. Карук ун пек çын мар. Кирукне хут шансах пăрахмастăп, ăна епĕ комсомол вырăнне те шутламастăп.

— Çапăçнă çав, суйеçтерместĕп ĕнтĕ. Çав каçах ытти йулташĕсемпе пĕрле Кирук Карука тытса хĕртесшĕн пулнă та, тепле, ҫарăннă вара. Виçĕм кун çапах савăнтăм вара,—хĕненĕ.

Кулине хĕрелсе кайса пуçне хăпартрĕ.

— Камсем вара?

— Кирук, тата Йемелккепе Йакур пулнă, терĕç. Леш, Карукĕ, вăйсăрскер, ним те тăвайман, тет. Çавăншăн та епĕ ăна тата йуратмастăп. Каҫҫă тенĕскер вăйлă пултăр вăл. Унăн пуçĕпе мĕн тăватăп. Хресҫенсене пуç кирлĕ мар. Алли-ури çирĕп пулсан, вара-пире çитнĕ...

Кулине килĕшмерĕ.

— Ваҥккана та, Карука та хурлатăн есĕ. Тӳррипех кала, ҫухăнтан килĕштерместĕн вĕт? Ман шутпа ҫухăнни, пуйанни çавах. Çынни çын пултăр.

Пуйаннисене епĕ пушшех те йуратмастăп. Вĕсем куштан, йепле вĕсем хĕрсене мăшкăлама пăхаççĕ...

Хресҫене тăн-пуç кирлĕ мар тетĕн есĕ. Йепле ăшшĕ кирлĕ мар? Пуç ĕçлемен вĕренмен çын—суккăрпа пĕрех. Вăл Шупашкара кайсанах аташат. Йеплеха çав Ваҥккана йуратас мар, йепле вăл сапăр. Ăçта сан Кируку.

Кулине тата та каласшăн пулҫĕ те, анҫах темшĕн шарламарĕ. Тарйе те тӳсеймерĕ:

— Ну-у кăна уш ан кала та. Ваҥккана Кирукăн çитме питĕ инçе.

Марйе Тарйе те Кулине майлине курсан:—Есĕр вĕт, иккĕн пултăр ĕнтĕ, терĕ кулкаласа.

Марйепе Кулине йаланах ҫапла. Пĕр-пĕринпе килĕштереймеҫҫĕ. Ҫакăн пек пушă вăхăтра вĕсен хирĕҫӳ ҫас-ҫасах тухса кайнă. Марйе хăйĕнне перет, Кулине—урăхла. Кулинен ҫĕри Марйе йенне никҫан та туртăнман. Ну мĕн тăвас тетĕнха. Кӳрш-арăшри ҫынсенҫен урăх никампа та калаҫма вăл йулташ тупман. Типкасса кайма инҫе, апла инҫете ҫӳреме пушă вăхăт та тупман. Ҫакăн пек пĕр ҫур сехет пушаннă вăхăтра ăҫта унта йут кас тăрăх ҫӳреме. Куншăн та спаҫҫипă. Кун пекки те Кулинешĕн ик-виҫ кунта пĕрре ҫеҫ тӳрĕ килет.

Марйепе Кулине хытах та тавлашса кайаҫҫĕҫ пуҫ, анҫах урампа иртсе кайакан Улҫки урăх сăмах йуппине пăрса йаҫĕ.

— Ав вырăсла майра каҫăрланса таҫталла кайрĕ,—терĕ Улҫки ҫине пăхса Марйе. Вăл Улҫкийе йуратмаст. Йуратмаст кăна мар. мел пулсан тытса та ҫийĕҫҫĕ.

— Вулакан ҫурта йартлатрĕ пулас. Ларăттăмҫҫĕха епĕ ун пек пулсан, кута хĕссе, пĕр сиккеленмесĕр.

Ҫине тăхăнма кĕпи ҫук вĕт, шкул тăрăх ҫатăлтатса ҫӳрет. Кăҫал та хĕлĕпе каҫсеренех шкула ҫупаҫҫĕ, тет. Телекаткă пулнипе камсула кĕнĕ. Хулана вĕренме кайасшăн тет-ха. Вĕсенҫен те вĕренӳ пулсан, тĕнҫе тепĕр май ҫаврăнĕ, хĕвел те кутăн тухĕ.

Тепре тата ун пекки ват ухмах Мархва аппа пур, темĕскер ҫухатнă вара, ун хыҫҫăнах йашлатса ҫӳрет. Ҫилски пумушнĕкне ҫвишенни туса кĕртнĕ тет. Арҫын пекех пухусене ҫӳрет...

Вăрахҫен ҫăтса итленĕ Кулине ăна хирĕҫ тавăрса каласшăнҫҫĕ те каламарĕ.

Шкула кайакан Улҫки, вĕсем пахҫара выртнине куратăркаҫах, вĕсен патне ҫаранмасăр, урампа ҫаврăнса Ухăлҫван сат пахҫи умне пырса ларҫĕ.

Кулине ăна курҫĕ. Асăрхамасăр Марйене:

— Улҫки ман патма килҫĕ, вăл манпа ҫапла хутран-ситрен калаҫкалама ҫӳрет, кайасха тата, кĕттерес мар, терĕ те, симĕс пурҫăн кĕҫҫе пек сарăлса выртакан курăк ҫинҫен тăрса хуҫа килне васкаса утрĕ.

—Вăййа тух каҫхине, ҫӳреместĕн!—тесе кăшкăрҫĕ Тарйе ун хыҫҫăн.

— Вăхăт ҫук ҫав, тухăттăм та!... тесе кăшкăрҫĕ ăна хирĕҫ Кулине.

Марйесен пахҫи уҫă. Сывлăшра ҫеҫек шăрши кăна. Симĕскăвак, хĕрлĕ, сарă ҫеҫексем йешĕл курăкпа ҫӳкенсе лараҫҫĕ. Ҫавсенҫен пулас ĕнтĕ тутлă шăршă сарăлат...

— Ку та ҫавăн йышшийех, -терĕ Марйе, Тарйе хăлхи патне пĕшкĕнсе.

— Ара ĕретлĕ ҫын пĕтĕленмест ĕнтĕ. Куран, мĕнле вăл туртса ҫыхса ҫӳрет.—Ҫав самантрах Тарйен пуҫĕ урăхла шутларĕ: „хамăн мĕнле?“—Иртнĕ каҫ Уртемейпе пушарни лапас айĕнҫе ҫĕр каҫнине астуса илсен, тĕк ларнă ҫĕртенех умĕнҫи йешернĕ курăка ывăҫласа ҫăлма пуҫларĕ...

Марйе те ђёлхи вёçне килсе капланнă сăмахёсене калла çăтрё. „Ах мур, çара çерçи, йепле вăл Кенăна çаварса илнё“—Кулинене çиленнё шухăшпа пасарта тёл пулсан Кенă ун çине йăвашшăн пăхса кулни пёрлешрёçё. Марйе нимён калаçмасăрах сăмси айёнђе вăрттăн кулса илђё.

— Марйе, мён есё ху тёллён кулатăн?

— Çук, ахаљ, пёђёкçё ђухнехисене аса илтём.

Тарйе тытăнкăрах сассипе сёрен йуррине пуçларё. Марйе те хутăшрё: Икё пиçсе çитнё хёр, пёр-пёрин ăшёнђи шухăшёсене пытарса, кађђисем ваљљи йенђёк тёрлерёçё...

Кулине Марйепе Тарйерен уйăрăлсан кайма пуçланă Уљкийе ђёнсе кăшкăрђё.

— Уља, кунта!—Кулинен çинçе уçă сасси пёлётре „тр-тр-тр-тăр-тăр!“ йурлакан тăри патне çунатланса вёçрё. Уљки Кулинен сассине илтсен Ухăљван умёнђи ватă хурăн хыçёнђен хёрлё йавлăкпа майралла çыхнă пуçне кăларђё.

— Епё кунта, сан патна килсеттём.

— Çиђђас.

Икё сар хёрён ђёрисем пёр-пёрне курсан хавассăн тапрёç... Уљки çёнё хыпарсемпе Кулинене савăнтарђё. Хулари хёрарăмсен ушкăнёпе калаçни, хапрăкра вырăн тупма сăмах пани, йађейккăра кăмсамула илни—пурте Кулинешён ырă, çёнё пурнăç патнелле хăвăрттăн туртакан хыпарсем.

Пурин те вăл хапăл туса савăнса итлерё. Йулашкинђен уйăлас умён Уљкийе ыталаса тутинђен вёрин ђуптурё. Уљки кўршё пўртёнђен пăраниђђенех Кулине хăйён ырă шухăшёсенђен хăтăлаймарё.

Тăрсан-тăрсан савăннипе хуллен çинçе сассипе йурласа йађё. Кулинен ђерђен сасси кёслен çинçе хёлёхённи пек ађашшăн йухат. Çур сехет ытла пахђари ђеђексем Кулине йуррине пуçёсене тăп тайса итлесе ларђёç...

Хурлăхпа пусмăра таптаса çёнё çул çине тухакан тăлăх йуррине илтсен тўпери тăри те шăпах пулђё.

5. „Пуçлăх патне“.

МАЛТТИН Сађук патёнђен тухса йалканаш пуçлăхё Паљук патне утрё.

Кипекён сакăр урам, саккăрăшё те ват карђăксем пек кукăрăлса йёркесёр сапаланса пётнё. Пёлмен çын аташма та пултарат. Малттин, ик-виç çул йалта пурăнман пулсан та, урамăн йёркисене аван астăват. Çурт хуçисене те веçех паллат.

Ак хёреслё урам. Кётесрен пăрăнсан шурă ђассавни хыçёнђен пуйанкас çырма хёррипе тăсăлса анат. Ёлёк-авал Кипекре пёр çак Анаткас çеç пулнă. Кайран, пёр ёмёр иртсен, Кипек сакăр каслă аслă йал пулса ёрђесе кайнă.

Анаткас хыçне, сăрт çине Типкас сапаланса ларнă. Вăл кăçалсенҫе шăтнă кас, çавăнпа та питĕ ҫухăн. Хăма, калай (тимĕр) витнĕ çурт) тавраш кунта курма çук. Çак Типкасăн хĕрринерех пĕр пĕҫĕк латакайрах, вăтам пўрт пур. Вăл йалканаш пуçлăхĕ Палҫукăн пўрҫĕ. Малттин унталла утат.

Симĕс йăмрасем ăшне пытаннă кас Малттин çине тĕксĕмĕн пăхнăн туйăнат. Ереҫĕпех шатрун ларнă çуртсем. Хăма, калай... Пурин те тенĕ пекех çĕлен пек йавкалантарнă йупасенҫен тунă криҫтсасем урама тухнă. Урамра пăру, сысна, кашниннех йытă. Сарлака кўлĕре кĕтўпе хур-кăвакал какалат.

Анаткас урамне кĕрсенех Малттина тăват-пилĕк йытă хар çыпăçрĕç.

-- Вот мурсем. Пăшшол!..

„Мăнтăр лашисене сыхлама усраççĕ"—шухăшларĕ Малттин.— „Çак кас пуйанĕсем хур тăваççĕ ĕнтĕ. Пĕри пухура кăшкăрсан ыттисем уншăн хар тăраççĕ. Ҫухăнсем веçех пусăраннă... Усал кас, малтанах канашласа пыраççĕ. Револҫутси вăхăтĕнҫе те ку йалта пĕр çак кас çеç ытла хытă тапăртатнă. Ара йеплеха тапăртатас мар? Вĕсенҫен вĕт револҫутси сакăр çĕр теçеттин ытла çĕр туртса илҫĕ. Контрипутси... Аван пулнă вĕсене кўпсе выртма. Хĕрĕх çуллăха улпутран тара илнĕ çĕрне хăпартса сутса услам курса шиксĕр пурăнаççĕ. Выçлăх çулта ку кас аван пуйса йулҫĕ".

Çапла шухăшласа пырсах Малттин Типкас ансăр тăкăрлăкне кĕрсе кайрĕ.

Т ă к ă р л ă к анкартисем хушшипе тăсăлнă. Кунтан Анаткас пуйанлăхĕ пит аван курăнат. Пурин те çурса тунă ампарай, пахҫинҫе хăмла, пыл-хурҫĕ.

Ак кунта пуринҫен те ҫăн пысăк, пуринҫен те çўлĕ Ухăлҫванăн ултă кĕтеслĕ симĕс тăрăллă пысăк çурт, вăл пĕлĕтелле кармашса ларат.

Ухăлҫванăн анкартинҫе ыраш çапаççĕ. Малттин хулленрех утма пуçласа çынсем кăшкăрашса калаçнине итлерĕ. Вунăн-вунпиллĕкĕн Ухăлҫван тыррине çапнине курсан савăннипе ҫĕри сике пуçларĕ.

„Сисеççĕ мурсем, 35 урапаллине пуçланă. Кăна ĕçертес марҫҫĕçке. Кĕçĕрех çĕнĕ расклаткă тумалла. Ыранҫҫен тартмĕçха" терĕ те ăшĕнҫе, тăкăрлăк вĕçнелле ҫупнă пек васкаса утрĕ.

* * *

Çеркуни Малттинран уйăрăлсанах йаҫейккă çыруçи патне çамрăксен пуххи пуçтарма вĕçтерҫĕ. Унăн пиҫĕ савăннипе хăй тĕллĕн хĕвел пек кулса пырат:

„Ну халĕ ĕнтĕ ĕç пуçланат. Шахтăри комсомолĕссем таврăнсан кун пек кăна та пулмĕха". Кăсйинҫен хутпа ҫĕркенĕ çăкăр татăкне кăларҫĕ, çул çинҫех çăварне татăкăн-татăкăн тĕркесе ҫикме пуçларĕ.

„Хĕ, мĕн пысăккăш йал. Ма-ха парттийтсăсем сахал. 4 çеç".— Утат, ҫăмлат. Пырсан-пырсан копператтив тĕлне çитеспе пĕççине

кăлт çапрĕ. „Кунта йађейккă вăйлă пулмалла, сапаланса пĕтни пĕтерет. Хăшĕ слушпăра, хăшĕ шахтăра, хăшĕ активисланаççĕ те хулана вĕренме кайаççĕ. Малтан актив туса хăвармалла...“

Çеркуни актив тăвасси çинђен шутлама пуçларĕ. „Малттин килни аванха“ тесе хăйне хăй мăкăртатса пыракан Çеркунийе Çпритун Мирунђă тĕл пулђĕ.

— Сывиха?—Çеркунийĕн ĕçлĕ шухăшне татрĕ.

— Çӳретпĕрха, ху мĕнле, Çпритун Мирунђă?

— Што-тă, çак ернере шкулта кĕнеке-хаçат вулама пăрахрĕç.

— Е-е, çапла çав, çак кунсенђе ремонт туса пĕтереççĕ. Хаçат вулама унђђен Лариван патне кайма пултаран. Пайан çеç-ха çĕнĕ хаçатсем килђĕç. Питĕ лайăх хаçат пур. Есĕ ăна вуламан пулђха? „Пирĕн йал“...

— Йурĕ еппин, каçхине кĕрсе тухмалла пулатха. Што-тă вăрçă-вăрçă тесе калаçкалаççĕ, хăйамат ђăнах пулса ан кайтăр.

— Вăрçă пуласси-мĕнĕ... Да, Китай ђиккинђе... Хаçат çинђе Китай улпуђĕсем вĕсен çĕрĕ çинђи пирĕн ђукун çула туртса илни çинђен пĕлтереççĕ. Ун çинђен пайан хурал пӳртĕнђе Малттин токлат туса парасшăн.

— Вађкка? Шупашкара кайманђђиха вăл?

— Ара. Хађ çапах таврăнђĕ.

— Вот што-о! Пашка, ађа. Ну, пултарат те ĕнтĕ...

— Çапла çав.

— Вот-вот, терĕ Çпритун, вăтамрах тăракан хресђен,—апла кĕçĕр унта пырасха. Халĕ Мĕтри кум патне кайса килес терĕмха.

— Йурат, йурат,—Çеркуни лешĕ утма хатĕрленнине курса хăй те пĕрик утăм малалла утрĕ. Çпритун Мирунђă кайас шухăша калле туса уђђитле ђарђĕ.

— Епĕ çак тырă çинђенех калаçасшăн. Ман çийе 30 пăт хунă, тет. Ухăђванпа Митук çине те 40 пăтшар кăна хунă имĕш. Ку йапала ĕнтĕ пĕртте тĕрĕс мар. Епĕ нумайах та пулмаст 60 пăт хоссутарствăна леçсе патăм. Халĕ, тупата туршăн, пĕр пăт та ытлашши çук. Ăçта унта 30 пăт. Пулсан епĕр кутăнланса тăракан çыннисем мар ĕнтĕ, ху та пĕлетĕн. Налукпе штрахавайне те справнă леçсе тăратăп. Çак йенђен ӳпкев пур ман канаш ирĕкне. Ытти йенђен хут ăна пĕртте тиркеместĕп.

— Уђђитлĕ ку сăмахсене илтсен сиксе ӳкмерĕ. Ун пек сăмахсене вăл нумай çынтан илтнĕ. Висĕм кун кĕтӳç Упађа та ун умĕнђех савите вăрçрĕ. Ђăнах ĕнтĕ, кĕтӳç ăçтан тӳлетĕр 10 пăт? Ăна хăйне çиме çитмест.

— Тĕрĕс, Çпритун Мирунђă, тĕрĕс, терĕ ун çумнерех пырса.— Сан çине хумалла та пулман, тата ыттисем çине те нумайĕшĕн çине çапла хумалла пулман, анђах пирĕн йалта хунă. Ăна, Çпритун Мирунђă, сана совет влаçĕ хуман, ăна йалканашĕпе çав камиççири кулаксемех хунă. Совет камăн ытла çавăнне илме хушат. Камăн çуккине хăйне парат. Пирĕн йалта тĕрĕс туман.

Камиççийе кулаксене кĕртнĕ. Пур çитменлĕх çакăнта... Митук

ывӑлне раҫвӗ унта кӗртме йурат. Тата Михетере—хӑҫан вӗсем ђухӑнсемпе вӑтамсемшӗн йӗни пур. Вӑт ҫак кунсенђе саҫҫетани туса ҫӗнӗрен камиҫҫи суйласа ҫӗнӗ салату тӑвасшӑн, йалканашне те ҫул кӑтартас пулат. Претҫетатлӗ ђухӑн пулсан та хӑравҫӑ. Пуйансенђен хӑрат, куран. Санӑн ҫук пулсан, сан ҫине хумӗҫ.

— Ара ҫук ҫав, ун ҫинђен пӗтӗм кас пӗлет.

— Ну, вот, ҫапла.

Ҫпритун Мирунђапа уђђитле мӗн комсомол йађейкки ҫыруҫи патне ҫитиђђенех никам та ђаракан пулмарӗ. Каласрӗҫ...

* * *

Уђђитлӗпе Малттин тухса кайсан Саңук ђылайђђен тарӑн шухӑша кайса ларђӗ. „Ђӑн, Ваңук ђӑннине калат... Ну, калӑпӑр, совет пӗтсен? Пурпӗр вилӗм... Ҫук, ҫук пӗтмест... Ӗҫлес пулат. Ҫурта страхховат тумалла ҫак ернерех. Епӗр те ӗҫлемесен кам ӗҫлӗ“...

Ларсан-ларсан арӑмӗ патне лаҫҫа тухрӗ.

— Ну, Верук, кӗҫӗр пуху тӑватпӑр. Сирӗн аҫусем ҫине те пӗр 100 пӑт хумаллах пулӗ ӗнтӗ. Совета тырӑ кирлӗ.

Ђӑркӑш Верук упӑшкине ђасах туласа ывӑтрӗ.

— Ӗҫӗ-хӗлӗ пӗтрим сан. Халӑх тӑрӑх сӗтӗрӗнсе ҫӳретӗн. Ак ҫуртна вут тӗртсе йарӗҫ. Тата аттесем ҫине хурасшӑн? Вӗсем патне йепле, мӗнле куҫпа кайса кӗрӗпӗр кайран, ҫавна пӗл, ухмах. Вӗсен тыррисем те ҫук. Аҫтан пултӑр халӗ. Виҫӗ лаша, виҫӗ ӗне— вӗсем хӗл каҫиђђен сахал ҫийеҫҫӗ тетним?

— Ђарӑнха. Мӗн ес ҫатӑртатан. Ђарӑн, йалан ес аҫусемпех. Лашине ытлашши пулсан сутђӑр. Кам виноват вӗсем виҫӗ лаша усранӑшӑн. Ну шутлаха есӗ ху пуҫупа. Упаңа ҫине хумаллаи? Ухмах, халђ те сан сӑмахупа ђут авӑра ђӑматтӑм.

Верук каллех тӗпӗртетме тытӑнђӗ. Тӗпӗртетнӗ хыҫҫӑн ҫуллангкаласа, йӑпатса та пӑхрӗ. Ҫук, упӑшки хӑй сӑмахӗнђен тухмаст. Хӑйӗннех перет...

— Ну, Верук, ҫитӗ, саккун халђ урӑх, ӗлӗкхи мар. Нумай каласмӑпӑр. Турӑх илсе тухха. Пайан иртенпе апат ҫимен вӗт.

— Халӗ совет саккунӗ равнӑправи, тет. Ху пӗҫер те ху ҫи. Ҫитӗ. Пӗри халӑх тӑрӑх сулланса ҫӳрет, ес пур кунта тарҫӑ вырӑнне ӗҫлесе пурӑн. Ҫитет, урӑх ӗҫлеместӗп.

Ӳпкелешнӗ арӑмӗ итлеменнине кура высӑварлах комсомолӗссен пуххине тухса кайрӗ...

6. Кӳлӗ хӗрринђе.

ПӖЛӖТРЕ шӑраннӑ хӗрлӗ хӗвел ђӑрӑш вӑрман хыҫне кӗрен ленттӑ пек сарӑлса йармакланђӗ.

Кулине кӳлӗ хӗрринђе кӗпе ҫӑват.

Шӑратнӑ ылтӑн пек сарӑлнӑ ӑшӑ шыв кӑтраланат. Лӗп шывра ђӳкеме те кӑмӑллӑ. Тата пӗрик кӗпе кивсе ђӳкесен ӗҫ те пӗтет. Халтан кайнӑ Кулине йулашки вӑйне пухса ӗлӗкхи пекех ҫамӑллӑн кивсисене выђатат.

Ĕç хушшинђе ун пуçĕнђи йаланхи шухăшĕ йăшăлтатма тытăнђĕ. Кулинешĕн йывăр, анђах вăл унтан нийепле те хăтăлаймаст. Халђ те çавах ун ывăннă çан-çурăмне тимĕр кăшăлпа кăшăлласа илђĕ. Пĕђĕк ађасем вăрăм ђĕлхине кăларса пĕр-пĕрне вăрçнă ђухнехи пек вирткелешет.

— Мĕн тумаллаши? Мĕн тума вăранђĕши, ма-ши çав тери асаплантарат? — Кулинен лĕнђĕр кайнă аллисем сасартăк йывăрланнă шўнĕ кĕпе хыççăн ђавси таран шыва путрĕç. Ылтăн-кĕмĕл ункă пек хумсем сар хĕртен йăр-р-р кусса кайса хăмăшлăха пытанђĕç. Кулине шыв тĕпне курасшăн пек тинкĕрсе пăхрĕ.

Шыв ăшĕнђен Кулине çине тăп-тăваткăл питсăпат пăтранђăклă куçĕпе хĕрнерех пăхрĕ.

„Кам ку, кам?". Кам пуррине те Кулине маннă. Вырханђăклă мăшкăл пусмăрĕнђе пурнакан тăлăх Кулине ăна палласшăн. Кулине ун пиђĕ çумне сĕртĕнсе ађашланасшăн. Çук... Тăлăха ним те пўрмен иккен.

Тăрна куç пек тăрă шыври Кулине мĕлки таткаланса ирĕлет. Ав! ав! Кулине ун татăкĕсем хумпа пĕрле хăмăшлăха васканине халђ те курат. Каллех пĕђђен. Каллех икĕ вăй Кулинене икĕ йенне турткалама тытăнђĕç...

Çулахи ăшă çил çемçе çунат вĕçĕпе тăлăх Кулинене ађашшăн пуçран савса илђĕ. Кулине пекех армак-ђармак туратлă мăн çўçе хуллен çупка çулçисемпе ђĕпĕл-ђĕпĕл калаçса илђĕ...

Çук, киђем, хăмăшлă, хăрушă...

Анђах Кулинен халтан кайнă çанçурăмĕ унта канлĕх курат.

— Кулине пурăнмалла, ађушăн пурăн, тет килнелле туртакан пĕр шухăшĕ.

Тепĕри çавăнтах витлесе илет:

— А, мăшкăл, кулă, тĕнђе кулĕ.

Çук, Кулине ăна итлемест.

— Улталанакан пĕр ес кăна мар!.. Шан! Улђкийе шан!.. Тархаслатăп сана—шан. Пĕр вĕсем çеç сана шеллĕç. Вĕсем çеç сана ырлăх пурнăç çулĕ çине тăратĕç.—Ес пĕђђен мар, йулташусем санăн пур.

Ку сасса тăлăх йуратрĕ. Сасăпах „тĕрĕс" терĕ те кĕписене хăвăрт-хăвăрт ђўкесе пăрма тытăнђĕ.

* * *

Кўлĕ хĕррине çамрăк кĕтўç Кĕçтук шыва кĕме васкаса ђупса анат. Шăрăхпа пиçнĕ тутисем унăн çурăлса пĕтнĕ. Тути çурăкĕсем тусан ларса пĕтнипе питĕ ыратаççĕ. Кĕçтук тутине ђĕлхипе йĕпетсе илет. Кĕтĕве иккĕмĕш çул çеç тухат пулсан та, Кĕçтукăн çанçурăмĕ касђен пĕтĕмпех ĕшеннĕ. Касхи лĕп шыв тар тăварĕпе сăрланнă ўтне çăмăллатсах йарат. Çавăнпа та вăл кĕтў Кипекĕн аслă урамне акăрашса кĕрлесе кĕрсессĕнех кўлĕ патне уçăлма ђупса анђĕ.

Пайан Кĕçтукăн пушшех те васкамалла. Ирхинерех йађейккă çыруçи каç пуху пулаť тесе пырса каланăђђĕ. Ун çинђен вăл нумай шутланă.

Кĕçтук йалан кĕтÿре.

Пайан ирхи хĕвел пилеш пек шупка хĕрлĕ пуçне кăтартнă вăхăта вăл кĕтÿпе симĕс улăха çитме те ĕлкĕрет. Вылђăх-ђĕрлĕхсене вăл йуратаť. Вылђăхсем те ăна йуратаççĕ пулас, вăл каланине итлеççĕ.

— Хас! Айван, мĕн уçăм йенелле пăрăнатăн, ав сан валђи улăх, тет вăл вара, пĕр-пĕр ĕне хÿрине суллантарса сĕлĕ пуссине пăрăнма пуçласан. Ени çаплах пуççăрланса сĕлĕ калђи йенелле утсан, Кĕçтук ăна вутпа ăшаласа тĕрленĕ ђукмар патаккипе йунаса хăратаť.

Кĕçтук вылђăха шеллет, ђĕлхесĕр йанавар мĕн пĕлетха вăл, тет. Упађа, леш хытăран хытă хĕнеме тытăнсан—есĕ малтан ахалђ çеç хăратса пăх, Упађа тете, тесе ăс параť.

— Е-еес, çамрăк кĕтÿçĕха. Ман пек кĕтÿ хыççăн 15 çул сĕтĕрĕнсен, аванах хĕртме тытăнăн. Ĕнÿ çинђе йĕр кăна мар, йун сиксе тухĕ, тет вара ăна хирĕç Упађа çиленмеллилех çиленсе.— Епĕр Сĕнтĕкпе кĕтнĕ ђух кашни кунах тенĕ пек пĕр-ик сурăх урисене сĕтĕрсе таврăнађђĕç. Манка ха ес, Кĕçтук.

Вăл йаланах Кĕçтук ăна тÿрлетнине йуратмаст.

Ват кĕтÿç çак çулсенђе такама çиленнĕ пек пăшăрханса çÿрет. Те ăна кĕтÿ йăлăхтарнă—ват шăмшак канăçлăх ыйтаť, те ватàлсан çын хăй çапла пулаť. Упађа хăш ђух Кĕçтукпа килĕштермест. Çăмартисем ђăххине вĕрентме тытăнђĕç ку саманара, тет ăшĕнђе, леш ăна вĕрентме тытăнсан.

Хăй çапах та итлет. Темĕскер шуйттан камсулĕсемпе вăркăшаť пулсан та—хамăр çын, текелесе иртерсе йараť. Çавăнпа та вăл Кĕçтука хăш ђух, ытла кирлĕ вăхăтра, йе хулана конферентсийе мĕне кайнă ђух, вăрçмаст.—Пĕтмест мурсен ĕçĕ, темĕн тăваççĕ вĕсем унта,—кăшт сăмси айĕнђе мăкăртатаť те, çаплипех иртет.

Кĕçтук йаланах хирте, йе вăрмана кĕрсен кĕнеке уçнăшăн та çиленмест.

— Вĕрентĕр, пирĕн пек суккăр пулнин ырри çук-çке. Тен, тăнпуç пулсан, çын ретне те кĕрĕи?—шухăшлаť вăл, кĕнеке ăшне пуçне ђикнĕ Кĕçтук çине пăхса. Çавăнтах тата хăш ђух хăй çамрăк ђухнехи пурнăçне асa илсе хурланаť.—Çĕрђĕ пирĕн çамрăклăх. Çурри тарçăрах, çурри кунта, кĕтÿре. Кĕçтук пирĕн пек мар, урăх çын пулĕха—вăл çапла, самани урăхла.

Вăл вĕренме шухăшлаť. Ак пăх, мана пĕђђене пăрахса хăварĕха.

Халђи самана çапах урăхла, авантарах. Хуť халђ те пулин пуйан пуйанах пурнаť те, çапах та урăхла.

Ухăлђванах илер. Пуйан, ну, пуйан пулсан халăх çинђе ĕлĕкхи пек сумĕ çук... Тулђккĕ çав нађар çынна ĕлĕк пурнăç паман. Ку тĕрĕс. А-а, халђ, ак мана мĕнле пурнăç пăраççĕ?!. Çакăн пек вăхăтра

Упаӊа калама çук тискер. Выӆăхсене те айăпсăрах хĕнеме тытăнат. Упаӊапа Кĕçтук ӆас-ӆасах ӆĕрре кĕрсе хирĕçсе кайнă. Тавлашу иртсен Упаӊа çамрăк йулташне парăннă пек пулат.

— Сăмахпа ес мана çĕнтеретĕн пулсан та, есĕ хаӆ пурнăç курман. Нумайха сан манран вĕренмеллисем, ну çапах та, шăллăм, есĕ тĕрĕс сăмах калатăн,—тет Кĕçтукăн çĕмĕрт пек хура çӳçне хăй аӆине аӆашланă пек савса.

— Пашка ес, шăллăм! Ак çак плаша та есех вĕт çĕлеттертĕн, есĕ, мĕн каламалла, пашка, пашка! Вĕрен, аӆам, вĕрен. Çыншăн мар, хушăн.

Çав хушăрах кăмăлĕ хуçăлса кайсан вара пĕрĕннĕ куç хупанкисемпе шăрçа пек куççулĕсене куçĕсенӆен хĕссе кăларат.

— Аӆам, мана та вара ан пăрах. Турă мана ку йенӆен те пӳрмерĕ, хут ес те пулин ан пăрах. Йепле еп пурнăпши ватăлмаллăх кунсенӆе?

Кĕçтукăн ӆĕри çак вăхăтра çунатланса хăвăрттăн тапат.

— Йурĕ, Упаӊа тете, епĕ сана нихçан та пăрахмăп. Манăн та аттем çук вĕт.

Упаӊа хĕпĕртет...

— Йурĕ, аӆам. Манăн урăх çынра шанӆăкăм та çук. Вула, аӆам, вула, вĕрен, хăвăншăн пулĕ. Есĕ вĕреннĕ çын пулсан тен мана та çăмăллăх тивĕ.

Ватă Упаӊа хĕпĕртесе саланса çийекен кĕтӳ тавра çаврăнма утат.

— Хас! Хас ӆĕмере. Ак кунта вăйлă, кунтарах, ай-й-вансем.

Упаӊан тытăнкăллă сасси шăппăн ухăнса ларакан вăрман хĕррине кайса çухалат.

* * *

Кĕçтук хĕвелпе тăрса мĕн хĕвел анаӆӆенех кĕтӳре çӳрет пулсан та, йаӆейккă ĕçне пăрахмаст...

Кĕнеке вулат, çамрăксем ваӆӆи çĕнĕ сăвăсем çырат, анӆах вĕсене вăл ретаксине йарса пăхман. Çырса пĕтерсенех аван пек, кайран—ăна ретаксине йарса унпа çынсене анратма та нистуйит, тет.

— Еç пур, туӆккă ан ӳркен, тет вара вăл, çут çанталăкра нумай пурăнса курнă çын пек, вăрăммăн сывласа.

Халĕ те унăн пуçĕнӆи шухăшĕсем хăй çинӆе мар.

— Пĕркун тырă хатĕрлес ĕçре ушипкă панă пулнă çав. Йеплеха апла, йал çине кăтартнă виçене йатакпа сулса йамалла. Тĕрĕс мар ку. Малттин те ĕнер çапла каларĕ. Çĕнĕрен тăвас пулат. Та!.. Пайан хытă тăрас пулат ĕнтĕ.

Çук, çынсем сахал. Малттин, Çеркуни, Саӊук, Кĕркуç, епĕ, тата... Ну, пурĕ вуниккĕн иккен. Тăвата пин йатака вуниккĕн?

Кĕçтук сăмси айĕнӆе, тутисене мăкăртатса ши-ши! шăхăрса йаӆе. Хăрăмланса хуралнă мунӆасем лапсăркка ватă йăмрасен айне пытаннă. Кĕçтук кӳлĕ хĕрринӆе тĕпĕлтетсе ларакан икĕ ват йăмрасем хушшине ӆарăнса пахса тăрат.

Тĕкĕр пек çуталса выртакан кӳлĕ хĕрринҫе Кулине шурă йĕм тавăрса тăрат. Ун çине Кĕçтук сăнаса пăхнине вăл курмаст.

— Кĕпе çăватнам?—терĕ хуллен Кĕçтук.

— Мĕн тăвас тетĕнха: Çапла.

— Урăх ĕç тупас пулат. Мĕн çав шуйттансен кĕпи-йĕмĕсене тасатса пурăнатăн.

— Ан кала та ĕнтĕ. Тепле хăтăласха çак тамăкран.

Кулинен хурлăхлă тарăн куçĕсем çăлтăрсем пек вăрттăн кулса илҫĕçĕ; сăмаххисем киҫемлĕ пулсан та, унăн çинçе сасси шăнкăрав пек ҫанкăртатат.

— Пухăва каймастнам есĕ?

— Кайатăп. Çавăнпа килтĕмха. Ха-а-лĕ! пуху уçăлаҫҫен виçĕ хут та мунҫа кĕрсе тухма пулат.

— Есĕ ху мĕнле?

— Еç нумай та? Ну, ĕç вилсен те виç кунлăха йулат, теççĕ те, ăна пăхмастăп ĕнтĕ. Пыратăп.

— Вот, Кулине, ку питĕ тĕрĕс!

Кĕçтук тата та каласшăн пулҫĕ те, анҫах шарламарĕ.

— Васкамалла вĕт, ҫасрах кĕр шыва, терĕ Кулине кулкаласа.

— Ара пăртакçă сивĕнемха. Тарланă ӳтпе йепле труках шыва ҫăматăн.

— Вон ес мĕнле? Тухтăрсем пек иккен.

— Ан хăвалаха. Курманни нумай пулат вĕт.

— Лар, лар. Хăваламастăп.

Кĕçтук, Кулинерен инçех те мар, хĕлле касса ӳкернĕ ватă çӳçе тункати çине пырса утланса ларҫĕ.

Кулине йулашки кĕписене васкаса ҫӳхет.

Хаклă, çывăх йулташа вăрах курмасăр çӳренĕ вăхăтра унпа тĕл пулсассăн пурин çинҫен те калаçас пек. Мĕн ҫухлĕ шухăшсем вара пуçра пăтранаççĕ.

Кĕçтук ырă шăршăллă уй-хирте пĕҫҫен çӳренĕ вăхăтра Кулине çинҫен нумай пуç тавра çавăрса шухăшланă.

Уйри тăлăх çеçкесене çак йуратнă Кулинепе танаштарнă. Мĕнле мĕнле кăна вăл аҫашласа хăй çырнă сăввисене шăрантарнă... Анҫах ăна айван выҫăхсенҫен пуçне никам та илтмен.

Хăйĕн çемçе ҫĕрийĕ Кулинене йуратса кăварланса çунни çинҫен вăл Упаңана та систермен.

Кĕçтукăн çăмăл шухăшĕ йăшăлтатма пуçларĕ.

— Калас. Мĕн пытармалли пур. — Çук. Капла луҫҫĕ, тĕл пулсан аван калаçат.

Кĕçтукăн йӳçсе хăпаракан вĕри шухăшĕ пĕр сăмах тĕртсе кăларҫĕ.

— Кулине, ман сана пĕр сăмах каламалли пур, есĕ туҷккă ан çилен вара.

— Ак, мĕншĕн çиленес, кала,—итлетĕп.

Кĕçтук пуçĕнҫи шухăшĕсене майларĕ: „Ухмах, мĕн супĕлтететĕпха епĕ“. Унăн тăнлавне вĕри йун килсе тапрĕ. Ăна хирĕç

хĕвел пек çутăлса пăхакан Кулинен сăн пиђĕ уçланкăри йешĕл çаран çинђи ăшă çилпе ђўхенсе ларакан сарă çеçке пек туйăнђĕ.

Йепле ун çинђен калас тетĕнха.— Çук, урăх ђух...

— Çук! А-а, акă мĕн çинђен ыйтса пĕлесшĕнђĕ.

— Мĕн? — терĕ Кулине ђеђен сассине кăларса.

— Пĕлниха есĕ сана комсомола илнине?

Кулинен пиђĕ çурăлас пек хĕрелсе кайрĕ. Кĕçтук пуçĕнђи шухăшне пытарса ун вырăнне сăмах çукран туса каланине вăл туйрĕ. Çапах та пĕлмене хывса тĕс кăтартмарĕ.

— Ун çинђен мана ĕнер Улђки каласа пађĕ, терĕ те,--ара çакăншăн мĕн çиленмелли пур, тесе калас шухăшсем ун пуçне килсе кĕђĕçĕ.

Кулинен çинçе хĕлĕхлĕ ђĕри Кĕçтук ăна йуратнине сисет. Вăл хăйĕн кăмăлне те кайат... Йепле уççăнах калас тетĕнха.

— Ђĕри аван, Малттинĕнни пекех, — шухăшларĕ вăл. Пуçĕнђи тутăрне салтса арпашса кайнă çўçне тўрлетрĕ.

— Шыва кĕр тата, пухăва каймасăр йулăпăр.

— Ăна вăхăт нумай кирлĕ мар вĕт. Çиђђас!

Çавăнтах Кĕçтук Кулинерен темиçе çуллăха уйăрăлса кайнă пек, вăрăммăн сывласа:

— Тĕрĕс, васкас пулат, терĕ те, мунђасен тепĕр йенне шыва кĕме ђупса кайрĕ.

Кулине йулашкинђен Марук кĕпине пăрса типĕтрĕ. Кĕçтук утланса ларнă çўçе тункати çине кукăр кĕвентине хурса, пăрса сăрхăнтарнă кĕписене тийерĕ. Пĕр аллипе ăвăс йăвăççинђен тунă ђĕресне тытса хулпуççи çинђи кĕвентине йăтса çыран çине хуллен хăпарђĕ...

— Кулине! Пĕрле кайăпăр.—Кĕçтукăн уçă сасси кунĕпе шавласа ывăннă хыççăн тĕлĕрме пуçланă кўлле вăратрĕ.

— Васкас пулат ман! Çаксене леçсен епĕ те пухха пыратăп, терĕ ăна хирĕç Кулине. Хăй васкаса Ухăлђван çурт йенелле утрĕ.

Тĕттĕм сăр çурçĕр йенђен нумай çўлелле шăвса хăпарђĕ. Кĕтмен çĕртенех пĕр шапа:

— Крр! Крр! кăрласа илђĕ.

Кĕçтук ак, шапасем калаçма пуçлаççĕ тесе, пĕр самантлăха йăпанса ђарăнса итлерĕ. Шапасем шарламарĕçĕ.

Кулине йенне çаврăнса пăхрĕ вăл. Анђах Кулине çаврăнса пăхмарĕ.

— Васкат. Ан тив, васкатăр ĕнтĕ. Пухура курăшăпăрха.

Ђерет хуçисем апат хатĕрленине пĕлетĕр каçах, шкул йенелле васкаса утрĕ Кĕçтук.

(*Малалли пулат*)

ВАТӐ ШАХТОР

ЙЕХРИМ ИВАНӖ

Ватӑ шахтора, хастар утарнӗкс—Суххарӗн Кӗҫтенне халалатӑп ҫак сӑвва.

Ҫирӗм ҫул вӑл
Ӗҫлет шахтӑра,
Хура кӑмрӑк ђават
Ҫирӗм ҫул вӑл.
Тӑван хир ђӗрҫинђе
Ӳснӗскер,
Шахтӑрах иртет пуђ
Ун кунҫулӗ.

Кӑҫал ҫеҫ еп
Паллашрӑм унпа;
Ват шахтор вӑл—
Сухханӗн Кӗҫтенӗ.
Вӑл та, еп те
Кунта килиђђен
Уй-хирте, вӑрманта
Хыт ӗҫленӗ.

Ҫирӗп халлӑ
Ҫак ватӑ шахтор.
Пӗр ҫӗртех
Унпа епӗр пурнатпӑр.
— Каласамђђӗ мана ес ђӑнпа:
Кунта ӗлӗк
Пурнӑҫ мӗнле пулна?

Ҫапла ыйтрӑм
Пӗрре еп унтан,
Иртнине
Асӑнса илнӗ майӑн:

— „ Ех, тӑван,
Ӗлӗкхи пурнӑҫа
Асилсессӗн
Йӗрес килет манӑн.
Йӑвӑр...
Йӑвӑрђђӗ иртнӗ ҫулсем.
Ех, мӗнђухлӗ унђух
Куҫҫулленнӗ,
Вун-вуникӗ сехет
Кунсерен
Шахтӑра кун ҫуттисӗр
Ӗҫленӗ.

Ир анан та,—
Касђен ђакалан,
Пилӗк-ҫурӑм
Ай-йай ыратађђӗ.
Суранлантӑн,—
Ан кӗт пулӑшу!..
Ӑҫтан килтӗн,
Унта ӑсатађђӗҫ.

Ҫаплаллађђӗ ҫав
Иртнӗ ҫулсем,
Ҫаплаллађђӗ
Патшан саманийӗ.
Ентӗ, хаљ, ак,
Ҫав кив тӗнђене
Ҫапса хуҫрӗ тӗппех
Ӗҫҫынниӗ.

Ирĕк сывлăш
Сывлат хаљ Тонпас,
Шахторсем те
Текех тарăхмаççĕ.
Нўрлĕ çĕр
Ăшĕнђи кăмрăка
Пĕр хавассăн,
Утарлă ђаваççĕ

Револђутси вуђахĕ ваљђи
Кăмрăка пикенсех
Еп ђаватăп
Вĕт еп хам та
Çак çут тĕнђере
Уншăн çеç,
Уншăн çеç пурăнатăп.

Çирĕм çул еп
Ĕçлеп шахтăра,
Хура кăмрăк ђавап
Çирĕм çул еп.
Еп утарнĕк!
Çав ђаплă ĕçре
Ирттĕр, ирттĕр
Ман ĕмĕр кунçулĕ!!.

Çирĕп халлă
Çак ватă шахтор,
Ĕç çинђе ђĕрине
Вăл çунтарнă.
Ах, мĕнђул вăй-халне,
Мĕнђул тар
Çирĕм çул хушшинђе
Вăл йухтарнă!..

КОМСОМОЛ

АЛАКĔР ВАÇЛЕЙĔ

Хампа тантăш комсомолĕссене

Октапĕр.
Унђђен
Пулнă вăхăт иккен вăл:
Хĕнхурлăх...
Ун виттĕр
Тухмашкăн асап...
Ак ирĕк
Тивлеђшĕн çуратрĕçĕ тăвăл,
Мĕлйун пролеттари
Кĕç çапрĕ напат:

— Ей, тухăр!
Хĕнхурлăх вуђахĕ
Хускатрĕ пире,
Хĕнхурлăх вĕрентрĕ
Пире çапăçма.
Тсехсем,
Уйхирсем,
Штољнăсем!
Вăй парăр
Пире!
Асаплăх сăлтавĕн
Пуçне аркатма. —

Куратăп.
Ман куç умĕнђе,
Пуç виттĕр тухса
Истори çăмхийĕ
Васкавлăн
Сӳтлет.
Мĕлйун пролеттари,
Асаплă
Хĕн виттĕр тухса
Октапĕрĕн
Ђыслă йатне
Хисеплет.

Ырхан,
Шăлапир пек,
Шуралнă питсен куçĕсем,
Илйиђ хунарне
Хапăл тунă.
Илйиђ хунарпех,
Ĕмĕр-ĕмĕр
Çӳнми вутпа хыпнă вĕсем,
Ĕмĕр-ĕмĕр ђакми
Вăйпа тулнă.

Унђух,
Епĕр хамăр çиђ-сакăр çулхи.
Хĕнхурлăх сĕткенĕ
Нишлетнĕ пире.
Ђир-ђĕрлĕ,
Вăйхалсăр,
Йе выçлăх парни
Тăвасшăн çуратнă асаплăх
Пире.

Çук, çавсен ађисем,
Çавсен ађисем вĕтха епĕр.
Кам куçĕ.
Хакланă
Илйиђ хунарне,
Кама хапăл тунă Октапĕр
Кам ирĕкĕ татнă
Асап сăнђăрне,
Çавсен ађисем вĕтха епĕр,
Çавсен ађисем.

Çавсен йунĕпе
Хĕмленен ђĕресем,
Пирĕнне
Вăйхала тĕреклетрĕç.
Хĕнхурпа
Пирђенсе
Çирĕпленнĕ пӳсен
Тӳсĕмне,
Валеçсе пире пађĕç.

Темĕн ђул
Мулйăхне парăнмарăмăр
епĕр...
Пирĕн çул
Майакне лартаканĕ пире,
Пирех
Хапăл турĕ Октапĕр.
ССРС
Револђутсишĕн пулђĕ
Ђĕре.

Манман еп,
Çук, манмĕ никам та...
Ак краштăн вăрçи, шуса
Тухрĕ умма.
Йутениђĕ.
Вранкĕл,
Колђакĕ...
Ђылайăн кармашрĕç
Пăвма.

Ик-виçĕ çул йахăн
Туллашрĕç вĕсем.
Ак выçлăх,
Ак пыйтлă тиф урлă каçса,
Аттесем, пиђђесем,
Аппасем,
Йăмăксем,
Пĕр харăссăн
Утрăмăр епĕр,
Йунланнă йалавшăн вăрçа,

Фронтра.
Çĕнтерӳллĕ уйав...
Путланђĕç шур йытă йăхсем
Çиçетпĕр,
Хаваслăн çитетпĕр киле...

Тсехсем,
Уйхирсем,
Штолђнăсем,
Çеремлĕ çĕр айĕн пăхса,
Салхуллăн
Пуç тайрĕç пире.

* * *

Ей, тантăшсем!
Унтанпа
Тĕреклентĕмĕр епĕр.
Комсомол çемйинђе
Хĕртĕнсе хурçăлантăмăр епĕр.
Çĕр ђăмарĕн
Йунлă питне тӳрлетме,
Туптапăр
Тата пĕр
Октапĕр.

Интустриллĕ
Çĕршывшăн,
Çĕн йалшăн кĕрлен тсехсенђе
Пайан
Тар тăксах çапăçатпăр.
Утарлă ĕçре,
Хăт кисрентĕр тĕнђе,
Пурпĕрех станока
Ĕшкĕртетпĕр.

Пур ĕçре,
Пур çĕртре пур комсомолăн
Алли,
Комсомолăн ăс-тăнĕ, вăйхалĕ
Колхосра,
Шахтăра,
Тсехсенђе
Епĕрех,
Епĕрех çĕн тĕнђе
Туптаканĕ.

Çĕршывра,
Шăтакан тăрпасен
Вăрлăхне
Акакан пулса тăтăмăр епĕр.
Çвирстрой,
Волховстрой,
Тĕрлĕ «строй».

Тĕрлĕрен кикантсен
Вăйхалсем.
Сотсиалисăмшăн,
Сотсиалисăмшăн кўлĕнђĕ
Тнеппăр.

Сотсиалисăм!
Пĕр сана,
Комунисăм патне
Çитересшĕн хаљ епĕр.
Ăс-тăнпа,
Вăйхалпах,
Сан турту хушшиңе
Кўлĕнетпĕр.

Партти!
Çĕр питне каскалан
Йухан шыв çулĕсем,
Тинĕсе йухса кĕнĕ пекех,
Сан ăшна
Йухса кĕрĕпĕр епĕр.
Сан ăшна
Çĕнĕрен ђĕресем,
Туптаса кўртсе лартăпăр
Епĕр.

Шанђăк пур.
Пирĕнте,
Вутланан ђĕресем варринђе
Хĕмленет вăл.
Çав хĕмпех,
Кĕç çĕр пиђĕ çинђен
Пусмăра шăлса утĕ тĕппех
Пĕртен пĕр,
Револ҆утсиллĕ
Тăвăл.

Интустриллĕ
Çĕршывшăн,
Çĕн йалшăн кĕрлен тсехсенђе
Пайан
Тар тăксах çапăçатпăр.
Йунăхин,
Йунăхат капитталлă тĕнђе, —
Ун йăхне пурпĕрех
Аркататпăр!

Шупашкар,
1930 ç.

Ҫӑваш респуплӗкӗ 10 ҫул тултарнӑ йаҫепе туса иртерне литтераттур ӑмӑртӑвӗнҫе Патманӑн „Вопла ҫинҫен“ 4-мӗш преми илнӗ.

ВОПЛӐ ҪИНҪЕН

Н. ПАТМАН

— Тинӗсре воплӑ пӗтет темерӗре есӗр? Воплӑ нӗтсе пынине прахутсемпе карапсем нехтӑпа ҫӳренӗрен килет темерӗре? Сирӗн шухӑшпа воплӑ нехтӑллӑ шыва ҫӑтаймаст мӗн?! Айвансем! Хӑвӑрах шухӑшласа пӑхӑр—мӗн ҫухлӗ нехтӑ тӑкӑнтӑр прахутсемпе карапсем ҫинҫен вӗҫӗхӗррисӗр аслӑ тинӗс шывне. Ан манӑр—нехтӑ вӑл шӗвӗ ылттӑн. Совет влаҫӗ ӑна питӗ тирпейлӗ тыткалат.

Анҫах «воплӑ» ҫӑнах та пӗтет. Уншӑн есӗр саманине ӳпкелени те тӗрӗс, мӗншӗн тесен Совет йӗркинҫе «воплӑ йурӑхсӑр йапала. йапала.

Епӗр пурте харӑссӑнах хыҫалалла ҫаврӑнса пӑхрӑмӑр.

— Есӗр ӑнланаймастӑр? Есӗр тӗплӗрех каласа пама ыйтатӑр? Йурат. Каласа пама пултаратӑп. Анҫах манӑн сӑмах вӑрӑм пулат. Теп, сире йӑлӑхтарӗ те. Ну, тепӗр йенҫен, каскаса ӳкмеллийех ҫукха пирӗн. Пире, вӗт, вӑхӑт иртерин пултӑр. Вӑхӑт иртрӗ—ӗҫ те пулҫӗ. Ну, пуҫлатӑп.

Пирӗн хыҫра ларакан ҫын аллинҫи хаҫатне ҫӗркуҫҫи ҫине хуҫӗ те хӑйӗн сӑмахне пуҫласа йаҫӗ.

* * *

Уи ҫухне протрасверска пӗтменҫҫӗ пулас. Выҫлӑх пуласси те паллах марҫҫӗ. Мана савӑт комиттеҫӗ йала токлат тума йаҫӗ. Ҫӑннипе каласан, епӗ унҫҫен, токлат тума мар, пухусенҫе те ҫӑвар уҫса пӗр путлӗ сӑмах каламан—те вӑтаннипе, те хӑранипе ҫӗлхе ҫыхланаҫҫӗ манӑн пуху умне тухса калама тытӑнсан. Ҫавӑнпа, малтан, кайасшӑн мар питӗ туртӑнкаласа тӑтӑм. —Пултараймастӑп, тетӗп,—хут йатлӑр, хут пайанах ӗҫрен кӑларса йарӑр, анҫах нимӗнле токлат та туса пама пултараймастӑп, тетӗп. Ну, хӑвӑрах пӗлетӗр,—профсойуснӑй тисҫиплинӑ, тути-ҫути, тем те тупӑнат уи пек ҫухне. Тухса каймалла пулҫех. Салтакран илсе килнӗ кутамккана кӗпекесем, хаҫатсем ҫикрӗм, пӗр-икӗ кун ҫимелӗх ҫӑкӑр илтӗм—Шупашкартан Атӑл тӑрӑх шутартӑм.

Токлат тӑвасси пуҫа ҫӗмӗрет—мӗн мурле туса иртерес, тетӗп. Хӑвӑрах пӗлетӗр—хресҫен ӗҫлӗ ҫын. Есӗ ӑна ӗҫрен татса пухӑва ҫӗнсе пыратӑн иккен те, пӗли-пӗлми супӗлтетсен мӗн пулатха вӑл. Пӑшӑрхантӑм питӗ. Ҫӳҫе те вирелле туртса пӑхрӑм пулмалла. Анҫах... анҫах Атал мана йӑпатма пӗлҫӗ. Атӑл ҫине пӑхса пырса, йулашкинҫеп токлат ҫинҫен те манса кайна.

* * *

Прахут Атăлăн аслă шывне çĕмĕрсе пырат. Шыв та çанталăк та шăп. Прахут çинҫе те çынсем çывраççĕ.

Ир.

Сулахай йенҫе, çӳлĕ çыран çинҫе йешĕл вăрман сарăлса выртат. Айакран пăхсан Атăл хĕрри симĕс пуставпа витĕннĕн туйăнат. Хăш хăш тĕлте сăрт çамкине тарăн варсем çĕмĕрсе кĕнĕ. Варсем тĕпĕнҫе çинçинçе шыв, кĕмĕл çип пек, таçтан, çĕр тĕпĕнҫен авкаланса тухат. Варсем тăрăх тĕллĕн-тĕллĕн çав хăйаматах сукмаксем, урапа йĕррисем кĕрсе кайаççĕ. Вĕсем çӳлĕ сăртсем айĕнҫе хурткăпшанкă йĕррисем пек анҫах курăнаççĕ. Ытла та пĕҫĕккĕн туйăнатçке етем Атăл таврашĕнҫе!

Хыçалта, хĕвел тухăçĕ хĕрелнĕ май, Атăл шывĕ çуталса выртат. Акă, аслă шыв тăрăх пĕр йарăм çутă тăсăлса выртрĕ. Тăсăлса выртрĕ—аслă шыва йăл култарҫĕ. Шакла сăртсем, аслă вăрмансем Атăл куллипе ăшăнса кайрĕç. Ăшăнса кайрĕç,—ăйăхран вăранҫĕç. Хĕвел тухрĕ. Çут тĕнҫе етеме тĕнҫе ĕçне ĕçлеме йыхрав йаҫĕ.

Прахут çинҫе çынсем йăшăлтата пуçларĕç. Вĕсен ăйхăллă куçĕсем йăваласа та уçăлмаççĕ. Пиҫĕсем пĕркеленсе пĕтнĕ, кĕлеткисем пĕкĕрĕлҫĕк, çутă çине те тухма хăйаймаççĕ. Шереметсем, есĕр мари çак вĕçĕхĕррисĕр тĕнҫене хăвăра парăнтарас текенсем?!

Прахут сасартăк тискер сасăпа ахăрса йаҫĕ те, пĕтĕм талпĕвĕпе тепĕр хут ҫĕтресе илсе, кӳмерккине çавăра пуçларĕ. Пирĕн умра пристăҥ çывăрса ларат. Пристăҥрен çӳлерех йал. Йешерсе ларакан сат-пахҫасем хушшинҫен пӳрт çивиттисем темиçе тĕслĕн курăнаççĕ. Хăш-хăш тĕлте пахҫа картисем, сăрт çинҫен уртăнауртăна анса, Атăл патнех пырса тĕртĕнеççĕ.

Айалта, пристăҥ патĕнҫе, пĕҫĕкçеç мĕлкесем йăшăлтата пуçларĕç. Вĕсен типшĕм урисем хыткан пĕвĕсене сăрт çинҫен силлентерсе анаççĕ. Тумхахран тумхах çине сиксе аннă май, вĕсен çурăмĕсем çинҫи шурă кутамккасем ташласа пыраççĕ. Ăçта васкаççĕ вĕсем! Ма ырхан ӳҫĕсене килĕшӳсĕр кисрентереççĕ?

Пурнăç ахаҫ вырттармаст—пĕри килет, тепри кайат, пурте хăй ĕçне кура васкат. Кама кăна курмастăнши çуллахи кун Атăл çинҫе! Авă, пристăҥрен уйăрăлса кайакан мăн прахут çине тинкĕрсе пăхса йулҫĕ пĕр карҫăк. Çумĕнҫе ывăл аҫи, вăл амăшĕн çĕтĕк сăкманĕнҫен çатăртаттарса тытнă. Иккĕшĕ те пĕрĕнсе, кăвакарса кайна—ирхи сивĕ çĕтĕк тумтир витĕр шăмма çитиҫҫенех шăнтат.

— Ăçта кайма тухнă вара есĕр, асанне?—тесе ыйтрăм карҫăкран.

— Ей, аҫам, ăçта кайса мĕн тупăпăр ĕнтĕ епĕр суккăрсем. Пиртен пулас çук вал кайса çӳресси, ырă çыннăм. Хырăм выççи пур пирĕн, çав хăвалат, христарати ыйтма тухпăҫҫĕ те... Пулăшсам пире. ырă çыннăм, пĕрер татăк çăкăр пулмĕши.

Карҫăк хăйĕн вĕçĕмсĕр кĕллине пуçласа йаҫĕ. Анҫах пĕтерме тĕл килмерĕ. Прахут ăсаннă хыççăн пристăҥ çинҫен хăвалама ты-

тăнъěç. Пěр çўлě, тěреклě хěрлě матрусě вăрăм авăрлă шăпăрпе карђак патнеллех çавăрса йађě те, тискер сасăпа:

— Марш отселя! Двадцать раз что-ли вам говорить, тесе кăшкăрса пăрахрě. Карђак, темскертен хăранă пек, шартах сиксе ўкрě.

— Ай туртур, ата, Еђук, ата ђасрах, тесе ађи аллине хыпашла пуçларě. Ађи те, хăранипе, амăшě çумне тата хытăрах лапђăнса тăђě...

— Кайăпăр... кайăпăр, кансěрлес мар сире тесе, карђăк пристăнђ çинђен айалалла васкаса утрě.

Вěсем ҳыççăн епě те Атăл хěррине тухрăм.

Хам умра таклаттарса пыракан икě ыйткалакан çине пăхса манăн кăмăл хуçăлђě. Икě çын кěлетки пурнăçăн икě вěçěнђе тăраççě. Анђах иккěшě те хађхи вăхăтра етем опђěствишěн усăсăр, мěншěн тесен пěри происвотствăран тухса ўкнě, тепри унта кěреймен.

— Кăпиталисăм йулашкийě—пуçа шухăш кěрсе çапăнђě. Кăпиталисăм çыннăн тирне сěвет, сěлěх пек унăн йунне ěмет, йурăхсăра тухсан ăна урама кăларса пăрахат.

Епě карђăка хăваласа çитрěм те, кутамккана салтса, çур çăкăра йахăн тыттартăм. Карђăк хăйěн путса кěнě куçěсемпе ман çине тем пек тилмěрсе пăхрě те пасăр пуçланă кěллине малалла вула пуçларě. Итлес килмерě унăн кěллине, парт çаврăнтăм та малалла утрăм.

* *

Ман умри çул йал хěррине кашт çеç кěрсе тухат. Йалтан тухсан, çěлен пек авкаланса, сăрт çине хăпарат. Çул урлă хăш хăш тěлте сукмаксем каçа каçа кайаççě. Ахăртне, кусем пўкле çўремеллисем пулмалла. Хăш хăш сукмак çинђе ěне йěррисем пур, вěсен çумěнђе сурăх урисем пěђěкçеç путăксем туса нынă. Кунта выђăхсем вăрмана çўреççě пулмалла. Пулат те телейлě йал—çу каçиђђен выђăхě вăрманта савăнат. Тепěр çěрте пур—выђах-ђěрлěх çу каçиђђен те çăвар тулли курăк çисе кураймаст.

Сăрт çине хăпарса ăш писрě. Питçăмартисем тарах тар йарăмланса ана пуçларě. Картус айěнђе çўç йěпенсе çемçелсе кайрě, çамкана пайăркан пайăркан çыпçăнат. Ђылай хăпарсан канма лартăм. Çеремě питех тикěсех те мар та, çапах, тўшек пекех туйăнса кайрě. Уçă сывлăш кăкăр тулли сывлаттарат. Атăл çинђен килекен лăпка çил пите çемçеп ађашлат.

Ех, Атăлě, Атăлě! Мěн тěнђе йышăнса тăрат. Мěн аслăшě сарлса выртат. Мěн илем çутçанталăка кўрсе тăрат. Аслă шыв тăрăх улăхсем йешěрсе выртаççě, улăхсем хыçěнђе сěм вăрман, шухăша кайнă пек, сěнк ларат. Мěн ђухлě мул, мěн ђухлě вăй кунта! Етем умěнђе хурткăшшанкă пěђěккěн курăнат. Атăл таврашěнђе етем хăй куçран çухалса кайат. Çав тěрлě пěђěкçě, çав тěрлě вăйсăран туйăнат етем çут тěнђе аслашěнђе.

Анђах етем çутçанталăкпа кěрешет. Вал ăна хăйне парăнтарма тăрашат. Ав, Атал тăрăх мăн кўмеркеллě пăрăшсем, ик-виçшер хутлă прахутсем, тем тăршшěллě сулăсем çўреççě. Кам тунă вěсене? Етем.

Ав, леш йенђе тем тĕрлĕ аслă улăхсем йешĕрсе выртаççĕ. Кам уссишĕн вĕсем? Етемшĕн. Вон тата, вăрманне пласса-плассан касса йĕрлесе пĕтернĕ. Кăна каллех етем тунă. Етеме хурт-кăпшанкăпа таплаштарма май пулсан та, унăн вăйĕ хăватлă. Етем хăйĕн алли çитнĕ таран пурне те парăнтарат. Вăл çутçанталăк вăйĕпе усă курса, çутçанталăка хăйне пăхăнтарат. Етем—çуттĕнђе хуçи.

Акă, Атăл леш йенђе сĕм вăрман сарăлса ларат. Унăн сарлакăшне тăршшĕне кам виçсе пĕлес? Мĕн ђухлĕ кунта пуйанлăх. Кунта çутçанталăкăн илемлĕхĕ. Кунта çĕр сĕткенĕ темиçе çĕр, темиçе пин çухрăм аслăшĕпе çитĕнсе çитнĕ кађђă пек йаштака йăвăç, ытарма çук сар пике пек илемлĕ ђеђексем пулса хăпарат. Камăн йуратас мар—пархатарлă çĕр етеме пехиллене çак парнесене! Камăн савас мар çакăн пек илемлĕ, ђуна савăнтаракан тем аслăшĕ сарăлса выртакан йешĕл пуставпа витĕннĕ çĕр талкăшне! Епĕр вăрмана йурататпăр та, саватпăр та.

Авалхи етем вăрмантан хăранă. Пĕтĕм усал, пĕтĕм хăрушлăх авалхи етемшĕн вăрманта пулнă. Вăрманта урса, çухăрса йе ађа пек макăрса арçури асса çӳренĕ; вармаита ватă йуман айĕнђе усал киремет, çынна кураймасăр, шăлне шатăртаттарса ларнă; вăрманта йĕрĕх. вăрманта тĕрлĕ усал-тĕсел кăткă пекех кĕшĕлтетнĕ. Авалхи етеме тĕшмĕшлĕх, çук йапалана пур туса, вăрмантан хăратса тăнă.

Пурнăç хăй ĕçне тăват. Тем пек хăрушлăх пулсан та, етем вăрмана хăй аллине çавăрса илет. Хађхи вăхăтра пирĕншĕн вăрман хăрушлăх мар, пуйанлăх. Етем ĕлĕк вăрман урлă каçса тухма хăранă пулсан, хађхи вăхăтра вăл уп урлă та пирлĕ пиншер, мĕлйуншар иртсе çӳрет. Ана вăл пахалат, ăна вăл тăваткăл тăваткăл туса уйăрат. Тăваткалĕсенђе кашни йăвăçне пăхса хак парат.

Акă. тен, нумайах та çул иртмĕ, ман куç умĕнђе сарăлса выртакан аслă вăрмана та ишшенерсем, вĕреннĕ çынсем килĕç. Вĕсем вăрмана тĕрлĕ йенђен виçсе пăхĕç. Йаштака ларакан йăвăçсене касса антарса ваклĕç, татăкĕсене сăнĕç, пахалĕç. Вăрмана ексамĕн тыттарĕç. Çурта пек тӳрĕ ларакан пĕлĕте çитиђђен ӳссе кайнă йăвăçсем хушшинђен вĕсенђен те çӳлерех тăрпасем шăтса тухса, хура тĕтĕм мăкăрлантарма тытăнĕç. Йăвăçсем айĕнђе çынсем кĕшĕлтетĕç. Кунта пăравуссем урлă та пирлĕ йăшăлтатса çӳреме тытăнĕç. Вĕсем йăвăçсенђен тунă тĕрлĕ паха таварсене тĕнђе тăрăх турттарма тытăнĕç. Вăрман ăшĕнђе вăйлă промышлĕннăç ђери тапма тытăнĕ. Кунта тĕрлĕ савăтсем кĕрлесе ларĕç, вăл саватсем тавра темиçе пин пролеттарисем хăйсен етеме тивĕçлĕ пысăк ĕçне тума тытăнĕç.

Ђăн калана çав пĕр ăслă çын—етем, çутçанталăкпа кĕрешсе, хăйне хăй улăштарса пырат, тесе. Ђăнах та, ĕлĕкхи киремете, йĕрĕхсемпе арçурисене ĕненсе, вĕсене парне парса ырă кăмăл шыракан тĕттĕм, выђăхпа йунашар тăракан çынна хађхи тĕнђене хăйĕн вăйĕпе, ăсĕпе хăйне парăнтарма тытăннă пролеттари хушшинђе мĕнле пĕрлĕх пур? Етем çутçанталăка çĕнтерсе пырат, çав вăхăтрах хăй те паллами улшăнат.

Астăватăп Тотпаєра курнисене. Акă спрĕн умра вĕçĕхĕррисĕр

сарăлса выртакан çеçен хир. Пăхăсăн, кирек ăçти уйхир пекех. Ытти çĕрти пекех унта тырă акаççĕ, утă çулаççĕ, çарансем çинђе кĕтӳсем симĕс курăка кăшласа çӳреççĕ. Кунта етем çĕр çийĕне усă курат.

Анђах етеме вăл çитмест. Етем, хурткăпшанкă пек, çĕр айне йăшăлтатса кĕрет. Аллăшар, çĕршер ђалăш йе çур сухрăма çитиђђен çĕр айне ђавса кĕрсе, унтан хăйне кирлĕ йапаласем кăларат. Кунта купи-купипе, хăш тĕлте çӳлĕ тусем пекех, çĕр айĕнђен кăларнă çĕркăмрăкĕ йе тимĕр тăпри мар, вĕсенђен тăкăнса йулнă пăрахăç тусан анђах купаланса выртат. Шутласа пăхăр—мĕн ђухлĕ пуйанлăх тухмастши çĕр айĕнђен.

Йеплеха çак ĕçе тăвакан етеме ĕлĕкхи питтекантропуспа танлаштарас?!.

Шухăш хыççăн шухăш. Тоннасри шахтăсене аса илсен хам выртакан йешĕл курăкпа витĕннĕ çĕр çине пăхса илтĕм. Ех, мăнтарăн çĕрĕ! Есĕ етем ваљђи тем тĕрлĕ ырлăх хатĕрлесе хунă. Акă, тен çакăнтах, ман айра, ђăваш ĕççынĕ ваљђи калама çук нумай пуйанлăх капланса выртат. Тен кунта тем тĕрлĕ паха минералсем пур. Кам пĕлет, тен нисăта та мар, çак выранта пĕтĕм ђăваш çĕрšывĕн пулас промышлĕннăç кăвапи.

Анђах кам пĕлет кăна çав. Хаљхи вăхăтра пулсан та, епĕр хамăр вайпах усă курма пултарайас çук, мĕншĕн тесен капиталисăм ђăваш çĕршывĕн сĕткенне ĕмсе, ăна ђухăнлатса, имперлетсе хăварнă.

* * *

Çапла шухăшласа выртса епĕ хам канма ларнине те манса кайнă. Тепре ђĕлĕм туртам та утам малалла тесе выртаттăм, айалтан ман паталла пĕр çын хăпарнине курах кайрăм. Çынни инçех те мар, анђах питђĕ куçĕсем курăнмаççĕ—çӳлелле хăпарнă май питĕ пĕшкĕнсе кĕнĕ. Сылтăм аллине хăй туратлăрах туйа тытнă. Туйи çине питĕ тайăнса пусса пырат. Çине çĕтĕкрех кăвак сăкман тăхăннă. Урисене мала йарса пуснă май, сăкман арки айĕнђен шĕп шĕвĕр ђĕркуççисем ылмашса пĕрин хыççăн тепри курăнса пыраççĕ. Ахăртне, ку вăйран тайăлнă çын пулмалла.

Утакан çын малаллах, теççĕ ваттисем. Çӳлелле хăпаракан çын та, епĕ пăхса выртнă çĕртех, ман пата çывхарђĕ. Хаљ ĕнтĕ епĕ ăна лайăхах куратăп. Ватах мар çын, аллă çула та çитеймен пулмалла. Анђах питĕ имшерĕн курăнат. Çăм шĕлепкине хăй пуç çине пусарах лартнă. Шĕлепки айĕнђен икĕ пĕђĕкçеç çивĕђ куçĕсем ман çине шăтарса пăхаççĕ. Мĕнле çын выртатши тесе пăхат пулмалла старик ман çине.

— Ларса ђĕлĕм турт, хăта, урасем канђђăр пăртак, терĕм епĕ вăл ман тĕле çитсен.

— Ђĕлĕмне туртмастăп та-ха ăна, анђах канма канасах пулĕ, питĕ ывăнтарђĕ, терĕ те старик, çул çинђен епĕ выртакан çерем çинелле пăрăнђĕ.

— Ăçталла кайма тухнă есĕ капла кутамккасемпех, тесе ыйтрĕ старик ман сумма майланса ларсан.

Ăҫталла кайнине каласа патăм.

— Епĕ палланӑ ҫын марши терĕм те, ҫук иккен.

Старик ман ҫине тепĕр хут пăхса илҫе.

— Ытла та вăй пĕтетҫке ҫав пĕр ватăлас йенне кайсан, терĕ вăл пăртак сывлăш ҫавăрсан,—шалт вăйран кайан вара пĕр ҫул ҫине тухсан.

— Пит ватах та марҫке есĕ, терĕм епĕ тĕлĕннĕ пек пулса.

— Сывлăхсем пĕтрĕҫке, аҫам. Сывлăхсем ҫапла мар. Сывлăх пулсан епĕ ҫапла туйапа та ҫӳретмĕттĕм те, сывлăх ҫукки пĕтеретҫке.

Епĕ, ним калама пĕлмесĕр, сӳне пуҫлана ҫикаркка ĕме пуҫлалăм. Тапак тĕтĕмĕ старик йеннелле кайрĕ мĕн—пырăнҫе темскер хăй-хăй турĕ те, старик кахлатса ӳсĕре пуҫларĕ.

— Акă, пуҫланҫĕ ĕнтĕ, терĕ старик ӳсĕрнĕ май сăмахсене таткала таткала—ҫе... лĕм... тĕ... тĕ... мĕ... йурамастҫке, терĕ вăл тем тĕрлĕ тертленсе.

Старик ҫылайҫҫен кахлатса ларҫе. Ӳсĕрнĕ май хăйĕн ӳтпĕвĕ темтĕрлĕ силленет. Кăкăрĕ, тисе кайнăскер, ках темессерен ҫурăмĕ ҫумне туртăнат. Ҫăра сурҫăкне сурса кăларса пăрахма пĕшкĕннĕ пирки, ӳсĕрнĕҫем, пуҫĕ ырхан ҫĕркуҫҫисем хушшинелле анса пырат. Аптăранипе старик шĕлепкипе ĕнсе ҫинелле тĕртсе лартрĕ. Шĕлепке айĕнҫен сайрарах кăна тарланипе пайракаланса кайнă сарă ҫӳҫ курăнса кайрĕ. Пуҫ тӳпи хăйĕн кăшт кукшалана пуҫланă, пит шухăшлă ҫын пулмалла мĕн ку.

Старике ҫелем тĕтĕмĕ ӳсĕрттернине сиссе. епĕ туртса пĕтермесĕрех ҫыкаркка сӳнтертĕм те айалалла сирпĕтсе йатăм.

— Ҫак инкек аптратат мана, терĕ старик пăртак лăплансан. Акă, ҫитес кĕркунне ҫиҫĕ ҫул ҫине кайат ĕнтĕ, ҫапах та вĕлермест. Тоссатнă вĕт,—самай хĕрсе ĕҫлес вăхăтра ҫапла кахлатса ларас пулат. Ĕлĕк, вăй питти ҫухне ĕҫленĕ. анҫах усси хамăра пулман, халҫ ĕҫлесҫĕ,—сывлăхĕ пĕтсе ларҫĕ. Ей, пурнăҫĕ, пурнăҫĕ, кама кирлĕ пулҫĕши епĕр тенҫере ҫуралса ӳсни, терĕ старик хурлăхлă сасăпа.

Старик сăмахĕсем ҫерене кайса тиврĕҫ. Сасартăках ман пуҫа тем тĕрлĕ хирĕҫӳллĕ, тем тĕрлĕ йăвăр шухăшсем кĕрсе капланҫĕҫ. Ҫанах та, куп пек ҫурри ҫерĕ, ҫурри вилĕ ҫынсем кама кирлĕши? Мĕн усси пурши вĕсен тĕнҫере пурăнни? Усси ҫук, анҫах ним тума ҫук йапала—вĕсене пăхса усрас пулат, вĕсене пулăшу парса, йăвăр, телейсĕр пурнăҫĕн йулашки кунĕсене ҫăмăллатас пулат. Шухăшласан, ҫӳҫ-пуҫ вирелле тăрса каймалла—миҫе ҫĕр пин, тен миҫе мĕлйун ҫын, кăпиталисăмлă Раҫҫейе пĕтĕм сĕткенне парса хăварса, Совет влаҫĕ вăхăтне нимпе йурахсăр, ҫахуткăллă, трахомлă, уксах-ҫăлахлă ахлатакан, ҫерене ҫуракан сасăпа йăнăшакан ҫар пулса йулҫĕҫ. Сӳсе арласан ҫӳпек пулат. Ҫӳпĕк, сӳс йулашки пулсан та, тĕрлĕ ĕҫе кайма пултарат. Ҫак ҫынсем кăпиталисăмшăн ҫӳпĕкрен те кайарах пулнă, мĕншĕн тесен вĕсенҫен мĕн йурăхлине илнĕ, йулашкипе навус вырăнне

кăларса пăрахнă. Тĕлĕнмелле тискер ĕҫ, анђах кăпиталисăм йĕркинђе куллен кун пулса пыракан йапала.

Сасартăках ҫурăм тăрăх сивĕ ђупса ђĕтретсе илђе. Ҫан ҫурăм ҫинђен темскер сĕвĕнсе анна пек туйăнђĕ. Старик йеннелле ҫавăрăпса пăхрăм. Ўслĕк иртнĕ хыҫҫăн, ҫăра сурђăкĕсене лађлаттарса ларат̆. Йĕрĕнђĕк, кăмăла пăтратакан карттин. Такама ҫилленес килет. Анђах ђĕлхе ҫав вăхăтрах лăплантаракан йăваш сăмах хушат̆:

— Апла ан калаха, старик. Усăсăрах мар пулĕҫке есĕ пурăнни те. Акă, халĕ епĕр ĕлĕкхи Раҫҫей вырăнĕнђе ҫĕнĕ пурнăҫ тăватпăр. Хуласенђе промышлĕннăҫа хамăр алла илтĕмĕр. Савăтсене, шахтасене йусатпăр, ҫĕнĕ рутниксем ђаватпăр. Епĕр хамăр умма мулхуҫисенђен йăлтах хăтăлас сатађ лартрăмăр. Ҫак ĕҫре хресђен те питĕ пысăк вырăн йышăнса тăратҫке. Акă, есĕ сăмахран тырă акатăн, ҫăкăр тăватăн, ху та тутă, ҫын вађђи те пур. Хуласенђе мĕн ђухлĕ ҫын, вĕсем пурте хресђен тыррипе тутă вĕт. Совет влаҫĕ хулапа йала тађă ҫыхăнтарса тăрат̆—хресђен хулана тырăпа ђĕр тавар парат̆, хула йала хатĕр тавар парат̆. Ҫакăнта есĕ те пĕр сыпăк пулса тăранҫке.

Ман сăмахсем хама питĕ тĕрĕс пек туйăнђĕҫ. Ђăнах та, хулапа йалăн сотсиалисăмлă ҫыхăнăвĕнђе кашни ĕҫхресђенех пысăк вырăн йышăнса тăрат̆.

Анђах епĕ калани старике пĕртте лăплантармарĕ. Вăл ман ҫине ҫилленнĕ пек ђарр пăхрĕ те:—Есĕ ху ăҫтисем пулатăн, тесе ыйтрĕ.

Хам хăш йенђи ҫын иккенне каларăм. Старик ĕлĕксенђе ҫўренĕ ҫын пулнă пулмалла. Пирĕн йала аван пĕлет. Пĕлĕшсем те пулнă мĕн унăн ĕлĕк унта.

— Вот, товариш, терĕ старик вырăсла. Пирĕн хамăр йала ҫитнђен пĕрлех каймалла пулатха. Акă, кунта сăртран хăпарсан пирĕн йалăн ыраш пуссийĕ пуҫланат̆. Есĕ ыраш калђине пăх та вара кам кама тăрантарнине кала. Ей, ађам, выҫă вилетпĕр кунта, не то што ҫынна тăрантарма, хамăра тутă пурăнмаллăх тырă тăваймастпăр епĕр кунта, терĕ старик йулашкинђен.

Епĕ кунталла ђанах тырăсем нађар пулнине илтнĕђђĕ. Ҫавăнпа купти пурнăҫа хăй курса ђатна ҫынна хирĕҫ сăмах витейменнине кура, урăх нимех те шарламарăм. Старик те текех сăмах вакласшăн пулмарĕ курăнат̆—ҫăпата кантри айĕнђен тухса кайа пуҫланă пурттипе вĕҫне майласа хĕстерђĕ те, майĕпен ура ҫине тăра пуҫларĕ. Сывмар ҫыннăн шăмшакки те тĕрексĕр ҫав. Епĕ, ҫамрăк ҫын, старик таринђен кутамккана та ҫурăм хыҫне майласа ҫыхма ĕлкĕртĕм.

— Ухмах ҫав хамăр та епĕр, терĕ старик ура ҫине тăрсан— Акă, пăх ĕнтĕ—кам калас мана хĕрĕх тăххăрти ҫын тесе. Вĕт хĕрĕх тăххăрти ҫын вăй питти ҫын пулмалла. Мехер, старав пулсан хĕрсе ĕҫлемелле, епĕ пур пайан-ыран вилĕм кĕтсе пурăнатăп.

Ҫав ҫуртшăн пĕтертĕм ҫав хам сывлăха. Ҫурт туса ҫын шутне кĕрес терĕмҫке. Пирĕн ђăвашăне пĕлетĕн ĕнтĕ—ђаваш мĕн ўссе ҫитсе тупăка кĕрсе выртађђенех ҫуртшăн асапланат̆. Айăхпе ҫы-

вăрмаст. апатне çимест—çурт тăвасшăн тертленет. Вĕт, мур илесшĕ, ĕмĕрне хыт çăкăрпа паранкă çисе иртерет çуртпа пурлăхшăн.

— Çамрăк ђухне хама хам шелллемерĕм, ытла çĕмĕрĕлсе пĕтрĕм, терĕ старик пăртак ђарансан.—Тăлăх ÿсрĕм, атте-анне хÿтлĕхне кураймарăм. Аннерен пилĕк çулхи ађа йултăм—хырăм пăрахса вилђе. Çÿлти патшалăхра пултăр, мĕскĕн.

Старик шĕлепкине хывса хă[illegible] çине хĕрес хурса илђе.

— Аттерен те хÿтлĕх курасси пулмарĕ, терĕ старик шĕлепкине майласа лартсан.—Атăл çинђе ĕçлеђђĕ вăл—хăш çул матрусра, хăш çул сулă çинђе. Астăватăп—атте хутран-ситрен киле таврăнсан питĕ тарăхса калаçађђĕ—мĕн ђул ĕçлерĕм, путлĕ пурнăç тăваймарăм, тетђĕ. Питĕ шеллеттĕм вара ун пек ђух епĕ аттене.

Анне вилсен атте ĕçе пуçларĕ, тарăхса пухнă пурлăх пĕккине те салатма тытăнђĕ. Пĕр лаша, икĕ енеђђе. Пĕр ĕнине сутрĕ. Сурăхсем нурђђĕ—пĕђĕккĕн пĕђĕккĕн пĕтрĕç. Ампара ĕçсех йађе. Витене, пысăк тесе, улăштарђĕ. Кайарахпа лашине те çавăтса илсе тухса кайрĕ. Епĕ вуникке кайсан тепре авланма шухăш тытрĕ. Майра илес терĕ. Варушка-манашкă тетђĕç, çавна çавăтса ныђе киле. Анђах нумайах пурăнмарĕç—таçта хăйаматра сĕтĕрĕнсе çÿренĕ майра та ђăтаймарĕ, нађах çухалђĕ. Майри тарсан атте хăй те нумайах пурăнаймарĕ вара. Тепĕр çуркуннех Атăл çинђе сулă çыхнă ђух ÿсĕрпе шыва кайса вилнĕ терĕç.—Старик каллех шĕлепкине илсе тепĕр хут хĕрес хурса илђĕ.

— Вара епĕр аппапа иксĕмĕрех йултăмăр. Анна вунçиђђĕ тултарса пырађђе, епĕ вунвиççĕ çине пуснă. Мĕн тăвас айван ађасен? Çурт пушă, çимелли çук, выђăх-ђĕрлĕх шăрши такçанах çук. пĕтнĕ, çĕрре икĕ йатне те тара панă. Ним шухăшласа ним тума çук.

Çав çуркуннех хамăр ратне пеккисем мана кĕтĕве кÿртрĕç. Тракка Мађђи тетђĕç, пеђђен çын, ђылай ватăскерђђĕ. Елĕксенђе Мађђа ђиперех пурăннă тетђĕç, анђах спурщђек пулнă ђухне кантуртисем кăпитантсăсене тĕрĕс çырса паманнипе куланай укçи нумай тулман тет те, вара çуртйĕрне туркипе сутса тÿлеттерђĕç тет. Хут пĕлмен çынна лартасси нимĕн те мар вĕт.

Пирвайхи çул çак Тракка Мађђине çÿрерĕм. Мађђа мана питĕ йуратсађђĕ, хăйĕн çăкăрне те парађђе. Кĕркунне тырă пухкаларăмăр. Ку пире нумай пулăшрĕ, хĕл kaçрăмăр, çуркуннене тухрăмăр. Çуркунне çăмарта патне кайрăм. Прох Çташпанђă, тетђĕç. Ђаплă хуçађђе, ун пекки таврара та çукђĕ. Хађ, хам кайса курман та, пĕтнĕ тет йăлтах. Хăй вилнĕ тет, ывăлĕсем тарнă тет. Влатимĕрски вырăсђе хăй.

Унта виçĕ çул çÿрерĕм. Усси пулмарĕ. Ђун тухасран пурăнни анђах пулђĕ. Канĕç çукђĕ, пĕрмай хăвалађђĕç, апатне аран-аран паркалатђĕç. Хуçи усалђе, прикашђĕксем çапађђĕç, мăшкăлатђĕç. Ђăтаймарăм, пăрахса таврăнтăм.

Çимĕкре анна кађђа кайрĕ. Йышлă çемйене кайрĕ. Йысна кĕркунне уйăрăлса тухре. Пурăнма хамăр патах килђĕç. Çапла вара хам салтака кайиђђенех пĕрле пурăнтăмăр. Салтакра тăватă çул

çӳрерĕм. Унтĕрохвитсер пултăм. Пит çăмăлђђĕ шăмпаккăм. Кимнаçтекре ман пекки çукђĕ. Ун ђухне асăрхаман та, ак хаљ астутарат— пит те çĕмĕрĕлсе пĕтрĕм çав салтакра та.

Салтакран тавăрăнсан аппасем хăйсен çуртне тухрĕç. Епĕ салтакра ђухне çуртне çавăркаласа лартнă. Каллех вара пĕђђене тăрса йултăм, каллех çурт пушанса йулђĕ. Тыткалама савăт-сапа çук. Ĕçлеме лаша çук. Вара ăçта ĕç пур, унта ĕçлеме тытăнтăм—ăçта ђанта çапан, ăçта вăрман касан, хăш ђухне Атăл çине те пырса çапăнан. Çапла аппаланкаласа лаша туйанса йатăм. Лаша илсен пурнăç та тепĕр майлă çавăрăнса кайнă пек туйăнђĕ. Тыррине хам ака пуçларăм, вăрманне хам лашапа турттараттăм. Авланса йатăм. Хĕрĕ хам пекех ђухăн килтен пулђĕ. Тен çавăнпах та-и иксĕмĕр питĕ килĕштертĕмĕр. Слав пух турра, карђăк çине халиђђен ал хурса курман. Авлансан вара мĕн çак ӳслĕке кайиђђенех улпут патĕнђе вăрман ĕçлесе пурăнтăм. Хам ĕмĕрте епĕ кăларнă вăрманпа çĕнĕрен висĕ йал тума пулат. Питĕ асаплантăм, хама хам хĕрхенмерĕм. Çĕрĕ çĕр мар, праçникĕ праçник мар ĕçлерĕм. Канăçне пĕлмерĕм, йепле те пулсан çурт çавăрса çын шутне кĕрес терĕм. Çуртне турăм, сывлăха ђиксе хутăм. Акă, куратăн ĕнтĕ йепле кахлатса пыратăп. Çак хама хам хĕрхенменшĕнех пулђĕ. Пĕрмай çын ĕçне ĕçлерĕм, çынна йурас терĕм. Йурарăм... спаççипе терĕç—кĕтсех тăр.

Старикĕн асаплă пурнăçĕ мана та хурлантарђĕ. Вăл каланă семĕн ман пуçа йăвăр шухăшсем пусса пыраççĕ. Ђапах та, мĕн ђухлĕ çынна тертлентерсе пурăнат харпăрлăх çиçтеми. Мĕн ђухлĕ етем çуртшăн, пурлăх пухасшăн асапланат, канăçне пĕлмесĕр хăйне хăй пĕтерет, сывлăхне çухатат, йулашкинђен мĕнле çарамас çуралнă, çавăн пекех тупăка кĕрсе выртат. Кăпиталисăм çиçтеми çапла вăл—çын хăйшĕн тесе ĕçлет, ĕç тупăшĕ мул хуçисен кăсйисене кĕрсе пырат.

— Акă, тата ватăлмалăх кунсенђе те капма пулмарĕ, терĕ старик пăртак пырсан.—Аслă ывăл манăн Мĕтри, Хĕрлĕ çара прĕккĕн кайнăђђĕ шуррисем килнĕ вăхăтра. Нумай çĕре çитсе курђĕ вăл— Урал тăвĕсем çинђе, Çĕпĕрте, Украйăнра шуррисемпе çапăçрĕ. Йулашкинђен икĕ çыру Варшшав патĕнђен килђе.—Атте, Варшшав патне çывхарса пыратпăр, ыран-пайан Варшшава илес пек тăратпăр тесе çырнăђђĕ йулашки çырăвĕнђе. Унтан вара çыру мĕнĕ пулмарĕ.

Кунтан пĕр сакăр çухрăмра пасарлă йал пур. Пĕркунсенђе хамăр йалсем пасара кайнă. Пасара кайнă та темле çавăнта паљаксем патĕнђен пленран тавăрăннă салтака тĕл пулнă тет. Вăл Мĕтрипе пĕрлех пулса тет. Вĕсен ротти йăлтах пĕтнĕ мĕн. Кусем вара плена çаклантăмăр тесе калат тет. Мĕтри те пĕрлехђĕ тесе калат тет, анђах лакĕртен çухалђĕ тесе калат тет. Нимĕçсем патне тарса ӳкрĕ пуле вăл, питĕ кансĕрђђĕ пурăнма паљаксем патĕнђе тесе калат тет. Çавăнтан тĕплĕрех кайса ыйтса пĕлем терĕм те, тел килмерĕ—ĕçлеме тухса кайнă тет.

Старикен, йулашки сăмахĕсене каланă ђух, сасси ђĕтре пуçларĕ. Сăмси нăш-нăш тума тытăнђĕ. Епĕ те, варçăри хăрушлăхсене аса илсе, шухăша кайрăм.

Старик пуçне ӡиксе туйнпе таклаттарса пырат. Хăй йăлтах ывăнса çитнĕ пулмалла—паçăрхинӡен те пĕшкĕнерех панă. Тем шухăш ĕнтĕ унăн пуçĕнӡе. Те ывăлне шеллесе хуйхине пусараймасăр пырат, те килти ĕççем синӡен шухăшлат, те тата урăх шухăшсем çаврăнаççĕ унăн пуçĕнӡе.

Епĕр кăшт вар пеккине антăмăр та каллех сăрталла хăпара пуçларăмăр. Ман старик йăвăррăнах сывла пуçларĕ,—ахăр, ывăнса çитрĕ пулмалла. Сывланă май, хăйĕн пырĕнӡе хăй-хăй туса пырат, кăкăрĕнӡе те темскер лăкăртатат. Епĕ, ăçта ларма авантарах вырăн пурши тесе, пăхкалама пуçларăм. Анӡах çерем тавраше курăнмарĕ.

Старик те, ман шухăша сиснĕ пекех:

— Ак, çак сăртрап хăпарсан ӡут кăна çерем пекки пур. Крап, теççĕ ăна пирĕн. Çавăнта ларса канăпăр, пит ывантарӡĕ, терĕ.

Ӡăнах та сăрт çине улăхсанах пĕр лаптăк çерем пекки курăнса кайрĕ. Çерем урлă, пирĕн çула татса, пруӡак иртсе кайат. Пруӡакăн пирĕн йенӡе, çуртри пусси пулмалла, сапсайра калӡа ӡĕлтĕртетсе ларат. Тепĕр йенӡе ыраш калӡи. Калӡа айĕнӡе хĕрлĕ-шупка тăм, хĕвел питтинӡе пиçĕхсе, вырăнăн-вырăнăн пӳрне хулăмĕш çурăла çурăлъ кайнă. Çурăкпа çурăк хушшинӡе тинпĕ тăм, тирĕк тĕпĕ пек, авăна авăна кĕпĕ. Калӡи сайра. Тунисем çинçе. Ӡавашсем хăрсуран теççĕ. Хăрсуранпа ӡирленĕ çын темле майпен тинсе пырат. Алли-урисем çинçелеççĕ, пиӡĕ-куçĕсем, сӳннĕ вуӡах пек, хуралса лараççĕ. Сулахай йенӡи ыраш калӡине курсан темме çак хăрсуранпа асапланакан çын аса килӡĕ.

— Ку çуртри пусси хамăр çумри Мулкаӡ касси йалĕн. Ырашĕ пирĕн. Вот, пăх ĕнтĕ—пирĕн телей йепле çĕкленсе килет кăçал, терĕ старик ыраш пусси çине туйнпе кăтартса.—Есĕ калатăн епĕр çынсене тăрантаратпăр тесе, ăçта унта çынпа тăрантармаллăх тырă пултăр. Купта кăçал хамăрăн выçă вилес пулат. Пирĕн хресӡенĕн çавă ĕнтĕ: турă парат—пулат, турă памаст—ирĕксĕр илме çук, терĕ вăл йăвăррăн сывласа.

— Турă парасси вал...

Старик епĕ мĕн калассине пĕлни паллах. Турă парат тесе шаннине хирĕç сăмах вăл пĕрре анӡах илтмен пулмалла. Çавăнпа та теп вăл, ман калас сăмаха пӳлсех, туррине те кăшт ӳпкелесе илӡĕ:

— Турри те çав куӡухне нире питех илĕртсе каймаст. Çăмăрĕ çук вĕт. Çăмăрĕ пулсан кунтъ та тырă авапах пулкалаканӡӡĕ те, çăмăрне парасшăн марçке турри, терĕ.

Сăмах вĕçне турă çинех туса пĕтернине кура епе те турă ыйтăвĕ çинӡех ӡарăнас терĕм.

— Тура çине шанасси хăйне теха вăл, анӡах тырă тухăçлăхне турăсăр та хăпартма май пуррипе манас пулмаст.

Сисрĕм—ман сăмахсем старикшĕн ним вырăнне те пулмарĕç, ара ăçтап пĕлме пултартăр ĕмĕрне турă çине шанса иртернĕ тĕттĕм çын çĕрççĕн çĕнĕ çитĕнĕвĕсене!

— Авă, терĕм, Туркестанрах çу каçиӡӡеп пĕр тумлам çăмăр ӳкмест. çапах унта хресӡенсем сиртеп лайăхрах пурăнаççĕ.

Старик җӗнмест, вӑл епӗ малалла мӗн калассине кӗтет.

— Унта хресҗенсем хӑйсем ҫӑмар ҫутараҫҫӗ. Вӗсем вуншар, ҫирӗмшер ҫухрӑмран канавсем тӑрӑх шыв кӳрсе, хӑйсен уйӗсене шӑвараҫҫӗ. Ҫавӑнпа вӗсен тырри-пулли аван пулат. Вӗсем турӑран ҫӑмӑр кӗтессине такҫанах пӑрахнӑ.

— Ҫӗрӗ пулсан ӑна епӗр те ӗҫлеме пӗлӗттӗмӗр те, ҫӗрӗ сахалҫке, ҫав кансӗр. Халӑх ӗрҗет, анасем пӗрмайах вакланса пыраҫҫӗ—пӗр савӑнса суха тумаллӑх вырӑн ҫук вӗт, тек ҫаврӑн пӗр ансӑр лаптӑк ҫинҗе. Ҫӗр мӗн парассине парат вӑл. анҗах унтан та ытлашшине илме ҫук.

— Ҫӗрӗ җанах та сахал ӗнтӗ вӑл, ҫапах та пӗлсе ӗҫлесен сахал ҫӗртен те тырпул нумайтарах илме пулат. Акӑ, Тани хресҗенӗсем, вӗсен ҫӗрӗсем пирӗннинҗен те сахал, анҗах ҫапах та пиртен вӗсем иквиҫӗ хут ытларах тырпул туса илеҫҫӗ. Ӗҫлеме пӗлни кирлех вӑл. Җӑн малтан таҫтан авалтан йулнӑ сухапуҫне пӑрахас пулат. Вӑл пирӗн йалхуҫалӑхӗ малалла кайассине җарса тӑрат. Тӗрлӗ машинисем туйанмалла. Машинисемпе ӗҫлесен авантараххине пӗлетӗр вӗт есӗр?

— Пӗлетпӗр те...

— Пӗлетӗр пулсан мӗн пӑхса тӑратӑр тата, туйанмалла анҗах. Вон, йутпатшалӑхсенҗи хресҗенсем—вӗсем пур ӗҫе те машинисемпе тӑваҫҫӗ. Ҫавӑнпа та вӗсем сиртен лайӑхрах пурӑнаҫҫӗ.

Старике каллех ӳслӗк аптӑрата пуҫларӗ. Ун кӑкарӗнҗе малтан хӑйлатсе илҗӗ, унтан хӑрлата пуҫларӗ. Старик ман алла тытрӗ те пуҫне пӗшкӗртсе темиҫе хутҗен ӳсӗрсе тусан ҫине ҫӑра сурҗак кӑларса пӑрахрӗ.

— Есӗ манпа утмалли ҫын мар таха, ҫапах сана пӑртак җарса тӑрам, терӗ вӑл пӑртак җарансан.—Епӗ сана пӗр халап каласа парам. Ӑна ӗлӗксенҗе пирӗн йалти Каҗҗа старик калаҗҗӗ. Каҗҗа питӗ җухӑн ҫынҗҗӗ. Вӑл ӗмӗрте те хисеплӗ ҫынсемпе йунашар ларса ҫӑкӑртӑвар ҫисе курман.

— Каҗҗа пиҗҗе, ма авланмастӑн есӗ халӗ те? тесе ыйтаттӑмӑр епӗр унтан хамӑр ҫамрӑк җухне.

— Мана пӳрни ӳссе ҫитменха, ӳссе ҫитсен авланатӑп, теҗҗӗ вӑл.

— Хӑҫан ӳссе ҫитет?

— Ан васкӑрха,—малтан ҫуралтӑр.

— Хӑҫан ҫуралат?

— Амӑшӗ ӳссе ҫитсен?

— Амӑшӗ хӑҫан ӳссе ҫитет?

— Ҫуралсан...

Тата малалла та ҫаплах—хӗрӗ амӑшӗ ӳссе ҫитсен ҫуралат, амӑшӗ—ҫуралсан ӳссе ҫитет, асламӑшӗ ӳссе ҫитсен амӑшне ҫуратат—пӗр сӑмахпа каласан асламӑшӗ те ҫук, амӑшӗ те ҫук, Каҗҗа пиҗҗе ваҗҗи хӗрӗ те ҫук. Ҫавӑнпа Каҗҗа пиҗҗе хӑйне пӳрнӗ хӗр ӳссе ҫитессине кӗтсе пуранаймарӗ—авланаймасӑрах вилҗӗ.

Вот, пирӗн пурнӑҫ та ҫавӑн пек ӗнтӗ—машин илес—тырӑ сутас пулат, тырӑ сутас—ӑна ытларах туса илес пулат, ытларах тӑвас—

ес калашлĕ машшина ĕçлемелле,—вот, хайхи Кађђа ниђђе хĕрĕ пекех пулса кайрĕ. Машшинсене, вĕт, хађхи влаç анђах çăмăллăхпа пара пуçларĕ. Елĕк вĕсене пире нитех кăтартман. Машшин илес пулсан тыррине нумайтарах сутас пулат. Тырри, хăвах пĕлетĕн, пирĕн çитмест, мĕншĕн тесен çĕр сахал. Çĕрĕ ытларах пулна пулсан тырри те çителĕклĕрех пулнă пулĕђђĕ. Çав çĕр сахалли нĕтерет те пире. Пирĕн халăх çĕр ĕçне йуратат. Пирĕн ђăвашсен пек ĕçлеме йуратакан халăх çук та пулĕ тетĕп епĕ. Анђах ĕçлемеллĕх çĕрĕ çук. Çĕр çителĕклĕ пулсан пирĕн ђăвашсем пек лайăх пурăнакан халăх та пулас çук...

Пуç тăррин ђе тăрисем йурлаççĕ. Айалта, ђĕлтĕртетсе ларакан ыраш калђи хушшинђе, темиçе çĕр çĕвĕ çĕлекен машшин ĕçленĕ пек, шарђăксем ђаштăртаттарни илтĕнет. Уйра никам çук. Тĕнђе пушă. Пĕр епĕр анђах старикпе иккĕн тусанлă çулпа çĕр пиђĕ тăрăх кăштăртатса пыратпăр.

— Пирĕн пĕтĕм никек çĕр сахаллинђен килет, терĕ старик пĕр икĕ ана урлăш ђĕнмесĕр пынă хыççăн.—Акă хăвах шухăшла. Çиме çитмест. Мĕншĕн? Çĕр сахал, çителĕклĕ тырпул туса илмеллĕх çук. Выђах-ђĕрлĕх пађар, вĕтĕ, хăйĕн тăкакне витме пултараймаст—каллех çĕр сахал пирки, çарансем çук, утă таврашĕ тума çук. Халăх хушшинђе килĕшӳ çук—каллех çĕр сахал пирки, пурăнма тăкăс, ниçта ирĕккĕн ура йарса пусма çук, пĕтĕмпех йышăнса илнĕ, ăçта усă курма пур—вăл татăка кашни хăй аллине çавăрса илме тăрăшат. Вĕт, калама намăс—вăрă-хурах пек пĕр-пĕрине вăрлаççĕ. Калăпăр, сан лайăхрах ана пултăр—ăна сан аллунтан—çăлса илме тапăнаççех. Вăрă, хут. вăрлат, çын курмаст. Кунта, вĕт, тăр кăнтăрла çĕрсĕр тăратса хăвараççĕ. Çавăн пирки халăх хушшинђе хирĕçӳ пырат те. Хирĕçеççĕ, кăшкăраççĕ, пĕрне пĕри çапса амантаççĕ, вĕлереççĕ,—пĕтĕмпех халăх тăкăс пурăннăран. Хăвах шухăшла—çĕр ирĕккĕн пулсан мĕншĕнха çав тĕрлĕ тискерленес?—Вĕт, пурне те ирĕк, пурне те çителĕклĕ.

— Акă пăх, терĕ старик пăртак сывлăш çавăрсан,—ав, унта пруђак хĕрĕнђе пĕр пĕђђен хĕрес ларат. Мĕн пирки килсе лартнăха ăна кунта, уй варне? Çав çĕр сахаллийех кӳрсе ларттарђĕ ăна çакăнта. Çĕр пурне те çителĕклĕ пулнă пулсан, çак хĕрес те пулас çук çакăнта, терĕ пирĕн çулран пĕр çур анапӳ йахăн сылтăмалла пĕр пĕђђен ларакан йăвăç хĕрес çине кăтартса.

Уй варринђе, вăрман хĕррисенђе йе çырма пуçĕнђе çавăн пек пĕђђен хĕрессем ларнине ђылай куркаланă епĕ. Вăл хĕрессем—халăх пурнăçĕнђи историллĕ токкумĕнтсем. Ђылайăшĕ вĕсем халăх хушшинђе пулса иртнĕ пысăк ĕçсенех кăтартаççĕ. Астăватăп—пирĕн йалта Хветĕр пурђĕ. Çамрăксем ăна Сăсăл Хветĕрĕ тетђĕç, мĕншĕн тесен вăл Шур Усăп патенђе мелникре пурăннă ђухне пĕрре армантан сăсăл варланă тесе йат тухнăђђĕ. Ђăннипе сăсăлне Хветĕр вăрламан та иккен, ăна арман хуçи ывăлĕ Хветĕр çук ђухне тутар усламçа сутса йанă мĕн. Çак Хветĕрĕн хуçи пĕрре хыснаран ултçĕр пăт ыраш авăртма путрет илет. Вăхăђĕ кĕркунне пулнă. Çĕнĕ тырă алла кĕнĕ май

çăнӑх авӑртакан ахаҫ те сахал мар. Хветĕрĕн ĕç çитет. Путрет илсен, хайхи, ĕç тата та капланса килет. Авӑртса пӑрахасах пулат вĕт. Хветĕр кунĕн-çĕрĕн армана çавӑрттарат. Çил вӑйлӑ. Хуçпваскат. Нимĕн тума та çук—ĕçлес пулат.

Пĕр каçхине çил ытла та вӑйлӑн килҫĕ тет. Шур Уçăп савӑнат. Савӑнмасӑр—ҫул айĕнҫен, вĕт, кĕрĕк çанни пек йавӑнса тухат çăнӑх. Хветĕр каларĕ тет хуçине:

— Уçăп пиҫҫе, арман хӳрине пӑртак пӑрас, тен çил ытла килсе çапӑнсаг арман тӑррине ывӑтса йарĕ, тесе каларĕ тет.

— Йепле ларат, çавӑн пекех авӑртӑр, терĕ тет Уçăпĕ Хĕветĕре хирĕç.—Йар полнӑй хот, çĕр каçа аллӑ пӑт туса пар, çил пур ҫухне усӑ курса йулас, терĕ тет. Хветĕре мĕн! Хуçи каланӑ—Хветĕр итленĕ. Армана çиле хирĕç тӑратат. Çил тӑпӑлтарат. Арман кĕрлет. Ҫулĕ çине пӑхсан, çавӑрӑнни курӑнмаст. Уçăп савӑннипе аллисене сĕркелесе анҫах çӳрет. Анҫах савӑнмалли нумайах пулмарĕ. Арман çăтӑр-çатӑр тӑва пуçларĕ. Çил кас-кас килсе çапӑнмассĕрен арман, сив ҫир тытнӑ пек, ҫĕтресе илет. Арман ҫĕтренĕçем Уçăц ҫĕри те кӑртлатма тытӑнат. Ҫӑтаймарĕ Уçăп.

— Хветĕр, терĕ тет вӑл тытӑнкӑллӑрах сасӑпа,—пыр, ҫасрах арман хӳрине йал йенелле пӑр, унсӑрӑн армана тĕпне çитиҫҫенех çĕклесе çапма пултарат, терĕ тет. Хветĕр армантан вĕçтерсе тухса кайат. Минутран арман хӳри ҫĕрпклетме те пуçларĕ тет. Анҫах çав вӑхӑтрах аслати пек хӑрушӑ сасӑ шатӑрттарса йарат. Арманти çынсем хӑранипе хытса кайаççĕ. Никам ним ҫĕнме пĕлмест. Пурте Шур Уçăп çине пӑхаççĕ. Уçăп ҫӑннипе те шуралса хытса кайнӑ. Тутисем анҫах кӑрт-карт туртӑнкаласа тӑраççĕ.

— Пĕтрĕ арманӑн, тесе каларĕ тет. вӑл ни хыттӑн, ни шӑпшӑн пӑртак тӑн кĕрсен. Çынсем ҫул çине пӑхаççĕ. Ҫул ĕлĕкхи пекех çаврӑнат.

— Мĕн пулҫĕ?!..

— Арман çунаттине хуçса пӑрахрĕ пулмалла, тесе каларĕ тет пĕри ҫул çаврӑннине кура.

Тухса пӑхаççĕ. Ҫанах та, шӑп арман хапхи уменҫе хӑрах çунат сарӑлса выртат. Тата типкеререх пӑхаççĕ—çунат айĕнҫен Хветĕрĕн хӑрах ури курӑнса выртат.

— Пĕтернĕ, терĕç кӑна курсан çынсем. Ҫанах та арман çунатти йепле ӳкнĕ çаплах лапҫатса пӑрахнӑ Хветĕре.

Хветĕр пĕтрĕ.

Нумайах вӑхӑт иртмерĕ Шур Уçăп. арманне йусамасӑрах, сутса йаҫĕ. Армана тийесе кайсан ун вырӑнне, Хветĕр вилнĕ çĕре, хĕрес ларттарҫĕ арамӑ.

Астӑватӑн тепĕр хĕресе. Ӑна енĕ Потоҫски кĕпĕрнинҫе хыр вӑрманĕ хĕрринҫе курнӑҫҫĕ. Кунта икĕ çамрӑк, каҫҫӑпа хĕр, пĕрне пĕри йуратса пурӑннӑскерсем, наркӑмӑш хыпса иккĕш те пĕр тӑрукак вилнĕ. Вĕсене йуратнине кура мӑшӑрланма май килмен мĕн, мĕншĕн тесен хĕрĕн ашшĕ ҫухӑн пулнӑ, каҫҫин—пуйан. Паллах, пуйан çын хӑй килне ҫухӑп хĕрне кĕртсе хӑйĕн йатне парасшӑн пулман.

Ывӑлӗ вилсен, мӗн тӑвас тетӗн, вилнӗ вырӑна пысӑк шурӑ хӗрес ларттарҫӗ тет вара.

Ҫул ҫӳренӗ ҫух епӗ ун пек хӗрессем ҫылай курнӑ. Ҫӑн, вӗсене мӗн пирки лартнисене ыйтса пӗлмен, ҫапах та вӗсем ӑнсӑртран пырса ларнӑ хӗрессем мар пулмалла. Ҫылайӗшӗ весенҫен пурнӑҫра пулса иртнӗ пысӑк ӗҫсенех кӑтартаҫҫӗ.

Старик ҫак пиртен айакра мар ларакан хӗрес ҫине кӑтартсан, ман пуҫа асӑннӑ хӗрессен историйӗсем аса килҫӗҫ. Епӗ старике ӑна мӗн пирки лартнине каласа пама ыйтрӑм.

— Ӑна лартни нумайах пулмастха,—терӗ вӑл пӑртак утсан.

Ку вырӑнта Унеҫӗм Ваҫлине вӗлерҫӗҫ. Патшана пӗтернӗ хыҫҫӑн халӑх питӗ пӑлханҫӗ вӗт. Ҫав ҫӗршӗнех ҫав, ҫӗр пиркийех. Акӑ, ҫакӑнта ҫул хӗррине тухакан ҫӗр вӑл ӗлӗк Мӑрсай Унтриҫҫе. Мӑрсай Унтри ӑна креппит тунӑҫҫӗ. Кунта ҫурт та туса лартнаҫҫӗ вӑл. Ҫил арманӗ те пурҫҫӗ унӑн. Ҫуртне хула пекех ҫавӑрнӑҫҫӗ—улпутла. Улпутла пулмасӑр—ӗмӗрлӗхе иле иле вӑл 80 теҫеттине ҫитернӗҫҫӗ те. Патшана кӑларса пӑрахсан пӗтрӗ вара унӑн креппитӗ те. Ҫурҫӗсене йала куҫарҫӗ. Арманне мӑнйалсене сутрӗ пулас вал ун ҫухне.

Утатпӑр. Старик пуҫне ҫиксе туйине таклаттарса пырат. Епӗ вал пуснӑ май ҫӑпати айӗнҫен тусан ҫӗлтӗрт-ҫӗлтӗрт малалла вӗҫсе пыпине пӑхса пыратӑп.

— Вӑл вӑхӑтра халӑх ытла пӑтранҫӗҫке, терӗ старик каллех хӑйӗн сӑмахне пуҫласа. Самани ытла та пӑтранҫӑк пулҫӗ ҫав. Ҫӗмӗрес, теҫҫӗ. Тавай ҫунтарса йарас, теҫҫӗ. Вӗлерес ӑна шуйттан ӑруне, тесе кӑшкӑраҫҫӗ тата хӑшӗсем. Анҫах ҫунтараймарӗҫ те, вӗлереймерӗҫ те—Мӑрсай Унтри халӗ те ҫип-ҫиперех пурӑнат. Мӑрсай вырӑнне Унеҫӗм Ваҫлине пуҫтарса хуҫӗҫ.

Ваҫлийӗ хӑй те ытла круттарах тытӑнҫӗ пулас ҫав, терӗ старик малалла.—Ара, урса кайнӑ халӑха ӑҫтан ҫаран. Халӑх йатран уйӑрас тесе кӑшкӑрат. Ваҫлийӗ атпу хӑйӗнне.—Кунта, тет, епӗр, ӗлӗк кулак ырӑ курса пурӑннӑ ҫӗр ҫинҫе, тет, сӑнав уйӗ тӑватпӑр, тет. Кунта пирӗн йупа ӗмсе пуранаҫҫӗ Мӑрсай кулак, тет, халҫ вӑл вырӑнта епӗр хамӑра ҫухӑнлӑхран ҫӑлӑнмалли примерлӑ уй тӑвӑпӑр, тет.

— Ну, вара?

— Мӗн вара! Пуҫне хуҫс. Урса кайнӑ халӑха хирӗҫ ӑҫтан пыран. Еҫӗ, теҫҫӗ, апла хӑтланатна, еҫӗ хамӑр ҫӗре хамӑра парасшӑн мари, еҫӗ хамӑр алла кӗнӗ ҫӗре каллех вӗҫерттересшӗни тесе кӑшкӑраҫҫӗ. Малтан кӑшкӑрҫӗҫ, унтан ҫапкаларӗҫ, унтан хӑйхи ҫылайах тивертрӗҫ пулас—Ваҫли ҫавӑнтах тӑсӑлса выртса йулҫӗ. Киле илсе таврӑнҫӗҫ. Тепӗр кунне вилҫӗ.

Аван ҫынҫӗ Ваҫли. Ҫылай уҫӑлна ҫынҫӗ. Вӑл тӗнҫерс ҫитсе курман вырӑн йулманҫҫӗ пулӗ. Пур ҫӗре те ҫитнӗ, пурне те курнӑ, такамна та каласса пӑхнӑ. Так пӗтерҫӗҫ ҫав ҫип-ҫипер ҫынпах. Мӗн тӑвас тетӗн, ҫырни ҫапла пулнӑ ӗнтӗ унӑн. Йӑвӑр тӑпри ҫӑмӑл пултӑрах.

Старик туйине сылтӑм алран сулахайа куçарса пӗр виçӗ хут хӗрес хывса илҫӗ.

— Ӗçне Мӑрсай Унтри хӑйех турӗ те, çав, анҫах ӑçтан пӗлме килен ҫейс çын хӑтланнине. Кайран паллӑ пулҫӗ—Унтри малтанах хӑй майлӑ карма çӑварсене ӗçтерсе шайкка çавӑрнӑ мӗн. Васлийе Унтрийех пӗтерҫӗ, тесе сӑмах çӳретҫӗ. Анҫах самани татах пӑтрапса кайрӗ. Нимӗн те пулмарӗ. Вӗлерессе çавсемех вӗлерпӗ тет.

Унтрийе ҫӑнах та кураймасҫӗ ӗнтӗ Васлийӗ те. Ӑçта тӗл пулаççӗ иккӗшӗ—Васли Унтрийӗ питлеме тытӑнат—есӗ, тет, çын тарӗпе нуйнӑ, çын йунне ӗмсе шыçмакланнӑ. Санӑн мӗн пур пуйанлӑху çын куççулӗпе пулнӑ пуйанлӑх, тет.

Вилес умӗн те каларӗ тет çав: епӗ вилетӗп, мана урӑх нимӗн те кирлӗ мар. Халӑх тӗттӗмлӗхӗ мана пӗтерҫӗ, тесе каларӗ тет. Анҫах хӑçан та пулсан Мӑрсай та пӗтӗ, вӑл та йал çинҫе ӗмӗрлӗхе пуç пулса тӑраймарӗ, тесе каларӗ тет.

Старик сӑмахӗсем мана та çӳçентерҫӗç. Старике итлесе пынӑ май, вӑл калапӑ хӑрушӑ ӗç ман куç умне пӗр карттин хыççӑн тепӗр карттин пулса улшӑнса пырса тӑҫӗ.

Акӑ, ҫухӑнлӑхра, çӗр хӗсӗклӗхӗнҫе ӗмӗртен асап, хӗнхур курса пурӑннӑ çак старик пекех типшӗм çынсем. Вӗсене нурнӑç йӗрки темиçе ӗмӗр хушши пусса, пусмӑрласа тӑнӑ. Кам кӑна вӗсене хур туман?! Ҫӑн çӳлтен, патшаран пуçласа ҫӑн айала, вулӑсри тийек патне çитиҫҫенех пурте вӗсене мӑшкӑланӑ, вӗсене хӗстерпӗ, «мушик» тарӗпе, мушик йунӗпе хӑйсен пурнӑçне илемлетсе пурӑннӑ.

Акӑ тата тепӗр йышши сӗлӗх. Ку халӑх ӳҫӗ çине, сӑвӑс пек, пӗтӗмӗшпех кӗрсе вырнаçнӑ. Халӑх йунне ӗмсе çурӑлас пек шыçмакланса кайнӑ, анҫах çапах та ҫаранмаст, татах ӗмет. Кам тетӗр ӑна?—Мӑрсай Унтрийӗ.

Самана улшӑнат. Халӑх хӑйӗн ҫӑн пурнӑçне курма тытӑнат. Сӗлӗхсем те хӑйсен ырӑ пурнӑçӗ кӗскелсе пырасса сисеççӗ. Анҫах парӑнасшӑн мар. Вӗсем хӑйсене хирӗç пыракан Унеçӗм Васлисене çӗр çинҫен шӑлса пӑрахма тытӑнаççӗ, мӗншӗн тесен Васлисем вӗсем ваҫҫи шӑтӑк ҫаваканcем пулма пултараççӗ.

— Неушлӗ вара Васлийе вӗлерекенсене нимӗн те пулмарӗ, тесе ыйтрӑм епӗ тарӑхнипе старикрен.

— Мӗн пултӑр?—нимӗн те пулмарӗ. Халӑхпа пулнӑ ӗç вӗт. Кам айӑплине ӑçтан пӗлен унта. Пӗр-иккӗшне тытса кайам пек турӗç те, ҫасах кӑларса йаҫеç.

— А, Мӑрсай Унтрине?

— Мӗн Мӑрсай Унтрине?

— Ара, хӑвах калатӑн вӗт Васлийе Мӑрсай Унтри тӗтхӗртнипе вӗлерпӗ тесе. Ӑна пӗлекенсен токкасат туса айӑпламаллаҫҫӗ.

— Айӑплӑн ӑна. Вӑл тасаран та таса. Курман, илтмен—унӑн пӗр сӑмах. Епӗ килтех ларнӑ, 'тет вӑл.

— Ей, терӗ старик тата пӑртак утсан,—ун пек ҫейепе есӗ ӑçтан айӑплас тетӗн. Пирӗн пек ухмах мар вӗт вӑл. Пирӗн пек пулсан вӑл хӑй ӗмӗрӗнҫе тунӑ ӗçсемшӗн тӗрмерех çӗрсе вилмелле. Мӗн-мӗн

хăтланманши вăл ĕлĕк. Мĕн ђухлĕ çынна макăртманши, миçе çын пуçне çименши. Нимĕн те çук.

Таг тасах. Халĕ те ђип-ђиперех пурăнат.

— Малашне нумайах пурăнаймĕç ĕнтĕ вĕсем те, терĕм епĕ старике пăртак лăплантарса.—Совет влаçĕ кулаксене питех ирĕк памаст. Çирĕп тыткалат вĕсене.

Старик ђĕнмерĕ. Ахăртне, ман сăмахсем витĕмлех пулмарĕç пулмалла.

Ку йенне халиђђен епĕ килсе курманђђĕ. Салтакра ђух ку йенђи ђăвашсене ђылай тĕл пулкаланă епĕ. Вĕсемпе пĕрле те пурăннă. Ун ђухне вĕсем урăхларах калађђĕç пулмалла. Вĕт кашни хăйĕнне мухтат. Вĕсем каланипе епĕ кунта пурнăç пыратех тесе шутланăђђĕ. Анђах хам куçпа курсан шухăш улшăнђĕ. Старик калашле, кунтă ђăнах та çĕр сахал. Халăх йышлă, ăçта пăхнă унта йал. Çитменнине тата çĕрĕ те çырма-çатраллă, тăмлă. Мĕн ђул тырă туса плес унтан халђхи йĕркепе ĕçлесе пурăнсан.

— Сирĕн çĕре пĕрле ĕçлесе пурăнмалла тăвас пулат, терĕм епĕ старике пырсан пырсан.

— Мĕнле пĕрле ĕçлемелле?

— Вăт, йăрансене пĕтерсе, пусу сарлакăшех пĕрле сухаласа, пĕрле акса.

— Пулмаст вăл, терĕ старик епĕ каласа пĕтериђђенех.—Пирĕн халăхпа пулас çук вăл.

— Мĕншĕн пулас çук?

— Ара, ăçтан пулма пултартăр—вĕт кашни хăйшĕн тăрăшат, халăхшăн пулсан никам пўрнене пырса тĕртесшĕн мар. Хăйшĕн пулсан вăл çĕр çывăрмаст, хăй ĕçне тăват, халăхшăн пулсан—йепле те пулсан халăхран кайа йулса пыма тăрăшат тата ĕçне те питех тĕплĕн туни çук. Пирĕн халăх çавăн пек вĕт—хăй пурлăх тăвасшăн. Ахаљ каламан пулĕ çав ваттисем хăйĕн ђавси хăйне çывăхрах тесе. Тĕрĕс сăмах вал. Пит те тĕрĕс сăмах.

Епĕ старике пĕрлешсе ĕçленин уссисем çинђен калама тытăнтăм. Йăрансем пĕтнипе çĕр аслăланни, халăхпа машшинсем туйапма çăмăлтараххи, машшинсемпе ĕçлесе тырпул тухăçлăхне хăпартни, минерал çăнăхĕсемпе çĕре çемçетни, виçĕ пусăран нумай пусса куçма пултарни—çаксем çинђен старике питĕ тĕплĕн ăнлантарса патăм. Анђах старик манпа нийепле те килĕшмерĕ.

— Пирĕн халăхпа пулас çук вăл, халăх ытла килĕшўсĕрçке пирĕн. Хаљ капла пурăннă ђух та хирĕçмесĕр пулмаст те, вара пĕрле хутшăнса кайсан тўпелешсе вилмелле, терĕ вăл ман сăмахсене тĕплĕн итлесе пĕтернĕ хыççăн.

Епĕ çав ыйтăвах тепĕр йенђен пуçларăм.

— Акă, хаљ анђах есĕ Мăрсай Унтри çине тарăхса илтĕн. Мăрсай Унтрисем сире ђанах та тарăхтараççĕ. Анђах çĕре пĕрле ĕçлеме тытăнсан çав мăрсайсем те сире тек пуççаптараймĕç, мĕншĕн тесен пур ĕçре те халăх хуçа, пур ĕç те халăх çинђе пулса пырат—пурте пуриншĕн, кашни ертелшĕн ĕçлет.

— Ҫук, пулас ҫук вӑл. Есё хӑвах астуса илха—йепле вара пур ҫе те халӑхпа туса пырас? Йе халӑх килёшмесен, вара мён тӑвас? Ҫук, пулас ҫук вӑл. Епёр пурӑнакан йёрке пиртен тухнӑ йёрке мар вӑл—ёмёртен пыракан йёрке. Аттесем, асаттесем улӑштарман ӑна, пиртен те улӑштарасси пулас ҫук. Ҫёрё пултӑр, ҫёр пулсан ёлёкхи йёркепе те пурӑнаттӑмӑр та, ҫав ҫёр хёсёкки пётерет пире.

Старик ытла та татӑклӑн каласа хунине кура, манӑн та пёр вёҫне ҫитнё сӑмаха тепёр хут пуҫласа йарассӑм килмерё. Ҭӑнах та, мён каласа мёнле ӑнлантарас старике хам шухӑша. Ман шухӑшпа хресҭенён пурнӑҫне лайӑхлатасси, ёҫхресҭенён кулак аллинҭен ҫӑлӑнса тухасси йалхуҫалӑхне ҫёнё майсемпе илсе пынинҭе, ҫёре ҫёнё технёккӑпе ёҫленинҭе, ёҫе ушкӑнлатнинҭе, пётём йалхуҫалӑхне сотсиалисӑм ҫулё ҫине куҫарнинҭе. Старик шухӑшёпе ҫӑлӑнӑҫ ҫёр хутшаннинҭе анҭах.

Старикпе ман шухӑшсем нийепле те килёшме пултараймӑрёҫ.

Ҫёр сахалли ҫине ӳпкелени маншӑн пёрре те ҫёнё йапала мар. Астӑватӑп—епё пёҭёк ҭухнех стариксем ҫёр сахалли ҫинҭен калаҫнине. Ун ҭухнех вёсем ҫёр сахал тетҭёҫ. Ун ҭухнех вёсем патша ҫёнёрен ҫёр касса парасса кётетҭёҫ.

Тухса ларӑр ҫулла урам хушшине ваттисем калаҫса ларнӑ ҫёре. Хаҭ те вёсем ҫёр сахалли ҫинҭен тарӑхса калаҫаҫҫё. Ҫёр сахал тени вӑл ёмёртен пыракан ыйту. Темиҫе ӑру тӑршшё вӑл пирён хресҭен умёнҭе калама ҫук пысӑк ыйту пулса тӑнӑ. Хӑшё ҫёр хӑйне хӑй ӳсессе кётсе тӑнӑ, хӑшё ҫёнёрен касса парасса кётнё, хӑшё тата урӑхла та шухӑшланӑ. Анҭах ҫёрё ӳсмен, ӳсме мар, вӑл кулаксен, помещҭёксен аллине кёрсе пырса, ҫулсерен ҭакса пынӑ.

Шухӑшласан, пётём ҫанҫурӑм ҭётресе кайат—Совет влаҫё килсе ҫак ёмёртен пыракан ыйтӑва тивёҫлён татса паман пулсан, хӑҫанҭҭен пирён хресҭен ҫёр талккӑшё ӳсессе кётсе ларнӑ пулёҭҭёши! Тата мён ёмёрҭҭен пирён куҫа ҫак татӑлма пёлми ыйту хупӑрласа тӑнӑ пулёҭҭёши?'

Совет влаҫё ҫёрулпуҭёсене пётерсе, вёсен ҫёрёсене хресҭенсене паҭё. Совет влаҫё ҭӑнах та ҫёр хёсёк вырӑнсенҭен ирёкрех ҫёре куҫса ларма ҫӑмӑл майсем паҭё. Йулашкинҭен, Совет влаҫё йалхуҫалӑхён пётём ҫиҫтемине, пётём технёккине улӑштарса, ӑна сотсиалисӑм ҫулё ҫине тӑратрё.

* * *

— Акӑ, йала та ҫитрёмёр, терё старик сасартӑках.

Ҭанах та епер йал патнех ҫитнё мён. Сӑрт айёнҭе улӑмпа витённё йал сапаланса ларат. Хёртсе пӑхакан хёвел питтинҭе пуш урамсем, сёнксе лаpакан пӳртсем. Кӑшт-кашт анҭах, хурлӑхлӑ лаpакан ҫуртсем хушшинҭе, сап-сарӑ ҫёнё ҫуртсем урам илемне кёртсе лараҫҫё.

Хёреслё урам тёлне ҫитсен ман старик ҭарӑнҭё.

— Ну, терё вӑл мана куҫран тёллесе пӑхса,—спаҫҫипе сана

ырӑ сӑмахушӑн. Хам ухмах пуҫӑмпа ытларах та пуплерӗм пулӗ те, каҫар ӗнтӗ. Мӗн тӑвас тетӗн—тӗттӗм халӑх вӗт епӗр. Пире сирӗн пек хула ҫыннисемпе калаҫма та намӑс та, йурӗ ӗнтӗ...

— Ата, хамӑр пата кӗрсе тух пӗр йала ҫитнӗскер, хӑна тӑвассм пулас ҫук та, атте-анне тивлеђӗпе ҫапах ҫӑкӑрпа тӑвар ҫырткаламаллӑх пур, терӗ старик епӗ ним калама аптӑраса тӑнине кура..

— Ҫук, кӗрсе тӑраймастӑп пулӗ. Манӑн хам ҫитес ҫӗре ҫитмеллех. Спаҫҫипӑ ырӑ сӑмахна.

—Васкатӑн пулӗ ҫав. Пӗр тухнӑ ҫыннӑн утасах пулат ҫав. Кайалла таврӑннӑ ђухне кӗр еппин май килсен. Кӑмӑл ту. Ман кил кунтан инҫех мар. Ыйтсан такам та кӑтартса йама пултарат ман тӗле. Ваҫҫа йатлӑ епӗ. Пӗђӗк Иван Ваҫҫи теҫҫӗ мана йалта. Вырӑсла каласан Ваҫҫили Иванов пулатӑп. Ваҫҫили Иванђ, тетђӗҫ ӗлӗк мана салтакра ђухне.

— Спаҫҫипе. Тен кӗрӗп те.

Ал парса уйӑлтӑмӑр. Епӗ малалла утрӑм, старик сулахайалла пӑрӑнђӗ.

* * *

Ваҫҫили Иванђ! Аван йат—калама ҫӑмӑл, итлеме илемлӗ. Анђах темме пире, ђӑвашсене, тарӑхтарма каларнӑ йат. Ҫийелтен пӑхсан ним тарӑхтармалли те ҫук пек. Анђах... анђах унӑн та хӑйӗн сӑлтавӗ пур ҫав.

Елӗкхи Раҫҫей, унта ҫӗр хӗрӗхе йахан ђӗлхе пулнӑ пулсан та, вырӑс патшалӑхӗ пулнӑ. Ҫак патшалӑхӑн натси политтӗкӗ—вырӑс халӑхӗ, тӗрӗссине каласан вырӑс творенӗсемпе кӑпиталисӗсем пуҫ пулса тӑмалла политтӗк пулнӑ. Ҫапла вара, темиҫе мӗлйунлӑ халӑхсем, ҫав хушӑрах ђӑвашсем те, темиҫе ӗмӗр тӑрӑшшӗ пуҫ пулса тӑракан вырӑс творенӗсемпе кӑпиталисӗсене пӑхӑнса пурӑннӑ.

Малалла. Октапӗр револђутси пулиђђен ҫур ӗмӗр малтан вырӑс халӑхӗ хушшине кӑпиталисӑм хӑватлӑн ҫӗмӗрсе кӗме тытӑннӑ. Пурнӑҫа шалтан шала кӗнӗ май, вӑл ӑна улӑштарса пынӑ. Ђылайтанпа ӗнтӗ вырӑссем хушшинђе савӑтсем, хапрӑксем, шахтӑсем шӑта-шӑта туха пуҫланӑ. Вырӑс халӑхӗн хӑйӗн пуршуаҫийӗ, хӑйӗн пролеттариађе ђӑмӑртанат. Пӗтӗмӗшпе илсен, вырӑс халӑхӗн пурнӑҫӗ хӗвел анӑҫӗнђи кӑпиталисӑм хыҫҫӑн хыттӑнах пыма тытӑннӑ.

Ђӑваш ҫӗршывӗ ҫав вӑхӑтра колониллӗ пусмӑр айӗнђе хӑйӗн ылханлӑ пурнӑҫне пурӑнса иртерет. Кунта промышлӗннӑҫлӑ кӑпиталисӑм кӗретӗнех пырса кӗмест, вӑл пуринђен ытла унӑн сӗткенне ӗмме тӑрӑшат. Ҫакна тума ӑна ђӑваш кулакӗсемпе пупӗсем, ђӑваш хуҫисем пулӑшса тӑраҫҫӗ. Ҫапла ђӑваш халӑхӗ, курттӑмӑн илсен, икӗ пайа пайланса пынӑ: пӗри кулаксемпе хуҫасем, тата ыттисем; тепри—пӗтӗм ђӑваш ӗҫхалӑхӗ. Пӗри експлоаттатсилекен пай, апла пулсан патшалӑхра пуҫ пулса тӑракан класа ҫывӑх пай, тепри—ӗҫхалӑхӗ, вырӑс кӑпиталисӗсене натси тӗлӗшӗнђен те, клас йенђен те хирӗҫле пай. Ҫак йулашки массӑна патша правиттӗлстви тӗттӗмлӗхре, ђухӑнлӑхра тытнӑ. Ӑна хуҫалӑх тӗлӗшӗнђен те, култтурӑ йен-

ҫен те вӑй илме паман. Паҫах урӑхла,—унӑн етемлĕхне çухатса, ӑна выҫӑх вырӑнĕнҫе усранӑ. Сӑмахран, уйсенҫе кĕтўсем курсан епĕр ку пӑру кĕтĕвĕ, ку сысна кĕтĕвĕ тетпĕр. Çавӑн пекех вырӑс пуршуаçийĕ те ҫӑваш ĕçхалӑхне пĕр йатпа ҫĕннĕ. Вĕсемшĕн пĕтĕм ҫӑваш ĕçхалӑхĕ «Ваççили Иванҫ» пулнӑ та çитнĕ.

Тĕрĕссипе каласан, пуршуаçи ĕçхалӑх масси çине çапла пӑхни пĕр ҫӑвашсем тĕлĕшĕнҫен кӑна мар. Уншӑн вырӑс ĕçхалӑхĕ те, ытти натсиллĕ ĕçхалӑхĕ те «Ваççили Иванҫран» уйрӑм мар. Акӑ, вырӑс хресҫенĕсене йут патшалахсенҫе «упа» тесе йе Саххар тесе ҫĕнеççĕ, франтсус хресҫенĕсене хӑйĕн пуршуаçийĕ тахçантанпах Йакку тесе йат панӑ. финсене ҫухонĕтс, Çĕпĕрти хресҫенсене ҫалтон теҫҫĕç тата ытти йатсем те нумай ун пеккисем.

Пуршуаçи ĕçхалӑх массине пĕр йат пани вӑл ун çине мĕнле пӑхнине лайӑх кӑтартат. Астӑватӑп—пĕрре епĕ Клеп Уçпенскин пĕр кĕнекине вуланӑҫҫĕ. Писсаттĕл Уçпенски Каçпи тинĕсĕпе килелле таврӑнат. Вал ларса пыракан прахут çумне сехетсерен лутка кимĕсемпе хаҫ анҫах тытнӑ пулӑсем тийе тийе пырса прахут çине пушатаççĕ.—Ку мĕпле пула?—тесе ыйтат писсаттĕл пулӑçӑран.

— Халĕ воплӑ кайрĕ ĕнтĕ, малалла сплош воплӑ кайат, тет лешĕ. Çак сплош самах авттӑра шухӑша йарат.

— Вот мĕншĕн мана киҫемĕн туйӑнат те, тесе шухӑшлат вӑл.— Малалла пурте «сплош» кайат: уйсем те, тырӑ пуҫахĕсем те, лашасем те çĕр те, йавӑçсем те, пўртсем те, арçынсем те, хĕрарӑмсем те пурте каснӑ лартнӑ пĕр-пĕрин пек тумланаççĕ, пĕр пек йурлаççĕ, пĕр пек шухӑшлаççĕ, пĕр сӑмахпа каласан—çăрттан та темиçе пиншерĕн сплош килет, воплӑ та ушкӑнӑн ушкӑнӑн пĕр-пĕринҫен ним уйӑрӑлмасӑр мĕлйуншаран сплош пырат, халӑхе те çавсем пекех пĕр-пĕринҫен ним уйӑрӑлмасӑр Арханкĕлскран Атестӑна, Атестӑран Камҫаткӑна, Камҫаткаран Влатикапкаса, унтан Перçси, Туртси ҫиккисене çитиҫҫенех сплош пурнӑçпа пурӑнат.

Çапла шухӑшласа хӑйне хӑй кӑмӑлсӑрланат Уçпенски писсаттĕл.

Кунта тĕрĕсси те пури теп. Уçпенски вӑхӑтĕнҫи çĕрĕçĕн ҫухаи технĕкки, наттураллӑ хуçалӑх çиçтеми—çаксем опҫӑ хушшинҫи çыхӑнава хӑйсем майлӑ орканисатсиленĕ, халӑх питех сийленсе çитмепин тинкерсе пӑхма пĕлмен çын куç умĕнҫен халӑх хушшинҫи класлӑха пытарса тӑма пултарнӑ. Анҫах Уçпенски кунта опҫӑ çыханӑвĕ çинҫен мар, пуринҫен ытла вырӑс хресҫенĕсен етемлĕх, çынлӑх уйрӑмĕсем çукки çинҫен калат. «Кимĕ тулли вопла, пурте вĕрçĕне çирĕм пуслӑх кĕмĕл укçа пек» тет вӑл. Малалла: «арçынсем те, хĕрарамсем те пурте каснӑ лартнӑ пĕр-пĕрин пек—пĕр пек тумланаççĕ, пĕр пек йурлаççĕ, пĕр пек шухӑшлаççĕ» тет вӑл. Уçпенски шухӑшĕпе, вырӑс хресҫенĕн хӑй пуçласа хӑй ĕç тӑвасси те çук, унӑн нимĕнле уйрам творҫестви те çук,—пурте сплош, пурте халӑх хушшинҫе çтиххийлӑ пулса тӑрат.

Каламасан та паллӑ, ку масса çўлте асӑннӑ «Ваççили Иванҫӑллӑ» массӑ майлӑскерех пулса тарат. Уçпенски шухӑшĕне вырӑс ĕçхалӑхĕ хушшинҫе етемлĕх уйрӑмлӑхĕ çук. Сурӑхсем, сыпасем

йе выђӑхсем йепле пӗр пек «тумланаççӗ», пӗр пек макӑраççӗ йе çухӑраççӗ, çавӑн пекех халӑх та пӗр пек тумланат, пӗр пек йурлат, пӗр пек шухӑшлат. ыыыӑӑӑӑ

Выђӑхпа етем хушшинђе уйӑрӑмлӑх пури кунта? Çук пулас. Акӑ, мӗншӗн ӗнтӗ пуршуаçи ӗçхалӑхне пӗр йатпа ђӗннӗ!

Уçпенски наротнӗк пулнӑ. Вӑл халӑхшӑн тӑрӑшакан çын пулнӑ. Анђах халӑхшӑн çунакан çын пулнӑ пулсан та, çапла шухӑшласа вӑл ӗçхалӑхӗн творђӗствӑллӑх вӑйне тивӗçлӗ хак пама пултарайманни курӑнат. Кунтан ним тӗлӗнмелли те çук, мӗншӗн тесен ђылай вӑйлӑ, ђылай ђаплӑ писсаттӗлсемех, хӑйсем кӑмӑлпа халӑх майлӑ пулнӑ пулсан та, клас тӗлӗшӗнђен унпа çыхӑнман пулсан, хӑйсен творђӗствинђе пуршуаçи шухӑшне çутатса тӑнӑ. Акӑ, илӗр ӗлӗкхи ђаплӑ хутошнӗксен карттинӗсенех. Сахалашӗнђе вӗсенђе ӗçхалӑхне хӑй пек кӑтартнӑ. Ун вырӑнне пуринђе те тенӗ пекех вӗсенђе, калӑпӑр, рапођђийе кӑтартнӑ пулсан, вӑл пантит пек тискер, хресђен пулсан—вӑл упа пек лӳппер, пӑру пек ухмах.

Пуршуаçи ӗçхалӑх массине етем картинђе шутланӑ пулсан та, ӑна ђӑн ђан етемрен **кайарах** тӑракан ђӗрђун вырӑнне хурса пурӑннӑ. Ку ђанах та çапла пулнӑ,—унсӑрӑн помешђӗксем пӗр йатӑ вырӑнне икӗ çын пӑрса улӑштарман пулӗђђӗç.

Патша правиттӗлствипе пуршуаçишӗн ӗçхалӑх масси Вѣççили Иванђ, Саххар, Йэкку, ђалтон, тата ытти те пулни усӑллӑ пулнӑ. Вӗсем çак массӑна темисе ӗмӗр хушши ӗмсе тӑнӑ, ӑна «сплош» пурнӑçпа пурӑнтарма тӑрӑшнӑ, ӑна хӑйӗн ђӑн сӑнпитне, хӑйӗн етемлӗхне палӑртма ђарса тӑнӑ.

Çавӑнпа та-и ӗнтӗ мэн старик те хаљ те, Уçпенскин Иван Йермолайђи пекех, çӗрӗçне ушкӑнлатасси синђен калаçма тытӑнсан:

— Ей, çук, апла пулас çук, тет.—Йалпа пӗр çыру çырма пултаратна есӗ? Вот, ку та çавӑн пекех пулма пултарайман йапала, тет.

Çапла шухӑшласа утрӑм епӗ йулашкинђен курпунне кӑларса урам тӑрӑх хӑйӗн килӗ йенелле утакан Ваççили Иванђ çине пӑхса илсе.

* * *

Çакӑнтан вара ђылай вӑхӑт иртрӗ. Иртнӗ çулсем хушшинђе Совет çӗршывӗн пурнӑçӗ калама çук пысӑккӑн улшӑнђӗ. Çӗршыв хуçалӑхӗ, вӑрçӑђђенхи шута çитсе, унтан иртсе те кайрӗ. Епӗр пӗтӗм хуçалӑх айне çӗнӗ никӗс, вӑйлӑ технӗккӑллӑ никӗс хума тытӑнтӑмӑр. Совет Сойусӗ, унӑн тӑшманӗсем калашле, калама çук пысӑк тимӗрç лаççи пулса тӑђӗ. Йалхуçалӑхӗнђе те çав хушӑрах пысӑк улшӑнусем пулђӗç. Ђӑваш пурнӑçне пӗтермӗшӗн—сухапуçӗн—çӗрӗçӗнђе пуç пулса тӑрасси ӗмӗрлӗхех пӗтрӗ. Ӑна хӑйне те çитес ӑрӑва курса тӗлӗнмелӗх муçейе кайса пӑрахассин срукне тӗллесе хунӑ ӗнтӗ. Сухапуç йулташӗ виçӗпусӑлӑх та хӑйӗн ӗмӗрне пурӑнса ирттерет. Ђӑваш çӗршывӗн уйӗсем варринђе çулсерен пахa тырпулсем акнӑ анасен шуђӗ ӳссе пырат. Йулашкинђен, йалхуçалӑхӗн ӗмӗрлӗхрен пыракан пӗтӗм çиçтеми те улшӑнат—уйӑрӑм апасем, уйӑрӑм лаптӑксем пӗтеççӗ, вӗсем хушшинђи харпӑрлӑха сыхласа тӑракан

йӑрансем урлӑ, çĕр хуппине аслӑн сӳсе пырса, вутлӑ тимĕр лашасем ђупэ пуçларĕç. Тĕшмĕшлĕ, тĕттĕм йалсем хушшинђе пулас йалхуçалӑх хулисем—колхоссем ђӑмӑртана пуçларĕç.

Шур сухалла ватӑ йал кисренђĕ. Вӑл хӑйĕн вилĕмĕ çывхарса килнине туйса илђĕ.

* * *

Нумай пулмаст манӑн çав ĕлĕк курса калаçнӑ старниксен йалне кĕрсе тухмалла пулђĕ. Претçетаттĕле шыраса пысӑк шатровӑй çурт патне çитрĕм. Пӳртне тимĕр витнĕ. Карниссене ерешлентерсе илемлетсе пĕтернĕ. Хуралђĕсем çӳлĕ, тĕреклĕ. Пӑхӑсӑн, каçоннай çурт пекех купаланса лараççĕ.

Икĕ пӳрт хушшинђен урамалла тухакан крыљтса çине хӑпартӑм. Сулахай йенђен такам хыттӑн калани илтĕнет. Алӑкне уçса кĕретĕп. Кунта халӑх пухӑвĕ мĕн. Ретĕн-ретĕн лартнӑ вӑрӑм тенкелсем çинђе ваттисем, çамрӑксем, хĕрарӑмсем тађђӑн ларса тулнӑ. Тенкелсем çине шӑнӑçайманнисем ура çинђе тӑраççĕ.

Епĕ пырса кĕрсенех сӑмах калаканни пĕр вӑхӑта ђарӑнђĕ. Вӑл тинкерсе пӑхнине кура, ыттисем те ман çине çаврӑнса пӑхрĕç.

— Кĕме йурати? тесе ыйтрӑм епĕ пурте ман çине пӑхнӑранименсе.

— Йурат, йурат. Ата, кĕрех, товариш. Акӑ, кунтарах иртсе лар.

Пуху претçетаттĕлĕ мана сĕтел çывӑхнерех пĕр пушӑ вырӑн кӑтартса пађĕ.

Кунта колхоçнĕксен пуххи иккен. Акана тухасси çинђен сӳтсе йаваççĕ.

— Хамӑрӑн пирĕн çавӑн ђухлĕ плук пур, çавӑн ђухлĕ сӳре пур. Кусемĕр пуçне сухапуçĕпе йӑвӑç сӳресем ытлашшипех. Кашни икшер касӑллӑ плука икшер лаша, пĕр касӑллисене пĕрер лаша кӳлсен, çавӑн ђухлĕ лаша сухара çӳремелле пулат, çавӑн ђухлĕ сӳрере.

Токлатђĕк питĕ теплĕн, кашни ĕçе ђыхвӑрсемпе кӑтартса нумайђђен ӑнлантарат. Миçе лаша, миçе урапа, мĕн ђул вӑрлӑх, мĕн ђул мишук—пĕр йапала та манса хӑвармарĕ пулас.

Малалла вӑл ђленсене мĕнле мĕнле ĕç параççи çине куçрĕ. Кунта та правлени мĕнле тӑвассине малтанах шутласа хунӑ мĕн.

— Ĕлĕк, тет токлађĕк, ваттисем, çемйере сухалама пултаракан çын пулсан акма анђах тухађђĕç. Кунне пĕрре кайса пĕр ана акат те, унӑн ĕçĕ те пĕтрĕ. Халĕ епĕр ваттисене савçемех тапратаспӑн мар—кӑçал епĕр пĕтĕм тырра машшинпа акса хӑваратпӑр. Çавӑнпа, Уçӑп пиђђе, есĕ кӑçал акана та тухса кураймастӑн пулĕ, терĕ токлатђĕк малта ларакан кӑвак сухаллӑ старике кулкаласа.

— Мĕнлеха апла? тĕлĕнет старик.

— Мĕнле пултӑр?!—йаснӑ, хаљ ĕнтĕ есĕ улпут пекех пулатӑн. Ей, ну! репеттӑ, тесе анђах лар, терĕ хыçалтан пĕри çамрӑкрахскер.

Халӑх кӑшт йӑшӑлтатса илђĕ.

— Карђӑкӑм çукçке. Карђӑк пулнӑ пулсан йӑпанса та ларна

пулăттăм та, хаљ пĕђђен мĕнле ђăтса ларас килте çынсем акара савăнса ĕçленĕ ђух, терĕ Уçăп пиђђе йури култармаллах хуйхăллă сывласа йарам пек туса.

Халăх лаштăрах кулса йађĕ.

— Анђах, йулташсем,—терĕ токлатђĕк пĕр самантрах куллине ђарса,—пирĕн умра йăвăрлăхсем те сахалах марха. Пирĕн кăçал çуракине примерлă иртермелле. Епĕр йалăн ĕмĕртен пыракан йăлисене патах татрăмăр. Епĕр пур ĕçре те çĕнĕ майсемшĕн тăрăшатпăр. Пирĕн, халăха хамăр йенне çавăрас пулсан, питĕ йĕркеллĕн, питĕ астуса ĕçлес пулат.

Пире курайманссм, пирĕн ĕçе ђăрмантарма хăтланакансем пумайха. Вĕсем пирĕн çипђен тем те каласа çӳреççĕ. Вĕсем халăх тĕттĕмлĕхĕпе усă курса пирĕн ĕçе пĕтерсе хурасшăн. Хытă тăрăр, йулташсем, тимĕр пек çирĕп пулăр. Авалхи йал куштанĕ çак хула пек сарăлса ларакан çурт хуçи пулнă Мăрсай Унтри пĕтрĕ, унăн ĕмĕрĕ çак куна çитеймерĕ. Анђах Мăрсай пĕтрĕ пулсан та, Мăрсай йăхĕ те, Мăрсай шайкки те пĕтмен—ытти кулаксем сывах пурăнаççĕха.

Йулташсем, тепĕр ернерен пирĕн правлени, çуракине хатĕр тăнитăманнине тĕрĕслес шутпа, смоттăр туса иртерме йышăнђĕ. Çак смоттăра пирĕн пурин те пĕр çын пек харăс тухса, хамăрăн килĕшӳллĕхе, хамăрăн орканисатсиллĕхе колхосра тăман хресђенсене кăтартмалла. Астăвăр, йулташсем, пирĕн ĕçе кура йалта колхос вăй илме пултарат. Тепĕр йенђен çак смоттăртах пирĕн хамăр вăй çинђен йалти тăшмансене пĕлтермелле. Ан тив, хăйсен куçĕпе хăйсемех курђђăр пирĕн килĕшӳллĕхпе йĕркеллĕхре хăйсен вилĕмĕ иккенне.

Токлатђăкăн хĕрӳллĕ сăмахĕсене алă çупни хупласа илђĕ.

Пуху пĕтсен мана колхоçнĕксем çавăрса илђĕç.

— Есĕ Шупашкартан килнĕ çын пулмалла. Ну, мĕнле çĕнĕ хыпарсем пур унта? Колхоссойусра мĕн çĕнни пур? Ытти çĕрти колхоссем мĕнле пурăнаççĕ? Тата та, тата та ыйтусем сирпĕнеççĕ.

Епĕ те ыйтусем пама тытăнтăм.

— Сирĕн колхос хăçан пуçланнă? Миçе кил? Мĕн ђухлĕ машини, тата ыттисем те.

Колхос пуçланни нумай пулмаст иккен—пĕр çулталәк анђах. Колхосра çур йал ытла. Кăçал пĕр вăхăтра йалĕпех те кĕрсе пахнă та, анђах ђылайăшĕ кайалла тухнă. Кайалла тухнисем хушшинђе ĕлĕкхи ђленсем те пулкаланă.

— Питĕ йăвăр килђĕ пĕр вăхăтра, терĕ паçăрхи токлатђĕк хăйĕн сăран пиншак кăсийиђен «Пушки» туртса кăларса.

— Туртатна? терĕ вăл пирус пађкине ман йеннелле тăсса.

— Спаççипе, туртмастăп епĕ.

— Туртманни луђђĕ вăл. Епĕ те ĕлĕк туртмастăм та, пимĕђсем вĕрентрĕç. Хаљ пĕр вĕреннĕ йапалана никкак пăрахма çук.

Питĕ йăвăр килђĕ пĕр вăхăтра, терĕ вăл пирусне ђĕртсе пĕр

— Питĕ йăвăр килђĕ пĕр вăхăтра, терĕ вăл пирусне ђĕртсе пĕр мар пире колхос, теççĕ малтан, кирлĕ мар пире вăл. Тавай, колхос

ҫӗрне каллех йал ҫине уйӑрса йаратпӑр, тесе кӑшкӑраҫҫӗ кулаксем хыҫҫӑн

— Мӗн тӑвас?

Епӗр колхоҫнӗксем, аптарасах тӑмарӑмӑр. Вӗсем пӗр сӑмах каласҫӗ, епӗр виҫҫӗ. Халӑх ҫинҍе тӑнлантаратпӑр, килте, урамра—пур ҫӗрте те пирӗн сӑмах колхос усси ҫинҍен, кулаксен сӑмахӗсем сийенли ҫинҍен.

Халӑх лӑпланҍӗ. Кайарахпа хӑйсемех пирӗн пата киле пуҫларӗҫ. Пӗри—мана илӗр, тет, тепри—мана илӗр, тет, хайхи, йулашкиҍен пӗтӗм йал колхосра пулса тӑҍӗ. Шухӑшларӑм ун ҍухнех—ку ытла та ҍас пулса тӑҍӗ; ырраи, усаллаи пулат ӗнтӗ, тесе. Шухӑшлани тӗрӗсех пулҍӗ—хайхи кайран кайалла тухма тытӑнҍӗҫ. Нумай тухрӗҫ, анҍах ҫур йал ытла ҫапах та халҍ колхосра. Тухакан тухтӑр, ҍармастпӑр. мӗншӗн тесен вӗсем хӑҫан та пулсан тепӗр хут килсе сайавлени парасси паллах.

Маттур ҫын, тӗплӗн, ӗҫе пӗлсе, хӑйне хӑй астуса калаҫат. Хушӑран вырӑсла та йӗркеллӗн ҫавӑрса хурат.

— Вот, пӑх—ак, ҫакӑнта таракансенҍеп епӗр ҍӑн малтан пиллӗкӗн колхос тӑвас ӗҫе пуҫласа йатӑмӑр. Ун ҍухне пире шанмаҫҫӗ.— Мӗн тухтӑр вӑл есӗр хӑтланнинҍен, теҫҫӗ. Ак, халҍ колхос уссине сисрӗҫ те, колхосран тух тесен те тухас ҫук.

Колхоҫнӗксем пурте хӑйсен йулташӗн куҫӗнҍен пӑхса тӑраҫҫӗ. Лешӗ хӗрӳленсе каланӑ ҍухне вӗсен куҫӗсем те ҫуталса пыраҫҫӗ, ахӑртне вӑл хӑйсем клас сӑмахӗсенех калат пулмалла.

— Пирӗн ӗмӗт пысӑк, товарищи, тет малалла сӑран пиншак.— Епӗр ҫӗре авалхи йӗркепе ӗҫлеме пӑрахатпӑр. Епӗр ӑна акрономи вӗрентнӗ пек ӗҫлеме тытӑнатпӑр. Епӗр ҫӗрӗҫне тупӑшлӑ тӑвасшӑн.

Пирӗн ӗмӗт—хамӑр акса тунӑ тырпулран, мӗн ҍухлӗ май пур, ҫавӑн ҍухлӗ тупӑш нумайрах курасси. Ҫавӑнпа епӗр хамӑр колхосра хатӗр протуксисем туса кӑлармалла тӑвасшӑн. Акӑ, ил нимӗҫех. Вӑл нихӑҫан пӗр пӗрҍӗ тырӑ сутмаст. Вӑл йе ӑратлӑ ӗнесем усраса тырӑпа выљӑх апатӗнҍен сӗтҫу тӑват йе сысна ӗрҍетсе кӑлпасса тӑват. Шутласа пӑхха есӗ унӑн тупӑшне—вӑл ҫапла хӑтланса тен пӗр пӑт тӗш тырӑран виҫтӑват хут ытла хак илет.

Нимӗҫ пултарат вӑл, ӑна есӗ ӑса ан вӗрент. Керманире ӑҫта пӑхнӑ унта савӑт труписем курӑнаҫҫӗ. Пирӗнне пӑх—йапйака. Ма туса лартас марҍҍӗ ӗлӗкех ҫакӑнта, сӑмахран, ҍӑнта хапрӑкӗ. Халӑх ҍӑпта ӗҫлет вӗт. Асапланат кашни хӑйӗн ҍӑх кутани пек пӳртӗнҍе, сывлӑхне ҫухатат. Лайӑх стапоксемлӗ, тӗрлӗ машинсемлӗ хапрӑк туса лартсан неуштӑ усси сахалрах пулӗ? Вӑл хапрӑка лартӑпӑрах епӗр.

Сӑран пиншаклӑ колхоҫнӗк тата нумай каласа паҍе хӑйсен ӗмӗтне. Кирпӗҍ савӑҍӗ, панулмирен поматкӑ тумалли, ҫӗрулмирен паттӑкӑпа крахмал тумалли, тӑмран тӗрлӗ краскӑсем йухтармалли савӑтсем, йӗтӗптен пир тӗртмелли хапрӑксем, мунҍаларан капатсем сӳс-кантӑртан тӗрлӗ вӗренсем, йӑвӑҫран пурҫӑн тумалли хапрӑксем тата ыттисем ҫинҍен те каласа пӗтерҍӗ.

Ҫăваш ҫĕршывĕнҫех ҫакăн ҫухлĕ хапрăк-савăтсем лартма пултарассине хам пуҫра шухăшласа илсен, тĕлĕнсех кайрăм. Сасартăках мана хам ĕлĕк старике тĕл пулнă кун Атăл хĕрринҫе шухăшласа выртни аса килсе кайрĕ. Епĕ ун ҫухне сăрап пиншакран та интустриллĕрех ҫынҫĕ. Ман шухăшпа ун ҫухне епĕ выртакан тĕлте ҫĕр айне ҫавса кĕрсе каймаллаҫҫĕ—кам пĕлет, тен унта тем тĕрлĕ хăклă поротăсем выртаҫҫĕ. Хăмăн ун ҫухнехи шухăш, хаҫ аса илсен питĕ кулăшла туйăнса кайрĕ, мĕншĕн тесен, йалхуҫалăхне манса, унпа ҫыхăнтармасăр, тавай интустриленер тенипех интустриленме тытăнни ҫанах та кулăшла ĕҫ мĕн хаҫхи вăхăтра.

Епĕ кăшт кулса та илтĕм пулмалла.

— Епĕ калани сана кулăшла та туйăнат пулĕ те...

Сăрап пиншак кўреннĕ пек пулҫĕ.

— Ҫук, есĕ каланинҫен мар, хам шухăша аса илсе култăм епĕ, терĕм епĕ.

Мĕнле шухăш пулнине каласа памалла пулҫĕ. Пўртри ҫынсем ман айван шухăшран кулса илҫĕҫ.

— Тен епĕ калакан хапрăк-савăтсем те кулăшла пулĕҫ те, анҫах, ҫапах та, ман шухăшпа вĕсем пулма пултараҫҫех, мĕншĕн тесен вĕсем ваҫҫи ҫĕр тавар ҫителĕклĕ пулмалла. Халиҫҫен епĕр ҫĕре сухапуҫпе сухаласа унтан кашни пĕр пĕрҫĕ тырра куҫҫуҫпе йăлăнса ыйтнă.

— Ҫĕртен мар, Мĕтри, турăран телей кĕтнĕ, терĕ ман ҫумра таракан пĕр сухаллăскер.

— Ну, турăран пултăр, вăл вҫо ровно. Малашне епĕр йăлăнса ыйтма пăрахатпăр. Епĕр ҫĕр хуҫи, ҫĕр пирĕн хуҫа мар. Пирĕн ҫĕртен йăлăнса ыйтассине пăрахсă, ăна хамăра мĕн-мĕн кирлине пама хушма вĕренмелле. Епĕр ҫĕрпе кĕрешетпĕр. Ҫĕр мĕн ҫухлĕ хĕсĕнет, мĕн ҫухлĕ пирĕнпе хирĕҫет, ҫавăн ҫухлĕ тупăш ытларах илме тăрăшмалла унтан. Сухала есĕ ăна лайăх, трактăрпа; унăн иртне урла та пирлĕ виҫе виҫе темиҫе пайа касса вакла, кашни пайне тĕрлĕ паха тырпулсем ак—пĕри пулмасан тепри пултăр, пĕри лайăх пулнă пулсан ун хыҫĕнҫен акни тата лайăхрах пултăр; ăна есĕ нихҫан куҫран ан ҫухат, вăл мĕн хăтланнине сăнасах тăр—вăл сана парăнасшăн мар пулсан тислĕк тăкса унăн кăмăлне ҫемҫет йе минерал ҫăнăхĕсем сапса пар—ҫĕр кăмăлĕ ҫаврăнатех, ҫĕр сана парăнатех. Ман шухăшпа ҫĕр наҫар, ҫĕр сахал, ҫĕр хĕсĕк тесе алла усса ларни пустуй сĕлеке йухтарса ларни анҫах вăл. Сахал ҫĕртен те нумай тырă туса илме пулат, наҫар ҫĕре те аванлатма май пур—ĕҫлеме пĕлни анҫах пултăр. Епĕр ĕҫе сотсиалисăм ҫулĕ ҫине кăларатпăр—ҫакăнта пирĕн ҫăлăнăҫ.

— Сирĕн йалта Ваҫҫили Иванҫ пурăнатн хаҫ ҫав? тесе ыйтрăм епĕ Мĕтри калама ҫарăнсан.

Мĕтри ман ҫине тинкерсе пăхрĕ.

— Есĕ ăҫтан пĕлетĕн ăна?

— Ĕлĕкрех епĕр унпа пĕрре тĕл пулнăҫҫĕ. Ун ҫухне те епĕр унпа сак ҫĕр ыйтăвĕ ҫинҫен калаҫнăҫҫĕ.

— Пулĕ. Калаҫнă пулĕ. Вăл та ман пекех калаҫма йуратакан ҫынҫĕ. Анҫах вăл авалхи ҫын. Мĕн вилес патне ҫитиҫҫенех авалхи,

тахăп ĕмĕрхи асаттесен шухăшĕпе пурăнҭĕ. Хăй ухмах ҫын пулмасан та ҫĕнĕ йĕркене тĕпĕ йĕрĕпех ăнланса ҫитеймерĕ пулас.—Манран ирĕк. Есĕр ҫутăлнă ҫынсем, пурăнăр хăвăр пĕлнĕ пек, тесех вилҭĕ. Ман атте пулат вăл, терĕ йулашкинҭен сăран пиншак.

Старик вилнĕ тенине илтсен, темме ҭун хурлапҭĕ. Ерне, енĕ ăна пĕрререн пĕрре тĕл пулса, пĕрре анҭах калаҫнă. Ҫапах та Ваҫҫили Иванҭăн типшĕм, курпунлă кĕлеткине аса илсен, вăл кăх-кăх тесе ҭунтан тарăхса ҫăра сурҭăкне тата тата пăрахнине аса илсен, ҭун тăвăлса ҫитрĕ.

Ҭăнах та, хăй калашле, мĕн сăлтавпа ҫуралса пурăнса иртерҭĕши старик хăйĕн пурнăҫне? Мĕн тĕрлĕ савăнăҫ паҭĕҫши унăн ашшĕпе амăшĕ ăна ҫак ҫут тĕнҭене ҫуратса йарса? Хăш йенҭен картласа, мĕнле паллă туса хăварҭĕши Ваҫҫили Иванҭ ҫак вĕҫĕхĕррисĕр тенҭере ҫур ĕмĕр тăршшĕ ытла пурăнса иртерсе? Ним паллă та йулмарĕ. Тĕнҭе пурнăҫне вăл нимĕн ҭухлĕ те улăштараймарĕ. Мĕншĕн? Мĕншĕн тесен апла тума ăна патша та, турă та хушман. Мĕншĕн тесен ăна, пĕр ăна анҭах мар, ĕҫхалăхенҭен нумай пин, тен нумай мĕлйун ҫынна кăпиталисăм йĕрки, Уҫпенски калашле, ҭăнах та «воплӑ» тунă, вĕсене «сплош» пурнăҫпа пурăнтарса пĕрпеклетнĕ, пĕр пек йурлаттарнă, пĕр пек шухăшлаттарнă. Ҫак пĕр пек шухăшпа пĕр пек йурра епĕр нумай илтнĕ.—«Турăран хăра, патшана хисепле, сана пĕр питҫăмартинҭен ҫапсан есĕ тепĕрне ҫавăрса пар»—ҫаксем ĕҫхалăхĕн нумай йышне ҭăн ҭан ҫулран, клас кĕрешĕвĕнҭен пăрса тăнă. Ултав айне пулнисем ҭăнах та турăран хăранă, йунлă патшана хисепленĕ, хăйне пырса ҫапсан хирĕҫ ҭĕнме те хăйайман. Акă, тĕрĕссипе мĕнле «воплӑ» ҫинҭен каламаллаҭҭĕ Уҫпенски писсаттĕлĕн. Акă мĕнле «воплӑсене» хăйсен ҭăн сăппитне кăтартса вĕсене ҭăн ҫул ҫине тăратма тăрăшмаллаҭҭĕ наротнĕк писсаттĕлĕн. Акă мĕнле «воплӑсемшĕн» хурланмаллаҭҭĕ унăн.

Хурлантарат ҫав ҭăнах та, мĕншĕн тесен ҫак Ваҫҫили Иванҭ пек ҫынсем—вĕсем пусмăрлăхпа та, мăшкăллăхпа та килĕшнĕ ҫынсем. Вĕсем хăйсен етем тивĕҫлĕхне туртса илнипе те килĕшнĕ ҫынсем.

Иртнĕ вăхăт ҭуна хурлантарат. Анҭах ҫав вăхăтрах саванăҫ пĕтĕм кăмăла ăшăтса йарат—никам та мар, «Ваҫҫили Иванҭсем» вĕт, «Саххарсем», «ҭалтонсем», рапоҭҭи класпа пĕр пулса, ĕмĕрхи тăшманĕсене ҫĕмĕрсе пăрахрĕҫ, хăйсен етем тивĕҫлĕхне кайалла туртса илҭĕҫ.

Шухăшласан ҫӳҫпуҫ вирелле тăрат—Совет влаҫĕ пулман пулсан тата хăҫанҭҭен пуршуаҫи темиҫе ҫĕр пин, теп темиҫе мĕлйунлă ĕҫхалăхне «воплӑлантарса» тăнă пулĕҭҭĕши?!.

Акă, ман умра тăракан сăран пиншаках илер. Совет влаҫĕ пулман пулсан тен вăл та ашшĕ пекех ĕмĕрне «сплош» пурнăҫпа пурăнса иртернĕ пулĕҭҭĕ. Унăн та, тен, ҭи пысăк ĕмĕҭĕ хăҫан та пулсан ҫĕр хушăнасса кĕтсе пурăнни пулĕҭҭĕ. Вăл та, ашшĕ пекех,—турă парсан пулат, турă памасан нимĕн тума та ҫук, тесе пурăннă пулĕҭҭĕ.

Анҭах совет влаҫĕ хресҭене урăх ĕмĕт, урăх шанҭăк паҭĕ. Вăл шанҭăк—вăйа ӳстерсе, пĕтĕм пурнăҫа сотсиалисăм ҫулĕ ҫине ку-

çарса, çут тĕнђе пама пултаракан ырлăх пуйанлăхпа пĕтĕмĕшпех усă курма пултарасси. Паллах, çак ĕçе тума урăх етем, çĕнелнĕ етем кирлĕ. Кунта воплă пек сплош пурнăçпа пурăнакан, пĕр пĕринђен ним уйăрăлми, икĕ тумлам шыв пек пĕр пек Ваççили Иванђăсем йурăхсăра тухаççĕ. Кунта вăйлă, çирĕп, пысăк ĕмĕтлĕ тимĕр улăпсем кирлĕ.

Совет влаçĕ кивĕ тĕнђе йĕркине çĕмĕрсе, хăй умне етем ăруне те урăхлатас сатађ лартрĕ.

* * *

Прахут Атăлăн лăп выртакан асла шывне çĕмĕрсе пырат. Сылтăм йенђе, сăрт çамки çинђе йешĕл вăрман, хĕвел ăшши ађашланă май, пысăк шухăша кайса сĕнк пулнă. Вăрман айĕнђе, айалта, шыв хĕрринђе тĕллĕн-тĕллĕн çынсем кĕшĕлтетеççĕ. Мĕн ĕçлеççĕ вĕсем?

Ман пуçа пысăк шухăш аптăратат. Пуçран икĕ çын кĕлетки—Ваççили Иванђăпа унăн ывăлĕ туха пĕлмеççĕ. Ваççили Иванђăпа Мĕтри—умлă хыçлă пурăнакан икĕ ăру çыннисем. Пĕри—тĕнђе саккунĕсемпе, путсăр опђăлăх йĕркисемпе кĕрешме пултарайман, кĕрешме мар, вĕсене парăнса хăйне хăй çын шутĕнђен кăларса пăрахнипе те килĕшнĕ вăйсăр, тĕттĕм, тĕшмĕшлĕ ђахуткăллă старик. Тепри тĕнђе саккунĕсене хăйне парăнтарасшăн, етем пурнăçне етеме тивĕçлĕ тăвасшăн кĕрешекен вăйлă, хастарлă паттăр. Ашшĕпе ывăлĕ, анђах икĕ пĕр мар, хире хирĕç самана çыннисем. Кăпиталисăм Ваççили Иванђăн мĕн пур етемлĕхне, мĕн пур малаллăх шанђăкне ĕмсе илнĕ. Мĕтрийе Совет влаçĕ çĕнĕ пурнăç тума вăй та, хастарлăх та, калама çук пысăк ĕмĕт те панă.

«Хресђен ăс-пуçне çĕрпе çут тĕнђе вăйĕ парăнтарса тăрат. Тем пек лайăх çул çине тăрас пулсан та, вăл йепле те пулсан «ратсионалисăмлă» çектă тума кăна пултарат, анђах çут тĕнђе çине маттериалисăмлă куçпа, пĕртен пĕр тĕрĕс куçпа пăхас патне, çĕре хăйне пăхăнтарас шухăш патне çитиђђен хресђен нихăçан та ўссе çитес çук».

Çак сăмахсене малта асăннă Уçпенски писсаттĕлех çырнă.

«Раççейри пек хресђенсем асапланни, вĕсене пусмăрлани, вĕсенђен машкăлани урăх çĕршывра çук та пулмалла. Вĕсене мĕн ђул хытă пусмăрланă, çавăн ђухлĕ хăватпа вĕсем ăйăхран вăранĕç, çавăн ђухлĕ вĕсен револђутсиллĕ хастарлăхĕ никам çĕнтермелле мар вăйлă пулĕ. Револђутсиллĕ пролеттариатăн çак хастарлăха мĕн пур вăйпа пулăшса пымалла,—ан тив, вăл кивĕ, ылханлă, крепăслă, самотершавлă ђуралах Раççейе ђул çине ђул хăвармиђђен çĕмĕрсе тăктăр, вăл ирĕклĕ, хăйуллă çĕнĕ ăру пуçласа йатăр, вăл çĕнĕ, респуплĕклĕ çĕршыв туса хутăр, çав çĕршывра вара ирĕкре пирĕн сотсиалисăмшăн кĕрешес ĕç аслăшпех сарăлса кайĕ.

Çак сăмахсене тĕнђери пролеттарисен çулпуçĕ Ленин 1905-мĕш çулта каланă. Унтанпа пулса иртнĕ истори вăл калана сăмахсене, саккун вырăнне хурса, пункт хыççăн пункт пурнăçа кĕртсе пыђĕ те йулашкинђеп шăпах вырăна çитерсе лартрĕ.

Сотсиалисӑмшӑн кĕрешес ĕҫ Совет сойусĕн аслӑшнех пуҫланса кайрĕ. Вĕҫĕхĕррисĕр сарӑлса выртакан ҫĕр пиҫе ҫинҫе хресҫен масси, «ратсионалисӑмлӑ ҫектӑ» мар, коллективлӑ пурнӑҫ тӑват. Епĕр «воплӑсӑр». Пирĕн умра Архангĕлскран Атестӑна, Атестӑран Камҫаткăна, Камҫаткӑран Влатикапкаса, унтан Перҫҫи, Туртси ҫикки-сене ҫитиҫҫенех аслӑшпех ирĕклĕ, хӑйуллӑ ҫĕнĕ ару ҫĕнелнĕ етем—тимĕр улӑпсем—пуҫланса кайаҫҫĕ.

* * *

Ҫапла каласа паҫĕ пире Хусантан Шупашкара пыракан прахут ҫинҫе, епĕр ахаҫ ларасран тенĕ пек воплӑ шӑммисене суйласа пыпӑ ҫух, пĕр ҫӑваш рапоҫҫи.

— Ну, ӑнлантӑра ĕнтĕ Совет влаҫĕ вахатĕнҫе «воплӑ» мĕншĕн пĕтнине? тесе ыйтрĕ вӑл йулашкинҫен.

— Ӑнланма ӑнлантӑмӑр та, анҫах епĕр вӑл воплӑ ҫинҫен калаҫманҫĕҫке, терĕ ман ҫумра ларакан пĕр ватӑ.

— Пурĕ пĕрех марим вара? Епĕр ĕлĕк ҫав воплӑ шутĕнҫех пулнӑ вĕт. Воплӑпа пирĕн хушӑмӑрта пĕр уйрӑмлӑх анҫах пулнӑ—воплӑ шӑммисене епĕр кӑшланӑ, пирĕн тарпа йуна улпутсемпе кулаксем ĕмсе пурӑннӑ.

Пуҫ тӑрĕнҫе прахут трупи вӑрӑммӑн ахӑрса йаҫĕ. Пурте сулахай йенҫи кантӑк йенне ҫавӑрӑнса пӑхрӑмӑр. Пирĕн ҫумра Шупашкар ҫырма лаппинҫе, сӑртсем ҫинҫе сапаланса выртат.

Епĕр васкаса йапаласене пуҫтара пуҫларӑмӑр.

ÇИРĔМ ИККĔ
(ЙАТСĂРСЕМ)

ПОЕМĂ *)

АНТРЕЙ ПЕТТОКИ.

Сана çех пехилеп,
Хĕрлĕ çарăм.
Сана çех пехилеп
Çак йурра.

Еп çеç мар—
Мĕнпур пулас ăрă,
Еп çеç мар
Хаљ йурлап ку йурра!

Сан йатна ђаплама
Хăват çитмĕ,
Сан хална манăн мар
Мухтама!

Тимĕр-хурăç вăйна
Вилĕм витмĕ;
—Ес шăраннă вутпа,
Çулăмпа!

Револђутси ђунне
Ес çăлайрăн—
Канаш влаçĕн
Тĕреклĕ çарри!

Пур тăшманăн вăйне
Йăлт ватайрăн,
Пролеттарийĕн
Ал ђăмăрри!

Акă халĕ хам та
Хĕрлĕ çарăн,
Хĕрлĕ çарăн—
Хĕрлĕ салтакки.

Хĕрлĕ çăлтăрлă шљом—
Пуçа çаврăм.
Виç линейлă—алра
Винттовкки.

УКРАИНĂ

Украина—
Вĕçсĕр хир
Украинă—
Тĕрлĕ пир.

Ылттăн тулă сахал мар уйсенђе,
Украинă—йумах пек ыр тĕнђе!
Манăн куçăм курат ак сана:
Есĕ маншăн çут хĕвелĕн ђаршийĕ!**)

---

*) Поемăра Тури Кĕçнерни йенђи (Тутаркас р.) сăмах çаврăнăçĕсем нумай. Ăна авттăрĕ йури çавăн пек çырнă. Çаплипех хăварса пиђетлетпĕр.

**) Ђаршийĕ—ђаршавĕ тени пулат.

Пахҫа виттĕр курап Оксанна—
Йăлтра куçлă, хура куçхаршиллĕ.

Пахҫа çимĕç ларат усăнса,—
Канлĕх, савăнăç ирĕк сарлайнă;
Сар хĕвелĕ те пит савăнса,
Тўпере пĕр вырăнтах манса кайнă.

Ула пирĕн таçтах куç курми
Сарăлса выртнă Украинăн уй-хирĕ.
Украинăн—ырлăх ытарми
Украинăра савăнăç хаҫ ирĕк.

Анҫах...
Украина,
Астăватни?!
— Уйсем тăрăх тулла таптама
Кунсерен йуланут ҫупнине?!

Астăватни:
Хура çăхансем
Санăнне йун хыпма хапсăнса
Ĕрĕхсе сан çийĕн вĕçнине?
Астăватни?!.

* * *

Сарă тулă—
Пит тутлă пулас!
Çĕр-ай-хулăм
Кăмрăклă Тонпас!

Тинĕс урлă курат ăна куç,
Анкли, Френтси ăна пит хапас.
Украинă!..
Хăвăрг хапха уç!
Килĕшўллĕ пире сан Тонпас!
Украинă!..
Хăна-ху пулан пуç!
Ирĕк пулĕç Украинă, Капкас.

Тинĕс урлă шăваç хум сирсе
Тимĕр-хурăç тискер карапсем.
Хура тинĕс кăпăкăн йĕрсе
Ҫăтаймасăр тем пек хумханат...

Украина килеç „хăнасем“—
Украина шăваç карапсем...
Тимĕр-хурăç тупсем çĕкленеç—
Украинă,—
— Сана куђђенеç!

Украина шăваç, сĕтĕрнеç,
Украина пурте ыр сĕнеç:
Вак-тĕвекĕн сутат ăна Петљур,
Кăнтăр йенĕн Теникĕн килет.

Украинă,
    Асту,
        Ой, ан çур!..*)
— Тăшманна тўрĕрєххĕн тĕлле!

Анкли, Франтси йараç карапсем,
Анкли, Франтси йараç хĕç-пăшал...
Ешшелонăн шăваç вакунсем—
Турттараç кăмрăкпа сар тулла.

Кăмрăк, тулă йухат кашнă кун
Хура тинĕс йенне талккишпе;
Кăмрăк, тулă кайат йут çĕре
— Мускав, Питĕр—выçса вилес пек.

Мускав, Питĕр—выçса вилес пек,
Мускав, Питĕр хурçă картара,—
Çĕпĕр çĕрĕ—йăлтах Колђђакра,
Украина—мăшкăл таптавра...

Украинă—мăшкăл таптавра...
Иртĕхеççĕ хайар касаксем,
Таптанаç ылттăн тулăллă хирсем,
Мăшкăлланнă Украинă хĕрсем.

РЕВОЉУТСИ ВĂЙХĂВАЂĔ

Ылхануллă çĕр çиййĕн,
Çĕр çиййĕн
Çивђĕ çиçĕм çиçет. Штурм сарăлат.
Тăшман хăрушă, тискер пит...
Çвер**) тейĕн...
Пăх,—çăварĕ хыпасшăн карăлат!

*) Çывăр.
**) Çвер — тискер кайăк.

Тĕнђери пур куштан
Мул хăвађĕ
Купаланђĕ тискер пĕлĕт пек.
Пăвăнат ак халех
Канаш влаçĕ!
Ак, халех!.. Ак, халех пĕтес пек!..

Пролеттари, итле!
Револ̧утси,
Револ̧утси тăшман картинђе!
Тыт алла хĕç-пăшал,
Пролеттари!
Саншăн çех пулмалла пур тĕнђе!

Йе, тăшман путарсах
Пире ларти,
Йе, пăђланĕç ĕмĕрхи ĕмĕтсем?!
Канаша сыхлама,
Ĕç кăварти,
Канаша сыхлама вилиђђен!..

Хапрăк-савăт, хытăрах
Трупа кăшкăрт,
Хапрăк-савăт,васкат çынсене!
Пойăс, хăвăрт ђупсам,
Хыттăн ђашкăрт!..
— Пур вăйа куçарар фронт йенне!

. . . .
. . . .

Хапрăк-савăт кăкри сывламаст,
Хапрăк-савăт йăп-йăпăм ларат.
Трупа витĕр тĕтĕм тек тухмаст,
Тавра выçлăх кунсейрĕн сарлат.

Ĕнер çеç тухса кайрĕ фронта
Çапăçмашкăн хастарлă отрет;
ĕççын вăйĕ пĕтмен,—ак тата
Пайан тепĕр отрет çитĕнет.

Кашнă хапрăк пухат, кашнă йал
Йулашки хăватне фронт вал̧ђи.
Кунтан-кун çирĕпрех хĕрлĕ хал,
Хĕрлĕ çарăн сĕрлет хурт вĕлли.

ÇИРĔМ ИККĔН

Выçă, сивĕ...
Шенел кивĕ.
Çĕтĕк-çатăк
Сăран атă.

Çĕлĕк çĕтĕк,
Пуçа хĕсĕк.
Çара алă
Кушăркаллă...

Хулпуççийĕн
Штык тăррийĕн—
Йăлтăр-йалтăр—
Йăлтăрки...

Хулпуç урлă,
Урлă-пирлĕ
Ленттă çакнă
Патронпа.

. . . .
. . . .

Ак утаççĕ, утаççĕ...
Ђупаççĕ, такăнаççĕ...

Кĕрхи çил харсăр,
Ним пăхмасăр
Силлет те силлет
Çĕтĕк шенеле.

Кĕрхи çил харсăр
Йыт çури,
Силлет те
Çĕтет
Çĕтĕке.

. . . .
. . . .

Çирĕм иккĕн хăйсем
Çирĕм ик çын:
Пĕлмеççĕ—мĕн йатлă хăшши,
Ăçти çын.

Мĕн тăвас-ха йатпа?!
— Пĕр йат пур:
Кашниййĕн пĕр йат—
Пољшшевик!

Кашниййĕн пуçра
Шухăш пĕр.
Ђĕриййĕ çунат...
— Çунтăри!

Кĕрхи каç—
Хура лаç!
Кĕрхи каç—
Куçна йĕппе тир!

Тек утаç,
Такăнаç...
Тек ђупаç
Çирĕм ик пăхаттир.

Çирĕм иккĕн малта
йĕр йĕрлеç.
Пинĕн пинĕн пыраç хыçалтан.
Шавлаç... Кĕрлеç...
— Анђах шăппăн утаç малта.

Тăшман çывăх, умрах,
Те хыçра...
Тĕттĕм витĕр асту хытăрах!
Пăшал алăра,
Патрон ђыхнă ленттă çумра.

Кĕр каç тĕттĕм, хăруш...
Ан шиклен!
Хастаррах ђĕрӳне тапма хуш.
Ак итле:
Тавра шăп, таврара çук касђӳ...

Тавра йăпăш... Асту!..
Ан ĕнен!
Йăпăш айăн сыхлат тăшману.
Ан шиклен!
Шикленмешкĕн ан пĕлтĕр ђĕрӳ!

ПИРĔН ПУÇ ПУТОННĂЙ

Вутлă çарă епĕр,
Вут пек Хĕрлĕ çар.
Çил пек хыт çÿретпĕр—
Çил, пире ан ҫар!..

Алра çивҫĕ шашкă,
Тусăм—урхамах.
Ей, касак, ан ашкăн,
Ан ĕрĕх, ухмах!..

Тнеппăр шыв-и, Тон-и,
Ҫараймаç—каçатпăр!
Пирĕн пуç Путоннăй,—
Хыççăн йăлт кайатпăр!

Тапхăр шавлат, тапхăр
Ват йуман çилпе.
Тăшмана таптатпăр
Хыт тыт тилхепе!..

Пирĕн утсем ÿрĕк—
Çилпе тавлашаç!
Пирĕншĕн çул тÿрĕ—
Ҫармаст тĕттĕм каç.

Тнеппăр шыв-и, Тон-и,
Ҫараймаç, каçатпăр!
Пирĕн пуç Путоннăй—
Хыççăн харăс кайатпăр!..

Украинă хирĕ—
Лаптак такана.
Итле: çиле хирĕç
Йурлаç ак çакна.

Акă, çавра çилĕн
Вĕçет утлă çар;
Умра-хыçра вилĕм,—
— Ан пăх!.. Йара пар!..

Ху ывăннă-и, лашу-и,—
— Канма вăхăт мар!
— Кам унта!? Пуршуй-и?—
Айта, хăвалар!

ÇИРĔМ ИККĔН АК КАЛЛЕХ

Çирĕм ик çын
Утаç ак каллех.
Çирĕм ик çын
Ывăнас çук халех.

Кунĕн-кунĕн
Вăрă пек пытанаç...
Пытанаç те,
Каллех тек утаç.

Çивҫĕ çилĕ
Çийессĕн силлет,—
Тĕнҫе çийĕ
Хирçесшĕн çиле.

Ой, çанталăк—
Çавра сут тĕнҫе,
Хăмăр шăналăк—
Ҫара куçĕнҫе!

Çăмăр вĕттĕн
Ҫарусăр пĕрĕхет.
Кĕр каç тĕттĕм,—
Çĕре сĕм пĕркет.

Çулçи вăрăм,
Çулçи такăр мар.
Кĕр каç хăрăм,—
Ҫасах такăнма...

Çирĕм иккĕн
Çÿреç çапăнса,
Çĕр çи çийĕн
Утаç такăнсах.

Кил-çурт маннă,
Маннă тăван йыша..!,
Ҫун аманнă—
— Малаллах ишер

Ĕмĕр мĕскĕн,
Ĕмĕр—ђĕр нуша;
Ĕмĕр хĕскĕн—
Пуççап ђĕн пуша!..

Кăвак хуппийĕ
Уçăлђĕ перре,—
Çĕр тӳпийĕ
Пулмалла пире!..

Епĕр тухнă
Ђăнлăх шырама,
Пурăн, ђухăн,
Вилĕм—харама!..

Кил-çурт пирĕн
Пĕлĕт çи—кĕленђе,
Тăван çĕрĕ-хирĕ—
Çавра çут тĕнђе!..

. . . .

Кĕр кас тĕттĕм,
Çийĕнђе—сĕм çилхе;—
Кĕр кас тĕттĕм—
Хуплат çирĕм икке.

Çирĕм иккĕн
Утаç малаллах,
Çĕр хушшийĕн
Çитеç пĕр йала.

ШУРРИСЕМ

Не стая воронов слеталась.
А. Пушкин.

„Хура çăхан пуххийĕ мар
Вилĕ çинђе шавлат",
Хура ђĕреллĕ, шурă çар
Ђĕр йун ĕçки тăват.

Шавлаç, хиреç, хушăран йурлаç,
Хушăран турра кĕллеç...
Çĕрĕпе ĕççе ирђђен урлаç,
Урлаç—татах ĕçеç.

Кам çук кунта?!.—Ак охвитсер,
Улпут çури, касак...
Патша куђи, поп майлăскер,
Страшник, йалти кулак...

Пĕр шухăшпа, пĕр ĕмĕтпе
Ђунсем вĕсен çунаç:
Кивве çаврас, вутпа-хĕçпе
Раççей ђысне çăлас...

Патша та тĕн, тăван çĕршыв,—
Ак мĕншĕн тăрăшаç.
„Раççей пĕр пултăр, пултăр сыв!
Таврăнайтăр „иртнĕ каç"!

Алран тухса ӳкнĕ хăвата,
Пур пурлăха çаврас.
Çĕре, пур хапрăк-савăта
Каллех хамрах таврас.

Полкки-полкки шăваç, сарлаç..,
Карталанат Мускав.
Хыпас пекех тупсем карлаç,
Йунпа çăвăнат хунав.

Уйхир çийпе çавра çил мар,
— Шур çар кусат йыт пек.
Ђĕр йун йухат тулли çырма,
Çунат çĕрçи вутпе...

. . . .

Пур çĕрĕн хурлăх ђир-ђĕр, тиф.
Пур çĕрĕн вилĕм çеç сарлат.
Апатсăр—выçă, тумсăр—сив;
Вилес килмест?—Пăшал авăрла!

Ăçта çитеç—вут шар, куççуђ,
Ăçта çитеç—такан*).
Мĕнђул ылхан пулайрĕ пуђ
Тăшман шур салтака?!

*) Такан—çакса вĕлермелли.

Кам асăнмĕ хура йатпа
Колђђак, Тениккĕне?!
Кам ђĕрине сăран атпа
Таптаман-ши ĕнтĕ?!.

Кала, респуплĕк, мĕн ђухлĕ
Асап курса çав ђух?
Кала, ех амĕш, ăçта улă?*
Хăш уйхирте ађу?!.

Куççуђ тăкат ват амĕш,
Кĕтет, кĕтет çулран...
Вĕçсе кайан хур-аккĕш
Калат! „Ан кĕт улна“.

Хĕлле çитсен, шур йурăн
Хуплат ăна çитти;
Çуркуннепе сар хурăн
Тата хĕвел çутти.

Çеçен çилпе йăвашшăн
Тек ађашлаç куллен...
Çĕн самана тăвасшăн
Вăл шикленмен вилме.

ÇИРĔМ ИК ВИЛĔМ

Тушнан** йурла, кĕслем!..
Ђăтсам, ан сик, ђĕрем!
Мĕнле халпа вĕçлем
Пĕрре тĕрлен тĕрре?!.

Йурла, кĕслем, тушнан!
Ђун хавалне тапрат!
Ман йурă çирĕм ик тусшăнах,
Çирĕм иккĕшĕнех макăрат...

Тăван çĕр-шыв сарлак—
Утсах тухаймăн ђас:
Пĕр вĕçĕ—Çтерлитамак,
Тепри—Капкас, Тонпасс.

Выçса халтан ўксе,
Ывăнса ури утмаст,
Кашнин питре çўксем...***)
Ђакма приккас хушмаст.

* * *

Выçса халран ўксе,
Ывăнса—ура утмаст.
Патрон йăлтах пĕтсе,
Анђах—пĕртте супмаç.

Анђах пĕртте супмаç
Тăшман умђен нихçан;
Иртет-и кун, йе каç
Çапăçурах йалан.

Çирĕм иккĕшĕн приккас:
Тăшман тылне ленкме...
Кунсерĕн кун, каçшерĕн каç
Хыçран кансĕрлеме...

Çирĕм иккĕн пĕр сатађ—
Вăрттăн йĕр йĕрлесси.
Йĕр йĕрлесе утаç—
Хĕрлисен çул уççи...

Ĕçсе лараç ирђђен штапра
Çап-çут пакунлисем.
Ним шухăш çук—фронт катара,
Умра—çут ерехсем.

Сĕтел тулли ерех ларат,
Умра „çестритсăсем“...
Пуç çавăрăнат, мухмăр сарлат,
Тĕксĕмленеç куçсем.

---

*) Улă—ывăлу.

**) Тушнан—хурлăхлă та паттăрăн.

***) Çĕвексем, ђерсе пĕтернĕ.

* * *

Сасартăк сас сарлайрĕ харс,
Пăшал сасси тавра.
— Ăçта тревокă?! Шакăм марш!—
Шалт панĕккă штапра.

Çине-çинех çурлат кранат,
Илтĕнеç сассем: „Пли!.. Пер!..“
Хура вăрман йăлт вăранат
Пăшал хроплатнипе.

Йулашки çип—пикфорт çиппи
Пĕршер те çук патрон.
Мăкăрланат тар нӳхреппи.
Ăста тăратши ескатрон?

Ђĕтренђĕ пĕлĕт, кисренђĕ çĕр—
Тар нӳхреппи вутра.
— ...„Ах тур!.. Мĕн пулђĕ-ха кĕçĕр?
Кускаланаç штапра?‘

Ак шуррисем ђупаç ьсвотшер...
— „Тавай кранат ђасрах!..
Н-на! Ил-ха!.. Сволăђ офитсер!
Йулашкине!..“

Трах!!! Трах!!!
— „Н-на!.. Хып!..“ —Туртат—
„Оçеђкă, ђорт!!.“
Пуш килђсă çех—накан.
— „Тăшмансемех тытса вĕлерђђĕр—
Хамшăн патрон йулман“...

* * *

Ђупса çитет штапа салтак:
— „Ваш... Прот... Парттисансем!
Лекейрĕç халђ хăйсем йăлтах,
Пирĕн алра вĕсем!..“

. . . .
. . . .

Тушнан йурла, кĕслем!
Ђăтсам, ан сик, ђĕрем!
Мĕнле халпа вĕçлем
Пĕрре тĕрлен тĕрре?!.

Хирте вĕрет ђĕр çил,
Ађашланат ђеђек.
Хирти лапам ђĕрçи...
Ђипер пит çут тĕнђе.

Вĕшлен вĕрет тек çил,—
Йурлат, йĕрет тумра...
Çирĕм иккĕне вађђи
Хура тăпра умра.

Хура тăпра – масар
Çирĕм иккĕне вађђи...
— „Пайан ђуна татар,
Ак-ак, илтнейĕ: „пли!“

Çур кунĕ пит илем,
Йаш пурнăç хаклă пит.
— „Йепле, йепле вилем?!
Ђун-халпа татлăпи?!.“

Йаш куç хăрат пăхма
Тискер сив шăтăка.
— „Ех, мĕн пулин-пулман,
Сыв пул, ват тус çăка!“

Шутла—тата минçе
Минут йулайнă-ши?
Çын пурнăçĕ çинçе,
Хăçан татлайĕ-ши?!

Иртет минут. Тавра,
Тавра илем, ђер-ђун.
Анђах приккас штапран,
Приккас пĕр—вилĕм, йун...

Вăш-вăш вĕрет ђĕр çил,
Хĕвел çунат çўлтен...

— ...„Тăвансем! пĕлместĕр-ши,
Камçем вилеç сиртен?!

Кама тĕллеттĕр сер*)
Кама вĕлересшĕн-ха?!“
— Сулат ал офитсер:
Салпран ђĕтрет çăка.

Пуçсем тайлаç хуллен...
Кукленс(е) анаç çĕре.
Ђĕр йун—вĕри çĕлен
Тип çереме тĕрлет.

* * *

Лапам çийпе йĕрсе
Вăш-вăш, вĕрег тек çил.
Хĕвел пăхат хĕрсе,
Вут-кăварланат пĕлĕт- çи.

Таçти-таçти çынсем,
Пĕлмеç пĕрне-пĕри...
Пĕр пулнăђђĕ ђунсем,
Пĕр пек тапнă ђĕри...

Пĕр ĕмĕтпе çунса
Вилђĕç пĕр ĕçшĕнех:
Ĕçхалăхне сунсах
Кĕрсе ўкрĕç çĕр ăшне.

* * *

Йурла, кĕслем, сĕрле!
Ђун хавалне тапрат:
Манăн йурă—çирĕм иккĕшĕнех,
Çирĕм иккĕшĕнех макăрат...

ЕППИЛĂК

Çулсем шăваççĕ, сисме çук,
Пит хыттăн ђупат çĕн вăхăт.
Асран тухса ўкен иртнĕ çул:
Пин те тăхăр çĕр вунтăххăр...

Çĕн тапхăра кĕретпĕр епĕр,
Хыватпăр тĕп никĕс „ыраншăн“:
Кĕрлет çеç савăђĕ, сĕрлет хир;
Ђи сывăх мелоти вăл маншăн.

Тăватпăр епĕр çĕн тĕнђе,
Ўсетпĕр кунсейрĕн, пит вăйлăн.
Пирĕн ĕмĕт—мĕн пур çĕр çинђе
Тăвас пурнăçа пĕр сăйлă.

*) Есĕр.

* * *

Кероиккӑ иртнӗ çулсенхи—
Çавах мимене çӗмӗрет.
Историйе кӗрӗ „Ёнерхи“,
Вӑл кӗрӗ пулас ӗмӗре.

Тен вилӗпӗр епӗр. Ађасем
Тек асӑнӗç иртнӗ кунсене.
— „Ав, çакӑнта вилнӗ маçаксем.
Çав лакӑма ђикнӗ вѐсене!..“

Кероиккӑ иртнӗ çулсенхи—
Вӑл хаклӑн пире туйӑнат.
Ӑçта çитрӗн унта—çеçен хир
Çав иртнӗ кунсемшӗн йурлат.

Çирӗм иккӗн. Вӗсен йатсем çук,
Манатпӑр ђасах вӗсене.
Тухаççӗ асран çулран çул
Çапӑçуллӑ кунсем, паттӑрсем.

Сахали выртаççӗ, шута ил,
Çирӗм иккӗн, çирӗм иккӗн çӗрсе.
Сахали ӳлет çеçен çил
Çав йатсӑр çынсемшӗн йӗрсе?

Çирӗм иккӗн вӗсем—йатсӑрсем.
Çирӗм иккӗне йурӑра астӑвар.
Çирӗм иккӗн вилнӗ паттӑрсем
Çирӗм иккӗн йатсӑр комунар.

Ленинкрат—Ахмане.
1928—30 ç.

Ђăваш республĕкĕ 10 çул тултарнă йађепе туса иртернĕ литтераттур ăмăртăвĕнђе Йуманăн «Колхос новеллисем» пиллĕкĕмĕш премн илнĕ.

КОЛХОС НОВЕЛЛИСЕМ

М. ЙУМАН

Ĕç уççи

Ўтемĕр касенђе çын тенĕскерсем хурткăпшанкă пек çавăрнаççĕ.

— Пўле-Пилĕхе шĕкĕр, Харсăр Петĕр телей çарине тупна, тахапатпăр ĕнтĕ тўрех ăрăскал кĕпине,—тесе хĕрарăмсем ђупкалаççĕ.

— Тавĕ те пуçĕ те кўренкĕсĕр пулђђăр, Харсăр Петĕр тĕлĕнмелле ăслай тупнă, кўлетпĕр ĕнтĕ тўрех икĕ çунатлă утсем,—тесе арçынсем ђупкалаççĕ.

Харсăр Петĕр пушарни каланђи пек тăрăм тăррине улăхса тăнă, аллине алă тунинђен вăрăм çăра тытнă та уна пуç йĕритавра çавăркалат.

— Ак тек кулаттăр, пĕлĕмçĕ алă хăйне хăй пĕлтернĕ тесе мăшкăллаттăр... ак курăр та тĕлĕнĕр ĕнтĕ манăн хастар тупсăмран,—тесе вăл ђун хавалĕпе çухăрса илђе.

— Мĕп меслеђĕ турăн вара, Петĕр? Пурри те машшин тавраш ĕсем те ђаваш аллинђен килмен йапаласем пулас... Усси пулĕ-ши вара пире, хресђенсене? Кайса тăмĕ-ши вара усламĕ хысна аллине кăна?—тесе етемсем кĕрлеççĕ.

— Ку йапала ĕмĕр çаврăнакан хултăрђă йышши. Вăл çара сывлăпран таса çăнăх авăрса тăрĕ, ĕмпўлĕх меслеђĕ мар—вăл Ўтемĕр халăхăн меслеђĕ... Кĕреçе илмесĕр авăрттарăп, усси сире пулĕ, ђапĕ-хисепĕ мана тивĕ,—терĕ те Петĕр ђиркўрен çўлĕ тăрăм тăррииђен тўрех çĕрелле сикрĕ.

— Шăналăк карăр хăвăртрах урам урлă, Харсăр Петĕре йатса илĕр, алли-урине çĕре ан тивреттĕр—сийен ан пултăр,—тесе етемсем айалта шавлаççĕ, хыпаланса шăналăк караççĕ.

Петĕр шăналăк çине çĕмĕрен уххи пек персе анђе, шăналăкпа ђăлханса çĕр çине пуçхĕрлĕ тирĕнђĕ те месерле лаплатса выртрĕ.

Петĕр куçне-пуçне тăрмаласа пăхрĕ: йĕритавра пĕр çитĕпнĕ çын çук—шăкăр-макăр та шăл-йĕрен.

— Хайла хўри ђикеленсе анђе,ултав çўпçи саланђĕ... Халăха кĕреçесĕр авăртакан арман лартса паратăп тесе мухтанђĕ... ак тĕсне пулђĕ те—хăрăк ури шĕкĕл хуçăлђĕ,—тесе ĕхĕлтетиншех ĕхĕлтетеççĕ ађа-пађасем.

Петĕр сылтăм урине хыпалаеа пăхрĕ—вăл ҫапах та мунҫала пек лĕнҫĕркке.

Петĕр ыратнине сисеймерĕ, ҫапах та йăнăпımасан ҫынран лайăх мар тесе йан ҫурса йăнăшма пуҫларĕ...

Кăвак ҫӳтăпа лупас айĕнҫе урапа ҫинҫе ҫапла тĕлĕнсе сывăрат Харсăр Петĕр.

Ҫăхă-ҫĕпĕсем кăтиклетсе анҫĕҫ, урапа йĕритавра ҫупкаласҫĕ.

Витере лаша ирхи шăвару вăхăҫĕ ҫитнине сиссе кĕҫенкелет.

Харсăр Петĕр калле-малле ҫаврăнкалат, ĕнрешет, тăма вăхăт ҫитнине сиссе вăранма хатĕрленет пулас та ннйепле ыйăх пуссине ҫĕнтерейместь.

Кӳршĕрен Тарҫă Павăл пырса ҫитрĕ, Харсăр Петĕр сывăрнине курсан пуҫне пăркаларĕ те Петĕре ураран сĕтĕркелесе вăратрĕ.

— Касатăн ыйăха пуп майри пек... Ҫынсепҫен намăс. Ак уйра ҫĕмелсем пĕҫĕсене ҫапса кулĕҫ, харпăрҫăксем хастарлăхпа мухтанҫĕҫ, вĕсем ыйăха кана хастар иккен тийĕҫ,—текелесе вăл Петĕре вăратса лартрĕ.

— Ей мăшкăл, ытлашши те сывăрнă пулас... хасĕр лашана шăваратăп та утлапсах тухатăп,—терĕ те Петĕр урапа ҫинҫен сиксе анса ҫупкаласа лашине майлама пуҫларĕ.

— Ахалех мар ҫав, тĕлĕкре тенел авнă теҫҫĕ. Тĕлĕк хыҫҫăн кайсан ерешмен картипе вĕҫтерсе ăлав турттарăн, хăмăл ҫине ҫакăнса вилĕн тетҫĕҫ ваттисем,—тесе мăкăртатса вăл лашине шăварҫĕ, хăмăт тăхăнтарҫĕ, ҫĕлпĕртен тытса урама ҫавăтса тухрĕ.

Вăл лашапа утланма кăна хатĕрленсеҫҫĕ—темĕн аса илҫĕ те лашине хапха ҫумне кăкарса пуҫне хыҫкаласа пӳрте кĕрсе кайрĕ.

Пӳртре вăл турăш кĕтессине ыҫĕ те Тетĕш мешҫенĕ ҫĕвĕҫĕ Мирун пек тискер Микул кĕлетки хыҫĕнҫен пĕр тутăрпа ҫыхнă пĕҫĕкҫĕ йапала илҫĕ те кăсйине ҫикрĕ. Унтан вăл пӳртрен тухрĕ, лашана хапха ҫумĕнҫен салтса утланҫĕ те уйалла ҫуптарҫе.

— Муталанма та кирлех марҫҫе те и тен—Тарҫă Павăлран лайăх мар пĕрлехи тăрмăшлăх вĕт, тесе шухăшласа вăл ҫулпа йуртарҫĕ, ҫасах Тарҫă Павăла хăваласа ҫитрĕ.

— Илтерейĕпĕр-ши вара пайан та? Асапланни кăна ахаҫ пулмĕши?—терĕ Павăл Петĕр унпа танлашса йунашарлансан.

— Еҫĕн пĕр тытнă тĕртне тумасан мĕн пулăпăр вара епир?—терĕ те Петĕр пуҫне айалалла ҫикрĕ, вăрахăн сĕнксе ыҫе.

Петĕр хăйĕн пурăнăҫĕ тăрмашĕсене аса илсе ĕшенсе ыҫе.

Петĕр аҫаран пурăнăҫа илемлĕ ҫăмăртама тăрăшрĕ. Тăлăх ӳссе, вĕтӳ аҫине ҫӳресе вăл ҫын йĕркине кĕнĕ пек пулҫĕ. Вăл шкулра пĕр кун пулмасăр та ҫынсем ҫумĕнҫеп ҫырăва ҫырма-вулама таранҫҫен вĕренҫĕ. Ахалех харсăр йаҫĕ илтмерĕ ҫав вăл: вăл кăмкан таврап тӳрлетекен пăхăрҫă мишер патенҫе пурăнса пăхăрҫăпа кĕмĕлҫĕ ĕҫне те тишкерекен пулҫĕ, тимĕрҫĕ лаҫĕнҫе те ĕҫлекелесе пăхрĕ, хулара пĕр савăт пеккинҫе млатук ҫапса та пурăнса пăхрĕ. Пĕлĕмҫĕ алă—а ĕҫĕ пĕртех ăпмаст тесе тăрăхларĕҫ кӳршĕ-аршăсем. Вĕсем пĕлмеҫҫĕ: Петĕр ҫăтканлăхпа кăна мар тĕрлĕ ĕҫе тапратса пăхрĕ. Петĕр пĕр

йенҫен илеме, тирпейе хапсăпат, вăл шĕшлĕ ĕçне пăрахса хулари йышши ҫаплăрах ĕçе тытăнасшăн. Тепĕр йенҫен етемсем ҫухламаççĕ—Петĕр ĕмĕре мĕнле йывăрпа иртерет. Вăл çунса та пăхрĕ, выҫăх-ҫĕрлĕхрен те несекрен катăк пулҫе, вăрă-хурах та ун çине куç хурах тăҫĕ. Етемсем—Петĕр ансатран пуйат—ак вăл пĕр нимĕç кирлĕ кирлĕмерне туйанса йарат те сĕвет услама, тесе сÿпĕлтетеççĕ. Мĕн пĕлеççĕ вĕсем? Ак Петĕр çăм çапакан арман лартма тапратрĕ, вăй çитмерĕ те пуйан Çимукпа пĕрлешмелле пулҫĕ. Машшин çăм çапрĕ, Петĕр çĕр çывăрмасăр ĕçлерĕ—усси тапаклăх та пулмарĕ, Çимук кăсйине кайса тăҫĕ. Ак тата Петĕр çеппараттăр туйанҫĕ, арăм пирарĕсене сутса та пулин йÿнеçтерҫĕ. Ĕç пулат терĕ—нимĕн те тухмарĕ: малтан каллех Çимук çула пÿлрĕ, вăл та çеппараттăр туйанҫĕ те пĕтĕм ĕçе хăйĕн аллине çавăрса илҫĕ. Кайарахпа ĕçе копператсі тапратрĕ те Петĕре таптаса пăҫах хупларĕ... Çапах Петĕр малалла та çаплах кĕрмешет, тăрмашлат. Анҫах, туртана урăх çулпа пăрма вăхăт çитрĕ те...

Петĕр çапла сĕмленсе пĕрре Павăл çине пăхса илҫĕ, тепре умра çывăхаракан парлак çине пăхса илҫĕ. Павăл Петĕр некех лаша çурăмĕ çине пĕкĕленсе пурнăç çинҫен шухăшласа пырат пулас. Парлак икĕ хĕрлĕ çырмасен хушшинҫе тăм ҫÿлмек хырăмĕ пек пакарланса выртат. Парлак çинҫе кашласа ларакан ерĕм хушшинҫе виçĕ-тăвата тин сухаланă йарăм кукăрăлса—мăкăрăлса йăваланаççĕ, йарансем пуçĕнҫе тимĕр акапуç хăйаккăнланса выртат.

— Илтерейĕпĕр-ши вара пайан та? Асапланни кăна ахаҫ пулаши?—тесе шуса анҫĕ лаша çинҫен Павăл.

— Мĕн çука лăкăртататăн? Курассăм килмест çапла ĕç патне пырсан кĕсенленекене,—терĕ те Петĕр ут çинҫен хуллен анҫе, Павăл лашине те пырса тытрĕ те акана кÿлме пуçларĕ.

— Кĕсенленетĕн тен... Ҫун ыратнипе кĕçенленетен вĕт. Сана йурат: есĕ теветкел, ĕç йĕкĕҫĕ, çынсем «Петĕр вăл йеруй, ҫаппа мул етеммн теççĕ». А епĕ мĕн пултăм: лерен хăпрăм, кунта çыпçăнаймарăм,—текелесе пуçне хыçрĕ Павăл. Петĕр Павăл çине ҫейелĕ пăхса илҫĕ, турăш хыçĕнҫи йапалапа ҫикнĕ кăсйине хыпаласа пăхрĕ, сăмсине лашалла шăнăрса туртса илҫĕ те лашасене йунашар кÿлсе тăратрĕ, пуçĕнҫен тытрĕ.

— Аспах мар çав, Петĕр, пухура çĕмĕрĕлтĕн, çĕлĕкне урайне çапа çапа айкашрăн... пулсанҫҫĕ кунта трактăр йе Çĕмелсен çерем уçакан ака. Вĕсем пулмасан та ерттел лашипе, ерттел вăйпа парлака хăрран турттарма пулĕҫҫĕ,—тесе тăрăхлакаласа Павăл акапÿç аврипе пырса тытрĕ.

— Йе çитĕ сана кĕçĕленме... ав çулпа çĕмелсем çывăхараççĕ, кулĕç иксĕмĕр çапла кĕçеленнине курсан,—терĕ те Петĕр лашасене малалла харт туртрĕ.

—«Пĕҫҫен пĕкĕнме, тăваттăн ташлама, çĕрĕн çĕртме тума лайăх теççĕ çав, тантăш» тесе Павăл каласа та ĕлкĕреймерĕ—лашасем малалла ыткăнса утрĕç, акапуç йăранран тухса кайрĕ те çереме хăрах тĕрĕнепе кăна шăйракласа пыҫĕ.

— Мӗн ҫывӑрса пыратан? Мӗн йал куллн тӑватӑн?—тесе Петӗр ҫухӑрса илҗӗ те лашасене пуҫӗнҗен ҫакӑнса җарҗӗ, кайалла йӑран пуҫнелле ҫавӑрҗӗ.

— Халӑх ҫинҗе мухтанатӑн: «ак, Куҫма, сурӑр, пӗҗҗен ӗҫлесех сиртен ирттеретӗп» терӗн, пӗҗҗен пуҫпах ӗмӗр ака тимӗрӗ тивмен парлака та тырӑ ани тӑватӑп» терӗн. Ак турӑн ӗнтӗ: халӑх пухура та кулҗӗ, халӗ ӗнтӗ пушшех кулӗҫ»—тесе ҫилемес мӑкӑртатса Павӑл акапуҫне йӑран ҫине илсе тухса кивӗ шӑйрӑк ҫине тӑратрӗ, хӑй ҫамкине аллипе хупласа ҫул тӑрӑх шӑкӑртатса ҫывӑхаракан урапасем нение тирӗнсе пӑхса илҗӗ.

— Мӗн шӑнса тӑратӑн ӗнтӗ? Пус тармакланарах акапуҫ аврине, ҫитеҫҫӗ вӗт ҫӗмелсем!—тесе акӑрашнипех акӑрашрӗ Петӗр.

— Ан кӗрлесем, ӗҫ тухсан тухат. тухмасан йулашки пулат, ав Микул претҫетаттӗл килет, җаратӑп та кайалла илме йӑлӑнатӑн, епӗ вӗт сан пек вӗсемпе мухтанҗӑк вӑрҫи вӑрҫман, ӑмӑрту йӗтесӗ те татман, тесе мӑкӑртатса Павӑл акапуҫ аври ҫине хырӑмӗпе уртӑнса пускаларӗ.

Петӗр лашасене каллех вӑйпа малалла сӗтӗрҗӗ те ӗрӗхтерсе уттарҗӗ. Акапуҫ йӗтем пек хытӑ ана ҫинҗе йӑнӑшкаласа шурӗ те сасартӑк йӑранран сиксе тухрӗ. Павӑл акапуҫ аврине мекӗрленсе пускаласа та ӗлкӗреймерӗ—акапуҫ пӗр айакка йал ҫавӑрӑнҗӗ, Павӑла җикелентерсе ыватрӗ.

— Тпру, тпру! Мӗн тупрӑн, Павӑл? Мӗн тупни пӗрлехи пултӑр!—тесе кӑшкӑрашни илтӗнҗӗ ҫул йенҗен.

Петӗр ҫаврӑнса пӑхрӗ—хире ӗҫе кайакан ҫӗмелсем пырса җарӑнҗӗҫ, пӗр урапи ҫинҗе ерттел пуҫлӑхӗ Микул та ларат.

— Ҫунса кайтӑр пурлаку-масару, ӗнтӗр суйа ирӗклӗх, кайалла калухуса ҫырӑнатӑп,—тесе Павӑл сиксе тӑҗӗ те урапасем патне җупрӗ.

Петӗр пӗр вӑхӑта шӑнса хытса тӑҗӗ те сасартӑк вырӑнтан хӑпрӗ, Павӑл хыҫӗнҗен йуртрӗ.

— Есӗр ӑнӑҫлӑ пултӑр, шӑллӑмсем! Парлака анана ҫавӑратӑрахим?—тесе Микул ҫӗлӗкне илҗӗ.

— Харпӑрҗӑксем, пӗҗҗен пуҫсем, мӗн пултараҫҫӗ вӗсем? Ав хӑйсен йантӑ анисене те җантан тӑваймарӗҫ, калҗисем вӗсен мӗнле паҗар, тесе кӗрлесе илҗӗҫ урапасем ҫинҗи ытти етемсем.

— Ан мӑшкӑллашӑр, ӗҫре мӑшкӑллашмасан та йурӗ,—терӗ те Микул урапа ҫинҗен анҗӗ, Павӑлпа Петӗре ала паҗӗ.

— Микул пиҗей, епӗ туртана кайалла тӑвас тетӗп, ҫавӑнпа епӗ калас... тесе Павӑл сӑмахӗсене каласа ӗлкӗреймерӗ—Петӗр кӑсйинҗен пӗҗӗкҫеҫҫӗ тутӑр ҫыххи кӑларҗӗ, ӑна вӑрвар салтрӗ, пӗр хут татӑкӗ туртса кӑларҗӗ те Микула тыттарҗӗ.

Хам парлак сухалатӑп тет, ҫавӑнтах хам кӑсйара ҫак хута җиксе ҫӳретӗп,—тесе Петӗр вӑтанкаласа пӑхкаларӗ, пӗр ури ҫинҗен тепӗр ури ҫине пускаларӗ.

Павӑл пӗр вӑхӑта шарт хытса тӑҗӗ те кулса йаҗӗ.

— Петĕр çав ĕмĕр куштанлăхпа... мĕн камăлна хытарса çӳретĕн-ши вара... ĕçĕн пĕр тытнă тертне тумасан мĕн пулăпăр вара епĕр тесе лĕпĕртетрĕн,—тесе ӳпкелешсе-кĕвĕçсе илђе Павăл.

— Епĕ санран, айванран, сăмах вăлтас сăлтавпа çапла калаçрăм, иксĕмĕрĕн те пăкăсем шаннине епĕ тахçанах пĕлнĕ, çавăнпа та çак хута çырса кăсиара ђиксе çӳрерĕм,—тесе хăтăрса хуђе Петĕр.

Микул аллинђи хутне çавăркаласа пĕр-икĕ хут вуласа тухрĕ те иал кулса кăкăр кăсйнне ђикрĕ.

— Йурĕ, Петĕр. Çитес ларурах вуласа канаш тăвапăр... Ĕç уççи колхосра кăна, харпăрђăк йатне илтсе пурăнни килĕшмест те тетĕн. Тĕрĕс сăмах калатăн,—терĕ те Микул урапа çине хăпарђĕ.

— Манăн та çыру парас, çыру пĕлмен халпа епĕ йака пăр çинђе ан йулам—тесе куђђанса илђе Павăл.

— Сантан, çыру пĕлментен, Петĕр алă пуснă вĕт... ех шӳтсем,—терĕ те Микул лашасене хăвалама хушрĕ.

Урапасем çулпа шăнкăртатса малалла пӳсрĕç. Петĕрпе Павăл лашасене тытса акапуçне киле илсе таврăнма хатĕрленђĕç.

Йукйел упăтисем

Кĕре сулăннă кăç кăтраланса анђĕ. Сывлăш тĕтри ӳсен-тăран тĕнђенс нӳр нĕрĕхсе саланђĕ. Çӳлти çутçанталăк çĕр çине пинрен пин куç-пуçĕпе пиллĕ пăхат. Айакрах та мар—тавра ђиккипђен уйăх хĕрелсе пакарланса хăпарат.

Ђакăлтăм лапĕнђе кантăр анисен ăшĕнђен виçĕ етем кантăр ашса çул çине тухрĕç, айакрах та мар хура пĕлĕт пек сĕмленекен хăвалăх йеннелле тишкерсе пăхса тăђĕç.

— Мăшкăл, куратпăр самана: тăван килтен вăрă-хурахсем пек тарса çӳретпĕр, йал йышсенђен кантăр ашенђе пытанса кун кăçрамăр. çĕр çăттăр ĕнтĕ ку савит саманине,—терĕ те çав етемсенђен ватăраххи ана çине лађ сурђе.

— Калама та кирлĕ—сана, Йакур пиђђе, тарса çӳресен те йурат: есĕ хăвăнне хăвалатăн. Ак епир Мĕтри тантăшпа çил хăвалатпăр пулас: арăмсемпе ађа-пăђасене пăрахса тартăмăр та ĕнтĕ нимĕн тума та пĕлместпĕр,—тесе илђĕ пукан пек лутра Йакурпа авăн йупи пек çӳлĕ çинçе пӳллĕ Мĕтри хушшинђе таракан вăтам шăмшаклă етем.

— Апла-ха, ăс тытрăмăр та санпа, Иван, анђах ĕçе кăлараймăпăр-ши çав. «Çатан урлă çĕмĕрен йатăм, çĕмĕрен сăнние çухатрăм, çавах сăнна шыра-шыра атте пилне çухатрăм» тесе йурлађђĕ манăн асатте. Епир те çаплах пулмăпăр-ши?—терĕ те тăранккай Мĕтри Иван хулпуççинђен тытса силлерĕ.

— Ан калаçăрсем кайăкланса. Упа çине тухсан упаленме хушман, Ак утланăпăр утсене те кăвак çутăпа Тауш пуйан утарпе пырса çитĕпĕр. Йукйел коммунинђе пурăнинђђен сĕмвăрмаирп çармăс таршенђе

ирӗкленсе пурӑнӑпӑр,—терӗ те Йакур пилӗк йӗритаврa ҫыхнӑ йӗвене салтсa ҫурӑм хыҫне ҫакса йаҕӗ.

— Калама та кирлӗ—есӗ пурӑнӑн саралса: санӑн пӗтӗм тӗнҕе йӗлӗшпе паллӑш, санӑн ҫемйу те уптах, ак епир Мӗтрипе пӗҕҕен пуҫсемпе мӗн тӑвӑпӑр?—тесе иккӗленҕӗ каллех Иван.

— Майрасем туйанса йарӑр, ҫара пӗҫӗсемпе киленӗр—мӗн тӑвӑр... Йе, ҫитӗ мӑкӑртатса тӑма: вӑхӑт ҫитрӗ, утар хӑвалӑха,—терӗ те Йакур хӑвалӑх йенелле утрӗ.

Ун хыҫӗнҕен Мӗтрипе Иван та йӗвенсене хулпуҫҫисем ҫине ҫакса пуҫӗсене сӗнксе утрӗҫ.

— Калама та кирлӗ, Йакур пиҕҕе, епир Мӗтрипе хамӑр лашасене кӑна тытса утланатпӑр... Лашасен ҫырӑвӗсем те пирӗн кӑсйарах, тытас йе ҫынҫӑнас пулсан та атвит пама йӗрке пур,—тесе пыҕӗ Иван.

— Паллӑ—есир хӑвӑр лашӑрсене кӑна утланӑр. Ак маншӑн тӗнҕе тикӗс: хӑшӗ маттур—ҫавна тытатӑп та утланатӑп. Хӑвӑр пӗлетӗр: мана уншӑн ҫылӑх тивес ҫук, манӑн пӗр кӗтӳ ӑратлӑ лашасене пӗрне хӑвармиҕҕен туртса илҕӗҫ те Мӑкӑр савхусне илсе кайрӗҫ,—тесе утрӗ Йакур.

Хӑвалӑх сӗмленсе пин сасӑпа мӑкӑртатса ларат. Хӑвалӑх хӗрринҕе ҫараҫерҫисем урлӑ-пирлӗ вӗҫсе иртеҫҫӗ, хӑвалӑх ӑшӗнҕе унта-кунта вӗҫен кайӑксем ҕӗвӗлтетеҫҫӗ. Айакра тӗттӗм путлӑхӗнҕе лашасем тӑлхӑрни, ҫамрӑк аҕасем ҫухӑрашни илтӗнет. Вӑрман тӗлӗнҕи пӗлӗт ҫине хӗрлӗ мӗлкӗ ӳкрӗ: аҕасем вут-кӑвар ҕӗртрӗҫ пулас йе хӑрӑк-турата вирт йараҫҫӗ пулас.

Виҫӗ етем те хӑвалӑх хӗрринҕи хупах ӑшне кӗрсе ларҕӗҫ те тапак туртма пуҫларӗҫ.

— Хӑрас тӑвас ан пулӑр. Кӗтӳне теветкӗлте кун. Йукйел ҫамрӑкӗсем шапа-шӑпирен те хӑраҫҫӗ ӗнтӗ. Пӗркун ҫапла хампала туслӑ, снаккомсемпе ҫармӑссемне килсе кайрӑмӑр та утсене куҫ умӗнҕех утлансa вӗҫтертӗмӗр. Кӑнтӑрпа ҫармӑссене ҫатта ҫарамаслантартӑм, хӑрӑмпа хӑп хура пӗверӗм, вӑрман тӑрӑх ҫӳреме хушрӑм. Курнипӗри ватти те, ҫамракки те ҫавӑрӑнса пӑхмасӑр тарҕе. Каҫ кӳлӗм Нӑра уҫҫинҕе пӗр кӗтӳ хӗри-пӑраҫ лараҫҫӗ; хӑмла тытнӑ та сӑвӑ каласа лараҫҫӗ. Ҫармӑссене ҕупса кӗрӗр ҫавсем ҫине—тесе вӗҫлетрӗм. Ҫармӑссем намӑсӗсене асӑрхамасӑр ҕӑтлӑхран хӗрсем патне сиксе тухрӗҫ. Хам ҫӗмӗрт тӗми ӑшӗнҕен пӗрре кӑна ҫухӑртӑм: «Йукйел хӗрӗсем, йӗм кантӑрисене вырӑсла тӳлекпе тӳлӗр, салтса антарма меллӗ пултӑр кӑна, тесе ҫухӑртӑм... Пулҕӗ те вара кулӑш: хӗри-пӑраҫсем ҫерҫи кӗтӗвӗ пек ҫӗкленсе вӗҫрӗҫ, йӗрсе ҫухӑрса килӗсене тарҕӗҫ»... тесе Йакур такмакларӗ, такмакланӑҫем ҕӗлӗмне паклаттарҕӗ.

— Калама та кирлӗ—илемлӗ мар ӗнтӗ. Вара вӗт епир вӑрӑхурахсем мар, хамӑрӑнне шыратпӑр,—тесе Иван йунтӑхласа илҕӗ.

— Ну, ҫитӗ, кайар, ӗҫе пӗрле тӑвар, пӗри те пӗри такӑнас пулсан ӑна тытса ҫӗклӗпӗр, кама та кама тытас пулсан пӗрле ҫапӑҫӑпӑр, пӗр пӗрне пӑрахса тарма тумӑпӑр,—тесе Йакур сиксе тӑҕе те хӑвалӑх

ӑшнелле пӗкӗрӗлсе кӗрсе кайрӗ. Мӗтрипе Иван та пӗшкӗнкелесе унӑн хыҫӗнҫен сулӑнҫӗҫ.

— Пӗрле купаланса ҫӳрес мар. Кайӑкла пӗҫҫен пӗҫҫен айккас. Лашасене тытса йӗвенлесен епӗ хушмасӑр ан утланӑр: епӗ шӑхӑрӑп та пӗр харӑс утланӑпӑр та вӗҫтерӗпӗр,—тесе Йакур ҫӑтлӑха ҫӑмрӗ. Йакур куҫран ҫухалсан Мӗтри пӗр сулмакпа, Иван тепӗр сулмакпа хӑвалӑх ӑшне кӗрсе ҫикӗнҫӗҫ.

* * *

Нӑра уҫҫинҫе лаша кӗтӗвӗ пӗрре тапӑрланса, тепре саланса ҫаврӑнат. Шӑна-пӑван аптӑратнипе утсем тӳлек ҫийеймеҫҫӗ: хӳрисиллисене силлесе тек тӑпӑртатаҫҫӗ, пуҫӗсене ухса каллӗ маллӗ уткалаҫҫӗ.

Хӑвалӑх хӗрринҫе мул шӑтӑкӗнҫе вут-кӑвар йалкӑшат, хӑрӑктурат ҫатӑртатса ҫунат, вут ҫӗлхисем уйӑхпа ҫӑлтӑрсем сине йавӑнса хӑпараҫҫӗ.

Шӑтӑк йӗритавра мул тӗми ҫинҫе аҫа-паҫа шӑрҫа пек йунашарлӑ та айлӑ та, ҫилӗ те кӗрмешсе ҫавӑрӑнкаласа выртат.

Аҫасем шавлаҫҫӗ, йумах параҫҫӗ, тавлашаҫҫӗ.

Ак пӗр аҫа тарӑхса калаҫат:

— «Нумай пулмаст—ҫак мул тӗми ҫине икӗ упате килсе тухнӑ тет. Ҫӑмлӑ мар тет, ҫатта ҫарамас тет, мурскерсем. Аппасем хӑмлана килнӗ те канма ларнӑ пулат. Кӗтмен ҫӗртен сиксе тухрӗҫ тет те намӑс сӑмахсем ҫухӑрса хӗрсем ҫине сиксе пыҫӗҫ тет,—тесе вӑл йан ҫурат.

— «Ан лӑкӑртат, ҫӳйеҫҫӗ хутаҫҫи, упӑтесем тесе маймӑлсене калаҫҫӗ, вӗсем ӑшӑ йенҫе кӑна пурӑнма пултараҫҫӗ,—тесе пӳлҫӗ унан сӑмахне иккӗмӗш аҫа.

— Курнӑ ҫав, упӑтесене йал хӗрӗсем ҫӗрӗ куҫпа курнӑ... Асатте авал Йукйел хавалахӗнҫе лӑк тулли таркӑн, упӑте, арҫури пулнӑ тет. Вӑл хӑй те темиҫе хут та курнӑ тет. Упӑте вӑл ҫынна курсан кӑтаклама йуратат тет. Вал етеме «каттине пар, каттине калар» тесе катаклат, тет. Упӑтерен хӑтӑлаймасан вӑл шӑлсене шӗкӗлтеттерсе илет тет те мӑйӑр кышланӑ пек кышласа ҫӑтат тет. Йытӑран кӑна вӑл питӗ хӑрат тет, йытӑ хӳрине курсанах пуҫиле тӑрат, тет,—тесе шапӑлтатса илҫӗ виҫҫӗмӗш аҫа.

— Пӗрре ҫапла Йукйел халӑхӗ пӗр упӑтене те пулин ҫӗррӗн тытас тесе тарӑхнӑ тет. Упӑте йалан лаша утланмаллипе пӗлсе тӑрса, старпксем уҫук ӑйӑрне вӗретнӗ сӑмалапа йӗри-тавра сӗрсе йакатнӑ тет те хӑвалӑха кӳрсе хӑварнӑ тет. Упӑте ӑйӑра тӗл пулса хӑвалат иккен те утланса ларат, утланса ларат те сӑмала ҫумне ҫыпӑҫӑнат... Халахсем пӑхаҫҫӗ, ӑйӑр ҫинҫе упӑте йӑкӑлт-йӑкӑлт сиксе пырат. Ӑйӑра халах пырса тытат, йӗритавра йытӑ-каҫка пуҫтарӑнат. Сехри хӑпнӑ упӑте пуҫне виҫта ҫикме пӗлмест, вӑл тек ӑйӑр ҫурӑмӗ ҫинҫен сиксе анасшӑн асапланат, анҫах нийепле те сӑмаларан хӑпай-

маст. Аптăраса çитсен вал етем ђĕлхи кăларат те йĕрсе йарат. «Ађђи хăпсан кутти çыпçăпат, кутти хăпсан ађђи çыпçăпат» тесе ĕсĕклесе йĕпĕ тет вăл. Халăх упăтерен ахăлтатса кулнă тет. Лаша кĕтÿçи кăна ăна шеллесе илнĕ тет. Вăл ђăпăрккапа вăй-хавалпа çапнă тет те упăтене ђăпăркапа йавса сĕтĕрсе антарнă тет. Упăте çĕр çине ђикеленсе ÿкет, иккен те пĕр куç хушши вăхăтĕнђе сиксе тăрса хăвалăха тарат иккен. «Йукйелĕнђе кивĕ шалçа ан лартăр, çĕрĕк турпас ан пултăр, манăн пиллĕм çиђĕ хут кĕрсе çиђĕ хут тухтăр тесе ылханса тарнă пулат вăл. Вара çакăн хыçĕнђен Йукйел çиђĕ хутђен пĕр шалçа йулмиђђен çунђĕ тет. Ак мĕн кăтартма пултарат вăл упăте тенĕскер,—тесе сăмаха вăрăм тăсса йумахларĕ те тăваттăмĕш ађа тăп ђарăнђĕ.

Ађа-пађасем шăпăрт пулђĕç..хăравçăланса йĕритавра тĕттĕм мĕлкисем çине пăхкаларĕç.

— Супăлтетĕр кирлĕ мара, упăтесем мар, икĕ ураллă хурахсем иртĕнеççĕ теççĕ, ак кĕçĕр кăмсамулсем вĕсене айккама пăшалпа та тухмалла,—терĕ те иккĕмĕш ађа ура çине сиксе тăђĕ.

Унђен те пулмарĕ—кĕтÿ хăрт-харт туçа тĕпĕртетме тытăнђĕ, лашасем кĕçенсе унталла кунталла ђупкалама пуçларĕç.

Ађасем пурте сиксе тăђĕç—виçĕ етем мĕлки лашасене хăвалат, мех-мех тесе йыхăрса çилке-хÿререн çакăнма пăхат.

— Ăрйах, ăрйах, хурахсем, лаша вăррисем, караул!—тесе кĕтÿ ăшпелле вăркăнђĕ иккĕмĕш ађа.

— Ађасем, камăн шăлĕ таса шĕкĕлтетпĕр, камăн кăтăкĕ кăтăк кăтăклатпăр—тесе çухăрђĕ ађасен йенне çавăрăнса мĕлкесенђен пĕри.

Ађасем ђавкасем пек ђăлпар саланђĕç, хăва ăшĕнђе пĕшкĕнкелесе ђĕтĕрерĕç.

Виçĕ мĕлкĕ виçĕ ут тытрĕç, йĕвеп хыврĕç.

— Мĕк шăнса таратăр? Тытса кайаççĕ вĕт утсене!—тесе иккĕмĕш ађа мĕлкĕсем çине уркăнђĕ.

Вăл сиксе çитеймерĕ—пĕр мĕлкĕ пус тарасинђен хайар кăна ши-ши! шахарђе те виçĕ мĕлкĕ те виçĕ лаша утланђĕç те Нăра уççи утрађĕпе хăвалăх витĕр хирелле ыткăнђĕç.

Ађа-пăђасем тапăрланса пĕрне пĕри пере-пере ÿкерсе акăрса пĕрсе виçĕ йупалăк хыççăн ђупрĕç.

* * *

Пĕр самант та иртмерĕ—умра пăшал персе нађĕ.

— Кĕрĕс, кĕрĕс, кĕр-кĕр-кĕр!—туса вăл хăвалăха çурђĕ.

Пăшал сасси хăвалăхра çухалса ĕлкĕреймерĕ—темиçе пăшал сасси килĕшÿсĕр çапнă тăпаç сасси пек шăкăлтатма тытăнђĕ.

Йупалутсем ђаранђĕç, пăтранђĕç, кăшкăрашрĕç—малалла каймарĕç.

Вĕсем умне пăшал перекенсем акăрашса тухрĕç.

Йуналутсем лашасем çинђен вĕлт тирĕнсе анђĕç те ђăтлăха ђикĕнђĕç.

— Тытăр, персе ӳкерĕр хурахсене, тесе пăшаллă кăмсамулсем вĕсем хыçĕнђен ђăтлăха кĕрсе кайрĕç.....

Ђасах вĕсем акăрашкаласа кайалла çаврăнса тухрĕç, виçĕ йуналутсене тытса Нăрă уççине илсе пыђĕç.

Ађа-пађасем пăхаççĕ—вĕсем пурте Йукйел ĕтеммисем пулса кайрĕç: кулак уратинђен ӳкернĕ пуйан Йакур, унтан çуркуннепе Йӳкйел коммунинђен пăрахса тарнă Мĕтрипе Иван вăтам хресђенсем.

— Ак ку кашкăра тахçантанпах шыраттăмăр, нумай сийен турĕ, тытăр та çыхăр—хулана леçĕпĕр,—терĕ кăмсамулсенђен асли Йакур пуйан çине кăтартса.

— Ак ку Йукйел упăтисене ан тивĕр—тек çӳретђĕр агашса, таркăн пурăнăçĕпе тăрансан хăйсемех таврăнĕç»,—терĕ те вăл пăшал çакнă йулташсемпе Йакура Йукйелпелле илсе кайрĕ.

Мĕтрипе Иван нимĕн калама пĕлмесĕр пуçĕсене ђиксе тăђĕç, çĕр тĕпне ђикĕнессĕн пек вăтанса пĕр-пĕрин куçĕнђен пăхкаларĕç.

— Ха-ха-ха! Ак хайхи упăтесем, Йукйел упăтисем!—тесе ахăлтатрĕç çамрăк шăл-йĕренсем.

— Каларăм вĕт упăтесем çук, вĕсем ăшă йенђе пурăнаççĕ,—тесе кĕтӳ варринђен пккĕмĕш ађа çухăрса ђупса çитрĕ. Вăл ђупса çитрĕ те тăп хытрĕ.

— Ей, атте, есĕ пулмарăн-и вара? Мĕн пулђĕ ку?—тесе шăнсах тăђĕ те вăл Ивана пырса çакăнђĕ, йытă çури пек çуланђĕ.

— Калама та кирлĕ—машкал пултăмăр, ађам, хамăр угсене тытса вăрă йатне илтрĕмĕр, килех таврăнсан та йурăмĕ-ши,—тесе çупăрларĕ те Иван ађана йĕвен тыттарђĕ.

Ађа варвар ђупса кайса лашана тытса пыђĕ, Ивана тыттарђĕ. Унтан вал Мĕтри çине тинкерсе пăхрĕ те

— Мĕтри тете, тытса парам сана та лашуна, пĕрле таврăнăпăр, тесе кĕтӳ ăшне кĕрсе кайрĕ. Мĕтри лашине çавăтса тухрĕ.

Иван малтан, Мĕтри ун хыçĕнђен Нăрă уççи утрађĕпе лашасене çавăтса Йукйелпелле утрĕç.

Анне тек йĕрет... Пал йышсем те мĕн ухмахсене сутса çӳреççĕ ши тоççĕ... тесе йуртрĕ хыçалган Иван ађи.

— Йукйел упăтисем тупанђĕç, тарнă кайăксем килĕсене кайрĕç,—тесе ĕхĕлтетсе йулђĕç Нăрă уççинђе ађа-пађасем.

— Калама та кирлĕ—ухмах пултăмăр, Йакур хыççăн çӳресе упăте йатне илтрĕмĕр,—тесе йунтăхласа пыђе Иван.

Мĕтри ăна хирĕç нимĕн ђĕнмесĕр пуçне сĕпксе утрĕ.

Çилус нӳхрепĕ

— Ме, ҫик кăсйуна тăварланá çăкăр ҫĕлли, хырăму выçĕ, аҫам! тесе çаврăнҫĕ пӳртре Сухви аппай.

— Ан хыпалансам çука, ирҫҫен те хырăм выçсан,—тесе Матви аҫа алăк витĕр вăрăнса тухрĕ.

— Аçу ҫупмарне илме ан ман, сан пеккисене тăшманланакансем пур, темĕн курăн, тенĕ сăмахсем алăк хуппипе пӳлĕнҫĕç, пăҫă пӳртре аташса йулҫĕç.

— Тăшманланакансем пур... Шăлсăррисем кăна йулҫĕç ĕнтĕ йулсан та, пăшатанларăмăр вĕсен кăвапа тымарпе, текелесе Матви урам урлă сиксе каçрĕ, такăрласа кĕрсе кайрĕ, васкаса йал пуçĕнҫи халăх кĕлеҫĕсем патнелле çăрхаларĕ.

Кĕрхи ака каçне сулхăн сывлăм пĕлĕҫĕ пĕркеннĕ, ниçта пĕр саса-ҫĕвĕ илтĕнмест. Йалăн тепĕр вĕçĕнҫе кăна шкул хурт вĕлли пек сĕрĕлтетнĕн туйăнат.

— Çилус кампаниййĕ... Áмăртура епĕр çийеле тухатпăр, Кашăк кăмсамулĕсне пăҫăркатпăр, пĕр нӳхрепе самантра алтса йӳçĕтсе те лартрăмăр ĕнтĕ, ак теприне те алтса хутăмăр: тĕпне-хĕррине шăлма йулҫĕ те хупах-хăпах йумласа йама йулҫĕ,—тесе хăйне хăй хăшăлтатса Матви анкартисеп варринҫи кĕрпе арманĕ патне çывăхарҫĕ.

Арман халлапри мăн малахай пек йе çĕнĕ масар пӳрҫĕ пек тискерĕн тăмаланса ларат. Вăл çывăхарнăçем çĕр айĕнҫен çӳлелле йатăнса хăпарат, лапсăркка пуçĕпе тайăлкаласа Матви йенелле шăват.

Ӳт-тир пăрçаланнă пек, ҫун сӳленсе вĕҫĕлтетнĕ пек туйăнҫĕ.

Матви куçĕсене арман мĕлки çине тирҫĕ, хăлхисене тăратса унталла та кунталла ывăтрĕ. Хăрах куçа хура сĕм алăкран хĕсĕнсе тухса кĕпер картине хĕвел ĕмĕлĕ пек сывлăшра йухса кĕрсе кайнă пек сисĕнҫĕ. Хăра хăлхапа тахшĕ кушак пек çепĕç пусса иртнĕн туйанҫĕ.

Матви кăшт турткаланса тăҫĕ те сасартăк малалла хăпрĕ, алăсемпе хутăр çунаҫĕсем пек ухса тăкăрлăк тăрăх йарăшрĕ.

— Нимĕн те çук, ахаљ лĕпĕртетеççĕ çапла арманра алпастă автан пур тесе, нимĕн те çук, тесе йăпанса Матви арман тĕлне çитрĕ, унтан сасартăк çаврăнса пăхрĕ те акатуй ҫупакан пек аллиурине çĕре тивертмесĕр вĕçрĕ.

Арман кĕпер картинҫе етем кăшăлтатнăн, икĕ такмак куç çатан шăтăкĕ витĕр пăхнăн туйăнҫĕ. Матви ҫĕкеçленсе вĕçрĕ, çанах та хăлхаран çатан кăшăлтатăвĕ пĕрте хăпмарĕ.

Тăкăрлăк хыçала татăлса йулҫĕ, йĕритавра кайура çеремĕ уçăлса выртат, малта халăх кĕлеҫĕсем суратланса лараççĕ.

Матви икĕ май кĕлет хушшине тĕллесе ҫупса çитрĕ те умри тĕме çине йаванҫĕ. Вăл питне-куçне тăм-хăйăр тăпри çумпе сăтăркаларĕ, ҫĕрĕ тăпрана шăшлаеа уçă сывларĕ.

Умра уйри тĕпсĕр пус пек çилус нӳхрепĕ тĕксĕмленсе выртат, вăл тарăн сывласа, пĕлĕтелле пăс тĕтĕмĕ сăвăрса выртат.

Матви нӳхрепе тантăш Укçинене çупăрланă пек ыталаса савăђђӗ, сиксе апса, валтлатса тухса вылӗђђӗ, тӗпне хӗррине алă çупкисемпе çапса йакатăђђӗ.

— Ак турăмăр та ӗçе. Пин пăт выљăх çими, йӳçӗтнӗ хăйартан техӗмлӗ çимӗç пулат. Мӗпрен тăватпăр çав çимене? Хупах çулçинђен, măйан авринђеп, вӗлтӗрен вӗтлӗхӗнђен. Мӗн ђухлӗ кăна ытлашшк сӗт-çу илме пулат-ши çав çимене пула?—терӗ те Матви месӗрле çавăрăнса выртрӗ.

— Тăшманланакансем пур терӗ, анне... Пáшалантартăмăр вӗсен кăвапи тымарне. Кулаксене кураклантарса вӗçтертӗмӗр, куштансене хӗвел çине сарса куштартăмăр,—тесе çунатланђӗ те Матви шăхăрса илђӗ.

Матви шăхăрђăкӗ кӗлетсен улăмне вӗт-вӗл вӗçтерсе ђупрӗ, сӗмвăрманти шăхăрйан хурах сасси пек пулмасан та, тӗттӗм каçа йан йанăратрӗ.

Матви кам вăл? Вăл вăрман ахăрйанӗ мар, вăл шăхăрйан хурах мар—вăл кăмсамул ађи кăна. Çапах та Матви хăйне никамран та кайа мар йунаç вырăнне картат. Матвийе йулташсем «кăмсамул шăпăрӗ» тесе виртлешкелеççӗ. Пулин çапла пултăр—револ̧утсире шăхлиђӗ пулсан та сӗмвăрмапра ђаплă шăхăрйан пулнинђен пин хут паха.

Матви пуçне мап-кăмăллă пăркаларӗ, урисемпе тапаланса илђӗ те ӳпне вы̆ртса сăмсине нӳрлӗ тăм ăшне ђикрӗ.

— Йалта пӗр кушак куштан ластанки йулђӗ, Кушак Микихверӗ... Çепӗç Микихвер теççӗ. Ӗмӗрне ђейӧпе йун ӗçнӗ, çéпӗç тутар сăрлă аттине тăхăнса çӳренӗ... татрăмăр çав усламçă кайăкăн усланкă хăлхине те... Анђах арманра кам пулђӗ-ши? Кушак Микихверех пырса перӗйментӗр вӗт? Туртса илнӗ хуралта ытараймасăр каç та пулин пырса лармасттăр вӗт?—текелесе Матви аптăранă йенне пӗр айак спнђен тепӗр айак çине йăванкаларӗ.

— Ей çука, пӗлетӗп кам иккепне—тесе сӗмленђӗ те вăл палт тăрса ларђӗ.

— Кӳршӗ Йакку пулӗ вăл. Сăпанийе каççерен анкартисем тăрăх сӗтерсе çӳрет, сӗтӗрсе кӗнӗ тӗр те армана уллах тăват пулӗ—тесе хытă сасăпа каларӗ те Матви ђунне лашт каптарђӗ.

Вара вăл нӳхреп шăтăкӗ патне упаленсе пыђӗ, шăтăк ăшне пуçне усса шăтăк тӗпне курасшăн хăтланђӗ, анђах кураймӑрӗ: шăтăк тӗттӗмпе тӗпсӗр пек туйăнат.

— Мӗншӗн килсе çитмерӗçха тантăшсем? Мӗн халиђђен тавлашаççӗ-ши? Çилус ăмăртуне ђасах сӳтсе йаваймӗç çав,—тесе илђӗ те Матви йурӑ ӗнерешкелеме тытăнђӗ.

Çамкине нӳхреп хӗррине тӗреллесе вал мӗн аса килнӗ çавна сăвăларӗ. кӗвӗлерӗ, шăхăрса ӗнӗрђӗ.

— «Çутă пӗвӗм, çамрăк ӳсӗм, мӗншӗнех те авăнђӗç-ши пӗр ӳкӗм» тесе вăл темиçе хут пӗр сасăпа йăнăшкаларӗ те телӗрсе те каирӗ. Матви улăхра кӗтӳ кӗтет пек. Çарап тăрăх капан пек ăратлă ӗпесем хырăмӗсене йăтаймасăр сӗтӗрӗнеççӗ. Çаран пуçӗнђе хăмăплăх ла-

ђакинђе пуклак сăмса сыснасем пуçĕсене ђавкасем пек тăратса пашлатса выртаççĕ.

— Ăçтан туйантăр çак тери выђăх-ђĕрлĕхе? Мĕнле кăна апат çитерсе ĕрђететĕр çапла ђапла ђĕрлĕхе? тесе кĕвĕçеççĕ пек улаха пынă Кашăк йал кăмсамулĕсем.

— Çак ĕçе нўхреп тăват, çилус шăтăкĕ тăват,—тесе кăна ĕлкĕрђĕ Матви—пĕр Кашăк кăмсамулĕ ăпа сисмен çĕртен хăлха ђиккинђен те пырса тыттарђĕ.

Матви çўлелле сикрĕ, сывлăшра виç-тăватă хут пўске пек пуçăнтĕвĕн çаврăнђĕ те, çĕр çине питĕ хытă лаплатсах ўкрĕ.

Пуç çамки йап йанăраса кайрĕ те Матви вăранса кайрĕ.

Вăранса кайрĕ те хăраса ђĕтресе ўкрĕ. Вал йĕп йĕпе тăм çинђе выртат, шăмă-шакĕсем татăлса саланассăн пек сураççĕ. Йĕритавра куçа йеп ђиксен те курăнмаст, пуç тăррипелле кăна çутă шăтăк çăварĕ кăшт палăрат.

— Мĕн пулђĕ ку?—тесе ђăркуçланса хыпалашрĕ те Матви кулса илђĕ.

— Вара вĕт епĕ нўхреп тĕпне ђикеленсе аннă,—тесе вăл ура çине сиксе тăђе те, нўхреп хĕррине хăпарас шухăшпа тăрмаласа пăхрĕ. Ђĕрĕ тăм пăймакаланса алăра шăват, пўрнесем кăшт путса кĕреççĕ те уртăнпă уртăнманах йăпăртатса тухаççĕ.

— Мĕнле тухам йулташсем килиђђен? Мăшкăласа кулĕç кулатниксем, текелесе Матви пуçне кăна хыçкаларĕ—çумма темĕн питĕ тискер кĕрĕслетсе ўкрĕ.

Матви хыпаласа пăхрĕ—мăн кĕлет пусми вырапĕпђе выртакан арман ђулĕп катăкĕ пулђĕ.

Матви сивĕ тарпа тарласа илђĕ.

— Тупрăр вăйă—вĕлереттĕр вĕт, тивнĕ пулсан çĕмĕрĕлсе исленеттĕм,—тесе кăпа вăл çухăрђĕ—сылтăм хулпуççийе темĕн анса çапрĕ те Матвийе тĕшĕртеттерсе куклептерђĕ.

— Мĕн ку? Ей, кам иртĕпет?—тесе вăл пĕтĕм вăйпа кăшкăрђĕ, кĕлет çумĕпђи тымар пухаканпе тапса ывăтрĕ. Сасă лакăма пăкă кăларса кăшкăрсан кĕрленĕ пек кĕрлерĕ, анђах кĕрленеçем шăтăкрах çавăрăнса пăнђăхрĕ.

Матви хăлхасене хурçăлă çивђĕлетсе итлерĕ—çўлте тахшĕ кăштăртатат, мĕшĕлтетет.

— Ей, кам вал? Кăлар мана, шерте тавраш антарсам, улăхаймастăп ахаљ!—тесе вăл каллех акăрашрĕ.

Матви арман ђул катăкне нўхреп кĕтессине йăвантарђĕ, ђул çипе тымар пуканпе тăратса хуђĕ, пукан çине тăђĕ те çўлелле кармашрĕ.

«Тата виçĕ пукан айлă-çилĕ тăратса та алă çитес çук» —тесе кулђанђĕ те вăл çўлелле тилмĕрсе пăхрĕ.

Ак шăтак хĕррипђе етем мĕлки палăрђĕ, вата çып пек курăнђĕ.

— Хассан питђей, есĕ мар-и çав? Йарсам капта тавраш, хам халлĕп улăхаймастăп,—тесе Матви йăвапшăн йăлăнса илђĕ.

Етем мӗлки нимӗн те ҫӗнмесӗр нӳхрепе тепӗр кӗтесрен шертӗ антаркаласа муталанҫӗ, шертене калле-малле ҫавӑркаларӗ, унтан пӗшкӗнсе икӗ аллипе те тытрӗ.

— Куна йар, ку кӗтессе антар! тесе те Матви ӗлкӗреймерӗ— мӗлкӗ шертепе Матви кӗтессине сулласа ҫапрӗ те хӑй йӗпе тӑм ҫинҫен шуса ӗҫерӗнҫӗ, нӳхреп тӗпне лашлатса ӳкрӗ. Матви хӑй те шерте сулӑмӗнҫен пӑрӑнас майпа халпа сиккелерӗ те тымар пуканӗне пӗрле шӑтӑка сиксе анҫе.

— Кам есӗ? Мӗн айкашатӑн?—тесе кӑна Матви ҫӑварне уҫайрӗ— мӗлке сиксе тӑҫӗ те ӑна пырса тытрӗ, мӑйран пума пуҫларӗ.

— Кӑравул! Кӑравул! Вӗлереҫҫӗ! тесе ҫун хавалӗпе Матви сухарҫе, мӗлкӗпе шӑлпе ҫыртса тӳпелешме пуҫларӗ.

Мӗлкӗ ӑна мӑйран ҫӑмӑртаса, ҫӑвара-сӑмсана хупласа аптӑратрӗ, вӑл мӗлке ҫӳҫрен-сухалтан ҫакӑнса, алӑ-ураран ҫыртса тӑпӑлтарҫӗ.

Матви халран кайма пуҫларӗ, ураран ӳксе айала йулҫӗ, ҫӗрӗп пек пӗркӗнсе вӑл тапӑшрӗ, ӑш-ҫике тапса антӑхтарасран сыхланса пуҫлӑ-хӗрлӗ ҫаврӑнҫӗ.

Мӗлкӗ йалан ӑна урана тапасшӑн та мӑйран пӑвасшӑн пулҫӗ, анҫах йалан пултараймарӗ.

— Кӑравул! Кӑравул! Вӗлереҫҫӗ мана!—тесе Матви ҫун хавалӗпе ҫухӑрнӑҫем ҫухӑрҫӗ.

Унҫен те пулмарӗ—ҫӳлте нӳхреп патне етемсем кашкӑрса ҫупса ҫитрӗҫ. Матви сасӑсене илтнӗ илтменех уйӑрса илҫӗ—йулташсем хурала килсе ҫитрӗҫ.

— Кӑравул, кӑравул! Вӗлереҫҫӗ мана,—тесе Матви уйрӑм хытӑ ҫухӑрса йаҫе те мӗлкӗрен ҫӑлӑнса кӗтессе сикрӗ ӳкрӗ.

— Матви, есӗ мар-и? Мӗн пулҫӗ сана?—тесе кӗрлерӗҫ ҫӳлте тантӑшсем.

Ҫак сасӑсене илтсенех мӗлкӗ хирӗҫ кӗтессе пырса хӗсӗнҫӗ те пӑш пулҫӗ.

— Мана кунта темӗнле мур ҫынҫӑнҫӗ, пуса пӑрахма хӑтлапат, терӗ Матви тин ҫун кӗнӗ халпа.

— Ей, ан тӗллен, урмӑшнӑ пулӗ есӗ!—тесе ӗхӗлтетрӗҫ те йулташсем, хӑшӗ пӗри нӳхреп хӗррипе шуса умлӑ-хыҫлӑ Матви патне анҫӗҫ.

Шӑрпӑк ҫутса пӑхрӗҫ—Кушак Микихвӗрӗ кашкӑр куҫӗсенҫен кӳкӗрт кӑларса тӑрат.

— Микихвер пиҫей, епӗ сапа мӗн турӑм? Мӗншӗн есӗ мапа вӗлерме тӑтӑн?—тесе ывӑтрӗ Матви ҫилпе шӑнӑраймасӑр.

— Сапа вӗлерме епӗ ухмах мартӑр, епӗ кунта пушарин ҫикмекне шыраса килтӗм, ҫав ҫикмек нӳхрепре пулӗ тесе килтӗм те нехекрен санпа кӗрмешмелле пулҫӗ,—терӗ те Микихвӗр пуҫне усрӗ.

— Атӑр еппин тухар, кашкӑртан тӗрӗс сӑмах илтес ҫук, кашкӑр хӑйех шӑтака килсе ӳкрӗ, вырттӑр ҫакӑнта ҫутӑлиҫҫен, терӗҫ те Матви те унӑн йулташӗсем те ҫӳлтен ытти тантӑшсем пӑрахнӑ вӗрен тарӑх ҫӳле улӑхрӗҫ.

— Аçу ђупмарне илме ан ман, сап пеккисене тăшманланакансем пур тесе ăсатрĕ çав анне, ђăпах та тăшмансем пур иккен,—тесе калаçса Матви вĕрен тăрăх йăваланса улăхрĕ.

* * *

Çак ĕç кăнтăр çуттипе тин сÿтĕлĕнђĕ. Халăх пухăнђĕ. Микихвĕре шăтăкран сĕтĕрсе кăларђĕç. Вăл йалан тунђĕ, нÿхрепе сийăяллеме те Матвийе вĕлерме те шухăшламан тесе такмакларĕ. Етемсем шанмарĕç, «сийенçĕ есĕ, сийен сăлтавĕпе есĕ каçсерен кайăклатăн» терĕç. Армана кайса пăхрĕç—кĕрпе тăвакан нумай шăлсене хуçса пĕтернĕ иккен, пушарнийе кайса килђĕç—пырша çĕçĕпе касса темиçе тĕлтен шăтарнă иккен. Микихвĕре «кала тĕрĕссине» тесе пăркаларĕç. Вара каç кÿлĕмпе кăна Микихвĕр çăвар уçрĕ.

— Халăхсем, хăвăр пĕлетĕр—армана атăр та ĕçлĕхрен кăларат, тет, пĕвене таттарса йухтарат, тет. Хăвăрах каллех пĕлетĕр—епĕ атăр йышши мар, епĕ кушак йађĕ илтсе пурăнатăп. Тытăнса пăхам терĕм, вĕçĕ-хĕрри кирек ăçта та кайтăр терĕм... Шăтăк патне ађа таврашне вĕлересех тесе пыманђĕ те нехекрен ĕçĕ çавăпта кайрĕ... Матви палларĕ пулĕ, пурĕпĕр йата йарĕ, халăх умне тăратĕ, апла пулиђђен йĕре пытарам терĕм» —тесе Микихвĕр халăха ăнлантарса пађĕ.

Çакăн хыççăн çамрăксем:

— «Йĕрне пытараймарăн, сăнђăрлатпăр сана йулашки куштана! тесе шар çурса çухăрђĕç.

Алă Хыпанĕ

Ентри пиђђе пуса суллине мăйанла тăм муклашкисем тийесе тултарђĕ те шывран шăлĕсене шаккаса сиксе тухрĕ.

— Ахаљ те кĕр йенне кайнă шыв... Ун çине тата хĕвел ăшшипе путарас вырăпше ĕнтерĕк сулхăнĕпе муталанмалла пулђĕ... вăра-хурах пек пултăм ĕнтĕ, тесе вăл васкаварлă тумланђĕ те лашипе тытса кÿлђĕ, лашине килелле ђуптарђĕ.

Лаша уçăлса йуртма тапратсан вал кайалла Пуса Анĕпе Пуса кÿлĕ çине çаврăнса пăхрĕ те тискерленсе тата ытларах кăвакарнă пек пулђĕ.

— Ак амак тыттăр та ăншăрт хуçтăр... мĕн куна куртăм епĕ,—тесе вăл шăл витĕр ђиртсе сурђĕ те лашине ђăпăрккапа тăсса илђĕ.

Атте калађђĕ: хăвăнпе ан пар, çыннăнне ан ил, тетђĕ. Асатте калађђĕ: ху мулна ху хуçа пул, улпут уйĕ санăн мар, ĕмпÿлĕх çаран санăн мар, çын йапалине ăмсанас пулсан уйăх курĕ, хĕвел илĕ тетђĕ. Вĕсем çапла каларĕç, анђах епĕ ађам-пăђама мĕн каласа пехиллĕпши?—тесе Ентри пиђђе хăйне хăй калаçрĕ, пуçне-çÿçне унта-кунта ывăткаларĕ.

Лаша хапхана пырса вăрăнҫĕ, турта пуҫĕсемпе хапха хăмисене ҫурас пек кĕмсĕртеттерҫĕ.

Лисук акка пӳртрен сиксе тухса хапха пăтине туртса кăларҫĕ те хапхана йар уҫса йаҫĕ.

— Мĕн Михайлъ праҫникĕнҫе пек кăтартса тавăрăнтăн, ĕҫрен килеттĕр, хăнаран мар тăр,—тесе ӳпкелешсе вăл лаша хыҫĕнҫен хапхана хупрĕ.

— Еҫрен ҫав ĕҫрен... карса тăр ҫăварна, хӳрĕне йĕпет те, ҫĕлхене тăсса йӳплештер те урам тăрăх ҫуп, манăн упăшкам ĕҫрен таврăнҫĕ, Пуса Анĕнҫе ĕҫ туса таврăнҫĕ тесе йала йан ҫур,—тесе Ентри пиҫҫе хыттăн хыттăн ҫилемес калаҫрĕ, лашана тăварса тирпейлерĕ.

Лашана пăтратса кункра ҫумне кăкарсан Ентри пиҫҫе урапа патне пыҫĕ те урапа ҫинҫен пур кантăр-пуса ҫулҫи-шăммине кĕпе аркине тавăрса сĕтеле тасатнă пек шăлса тасатрĕ.

— Пурăнатпăр ҫав, ҫӳретпĕр... вилсен тин пире ăс кĕрет пулĕ,—тесе мăкартатрĕ те вăл хăйҫутнă пӳрте кĕрсе кайрĕ.

— Атте, сирĕн ерттел ĕҫĕ ҫапла вăрах пырат-и? Миҫе сехет ĕҫлетĕр ҫав есир талăкра?—тесе хирĕҫ пырса ҫулăнҫĕ ăна Микка ывăлĕ.

— Ерттел ĕҫĕ пулмасăр... мĕнле йытă хӳри ĕҫĕ пултăр,—тесе хăтăрҫĕ те вăл аҫана ҫĕлĕкне кутник ҫине пăрахрĕ, тĕксĕм кăмăлпа лаххан патне пырса аллисене ҫурĕ.

Лисук акка хурапран ҫĕрулми антарҫĕ, сĕтел ҫине сăкăр ҫĕллисем касса хуҫĕ, тăвар савăҫĕ лартрĕ.

Ҫиме ларсан та Ентри пиҫҫе камăлĕ ҫемҫелмерĕ.

Ҫăкар ҫăварта тăпра кумкки пек кăшăртатса ҫавăрăнҫĕ, ҫĕрулмисем хыпнă хыпманах пырса пӳлме пăхрĕҫ.

Лисук аккапа Микка хăйуллă-хăйусăр кавлерĕҫ.

— Атте, епир «Ҫăлтăр» ҫимĕҫне пуҫтартăмăр. Епĕ хамăн пайа отрет аллине патăм... ҫухăн аҫасем вĕт купăста ҫимесĕрех пурăнаҫҫĕ,—тесе илҫĕ Микка ҫинĕ хутран.

— Есир парăр ҫав... есир епир мар,—терĕ те Ентри пиҫҫе темĕн вăтаннă пек пулҫĕ, тĕк тăнă ҫĕртенех сĕтел айне пăхса илҫĕ.

— Калама та маннă: Йакур претҫетаттĕл килсе кайрĕ. «Кала Ентрийа лайăх ĕҫленĕшĕн сире ирттерсе кĕпе-йĕмлĕх парăпăр, терĕ. Уптан тухса кайнă ҫух—типсе пурăнатăр, ерттел сĕт-турăхĕ пулиҫҫен сире ĕне йӳнеҫтерме пулăшас, тесе илҫĕ.

Ентри пиҫҫе сĕтел хушшинҫен йалт сиксе тăҫĕ те пӳрт урлă каллĕ-маллĕ уткалама пуҫларĕ.

Лисук акка ҫӳҫенсех кайрĕ, ҫиме пăрахрĕ те вырăн сарма тытанҫĕ.

Самантра пурте салтăнҫĕҫ те хăйă сӳнтерсе ҫывăрма выртрĕҫ.

— Мĕн тулатăн? Мĕн пулҫĕ сана?—тесе йеррипе пăшăлтатса ыйтрĕ Лисук акка.

— Хайар куҫ ӳкрĕ, ҫавăнпа тулатăп,—терĕ те Ентри пиҫҫе кутăн ҫавăрăнса выртрĕ.

— Пусана халăхсем Йепвăрри Кĕркури вăрланă тесе хавхалаҫҫĕ, тет. Хавхалантҫѐр, майлă пулĕ,—тесе пăшăлтатса илҫĕ каллех Лисук акка.

Ентри питҫе шарт ҫĕтресе илҫĕ, тăрса ларҫĕ, пуçейĕнҫен шăтăркка кивĕ кĕрĕк туртса кăларҫĕ, ура вĕçне ывăтрĕ, тăрса çаврăнҫĕ те Лисук аккапа ура вĕçлĕ выртрĕ.

Ентри питҫе пайтахҫен пăшлатса пĕр айăк çинҫен тепĕр айăк çине çаврăнҫĕ, тĕрлĕ шухăш шухăшласа пăщăрханҫĕ, тарласа выртрĕ.

— «Ерттел пăхне йытă çимен теççĕ. Пирĕн пек ухмахсем çапла каланă пулĕ. Ерттел мана çын турĕ, ĕç çăмăллăхне кăтартрĕ. А епĕ мĕн турăм... пĕрре кăна мар ĕнтĕ, йалан çав йенне турттăнап,—тесе сĕмленҫĕ те, Ентри питҫе сарлака анасласа илҫĕ, çавăнтах харăлтаттарса çывăрса кайрĕ.

Ентри питҫе тĕлĕк тĕлленсе çывăрҫĕ. Вăл вунă-вуник çулхи аҫа пек те аслашшĕпе пасара кайнă пек. Пасарта лăк тулли касмăкҫўлмек, çăпата, кашăк, кҫинтăр. Ентри питҫе кҫинтăр çийесшĕн тилмĕрет, пĕр унаç та пулин çийес килет тесе йĕрмешет. Вырăс салми вăл, пуйан аҫисен çимĕçĕ, аҫам... курсан та йурĕ, пасара курма кăна килтĕмĕр вĕт, тесе йăпатат Ентри питҫене аслашшĕ.

Ак Ентри питҫе сиссе те ĕлкĕреймерĕ—пĕтĕм пасар сурăх кĕтĕвĕ пек çаврăнма пуçларĕ.

— «Вăрă тытнă, вăрă... ав ăна вĕтеççĕ» —тесе етемсем ҫупкалаççĕ.

Ентри питҫе аслашшĕне етемсем хыçĕнҫен сĕтĕрет, пасар вăрри мĕнле етем иккенне курма тилмĕрет.

Ентри питҫе курҫĕ: йĕмне антарнă етем выртат, етемсем ăна çара купарҫасенҫен пушăтпа çапаççĕ, вăрă «ай-ай» тесе ҫун хавалĕпе кăшкăрат. Ак вăрă çаврăнса пăхрĕ—хамăр йал етемми Кĕркури пулса кайрĕ..

Ентри питҫене аслашшĕ тытрĕ те васкаса танкăлтаттарса килелле илсе кайрĕ.

— Вăрлат ĕнтĕ, пуçне çиййҫҫенех вăрлат, шăмма вĕреннĕ йыта вилиҫҫенех çав йăлине пăрахмаст... Йĕп вăрланă тет, катăршнăй, пĕр пуслăх йапала вăрламасăр та канмаст, калама кирлĕ—хĕнпе те пурăнат, пĕр йатпа пилĕк хĕр ўстерет вĕт, мĕскĕн, тесе ныҫĕ Ентри питҫе аслашшĕ.

— Аҫам, ўссен çин çўппине те ан тив, ху ĕçлесе ху тăран,— терĕ те Ентри питҫене аслашшĕ хапха витĕр кĕрсе кайрĕ, хапхана хăй хыçĕнҫен шартлаттарса питĕрҫĕ. Ентри питҫе хапхана уçасшăн, тек шаккат, тек урапа тапаҫ, хапха çапах уçăлмаст...

— Мĕн çамрăк ыҫăх пек танăртатса çывăратăн?—терĕ Лисук акка Ентри питҫене кĕрĕкрен туртса.

Ентри питҫе вăранса кайрĕ, куçĕсене маҫҫа çинелле ҫарса пăрахрĕ.

— Кĕркури çавăн хыççăн çулталăк йун сурҫе, «Йĕп-Вăрри хушаматне туйанҫĕ... Вăл аҫаранах çапла пулнă, тет те... Унăн амăшĕ

йумăçсем патне те кайкаласа çӳренĕ . тет те» тесе сĕмленкĕлĕсе выртрĕ те Ентри пиҫҫе татах хăрăлтаттарма пуçларĕ.

Ентри пиҫҫе те ĕшеннĕ пек ҫирлешкелет пек. Вăл кутник çинҫе сăкман пĕркенсе выртнă пек. Ак алăк уçăлҫĕ те Ентри пиҫҫен ăмăшĕ пырса кĕҫĕ. «Ан хăра, аҫам, вилнĕ пулсан та килсе курам терĕм, есĕ ҫирлĕ теççĕ» —терĕ те вал Ентри пиҫҫеп алтымарне тытса пăхрĕ.

— Аҫам, сана Алă Хыпанĕ çыпăçнă. Вăл ҫунăм ама çăпанĕ, теççĕ. Ĕлĕк йумăçа çӳреҫҫĕç, халĕ йумăç тавраш пулмасан тен тухтăр патне кайса килместĕн-и, терĕ те карҫăк пӳртрен лĕпĕш пулса вĕçсе тухса кайрĕ...

Малалла Ентри пиҫҫе мĕнле çывăрнине астумаст.

Ҫӳреҫе витĕр çурăмпуç мĕлки палăрсан вăл вырăн çинҫен сиксе тăҫĕ те тухса лаша кӳлҫĕ, урапа çине ларҫĕ те салана ҫуптарҫĕ.

— Тухтăрĕ лайăхскер... пирĕн пеккипе те ҫиперех калаçать, ертелте те пулкаларĕ, мăшкăллашсах калаçмĕха... мăшкăлласан та тӳсес пулать, ҫуп çăпанĕ вĕт, çурăм çăпанĕ мар,—тесе сĕмленсе вал сала пуҫнитсине çитрĕ.

— Мĕн асаппа? Мĕн ҫирпе?—тесе ыйтрĕ йака пуçлă тухтăр.

— Алă Хыпанĕ йернĕ пулĕ мана... Икĕ çултаппа ерттел вак-тĕвекне тултатăп, ӳкĕнĕç пусма пуçларĕ, çĕр çывăрми пултăм, ҫирлерĕм пулĕ тетĕп,—тесе хуҫе те Ентри пиҫҫе пуçне ҫикрĕ.

— Мĕн тетĕн? Мĕнле ҫир тетĕн?—тесе тĕлĕнсе ыйтрĕ тухтăр.

— «Çĕр çирĕм çурăм пуса вăрларăм... ерттел çыххисене кӳле леçсе пусартăм... арăм йупшăхланнипе пулҫĕ те ку... хам та çав ĕлĕкрех кĕлте-улăм, кĕрепле-кĕреçе хĕстеркелерĕм, халĕ ĕнтĕ виçĕ каç çывăраймарăм,—тесе пăтранҫакла калаçкаларĕ Ентри пиҫҫе.

Тухтăр йал кулҫĕ те Ентри пиҫҫен кĕпине çĕклесе кăкăр-çурăмран шаккаса итлекелерĕ, алтымарне тытса çаврăнкаларĕ.

Унтан вăл сĕтел хушшине ларҫĕ те вăраххăнах темĕн çырҫĕ, çырупе каплертлерĕ, тăрса Ентри пиҫҫене тыттарҫе.

— Ҫуптар йала. Пулать ун пек ҫир, клептомани теççĕ пирĕн ҫĕлхене. Халĕ манăн ун пек им-йум пĕтсеҫҫĕ, тепре пыруçăн хам килне пырса леçĕп. Çул майĕпе ак çак çырăва хăвăрăн ерттел претçетаттĕлне Йакура парса ирт,—терĕ те тухтăр хыттăн-хыттăн ытти ҫирлĕсемпе йавăçма пуçларĕ.

Ентри пиҫҫе урапа çине тухса ларҫĕ те килелле ҫуптарҫĕ.

— Тасалатăпах муртан... ак ҫуп кĕçĕкĕ, манка аҫа-пăҫаран намăс, тесе вăл йала персе çитрĕ, Йакур умне ҫаранҫе, Йакура ҫĕнсе кăларса тухтăр çырупе тыттарҫĕ.

Йакур çырăва çавăра-савăра икĕ хут вуласа илҫĕ те ахăлтатса кулса йаҫĕ.

— «Мĕн кулатăн? Вырăнти çын та кулăш çыру çырать-и?—тесе тĕлĕнсе тăҫĕ Ентри пиҫҫе.

Йакур Ентри пиҫҫе патне сиксе ӳкрĕ, çурăмран аҫашласа çупăрларĕ, çупăрланиăçем çапла такмакларĕ:

«Ентри таптăш, таврăн килне.' ыйхăна ан вĕçтер... Алă Хыпанĕ

çинђен пухура вăтанмасăрах каласа парăн та, Алă Хыпанĕ пăђах хăпсъ ӳкĕ. Санра кăна мар вăл усал: çав кĕçĕпе нумай етемсен алă çупкисем кĕçтеççĕ. Вал авалхи кĕçĕ, çĕнĕ саманара ăна ерттеллешсе пĕтерĕпĕр. Ав Йĕпвăрри Кĕркури те çын йĕркине кĕрсех çитрĕ ĕнтĕ, малашне ĕмĕр аллăма кукăртас çук, Йакур сăват, тет. Пуса вăрланă тесе хавхаланђĕç те санăп йăнăшу пулнă иккен, тесе Йакур Ентри пиђђене урапа патне ăсатрĕ, лашине урам тăрăх пăрса тăратрĕ.

Ентри пиђђе урапа çине сиксе ларђĕ те йĕритавра уçă кăмăллă пăхкаласа килнелле ђуптарђĕ.

ИКĔ ТИМРĔÇ, ПĔР ТАКА

Н. ПИКТЕМИР

Тимĕрç шаккат,
Ун кĕвви пысăк кăмăллă,
Ђĕтрентерет сывлăша.
йăвăр ĕçпе
Вату тимĕрç те çăмăллăн
Пурнăç тума пулăшат.

Хĕм сапăнат
Йун тумлакĕсем йевĕрлĕ,
Тўрĕ лекет мăлатук.
Кăшт тăхтасан,
Хĕрнĕ тимĕр те сĕвĕрлĕ,
Ес туптаттартăн та плук.

Çур шывĕсем
Хăлхаран кăтăкланă ђух
Йурă мана та ђĕнет.
Пысăк ăратлă
Ахах кикириклĕ ђăх
Тулăх витре пек тўнет. .

Ав, килкарти умĕнђе
Хĕл куççулĕ
Шăнкăртатса пуçланат.
Катарахра
Кукăрмакăрлă çулĕ ун
Куç умĕнђен пăђланат.

Ђĕр йăвăçра
Сĕткенсем туртланнă пек
Укрĕç шывсен йуписем.
Хĕл кунĕсен
Халђ, ĕнтĕ, пит çухе кĕпе.
Шĕвĕр—хĕвел йĕпписем.

Пăс йĕрĕпе
Симĕс курăк та вĕрçĕн
Тухĕ парка йешĕрсе,
Ак çакăнта
Тĕнђери паттăр тимĕрçĕн
Хывăнђĕç сутă йĕрсем.

Кив çырансен
Çĕтĕк уракла шупăрĕ
Кăмăрђăк пек шăрăнат.
Хыççăн вара
Пăр сĕтелĕсен хупăрĕ
Шăтăртатса тапранат.

Ăмăртура—
Йунашар икĕ тимĕрçĕ.
Пурнăç сунталĕ хĕрет.
Хĕрлĕ сăна
Çăтакан хулăм тимĕрĕ
Пĕр ђарăнмасăр вĕрет...

. . . .

. . . .

Хĕм сапăнат
Йун тумлакĕсем йевĕрлĕ,
Тўрĕ лекет мăлатук.
Кĕлеткесем!
Çывăхран пурте сирĕлĕр!
Виђкĕн хĕмсем сунес çук...

* *

Çенĕх умен
Тухрĕ пĕђĕк така.
Еп, йуратса
Ăна хытă йакатрăм,—
Ир ђĕрене
Полђшевиклĕ вăратрĕ
Иккĕмĕш вăйлă ака.

ПИЂЕТ ЛАҪҪИНЂЕ.

В. АХТУПАЙ

Хăр-хăр, хăр-хăр, кăр-кăр ђĕтрет,
Кулат машшин,—машшин йĕрет.
Ҫамрăкранпа ман ҫак ҫĕртре
Выђат вăйхал, вĕрет ђĕре.

Умри машшин—хастар трушин,
Ӳлен тинамĕ—вăйпитти:
Мĕн ђул винтта, мĕн ђул прушин
Сиксе ташлат кăђтти-кăђтти...

Умри тинам сывлат вĕри вут,
Тинамăран машшин асат:—
Шкива ҫине ђупат привут
Маховике ыталаса.

Шђуса ҫинђе туллат вăйпа
Маттур шаттун шеҫтермене.
Шурă хут ҫине ђăр-ђар сăйпа
Ҫутă вĕт петтит*) ђĕпђĕрленет.

Вăђттик, вăш-вăш... листа вĕҫет,
Пиншер мĕлйун веҫет листа.
Васка, ĕҫле, тăван ĕҫе,
Ку лаҫăра ес ху ăста.

Васка, ĕҫле, тăван ĕҫе,
Ан йул, ан йул машшинăран,—
Миҫе мĕлйун вĕҫен хаҫат
Уйхир сават иррех ыран!..

Хура сăрпа пенҫин шăрщи
Тăна-пуҫа тек тĕтĕрет,
Анђах ђармаст савут шăрши
Утарнĕк Ҫитăр-Петĕре.

Кашни пайан керой-ĕҫђен,
Кашни ĕҫри ăмăртура:—
Машшин пўрни иртен каҫђен
Ҫине-ҫине листа турат.

Хађхи куна ĕҫпе тăлла,
Хађхи куна шутар мала:—
Кĕске утарлă кварттăла
Вĕри ĕҫпе тултармалла!..

Тата хытăрах, хытăрах туртат
Шеҫтермене маттур шаттун,
Епир пурте шаттун-турта,
Мăн шеҫтерми—васкавлă кун.

Хăр-хăр, хăр-хăр, кăр-кăр ђĕтрет,
Кулат машшин, машшин кĕрлет.
Ҫамрăкранпа ман ҫак ҫĕртре
Выђат вăйхал, вĕрет ђĕре.

---

*) Петтит—типокрафири вĕтĕ саспалли.

ЁÇХАЛĂХА ЂАРАЙМĂН, ПУРШУАÇИ

К. НАМАНКАН

Асран каймаст
Çĕнтерӳллĕ Октапĕр,
Асран каймаст
Теникĕн,
Вранкĕлсем...
Ик çиђĕ çул
Çак çер-шывра
Пĕр епĕр—
Хыватпăр çĕнĕрен
Çĕн никĕссем.

Нумай та мар,
Сахал та мар
Çак вăхăт;
Çавах та епĕр
Вăй питти çэмант.
Кашни тăрпаланан
Çĕн хапрăк-савăт
Мăкăрланса
Калаççĕ:
— Ан амант!..

Сахал-и пулнă вăхăт:
Çăмăр,
Сивĕ,
Сахал-и тухнă
Харсăр çилтăман?!
Халђ калăпăр:
Хĕрӳ ђĕре, ан сивĕн,
Камсемшĕн вăрçнă,
Çĕннĕ,
Ес ан ман!

Таçта,
Лере пуçне çĕклет-и
Тупă,
Патрунсемпе ђыхнат-и
Пулемет?!
Ей, пуршуаçи!
Хатĕрлетĕн, мĕскĕн, тупăк
Ху ђурувах
Сана тĕп тăвĕ
Теп...

Сан вилĕм кунĕсем
Хайар—
Пĕлетпĕр.
Ансат пулаймĕ
Çын йунне çиме.
Пур шахтăсем
Тăвасшăн
Пĕр Октапĕр,
Тупăсене çаврасшăн
Сан çине.

Ёçхалăха ђараймăн,
Пуршуаçи!
Шăлна хăйран
Пулсан та,
Çивĕђ мар.
Сан шăтăкна ђаваç
Йевроппă,
Аçи,

Сан вилĕмна курасшăн
Шупашкар.

* * *

Кунта:
Васка ес, пурнăç темппĕ

Тетпĕр.
Çавна кура тавратпăр
Çанăсем.
Ик çиҫĕ çул
Çак çĕр-шывра
Пĕр епĕр—
Хыватпăр çĕнĕрен
Çĕн никĕссем.

Кун-çул васкат,
Кун-çул ырмаст
Пулсан та,
Пĕри малта,
Тепри шăп хӳрере.
Çак çын саппа
Пĕрле тăрса кулсан та,
Ун ăшĕнҫе
Шăши,
Йĕкехӳре*).

Пире—
Патшалăх кӳлнĕ
Пысăк ĕçшĕн,
Вĕçне çитме
Пуçланă стройккăна.
Сотсиалисăм
Тапхăрĕн вĕçлевшĕн--
Çĕнтерӳллĕ хисеп
Пире
Кăна.

Умра--
Куспас**),
Çавал,
йе кĕмĕл Тнеппăр,
Умра—
Çĕркăмрăкпе
Електăр çутисем.
Ей, хурçă партти,
Çавăрт есĕ—тетпĕр,
йунав хывма
Пăрахҫăр „шăшисем“.

Нумай та мар,
Сахал та мар
Çак вăхăт,
Çавах та епĕр
Вăх питти самант.
Кашни тăрпаланан
Çĕн хапрăк-савăт,
Мăкăрланса калаççĕ:
— Епĕр танк.

*) Йĕкехӳре, шăши—вретиттĕл.

**) Куçнетски паççейн.

САВӐТ САССИ

ТӐВАТӐ ПАЙЛӐ ПЙЕССӐ

ҪЕРКЕЙ ЙАЛАВӖН

ВЫЛҘАКАНСЕМ:

1. КИРИЛ ПЕТРОВЕҘ—тума тытӑннӑ савӑт тиректӑрӗ, вашават, ҫӗнӗлле ӗҫлеме йуратаканскер 32 ҫулта.
2. ВАҪҪИЛЙЕВ—партти коллективӗн ҫекреттарӗ—28 ҫулта.
3. ТИМУК—савӑта ултавпа кӗнӗскер, кулак ывӑлӗ. Шухӑшӗ йаланах хайӗн йалти уйрӑм хуҫалӑхӗ ҫинҙе—30 ҫулта.

4. ВИХТӖР
5. ХВЕКЛА
6. ҪИМУН
7. УЉККИ

— Комсомолӗс-утарнӗксем.

8. ЙЕХРИМ—рапоҙҙи пулса ҫитеймен, хресҙентен уйӑрлайман ҫын. Тимукпа туслашса пӑсӑлаҫ. Прокулшҙӗк—26 ҫулта.
9. КУҪМА—ватӑрах рапоҙҙи, кукша пуҫлӑ, савӑтшӑн пит тӑрӑшса ӗҫлекенскер. Утарнӗке кӗрет. Ҫемҫе калаҫаҫ—40 ҫулта.
10. ЛЕКҪЕЙ—малтан иккӗленекенскер, кайран утарнӗке кӗрет—37 ҫ.
11. ХВЕКЛАН АШШӖПЕ АМӐШӖ—40—45 ҫулта.

Пӗремӗш пайӗ.

Сылтӑм йенҙе туса пӗтереймен савӑт корпӑсӗ, йӗри-тавра ӗҫлекенсене анса улӑхмалли. Стсенӑ ҫинҙе вӑрӑм тенкел, каскаламалли инструментсем. Сулахай йенҙе савӑт кантурӗ. Ҙаршав уҫӑлсанах, Вихтӗрпе икӗ рапоҙҙи, аллисене сулкаласа калаҫса иртсе кайаҫҫӗ.

I

ВИХТӖР (утса)—Тимукпа Йехрим ытти рапоҙҙисене пӑлхатаҫҫӗ, вӗсем пирӗн ӗҫе ҙарасшӑн.

ПӖР РАПОҘҘИ (ҫаннине таварӑнӑ)—Вӗсенҙен пуҫне ыттисем ним те калаҫмаҫҫӗ, пурте хавас пулҙӗҫ.

ТЕПӖР РАПОҘҘИ—Савӑтран хӑваласа кӑлармалла ӑна. Пӗтӗм ӗҫе ҫав пӑсаҫ. Сисетӗп еп вӑл мӗнле ҫын иккенне (сулахай йеннелле тухса кайаҫҫӗ).

II

(Тимук, Лекçей, Йехрим кěреççě).

ЙЕХРИМ—Хам илтрěм... ыран ěçлемеллех, теççě.

ТИМУК—(Хытă сасăпа)—Кам илтмен вăл сăмаха? Ěнертенпех çав сăмах!.. (Лараççě). Вăт мěн шухăшласа кăларнă вěсем?!. Вăт мěн хăтланаççě!?. Мăшкăлаççě кăна пирěнтен. Турра маннăскерсем!..

ЙЕХРИМ—Пуринђен ытла, Вихтěр ниçта кайса кěреймесěр вěтеленсе çÿрет. Ěçлессисем килсен, ěçлеђђěр, хăйсем.

ТИМУК—Тытса тăпкалас пулат ăна, лайăхрах, ăса кěрě вăл вара...

ЙЕХРИМ—Çав çеç кирлě. Ытла усалланçа кайрěç (Тата икě рапођђи, Куçма васкаса кěреççě).

III

ПĚРИ—Мěн пулнă?.. Мěн шавлатăр?.. (Куçма аллисене хыçалалла тытнă та, ним ђěнмесěр, ыттисем калаçнине итлесе тăрат).

ТЕПРИ—Ну-у-у?.. (Йěкěлтесе). Тупнă ухмахсене. Праçнěк кунě те ěçлеттересшěн. Çук, ку пулмаст, пулмаст ку йапала!

ТИМУК (Кăшкăрат)—Ěçлеместпěр. Ыран киле кайатпăр!..

САСĂСЕМ—Киле кайатпăр!.. Ěçлеместпěр!.. Ěçлеђђěр хăйсем!..

ЙЕХРИМ—Мăнкун çулталăкра темиçе хут пулмаст. Ěçлеместпěр. Ыран киле кайатпăр!..

САСĂСЕМ—Мăнкун тăватпăр. Ěçлеместпěр!..

ТИМУК—Ěç тесе ђуна параймăн. Мăшкăллама памастпăр.

САСĂСЕМ—К ђорту-у!.. Пайан каç ěçе пěтерсенех киле кайатпăр!. .

ЙЕХРИМ—Праçнěк. Пирěншěн те праçнěк!

ТИМУК—Хăйсем малтан çывăрнă та, халђ ěнтě пире вăкăр пек ěçлеттерсе, савăта икě уйăхра туса пěтересшěн. Вăхăтра туса пěтерес тесен, малтан çывăрас пулмаст, вăхăтра ěçе тытăнас пулат.

ЙЕХРИМ—Вăхăтра-а!.. Уншăн епěр айаплă мар. Çапла-и, тăвансем?!.

САСĂСЕМ—Çапла-а-а!.. Тěрěс!.. Пайан киле таврăнатпăр!.. Ěçěмěнě, çăва патне!.

ТИМУК—Хытă тăрăр, тăвансем. Хăвăра улталама ан парăр!..

САСĂСЕМ—Мăнкун, пуриншěн те мăнкун. Кайатпăрах, пире никамта ђарма пултараймаст.

КУÇМА—Ан кěрлěр-ха, йулташсем! мана калама парăр!

ЙЕХРИМ (çиленсе)—Ну, кала мěн калас тетěн, «Çавсем» майлă пулě?

КУÇМА—Мěнле «çавсем майлă» пулат-ха, вăл? Мěнле тата «çавсемпе» «кусем» пур пирěн савăтра? Калăр-ха мана çавна?

ТИМУК—Турăсăрсем. Мăнкун тăвас мар текеннисем.

КУÇМА—Епě хам та турăсăр. Епě те турра ěненместěп. Ну, мěн, калăр?..

ЙЕХРИМ—Мěн каламалла, сухалтан çавăрса илмелле те, тăраниђђен лăскаламалла сан пек кукша пуçа!

ТИМУК—Пěлетпěр, есě мěнле çын иккенне. Аван пěлетпěр. Ватăлмаллăх кунăнта ăсна çухатнă ес.

КУÇМА (Ăна итлемесĕр). Савăтра пирĕн нимĕнле «вĕсемпе кусем» те пулмалла мар. Пурте пĕр шухăшра пулса, пĕр çемйе пулмалла. Çапла-и?

ПЕРИ—Айта, кала-ха, кала курăпăр.

КУÇМА.—Нимĕн «курмалли» те çук унта. Епĕ çакна çеç каласшăн...

ЙЕХРИМ—Ну, кала-ха, итлетпĕр!

КУÇМА (çилленсе)—Мĕн кашкăр пек куçна çавăркалатăн. Пирĕншĕн савăта ĕлкĕртес ĕç, мăнкунтан хаклăрах тăмалла! Хăвăрах шухăшласа пăхăр, епĕр тăрăшса... (Ăна каласа пĕтерме памаççĕ).

ТИМУК—Вăн йепле-е-е? Савăт тесе еппин, праçнĕке те каймалла мар-и?

КУÇМА—Пирĕн рапоҫҫисен хамăрăн праçнĕк пулаť. Мăнкун пирĕн праçнĕк мар, пупсемпе кулаксен праçнĕкĕ, çавсемех туҫҫĕр ăна. Вăл пире.кирлĕ мар.

ЙЕХРИМ—Куртăри, кукша пуç мĕн калаçаť? Илтрĕри! Кам вĕрентрĕ сана?

КУÇМА—Манăн хамăн пуç аван ĕçлет, маншăн çын шухăшламасť. Никам та вĕрентмен мана!

САСĂСЕМ—Ĕçлессӳ килсен, ĕçле ху, сана кам ҫараť! Пирĕнтен ҫару çук.

ТИМУК—Ытлашши укçа параçи тен? Ех, йурăхсăр!..

КУÇМА (хыттăн кăшкăрса)—Çынтан, ыттисенҫен ытлашши укçа илесшĕн, нихăçан та тăрăшман епĕ. Ĕç укçи çитет мана! Ыттисенҫен ытлашши кирлĕ мар! Мĕн шăлăрсене çыртса тăратăр! Тĕрĕс сăмах тĕртлентеретим? Ĕçлетĕп, пĕҫҫен йулсан та ĕçлетĕп. Мана мăнкун кирлĕ мар, савăт маншăн сирĕн мăнкунăртан та хаклăрах. Епĕ пĕҫҫен мар, комсомолĕссем: Вихтĕр, Çимун, Уҫкки, Хвекла манпала, тата ытти рапоҫҫисем те çапла шутлаççĕ. Епĕр сахаллăн мар! (Лекçейа кăтартса) Акă, Лекçейе илĕр. Вăл кунта сирĕн хыççăн пĕлмесĕр çеç кăшкăрашаť. Ман шутпа, савăт ĕçĕ уншăн та мăнкунран хаклăрах. Çапла вĕт, Лекçей шăллăм?

ЛЕКÇЕЙ—Пĕр шухăшласан тĕрĕс пек. Ҫăнах та çав йалта мĕн пур унта? Ĕçсе ӳсĕрĕлни çеç.

КУÇМА—Епĕ те çавна калатăп.

ТИМУК—Есĕ калăн. Есĕ вĕт вĕренсе пĕтнĕ. Ан итлĕр ăна, йулташсем. Праçнĕке киле кайатпăр. Ĕçлетĕр вăл хăй пĕҫҫен, хăйĕн комсомолĕсĕсемпе.

САСĂСЕМ.—Кайатпăр! Тиректăртан ыйтатпăр. Ҫарма пултарайімаççĕ. Ĕçлетĕр хăй пĕҫҫен.

КУÇМА—Пĕҫҫен мар епĕ, йавăлсем. Тимук сăмахне итлетĕр, ун хыççăн кайатăр? Тимук мĕнле çынне епĕр тахçанах пĕлетпĕр. Ăна шанатăр пулсан, итлĕр еппин ун сăмахне, кулак ывăлĕн сăмахне... (аллине сулаť). Сирĕнпе калаçса çăвар тутине сайа йани çеç.

ТИМУК—Вăн, йепле калаçма пуçларĕ вăл? Кула-а-ак ывăлĕ? Кам каларĕ сана?

КУÇМА—Хам пĕлетĕп.

ТИМУК—Ху пĕлетĕн? Рапоҫҫисене пăлхатман? Савăтра нимĕнле кулаке те, нимĕнле ҫухане те пулмалла мар! Епĕр, рапоҫҫисем, кунта пурте пĕр пек, пурте рапоҫҫи кунта!

КУÇМА—Сурăх тирĕ тăхăннă кашкăрсем те пур савăтра, пурте пĕр пек мар çав.

ТИМУК (çиленсе)—Мĕн кирлĕ вара сана (ун патнелле аллине ҫăмăртаса пырат). Мĕн пуринпе те хирĕçетĕн вара? Тытса ĕнтмелле ăна шăмми-шакки курăнакан пулиҫҫен!

КУÇМА—Хĕнесе пăхха, мĕн пуле унта? Епĕ сире нимле усал та туман. Сирĕн ĕçес шухăш?.

ТИМУК (Куçмана çухинҫен тытса)—Санăн мĕн шухăш? Кала санăн мĕн шухăш?

КУÇМА (ун аллине вĕçерсе)—Ан çыхлан, кай! Кайран ӳкĕнмелле ан пултăр! Ан çыпăç ман çумма.

ТИМУК—«Çыпăçтарăп» сана, пĕрре парăп та, лапҫăнса ларăн. Кулак ывăлне курăн вара.

ПĔРИ—Çапăçса кайĕçи мурсем.

КУÇМА—Ан хăрат, мĕнпе хăрататăн? Хăракан йышшийех мар. Сирĕн пеккисене ҫарма пултарăпăр!

ЙЕХРИМ—Астăвăрха, мĕнпе хăратат вăл?

ЛЕКÇЕЙ—Мĕн тăрăнатăр есĕр ăнна. Мĕн усал турĕ вăл сире?

ТИМУШ—Çавăрса илĕр ăна. Аса кĕртер!

САСĂСЕМ—Тытăр!.. Хыçалтан тытăр!.. Ислетĕр шăммине. (Çав вăхăтра савăт кăшкарни илтĕнет).

КУÇМА (çĕртен пуртă тытса)—Сирĕлĕр кунтан. Епĕ сире нимĕн те туман, сире тивмен, есĕр те килсе ан çулăхăр ман çумма. (Пурте ăнтан кайса ҫĕнмесĕр хăраса тăраççĕ).

IV

(Вихтĕр, Хвекла, Çимун, Улкки тата 2—3 рапоҫҫи сулахай пенҫеп йурласа кĕреççĕ. Пурте çаннисене тавăрнă, хăшшин пит тăрăх тар йухат).

Комун йурри:

Пире нимĕн ҫарас çук
Хуйхи те, инкек те,
Турри те тек пире хăратаймĕ.
Нихăçан та, нихăçан та,
Нихăçан та, нихăçан та
Комунарсем ҫура пулса лармĕç.

ХВЕКЛА (Куçма патне ҫупса пырат)—Мĕн пулҫĕ сана, Куçма пиҫҫе? (Куçма пурттине çĕре пăрахат те нимĕн те ҫĕнмест).

ТИМУК—Ах-а-а!.. Есĕр хăвăр ҫура пулас çук, пире кăна ҫуралатма шутлаттăр? Сирĕншĕн пулсан, турă та нимĕн те çук! (Вихтĕрпа, Çимун, нимĕн ăнланмасăр пăхса тăраççĕ).

ХВЕКЛА—Мĕн пулнă вара сире? Кăнтăрлахи апата кайма куток пулнине илтменим есĕр?

ЙЕХРИМ (Хвеклана илтмесĕр)—Есĕр мĕн пирки савăнса йурласа çӳретĕр? Мĕнле савăнăç çитрĕ сирĕншĕн?

ВИХТĔР—Мĕншĕн савăнас мар? Виçĕ уйăхра савăт ĕçлеме пуçлаť. Пирĕн савăт. Епĕр тунă савăт. Йепле савăнас мар, куп пек савăт пĕтĕм сойусĕпе те 2—3 çеç. Ăнлантни есĕ çавна? (Вихтĕр Куçма патне пырсă шăппăн калаçаť).

ХВЕКЛА—Виç уйăхра мар, тăрăшса ĕçлесен, ик уйăхрах пĕтеретпĕр!

УЉККИ—Утарлă прикатă тăватпăр!

ТИМУК—Вăн йепле-е? Ик уйăхра пĕтерме шухăш сирĕн? Ыран, мăнкун кунĕ те ĕçлемелле мари, йепле ăслă çынсем тупăннă?

ВИХТĔР (малалла тухса)—Ĕçлетпĕр ыран та, тепĕр кун та ĕçлетпĕр, пире мăнкун тăрантармасť.

ТИМУК—Вăт, çамрăклах йепле калаçма вĕреннĕ вĕсем, манка çурăхсем

ЙЕХРИМ—(Витлесе) Сойусĕпе 2—3 çех, пĕрре çех марп? Кама улталатăн...

ВИХТĔР—Сана йаланах улталаççĕ, есĕ хăвна-ху та шанмастăн пулĕ, ĕнтĕ.

ÇИМУН—Иртнĕ пухура мĕн йышăннине манатăнпм?

ТИМУК—Епĕр йышăнман ăна, епĕр ыран ĕçлеместпĕр.

ВИХТĔР—Пăрахса кай еппин, сана кам ђараť!

ТИМУК—Есĕ мĕнле нађђалнĕк вара?

ВИХТĔР—Нађђаљнĕк мар епĕ, сирĕн пекех рапођђи.

ТИМУК—Ну, хуп çăварна!?

ВИХТĔР—Есĕ сăмах калама ђараймастăн!

ЙЕХРИМ—Есĕ мĕн çамрăк пуçăн, пире вĕрентме хăтланатăн, сăптăрсă йаган ак пит лайăх кăна!..

ÇИМУН (ун умне тухса тăрса)—Çапаймăн, аллă кĕске!

ВИХТĔР (Хвеклана)—Ђиректăра кайса ђĕн. (Хвекла васкаса тухса кайаť).

V

УЉККИ—Пĕркунхи пек ĕçсе килнĕ пулас вăл. Куçĕсене йепле çавăркалаť.

ЙЕХРИМ—Кăтартăп сана ĕçсе килнĕ, есĕ ĕçтертĕни мана, ама йытă!

УЉККИ—Ухмах! Хулиган! Ťфу! (пăрăнса кайаť).

КУÇМА—(Халиђђен ним ђĕнмесĕр, пуçне усса тăнă хыççăн, Уљккийе ђарса). Ан çыхлан унпала. Ăна Тимук каласа илĕртнĕ те, çавăнпа çеç кăшкăрапаť.

VI

(Тиректăрпа Хвекла кĕреççĕ).

ТИРЕКТĂР—Татах çав сăмах, татах Тимук пăлхатаť!.

(Тимук патне пырса) Ну, мĕн кирлĕ сана? мĕн çитмест?

ТИМУК—Нимĕн те кирлĕ мар.

ТИРЕКТĂР—Мĕншĕн ахăрашатăн?

ТИМУК—Нимĕн те çук, йе калаçмалла та мари?

КУÇМА (малалла тухса)—Унăн, Кирил Петровиҫ ыран мăнкун тума кайас шухăш. Ĕçлес текенсене хирĕç вĕсем. Çакăн пирки тавлашу.

ТИРЕКТĂР (Вихтĕре)—ытти рапоҫҫисене ҫĕнсе килха, пуху тăвас.

ВИХТĔР—Çиҫҫас (тухса ҫупат).

VII

ТИРЕКТĂР—Пĕтĕм таврана йан кайат. Ну, кала мĕн калаçмалли пур?

ЙЕХРИМ—Пайан каç киле кайас тетпĕр.

ТИРЕКТĂР—Кам ҫарат сире? Кайма кайăр та ыран ĕçе ĕлкĕрес пулат.

ТИМУК—Ыран праçнĕк, ыран ĕçлемелле мар.

ТИРЕКТĂР—Икĕ уйăхран пирĕн хамăрăн аслă праçнĕк çитет, акă, савăта туса пĕтерсен. Вăт, çавăн ҫухне савăнăпăр вара. Нихăш савăтра та праçнĕк тумаççĕ ыран. Епĕр те пухура ыран ĕçлемелле тесе йышăннă, йе мантăни çавна? (Рапоҫҫисем икшерĕн-виçшерĕн кĕреççĕ).

ПĔРИ—Мĕн пулнă? Мĕн пирки пуху?

ÇИМУН (Тимук патне пырса)—Тимук тус, санăн ĕçес килет, теççĕ, епĕ ĕçтерме пултаратăп.

ПĔРИ (кулкаласа)—Мĕн ĕçтеретĕн?

ÇИМУН—Хăй мĕн ыйтнине. (Кулкаласа) Сана епĕ, Тимук тус, савса, йуратса, çăмăр шывĕ ĕçтерме пултаратăп. Ха-ха-ха!... Хо-хо-хо-хо-хо!..

ПĔРИ—Ну, каларĕ те. Ĕçетни, Тимук? (Пурте кулаççĕ).

ТИМУК—Пошшол ты к ҫорту!..

ПĔРИ—Пĕлетри, мĕншĕн килне кайасшăн вăл?

САСĂСЕМ—Мĕншĕн?

ПĔРИ—Мăнкунта арăмĕ пăрахса, кайасран хăрат. Ҫейе вăл пирĕн. Ха-ха-ха!..

ТИРЕКТĂР (тенкел çине тăрса)—Йулташсем! иртнĕ пухура епĕр, кăçал мăнкуна праçнĕк тумалла мар, тесе йышăннăҫҫĕ. Çапла-и йулташсем?

САСĂСЕМ—Çапла-а-!.. Çапла-а!.. Тĕрĕс!..

ТЕПРИСЕМ—Çук, епĕр апла йышăнман!..

ТИРЕКТĂР—Кунта ыранхи кун ĕçлес мар, киле таврăнас тейекенсем пур. Вĕсемпе нумай калаçса тăмăпăр. Ĕçлесен ĕçлеççĕ, ĕçлемесен ĕçлемеççĕ. Хăйсене намăс пулĕ. Пайан епĕр урăххи çинҫен калаçăпăр... Ĕçе татах аванлатасси çинҫен шухăшлас пулат... (кăтартса). Акă Ваççилйĕв йулташ та килет...

VIII

ВАÇÇИЛЙЁВ (тиректăр çумне хăпарса тăрат)—Тиректăр тĕрĕс калат.

ТИМУК—Мĕне пĕлтерет вăл, ĕçлесен-ĕçлеççĕ, тени?

ВАÇÇИЛЙЁВ—Есĕ ҫăвашла калаçма маннăн, йе ăнланми пултăни?

ЙЕХРИМ—Пире савăтран хăваласа кăларасшăн мари?

ÇИМУН—Кирлĕ çав, тахçанах çавă кирлĕ, пăлхатса выртатăр.

ВАÇÇИЛЙЁВ—Малашне те капла хăтлансан, пуçăртан савса иртермĕпĕр.

ТИМУК—Калаçма та йурамасти вара?

КУÇМА (ăна айăк пĕрҫинҫен ҫышса)—Санăн ҫĕнмесен те йурĕ. Мĕн пĕлетĕн есĕ?

ПĔРИ (кулса)—Йепле нумай вĕреннĕ çын. Хе-хе-хе!..

КУÇМА—Ҫорт есĕ, Хĕветĕр. Ăнланас пулат, ăслă çынсем мĕн каланине.

ВАÇÇИЛЙЁВ—Калама ан кансĕрлеха. Итлĕр, манăн сăмах кĕске.

КУÇМА (ун çумне хăпарса)—Ҫимха, мана та пĕр-икĕ сăмах калама пар, унтан есех калăн.

ВАÇÇИЛЙЁВ—Ну, кала еппин.

КУÇМА—ытти хапрăк-савăтсенҫе утарлă прикатăсем тунă, пирĕн те çавна тăвас пулат. Ыран вара, хăт мăнкун пултăр, хăт ҫорт пултăр, ытти кунсенхинҫен те ытларах ĕçлетпĕр. Çаплан, йулташсем?..

САСĂСЕМ—Çапла-а-а-а!.. Çапла-а!.. Тĕрĕс калатăн!..

ТĔПРИСЕМ—Ху ĕçле-е-е!.. Епĕр ĕçлемеспĕр!.. Ĕçле ху!..

КУÇМА—Ĕçлетпĕр. Çыр мана, Ваççилйĕв йулташ, прикатăна! Çыр, ҫи малтан мана çыр!..

ВИХТĔР—Мана та çыр, Ваççилйĕв йулташ!..

ХВЕКЛА—Мана та!...

УЛҪККИ—Епĕ те çырăнатăп!..

ÇИМУН—Даешь ударную бригаду!.. çыр мана та!...

ВАÇÇИЛЙЁВ—Молодци, ребята, намăса йулмастпăр, çырăнатпăр прикатăна! Кайас, тейекенсем килĕсене кайҫҫĕр. Епĕр савăта туса пĕтерессине пĕтĕм Республĕк кĕтет. Срукҫен малтан туса пĕтерер, çапла-и, йулташсем?

САСĂСЕМ—Тимук, çырăнмастпăр, улталаççĕ вĕсем пире!

КУÇМА—Çыр, мана халех!.. Малти ĕретре ĕçлеме çырăнатăп, çыр, халех!

ВАÇÇИЛЙЁВ—Йулташсем! Епĕ куратăп: пирĕн рапоҫҫисем строиттĕлства ыйтăвĕсене ăнланаççĕ. Çпискисене кайран тăвăпăр, халĕ епĕ, акă, мĕн çинҫен каласшăн: Шупашкарти хăма çуракан савăт пире сотсиалисăмлă ăмăртува ҫĕнет, унти рапоҫҫисем, хăйсен ĕç тухăçне 32 проҫ. таран ÿстернĕ, пире те тăрăшса ĕçлеме ҫĕнеççĕ вĕсем. Йышăнатпăри çак ҫĕнÿве?

САСĂСЕМ—Йышăнатпăр!.. Вăхăтра ĕçлесе пĕтерес!..

ВАÇÇИЛИЙĔВ—Ыран мăнкун кун ĕçлеме тухмалла, тесе çĕпĕрен йышăнатпăр. Кам ыран ĕçлеме тухасшăн аларсене тăратăр (Тимукпа Йехрим. тата 2—3 рапођђисĕр пуçне пурте аллисене çĕклеççĕ).

ЙЕХРИМ—Есĕр кирек те мĕн тăвăр, епĕр праçнике кайатпăрах.

САСĂСЕМ—Çăва патне, кайăр! Пĕтĕмпех кайăр! (трупа сасси)

ТИРЕКТĂР (Ваççилийĕвпа йунашар хăпарса тăрат)—Ваççилийĕв йулташ тĕрĕс калат,—пирĕн сотсиалисăмлă ăмăртăва йышăнса, ăна пурнăçа кĕртме утарлă прикатă орçанисатсилемелле. Тăрăшса ĕçлесен, епĕр савăта ик уйăхра ĕçлесе пĕтеретпĕрех. Епĕ сире шанатăп. йулташсем. Пилĕк çуллăх плана тăватă çулта пурнăçа кĕртесси сывă пултăр! (Алă çупаççĕ). Халĕ, ĕнтĕ кайма пултаратăр, ыран та пайанхи пекех ĕçлемелле!

РАПОЂЂИСЕМ—Пĕтĕм вăйпа ĕçлетпĕр! (Саланаççĕ. Тимукпа Лекçей тата Йехрим калаçса йулаççĕ).

IX

ЙЕХРИМ—Ĕлĕкхи пекех хĕсĕрлеççĕ, ĕлĕкхи пекех нушалантараççĕ рапођђисене.

ЛЕКÇЕЙ—Ĕлĕкхине курман пуђха есĕ, курнă пулсан, капла калаçмăттăн, самайах пуçна хыçнă пулăттăн.

ТИМУК—Мăнкун çулне виççĕ килмест, ыран кайатăп, (тухса кайат).

X

ЙЕХРИМ—Епĕ те ĕçлеме тухмастăп, пайанах киле кайап.

ЛЕКÇЕЙ—Хут те мĕн ту, ĕнтĕ, хăвăн ирĕкў. Кайакана ђармастпăр, терĕç вĕт.

ЙЕХРИМ—Ĕçлессўсем килсен, ĕçлеђђĕр (тухса кайат).

XI

ЛЕКÇЕЙ—Такăшĕ тĕрĕс калат, пыр та, ăнлан вĕсене... Кăштах канамхă свонок пулиђђен (Выртат, анаслат).

XII

ВИХТĔР (Васкаса кĕрет)—Ей, тăр!.. Есĕ, капла, ĕмрўна выртса ним курмасăрах иртерĕн, тăр! (Çаннинђен лăскат).

ЛЕКÇЕЙ—Шухăша карăмха?

ВИХТĔР—Мĕн пирки шухăша?

ЛЕКÇЕЙ—Халђхи ĕçсем пирки... Итле, епĕ те прикатăна çырăнатăп, вăт мĕскер. Савăта вăхăтра туса пĕтерес пулат. (Сиксе тăрса пуртăпа каскалама тытăнат). Есĕ, шăллăм, мана ан çилен, епĕр хамăр тĕттĕм пирки пĕлмесĕр калаçатпăр.

ЛЕКÇЕЙ—Çук, ик—уйăхра мар, пĕр уйăхрах туса пĕтеретпĕр савăта. Ĕлĕкхисем аса килђĕç, çўç пуç вирелле тăрса кайрĕ. Ой, пит хăрушă, пит пит тискер ĕлĕкхи пурнăç!..

ВИХТĔР—Сисрĕним? кўр аллуна! Пĕрлешсе, пĕтĕм вăйпа ĕçлĕпĕр малашне.

ЛЕКҪЕЙ (аллине парса)—Ме, пилӗкӗшӗпех. (Стсенӑ хыҫӗнҫе «комунӑ йуррине» йурлаҫҫӗ. 6—7 рапоҫҫи пӗрин хыҫҫӑн тепри, кирпӗҫе йӑтса стсенӑ тӑрӑх утса иртеҫҫӗ, пӗр-пӗринпе калаҫса кулаҫҫӗ).

1-мӗш РАПОҪҪИ—Ҫитейместӗр мана, нийепле те ҫитейместӗр! (Сылтӑм йенҫен 6—7 рапоҫҫи пушӑлла вӗсене хирӗҫ килеҫҫӗ).

2-мӗш РАПОҪҪИ (Хытӑ сасӑпа)—Пӑрӑнӑр! утарниксене сарлака ҫул парӑр!..

Ҫаршав.

ИККӖМӖШ ПАЙӖ.

Стсенӑ малтанхи пайӗнҫийех. Каҫхине, хӗвел анас умӗн. Рапоҫҫисем ӗҫрен пушаннӑ. Куҫма пӑҫкӑ тӳрлетсе ларат̆. Марйе пырса кӗрет.

I

МАРЙЕ—Вӑт, пӗртте тӗк тӑра пӗлмест, вӑт канма пӗлмест. Мӗн есӗ канмалли вӑхӑтра та ӗҫлесе ларатӑн?

КУҪМА (тӑрат̆)—Пӑҫкӑ кантӑри татӑлса кайрӗ. Ахаҫ ларимҫен ҫавна, йусас, терӗм. Ҫылӑх мар пулӗ? Е-е?...

МАРЙЕ—Уншӑн каламастӑп. Канмалли вӑхӑтра, канас пулат̆, тетӗп. Ӗҫленӗшӗн мӗн ҫылӑх пултӑр вӑл?

КУҪМА—Канма пултарӑпӑр ӑна. (Пӑҫкине кӑтартса). Пӑх, йепле аван пулҫӗ. (Паусӑ). Ҫамрӑксем ӑҫта кайса пӗтнӗ пайан? Кашни каҫ ҫакӑнта тухса шавласа ларакамҫҫӗ. Вӗсем йурланине итлеме тухрӑм та, ҫук вӗт, таҫта тарса пӗтнӗ, пӗри те курӑнмаҫҫӗ. Пайан ӗҫлесе ывӑнҫӗҫ пулас.

МАРЙЕ—Ывӑнтарӑн вӗсене. Ҫас ывӑнмӗҫ вӗсем. Пайан вӑрмана кайатпӑр, терӗҫ.

КУҪМА—Калап, ниҫта та курӑнмаҫҫӗ.

МАРЙЕ—Йехримпе Тимуш таврӑннӑ.

КУҪМА—Илтрӗм. Каларӗҫ. Ӳсӗр пулӗ.

МАРЙЕ—Йехримӗ пит ӳсӗрех мар та, Тимушӗ ытла та ӳсӗр, вара. Сулкаланса ҫеҫ тӑрат̆.

КУҪМА—Мӑнкун хӑнисем. Пит хытӑ хӗртсе йамалла вӗсене.

ЙЕХРИМ (стсенӑ ҫинҫен)—Марйе, килха кунта наҫҫаса!..

МАРЙЕ—(Стсенӑ хыҫнелле пӑхса)—Ху килме хӑратним? Кил ху кунта.

КУҪМА—Епӗ кайатӑп. Курас килмест манӑн вӗсене.

II

ЙЕХРИМ—Никам та ҫук-и унта?

МАРЙЕ—Пулсан, ҫийесрен хӑратним? Ну кил, ут, епӗ кирлӗ пулсан.

III

ЙЕХРИМ (кĕрет)—Марйе, манăн санпа калаçмалли пур. Айта ларар çакăнта (Ларaççĕ).

МАРЙЕ—Ну, кала! Мĕн каламалли пур? Кала итлетĕп.

ЙЕХРИМ—Иртнĕ кунсенђе те, ĕлĕкхи пекех ĕçлерĕр-и? Çавна ыйтса пĕлес, терем.

МАРЙЕ (Кулкаласа)—Есĕ пурне те ху пек тетĕни?

Есĕр пăрахса кайсан, никам та ĕçлемĕ, терĕр-им? Пĕлессӳ килсен, мăнкун кунĕсенђе ĕлĕкхи кунсенђен вăйлăрах ĕçлерĕмĕр. (Паусă). Турру ђĕрĕлнине куртăр-и? Ха-ха-ха!..

ЙЕХРИМ—Есĕ, Марйе, кирлĕ мара ан калаç-ха. Епĕ...

МАРЙЕ—Ну, кирлине калаçăпăр. Мĕншĕн каç пулсан тин килтĕн? Ыран ирпе кăна килмеллеђђĕ.

—ЙЕХРИМ—Пирĕн çинђен мĕн калаçаççĕ? Пире вăрçмаççĕ-и?

МАРЙЕ—Сирĕн çинђен калаçса тăма вăхăт та çук пирĕн.

ЙЕХРИМ—Есĕ манран пытарса ан тăр. Манан пĕлес килет.

МАРЙЕ (çилленсе)—Вăт, йепле?—Унăн—«пĕле-е-е-с килет. Пĕлессӳ килет пулсан, мĕншĕн пăрахса кайрăн? Мăнкун хаклă пулђĕ сирĕншĕн? Ĕлĕкхи-и-и йăла! Халĕ ĕнтĕ, ĕлĕкхи йăласене пăрахас пулат. Пурнăç улшăнђĕ. Урăхла çĕнĕлле пурăнма вĕренес пулат.

ЙЕХРИМ—Есĕ кунта мана акиттатсилесе ан ларха, манăн ахаљ те ђăтма çук пуç ыратат.

МАРЙЕ—Çапла кирлĕ сана, ерех ан ĕç улĕмрен. Тимук йулташу ăçта кайрĕ?

ЙЕХРИМ—Тиректăр патне кайап, терĕ.

МАРЙЕ (хăраса)—Ӳссĕр пуççăн-и?

ЙЕХРИМ—Ӳсĕрпе калаçма аван та, ĕнтĕ, вăл. Урăлла тиректăрпа ăçтан хăйуллă калаçайăн!

МАРЙЕ—Кирлĕ пулсан, епĕр, пуринпе те урăллах калаçатпăр. Халĕ ĕлĕкхи мар, йулташсем пекех калаçаççĕ. вĕсем пирĕнпе. Хăй те вăл ĕлĕк рапођђи пулнă. Вытвишентсă вăл. Пирĕн пурнăçа авэн пĕлет.

ЙЕХРИМ—Ĕлĕкхинђен хушă хаљ.

МАРЙЕ—Пошол ты к чорту! Капла каалçатăн пулсан. Конттăр есĕ! Ерех ĕçме ђарнăран çапла калатни? Санăн ернипе ĕçес шухăш. Апла калаçатăн пулсан, ма килтĕн кунта? (Тухма тытăнат). Сана кулак ывăлĕ тесе, ахаљ каламаççĕ пулĕ çав. Тĕрĕс пулнă вăл сăмах. Ĕлĕкхинђен хушă-ă-ă! Ну каларĕ. Ха-ха-ха! Пĕтĕм тӳре шара хамăртан, вăл мĕн калаçса ларат? Апла калаçатăн пулсан, лармастăп санпала! (Тăрат). Ӳсĕртен урăлманха, есĕ. Кайса çывăр, çыисене култарса ан çӳре!

ЙЕХРИМ—Есĕ пĕр вăхăтра манпа пит туслăђђĕ, халĕ пăсăлтăн есĕ, Марйе. (Ыталасшăн).

МАРЙЕ—Ан тăскала аллусене! (Пĕр хĕрнелле пăрăнат). Тĕрĕс! Санпа пит туслă пурнаттăмăр. Малтан есĕ мĕнле çын иккенне пĕлмен

епӗ. Хаҫ пӗлсе ҫитрӗм епӗ сана, есӗ мӗн шухӑшлине, есӗ ӑҫталла туртнине пит аван туйатӑп. Пирӗн ҫулсем уйрӑм. Вӑт мӗскер!..

ЙЕХРИМ—Есӗ татах кирлӗ мара калаҫатӑн, Марйе. Ҫулсене йӗрлеме пӑрах-ха есӗ. Мӗн калаҫаççӗ пирӗн ҫинҫен?

МАРЙЕ—Мӗн калаҫҫӗр? Мӗн темелле сире? Ҫанӑсене тавӑрса, пӗтӗм вӑйпа ӗҫлемелле ҫухне, есӗр ӗҫе пӑрахса кайрӑр. Виҫӗ кун прокул турӑр. Намӑса пӗлес пулат. Мӗн темелле сире найансене, прокулшҫӗксене? Йе тата сире уншӑн мухтамалла?

ЙЕХРИМ—(ҫиленсе)—Аха-а! Вӑн йепле-е! Прокулшҫӗксем! Найансем! Кӑтартӑпӑр-ха вӗсене—прокулшҫӗксем мӗнлине!..

МАРЙЕ—Камсене,—вӗсене?.. Мӗнпе хӑратасшӑн вара есӗ? Пире хӑратаймӑр, епӗр нумайӑн. Ниҫҫава-а-а!.. Капла тӑрӑшса ӗҫлесен, сирӗнсӗр пуҫнех ӗҫлесе пӗтерӗпӗр! Ӗнер утарнӗксем ӗҫленинҫен тиректӑр та хытӑ тӗлӗнҫӗ. Комсомолӗссем пӗр ывӑнмасӑр ӗҫлерӗҫ. (Паусӑ) мӗн пуҫна усрӑн?.

ЙЕХРИМ—Хӳтӗлеместӗр есӗр пире. Пурте пирӗн ҫине тӑрӑннӑ.

МАРЙЕ—Хӳтӗлеме кӗтет тата, йурӑхсӑр. Ытти ҫӗрте пулсан, куншӑн сире тахҫанах савӑтран кӑларса сирпӗтмелле.

ЙЕХРИМ (пуҫне ҫӗклесе)—Есӗр те ҫавна шутламастӑр-и? Йепле сирпӗннине курӑр вара!..

МАРЙЕ—Татах хӑратасшӑн. Ан хӑрат... тархасшӑн. Питех хӑрамаççӗ, тенӗ сана! Кайса ҫывӑр, йе... тиректӑра йӑлӑн. Пӗррелӗхе саан каҫарӗ те и т ен?

ЙЕХРИМ—Пире те хӑратаймӑр (тухса кайат). .

IV

МАРЙЕ (пӗҫҫен)—Мӑнкун хӑнисем. Хе-хе-хе!..

V

КУҪМА (кӗрет)—Мӗн супӗлтетет вӑл ӳсӗр пуҫӗпе?..

МАРЙЕ—Вал тилӗ пек ҫейе. Темӗн те калаҫат. Хӑратса та пӑхат. Пирӗн хута кӗместӗр, тет. Ха-ха-ха! (Стсенӑ хыҫӗнҫе ҫамрӑксем йурлани илтӗнет). Пире хирӗҫ тӑратӑр, тет.

КУҪМА—Ха-а! Вӗсен хутне кӗмелле! Йепле калаҫат, намӑссӑр! Тфу!.. Тимукӗ кантур умӗнҫе хирӗлсе ҫӳрет. (Ҫамрӑксем йурласа кӗреççӗ).

VI

КУҪМА (кулкаласа)—Сире курсассӑн манӑн хамӑн та ҫамрӑкланас килет.

ҪИМУН—Мӗншӗн ҫамрӑкланмастӑн? халӗ ҫамрӑкланма май пур вӗт?

УЛҫККИ—Сухална хырса йар, ҫӳҫна машшинккӑпа хыртар,—ҫап-ҫамрӑк пулатӑн. Ха-ха-ха!.. Илетни мана? Каҫҫа илетни? Ха-ха-ха!...

КУҪМА—Есӗ Улҫкки, ытла та шут тума пултаратӑн. Манӑн хӗрӗм Марйе те ҫисти сан пекех. Кунта ман пата килсен, сире иксӗре паллаштарӑпха.

УЉККИ—Епĕр паллашнă унпала....

КУÇМА—Апла пулсан, нит аван. (Ыттисене). Мĕншĕн йурлама ђарăнтăр? Нуккă, çĕнĕрен пуçласа, çĕнĕ йурăсем йурласа парăр-ха. Вихтăрпа Хвекла ăçта кайнă тата? Вĕсен туйне хăçан тăватпăр. Кам та пулсан, кайса ђĕнĕрха. Ăçта çÿреççĕ вĕсем? (Вихтăрпа Хвекла пырса кĕреççĕ).

VII

КУÇМА—Акă, çылăхсăрскерсем, сăмах çинех пулђĕç. Есĕр пире пăрахса ăçта тарса çÿретĕр, шелмăсем? Авланђĕ те, урама та тухасшăн мар. Туйне хăçан тăватпăрха?

ВИХТĔР—Çĕнĕ клуп ĕлкĕрсенех туй тăватпăр.

ХВЕКЛА—Епĕр туйне йалта тăватпăр.

КУÇМА—Иш, йепле калаçат: Йалта Йалта-а тăватпăр!.. Кăтартăпăр йалта! Çук, кунтах, савăтрах тăватпăр. Урасем ывăниђђен ташлатпăр, вара! Йурати?

УЉККИ—Ђăнах та вара, сирĕн туй хăçан пулат?

ХВЕКЛА—Есĕ кађђа кайсан, санпа пĕр кунта тăватпăр. Йурат-и? Ха-ха-ха! Пĕр кунта икĕ туй тăватпăр. Ха-ха-ха...

(Хвеклан ашшĕпе амăшĕ пырса кĕреççĕ).

VIII

АШШĔ—Ман Хвекла çукши кунта? (Йĕри-тавра пăхкалат). Вĕсем те çакăнта марши?

ÇИМУН—Хăнасем килнĕ. Ђарăнăр!

ХВЕКЛА (Амăшне пырса ыталат)—Кунта епĕ, анне, кунта! Йепле çитрĕр? Çуранах килтĕр-и!.. Ма çырса пĕлтермерĕр, хирĕç тухса илнĕ пулăттăмăр. (Ашшĕне алă тытат).

Ашшĕ—Çитрĕмĕр майĕпенĕн...

АМĂШĔ—Ху пырăн-и тесе кĕтрĕмĕр, кĕтрĕмĕр, пымарăн, вара хамăр килсе курас терĕмĕр. Мăнкуна мĕншĕн пымарăн?

АШШĔ—Сана ваљљи аннÿ, çăмарта хĕретсе хуђĕ.

АМĂШĔ—Сана пит курас килђĕ.

ХВЕКЛА—Манăн та курас килет. Икĕ ернерен отпăск илсе, Вихтĕрпе пырас тенĕђђĕ. (Ватанкаласа). Савăннипе калама мансах кайнă. Епĕр кунта Вихтĕрпе... çырăнтăмăр!

Ашшĕ—Йепле çырăнтăр?..

ÇИМУН (Вихтĕре кăтартса)—Акă ку сирĕн кĕрÿ пулат. Авантарах пăхăр!..

АШШĔ—Шăлна ан йĕр-ха есĕ, ватă çынна труках ан мăшкăла, мĕн калаçатăн ес кирлĕ мара?

ХВЕКЛА—Атте, вăл тĕрĕс калат, епĕ Вихтĕра кађђа тухрăм.

АМĂШĔ—Йепле пиртен ыйтмасăрах кађђа каймалла? Çу-ук, апла иртĕнме йурамаст. Епĕр ун патне йури хăнана килетпĕр, вăл, ав мĕн хăтланса хунă.

КУÇМА—Пăхха, есĕ, авантарах кĕрÿне, ун пекки респуплĕкĕпе те тупаймăн, утарнĕк вăл. Вăлах купăççă, вăлах примерлă комсомолĕс. (Вихтĕр пырса алă тытат).

ВИХТӖР—Вӑрҫсан та мана ҫеҫ вӑрҫӑр, Хвекла вӑл, спре малтан систерешшӗнҕҕӗ те, епӗ ҕартӑм, мана вӑрҫӑр.

АМӐШӖ—Епӗр ӑна йалта Микуҫа ҫураҫас тесе ӗмӗтленеттӗмӗр, апла мӗнле пулҕӗха ку йапала?

АШШӖ—Епӗр ӑна пиме кпсеттӗмӗр.

КУҪМА—Кайа йултӑр, снаҕҕӑт, маларах кирлӗҕҕӗ. Ҫамрӑксем ҫапла вӗсем, пире кӗтсе тӑмаҫҫӗ.

АШШӖ—Вӑт йепле хӑтланат кӑҕухнехи аҕа-пӑҕа?

КУҪМА—Вӗсем мана спре ҕӗнме, тесе йаҕӗҫ те, епӗ автопус теҫҫӗн-ха, ҫавӑн ҫине ларайӑмасӑр йултӑм. Вӗсем айӑплӑ мар, епӗ айӑплӑ, мана йатлӑр. Никама айӑпламасан тата авантарах пулат. Хаҕ ӗнтӗ, йатласан та, ним те тухас ҫук.

АШШӖ—Йурӗ ӗнтӗ, мӗн тӑвас, епӗр ӑна йалта мӑнкун иртсен ҫураҫас, тесе тӑраттӑмӑр. Пит хӑтана нумай ҫӳреҫҫӗ.

КУҪМА—Ши-и, хӗр маттурне спснӗ. Камсем ҫӳреҫҫӗ? Кулак ывӑлӗсем мари? Вӗсем пулсан, кутӗнҕен тапса сиктер, акӑ ҫапла. Йурату ӗҫне ашшӗ-амӑшӗ ытлашши хутшӑнни йурӑхлӑ йапала мар вал, ҫамрӑксем хӑйсемех аван пӗлеҫҫӗ. (Ҫимуна кӑтартса) Ҫакӑнпа калаҫса пӑхха, вӑл ҫав йӗркене пит ӑста пӗлет. Сан кӗрӗвӗн йулташӗ пулат вӑл.

(Хвеклапа амӑшӗ калаҫса тӑраҫҫӗ).

ВИХТӖР—Ну, епӗр кайар, сирӗн канас пулат.

АШШӖ—Канас пулат... Ытла есӗ кӗрӳ, кӑмӑллӑ, пирӗн йалта та сан пекки ҫук. Ну, кайрӑмӑр еппин (тухса кайаҫҫӗ).

IX

КУҪМА—Астуха, ҕаваша—мӗн калаҫат. Ҫураҫса парас вӑхӑт иртрӗ ӗнтӗ вӑл. (Ҫимуна). Сана ваҕҕи те йалта хӗр ҫураҫса хумани?

ҪИМУН—Вӗсем хӑтланӗҫ те, хӑтланмӗҫ, темелле мар.

КУҪМА—Пӗрре ҫапла пирӗн йалта пӗр шаклапуҫ хӗр вӑрлама кайнӑ. Ҫӗрле пулнӑ, хӗрне курайман. Ҫапла вара курмасӑрах, хирти тӑмана пек, лартса килнӗ. Вӑт, мӗнле «ӑслӑ» ҫынсем пулаҫҫӗ тӗнҕере. Йепле курмасӑрах лартса килтӗн, тесе ыйтрӑм та, курма май килмерӗ, тет. Вӑт минкӗре сурӑх! Хе-хе-хе!.. Наҕар йӑла ҫав пирӗн ҕӑвашӑн.

ПӖРИ—Вара мӗн пулҕӗ?

КУҪМА—Мӗн пултӑр, ернеренех уйӑлҕӗҫ. Ну, вӑл ҫӑва патнеха, епӗр савӑта хӑҫан туса пӗтеретпӗр, мана ҫав шухӑш канӑҫ памаст.

ҪИМУН—Малашне те ӗнерхи пек тӑрӑшса ӗҫлесен, пӗр уйӑх ҫурӑран пӗтеретпӗр.

ПӖРИ—Ӗнерхи пек ӗҫлеме пире кам ҕарат? Йехрим пеккисем?

ҪИМУН—Савӑта туса пӗтерсен, ӑна уҫнӑ ҕухне, Шупашкартан правиттӗлствӑ ҕленӗ килмелле. Вӑт, ун ҕухне праҫнӗк пулат вара пирӗн.

УЛҔККИ—Ну, савӑт хитре те пулатҫке. Халех пӑхса ытармалла мар!..

КУÇМА—Ун ђухне вара епĕ сирĕн çинђен хам каласа кăтартăп, ку пирĕн утарнĕк, ку пирĕн утарнĕк, ку утарнĕтсă! тетĕп. Рапођђи тытăнсан, темĕн те тăват вăл.

ПĔРИ—Пăхăрха, Тимук килет. Мăнкун çынни... Ха-ха-ха!.. Хо-хо-хо!..

X

ТИМУК (тайкаланса кĕрет)—Мĕнтен кулса ларатăр? манран кулмаи?..

КУÇМА—Есĕ мĕнле нађђалнĕк вара, пире калаçса кулма ђарасшăп? Есĕ ÿсĕр, тесе пирĕн йĕрсе лармаллан?

ТИМУК—А-а-а!.. Есĕ кунта иккен? Сана такçантанпах шыратăп.

КУÇМА—Мăнкуна ĕçме илсе кайас тетĕним?

УЉККИ—Тимук, есĕ ÿсĕр, кайса çывăр.

ТИМУК—Сирĕнпе ĕçмен. Есĕр мана савăтран кăлармаи? Мана хирĕç пыман?

ÇИМУК (сиксе тăрат)—Есĕ пире хăратма килтĕни вара? Ĕçсе ÿсĕрĕлни çитмест, тата пире хăратасшăн. Кай кунтан!

ТИМУК—Есĕ, манка сурăх, вырăнăнта текех лар. Санпа калаçмасçĕ. Сирĕн пек йурăхсăрсене куркаланă епĕ.

КУÇМА—Епĕр те сан пек пĭантсăсене, нумай куркаланă, анђах сан пек ĕмĕтсĕррине курман вара. У-у-у кĕççе пит, тфу...

ТИМУК—А-а-а!.. Есĕ çаплан? Мана мăшкăламаи? (кĕссинђен тимĕр кăларат). Акă сана! (Куçмана айакки пĕрђинђен çапат. Куçма ахлатса, йăванса кайат.. Уљкки Куçма патне ђупса пырат, ыттисем Тимука çавăрса илсе, çĕре ÿкереççĕ).

ÇИМУН (ун аллинђен тимĕре туртса илет)—Çыхăр аллисене, кÿр кантăра!..

КУÇМА—Ах!.. Ох!.. Вăл мана такçантанпах çилленсе çÿрет. Анђах хăрамалли çук. Епĕ ватă çын вилсен те.

УЉККИ—Тухтăра ђĕнтерер! Тиректăра кайса калăр. (Аманнă вырăна пăхат. Пĕр ушкăн рапођђи ђĕнмесĕр тăраççĕ).

РАПОЂЂИ (ђупса кĕрет)—Ăçта? кама амантнă? (Тимук патнелле. Ах, тĕнђе йурăхсăрĕ, шуйттан! Парăр мана! Епĕ ăна халех çапса вĕлеретĕп (ђараççĕ).

ТЕПРИ (ђарса)—Апла йурамаст! Сут тишкĕрĕ!

Ђаршав.

ВИÇÇĔМĔШ ПАЙĔ.

Савăт корпусне туса пĕтерне, машшинсем лартмалла çеç. Шалтан кĕмсĕртетни, шавлани илтĕнет. Стсенă хыçĕнђе «**ой, ишшо рас**» кăшкăрса йăвăр йапала йăтнă пек туйăнат. Стсенă уçăлсан, сулахай йенђен рапођђисем пĕр-пĕринпе калаçса иртеççĕ).

I

ПĔРИ—Ђимха, ђим, Кĕркуç, епĕр Хусана кайнă ђухне ку савăта тума тытăннă çеç ђĕ вĕт. Никĕсĕсене çеç лартнăђђĕ. Вăт хаљ пыр та кур (пуçне суллат). Тĕлĕнмелле.

ТЕПРИ—Мĕн тĕлĕнмелли пур унта. Ђăваш ĕççынни ытти халăх ĕççыннинђен нађар, тетни, вара. Ĕлĕк патша вăхăтĕнђе çеç пире çын вырăнне картман. Кур, йепле пысăк савăт туса лартнă.

ПĔРИ—Пирĕн çакăнта çеç ĕçлеме кĕмелле мĕн. Хамăр респуплĕкрех халĕ рапођђисем кирлĕ, малашне пысăк савăтсем лартаççĕ. Епĕр ĕçлеме ытти хуласене кайатпăр. Пирĕн иксĕмĕрĕн те çакăнта çеç йулмалла мĕн.

ТЕПРИ—Халĕ кайа йулнă тетним. Халĕ те кайа йулман. Халĕ ĕнтĕ савăтĕнђе ĕçлеме рапођђисем кирлĕ пулаççĕ.

ПĔРИ—Тĕрĕс, Кĕркуç. Киле кайсан çемйесене курса килетпĕр те, çакăнта ĕçлеме кĕретпĕр, йурати?

ТЕПРИ—Кайа йулман пулсан, рапођђисем илсе тултарман пулсан, çапла тăвăпăр. Айта кĕрсе калаçса пăхар (утма тытăнаççĕ). Кайинђен ыйтса пĕлес. Ђимха, пĕри кунталла килет. (Куçма кĕрет те пăхат).

II

КУÇМА—Тĕреклĕ тăваççĕ, ђасах пшĕлмелле мар. Пултараççĕ ађисем (çынсене курат)есĕр мĕн ĕçпе? Ăçтан таврăнатăр капла?..

ПĔРИ—Хусантан таврăнатпăр, йулташ (вăхăтлăх ĕçе кайнађђĕ). Унта 3—4 уйăх ĕçлерĕмĕр. Çемйесене курма таврăнатпăр!

КУÇМА—Тоттă. Пăхатăп, пăхатăп та, хулара пулнă йулташсем пек туйăнаттăр. (Катартса). Ку савăта ĕçлеме те рапођђисем пит нумай кирлĕ пулђĕ. Есĕр мĕнле килмерĕр?

ПĔРИ—Çавна калатпăр та. Çакăнтан иртсех кайрăмăр. Ну, вара, тухнă-тухнах, Хусанах çитсе ĕçлес, терĕмĕр.

ТЕПРИ—Питех ÿкĕнмелли çук, унта та аван ĕçлерĕмĕр. (Ун патнерех пырса). Халĕ мĕнле, савăтра ĕçлеме рапођђисем кирлĕ мар-и? Епĕр киле пĕр-икĕ ернелĕх çеç кайатпăр, ађасене курма çеç.

КУÇМА—Ка-ак рас халĕ рапођђисене илеççĕ. Вăхăтлă çитрĕр. Пайан çеç пысăк машшинсем илсе килђĕç. Шалта йепле шавлаççĕ. Илтетри? Машшинсене вырнаçтараççĕ пулмалла.

III

ПЕТРОВ—(кĕрет)—А-а-а, Куçма йулташ килнĕ! Савăта килсе пăхмасан ђĕрÿ ђăтаймаçтим? Сывалатни? (Алă тытат).

КУÇМА—Ыран ĕçлеме тухатăп, Кирил Петровиђ. Пÿртре пĕђђен ларас-тăрас килмест. Кантăкран пăхатăп та, савăт çав тери илемлĕн курăнса ларат. Шаккани, кĕрлени, шавлани илтĕнет.

ПЕТРОВ—Савăт пит тĕреклĕ пулат. Пайан машшинсем илсе килђĕç. (Лешсене) Есĕр мĕн ĕçпе йулташсем.

ПĔРИ—Çул майĕ савăт курса кайас терĕмĕр. Хусантан таврăнатпăр.

КУÇМА—Хусанта çесоннăй ĕçре ĕçленĕ вĕсем, хађ киле таврăнаççĕ. Икĕ ернерен кунта ĕçлеме килесшĕн. Кĕме пулат-ши?

ТЕПРИ—Есĕ нађђалнĕк пулас? Калаçса пăхасшănђђĕ çавă.

ПЕТРОВ—Пире рапоҫҫисем тата кирлĕ пулаççĕ. Кантура кайăр, епĕ наҫҫас пырăп. Унта калаçса татăлăпăр. (Лешсем савăнса, кулкаласа кайаççĕ).

IV

КУÇМА—Машшинсене курма тесе килтĕм, Кирил Петровиҫ. Ҫĕре ҫăтмаст, йулташ. Еçсĕр пурăнма хăнăхман епĕ. Пулнитсăран тухсатарас патнех çитрĕм. Вăхăт вăрăм, ĕç çук.

ПЕТРОВ—Пĕр хăнахсан çапла вăл.

КУÇМА—Пĕркунхине çапла ман пата пулнитсана Çимунпа Улҫкки пыҫĕç те, савăт пурнăçĕ çинҫен каласа паҫĕç. Çавсемпе те вĕçсе килессĕм килҫĕ. (Паусă). Çамрăк утарнĕксем мĕнле ĕçлеççĕ?

ПЕТРОВ—Хурлама çук, пит тăрăшса ĕçлеççĕ. Ну, каймалли пурҫĕ, кайран калаçăпăр. (Кайат).

V

КУÇМА (пĕҫҫен)—Çапла-а, ĕлкĕрҫĕ савăт. (Хыпалат). Еç хута кайат топпер.

VI

ХВЕКЛА (сумккăпа тĕрлĕ йапаласем çĕкленĕ)—Епĕ сана куҫҫенеç çитересшĕн, тахçантанпах шыраса çӳретĕп, есĕ вăн ăçта тарса пытаннă?

КУÇМА—Пытанман, ниçта та пытанман, йăмăкăм. Халҫ çеç усăлма тухрăм... Куҫҫенеç илсе килтĕн-и апла? (Çурăмĕнҫен сават). Епĕ ҫирле выртнă вăхăтра есĕр мана пăрахмарăр. Сăпаççипă сире уншăн. Кăна епĕ нихăçан та манас çук.

ХВЕКЛА—Акă сана шурă çăкăр, акă тапак, акă... кăна пĕлетни? Ку мĕскер? (Какао парат).

КУÇМА—Мĕн расхутланмалли пур? Капла есĕр мана çитерекен йăпăр пек самăрлатса йарăр. Усала вĕрентетĕр капла есĕр мана.

ХВЕКЛА—Савком йури саншăн укçа уйăрса паҫĕ. Пайан мапăн канмалли кун, епĕ копператтива кайса килтĕм.

КУÇМА (Тапакне илет)—Куна парса хăвар еппин, тапак пĕтнĕҫҫĕ, ыттисене илсе кайса хур. Куҫҫенеçĕ тармĕ-ха вăл. Есĕр йалтан мĕн туса килтĕр? Мĕнле пурăнаççĕ йалта? Çавна калаҫа парха мана. Калаççĕ, калаççĕ, пĕри те путлĕ каласа параймаççĕ.

ХВЕКЛА—Епĕр унта виçĕ кун ĕçлерĕмĕр. Тимуксен йалĕ унтан тăватă çухрăмра çеç. Вăл ҫăнах х та, ҫи усал кулак ывăлĕ пулнă. Вĕсене халĕ раскулаҫҫĕт тунă. Тимукне тĕрмене хупнă.

КУÇМА—Вăл таçтан та паллă. Усал çынсем, мĕнне калан.

ХВЕКЛА—Епĕр ҫухăнсене пулăшма пынипе кулаксем ним тума пĕлмеççĕ. Çав тери çиленнĕ пирĕн çине. Есĕр вĕсене усала вĕрентетĕр, теççĕ.

КУÇМА—Вăн йепле калаçаççĕ вĕсем. «Сире камсем усала вĕрентеççĕ», тесе ыйтмаллаҫҫĕ вĕсенҫен. Пĕтессе сиссе усаланаççĕ вĕсем. Тата мĕн тур р?

ХВЕКЛА—Виҫӗ кун хушшинҗе пысӑк ӗҫсемех тӑваймарӑмӑр. Колхос ӗҫне пулӑшрӑмӑр. Хамӑр шеф йалне парнесем илсе кайрӑмӑр. Пит те савӑнҗӗҫ. (Кӑнтӑрла ҫитнӗ. Куток).

КУҪМА—Епӗ те хамӑр йалти колхоса кайса курасшӑн-ха. Такҫантанпах пыма җӗнеҫҫӗ. Кайса пулмарӗ. Ну, спаҫҫипӑ сана. (Хвекла тухса кайат. Рапоҗҗисем пырса кӗреҫҫӗ).

VII.

ПЕРИ—Куҫма йулташ килнӗ. Куҫма таврӑннӑ.

ТЕПРИ—Сывалатни? Тытса силлес пулат ӑна, җирӗ-җерӗ таҫта кайса кӗрӗ.

ПУРТЕ—Каҗҗат йево!.. Каҗҗат!.. (Силлеҫҫӗ).

КУҪМА—Җарӑнӑр, мурсем. Калаҫма парӑр. (Ӑна ҫӗре йараҫҫӗ. Вӑт тупнӑ вӑйӑ.

ВИХТЕР—Ну, савӑт мӗнле пек?

КУҪМА (шӳт туса)—Наҗар савӑт пит йапӑх ӗҫлеттӗр.

ПУРТЕ—Хӑш йенҗен наҗарха вӑл? Хӑшӗ килӗшмерӗ?!

КУҪМА—Шӳт туса калатӑп епӗ. Аван, пит тӗреклӗ савӑт. Курсан җун хӗпӗртет. Сӑмах ҫипе тӑратӑр.

ҪИМУН—Савӑта туса пӗтерсенех сана курорта йаратпӑр, теҫҫӗ.. Савкомра ҫапла постановлени йышӑннӑ.

ВИХТЕР—Шӳт туса мар, җӑнипе калатпӑр. Сана йамаллах, теҫҫӗ. Унтан вара хырӑмна вӑ-ӑ-т ҫапла ӳстерсе килетӗн. Ха-ха-ха!.. (Пурте кулаҫҫӗ).

КУҪМА—Кунта шӑлӑрсене йӗрсе тӑриҗҗен, есӗр мана ҫӗнӗ машшинсене кӑтартӑр. (Рапоҗҗисем пӗрерӗн-икшерӗн калаҫса тухса кайаҫҫӗ).

VIII

ҪИМУН—Курманиха есӗ? Ну-у, курсан тӗлӗнетӗн. Пирӗн машшин вӑйӗпе таврари вунӑ йала електритсӑ ҫути памалла, тет. Вӑт мӗнле ӗҫсем, Куҫма пиҗҗе, сисетни?.

КУҪМА—Сисетӗп, шӑллӑм. Туйатӑп. Ватӑмлӑх кунӑмра ырӑ пурнӑҫ курмалла пулҗӗ. Йала електритсӑ ҫути паратпӑр, җаваш йалне. Йепле савӑнас мар?

ВИХТЕР—Влатимӗр Илйиҗ ҫапла хушса хӑварнӑ.

КУҪМА—Ҫапла тӗрӗс шӑллӑм. Вӑл каласа хӑварнине манас пулмаст.

IX

ПЕР РАПОҖҖИ (кӗрет)—Колхоҫнӗксем, тата шкул аҗисем савӑт курма килнӗ, машшинсем курма килнӗ.

ВИХТЕР—Кайрӑмӑр епӗр те. (Куҫмана хулӗнҗен ҫавӑтат). Столовӑйа туса пӗтернӗ вӗт, кӗрсе куртӑн-и?

КУҪМА—Ӑна кӗрсе куртӑм, аван тунӑ столовӑйне. Савкком тӑрӑшат пирӗн. (Ытти рапоҗҗисем пӗр йеннелле, Куҫмапа Вихтӗр тепӗр йеннелле утаҫҫӗ. Хусантан тавӑрнакансем кӗреҫҫӗ).

X.

ПӖРИ (Теприне хулпуҫҫинђен ҫапса). Халӗ ӗнтӗ, ӗҫ хута кайрӗ пирӗн. Ернерен килетпӗр!

КУҪМА (Калла кӗрет)—Ну, мӗнле, илђӗҫ-и?

ТЕПРИ—Ӗҫ аван пырат. Иксӗмӗре те илђӗҫ. Ӗҫлетпӗр топпер ҫанна тавӑрса!..

КУҪМА. Йурат. Пит аван. Ҫапла кирлӗ!

Ђаршав.

ТӐВАТТӐМӖШ ПАЙӖ.

Савӑта туса пӗтернӗ. Трипунӑ ҫинђе савӑт тиректӑрӗ Петров, йађђейккӑ ҫекреттарӗ Ваҫҫилйӗв. Шупашкартан килнӗ правиттӗлствӑ ђленӗ, Хвекла Куҫма тӑраҫҫӗ. Трипунӑ умӗнђе Хӗрлӗ йалавсем тытнӑ: рапођђисем, хресђенсем—колхоҫнӗксем, савӑт ӗҫленине курма, миттӗнка пынӑ ҫынсем. Стсенӑ тулли халӑх. Мусӑк оркестӑрӗ.

I.

(Пӗр ушкӑн 5—6 хресђен савӑт ђӳређи патне пынӑ та, тӗлӗнсе пӑхаҫҫӗ).

ПӖРИ—Ай-йай-йай!.. Урапи мӗн пысӑккӗш! Пирӗн пӳртрен те пысӑк пулӗ.

ТЕПРИ—Ей, каларӗ. Пирӗн пӳртсене унпа танлаштарсан, Ӑҫта-а-а унта!..

ВИҪҪӖМӖШӖ—Пӑхӑр-ха правиттӗлствӑ ђленӗ килнӗ. Епӗ ӑна Шупашкарта та курсаттӑм. Ҫавӑ пулас вӑл? (Шавлаҫҫӗ, кӗрлеҫҫӗ).

ПЕТРОВ—(Хӑпарса тӑрат). Савӑта ӗҫлесе пӗтернӗ тӗлӗшпе пухнӑ миттӗнка уҫӑлнӑ, тесе шутлатӑп. (Оркестӑр «Интернатсионал» выљат).

ПЕТРОВ—Йулташсем! Пайан пирӗн савӑт ӗҫлеме пуҫлат. (Алӑ ҫупаҫҫӗ) Савӑта тӑвакан рапођђисем—утарнӗксем, хӑйсен вӑйне шеллемесӗр, тӑрӑшса ӗҫленипе, епӗр савӑта малтан йышӑннӑ планран икӗ уйӑх маларах туса пӗтертӗмӗр! (Алӑ ҫупаҫҫӗ). Ђӑваш ӗҫҫынни Совет сойусӗнђи халӑхсемпе пӗрле сотсиалисӑм тӑват. Комуниссен партти ҫул кӑтартса, тӗрӗс ҫулп йертсе пынипе, Ђӑваш респуплӗкӗ те вӑйланнӑҫемӗн вӑйланса пырат. Ҫултан ҫулах пысӑк хапрӑксем, пысӑк савӑтсем шӑтса тухма пуҫларӗҫ. Хаљ ҫеҫ туса пӗтернӗ пирӗн савӑт
савӑтсем шӑтса тухма пуҫларӗҫ. Хаљ ҫеҫ туса пӗтернӗ пирӗн савӑт
ҫав пысӑк претприйаттисенђен пӗри. Ӗлӗк пусмӑрта пурӑнакан ђӑваш ӗҫхалӑхне Октапӗр револђутсийӗ ҫӑлӑнӑҫ пађӗ, ӑна ытти халӑхсен ҫемйинђе тивӗҫлӗ вырӑн пађӗ. Пӗтӗм тӗнђери ӗҫхалӑхне ҫӑлӑнӑҫ паракан Октапӗр револђутсийӗ сывӑ пултӑр! Ӗҫхалӑхне тӗрӗс ҫулпа—сотсиалисӑм ҫулӗпе йертсе пыракан комуниссен парттийӗ сывӑ пултӑр!

ХАЛӐХ (алӑ ҫупат)—Ура-а-а!.. Ура-а!.. Ура-а!..

ПЕТРОВ—Ђăваш правиттĕлстви йађĕпе салам калама правиттĕлствă ђленне—Йекорăв йулташа сăмах паратăп. (Алă çупаççĕ).

ЙЕКОРĂВ—Çак савăта туса ĕлкĕртнĕ рапођђисене, ĕçхĕрарăмĕсене, тăрăшса ĕçленĕ утарнĕксене, савăт ĕçне йертсе пыракан тиректăрне савăта тата, планпа йышăннинђен икĕ уйăх маларах туса пĕтернĕшĕн, ĕçе пит тăрăшса ĕçленĕшĕн, Ђăваш правиттĕлстви йађепе хĕрӳллĕ салам калатăп. (Алă çупаççĕ). Йулташсем! Хамăр çĕршыва машшинлатасси, интустрилесси, халăх хуçалăхне çĕнĕ йĕркене кӳрсе ăна, сотсиалисăм çулĕпе йарасси пирĕн ђи пысăк, ђи малти сатађ. Пилĕк çуллăх план тăрăх пирĕн респуплĕкре те çак çитес çулсенђе пысăк хапрăк-савăтсем тата пулмалла. Вĕсенђен нумайĕшне тума тытăннă, хăшне пĕрне туса пĕтернĕ, хăшне тата çак çулсенђе тума пуçламалла. Хаљ çеç туса пĕтернĕ пирĕн савăт çав кикантсенђен пĕри пулса тăрат. Ăна план тăрăх йышăннă вăхăтран икĕ уйăх маларах туса пĕтерни—пирĕн рапођђисем партти политтĕкне ăнланнине, пилĕк çуллăх плана тăватă çулта пурнăçа кĕртме май пурринe авап кăтартса парат. Пĕтĕм вăй—ĕçлекен халăхра, вăл тăрашсан, темĕн тума та пултарат. Ђăваш ĕçхалăхĕ сывă пултăр, сотсиалисăмлă строиттĕлствă сывă пултăр! Ура!..

ХАЛĂХ (алă çупат)—Ур-а!.. ура-а!.. ура-а! (оркестăр).

ПЕТРОВ—Ĕçхĕрарăмĕсен йађепе, савăта тунă çĕрте тăрăшса ĕçлекен рапотнитсă-утарнитсă сăмах калат (Алă çупаççĕ).

ХВЕКЛА—Йулташсем! Савăта васкавлă тунă çĕрте пирĕн рапотнитсăсем те, рапођђисенђен кайа йулса пымарĕç. Вăл ĕçе пит пысăк вырăна хурса, хĕрарăмсем те утарлă прикатăна çырăнђĕç, арçынсемпе танах ĕçлерĕç. Сывă пултăр пире йертсе тĕрĕс çул кăтартса пыракан комуниссен парттийĕ!..

ХАЛĂХ—Ура-а!.. Урра-а!.. (Оркестăр).

ПЕТРОВ—Савăта ĕçленĕ утарнĕксен йађепе, ватă, хастарлă рапођђи Куçма Иванов сăмах калат. (Алă çупаççĕ).

КУÇМА—Савăт ĕлкĕрнĕ майĕпе епĕ те пĕр-икĕ сăмах калас, тетĕп. Хаклă йулташсем! Пайантан вара пирĕн савăт ĕçлеме пуçлат. Малтан, ĕçлеме тытăнсан, пирĕн хушăмăртан вăхăтра туса пĕтереймĕпĕр текенсем те пурђĕ. Хăшĕ-пĕрисем пирĕн ĕçе ђарма, кансĕрлеме те хăтланђĕç, анђах çамрăксем-комсомолĕссем пит тăрăшса ĕçленипе епĕр савăта икĕ уйăх маларах ĕçлесе пĕтертĕмĕр. Малашне савăтра та çапла тăрăшса ĕçлеме сăмах паратпăр.

ХАЛĂХ—Ура-!а Урра-а!.. (Алă çупаççĕ).

ВАÇÇИЛЙЕВ—Йулташсем! Савăта тунă çĕрте рапођђисем, рапотнĕтсăсем çав тери тăрăшса ĕçлени çинђен кунта тиректăр йулташ,—Петров та каларĕ. Тĕрĕс! рапођђисем пит хастарлă ĕçлерĕç, анђах вĕсен хушшинђе тата вăйлăрах çирĕпрех ĕçлекенсем пулђĕç. Вĕсем сĕннипе утарлă прикатă турăмăр. Епĕр йулашки ларура çакăн çинђен сӳтсе-йавса, ĕçђенрех, паллăрах утарнĕксене «Ĕç йалав ортĕнĕ» памалла, тесе йышăнтăмăр. Вĕсенђен пĕри акă ман çумра, трипунă çинђе тăрат. (Куçмана кăтартат). Вăл хăй ватă пулсан та, ђи малтан утарнĕке кĕрсе, çамрăк çын пек вăйлăн ĕçлерĕ. Уитан пуç-

не тата пирĕн çамрăксенђен нумайĕшĕ пĕтĕм вăйне хурса ĕçлерĕç. Вĕсене савкком йађепе тав тумалла, тесе йышăнђĕç. (Алă çупаççĕ). Вĕсем: çаксем: Вихтĕр Антрейĕв, Çемен Никколайĕв, Хвеклă Иванова, Марийа Никкиттина. Çавсем ăмăртăва пуçăннипе савăта, йышăннă вахăтђен малтан туса пĕтертĕмĕр. Ĕç паттăрĕсем сывă пулђђер. Ура!.. Ура-а!..

ХАЛĂХ—Ура-а!.. Ура-а!.. Утарнĕксем сывă пулђђер! (Алă çупаççĕ).

ПЕТРОВ—Тата хамăр шефа илнĕ йалăн колхос претçетаттĕлĕ сăмах калат. (Халăх алă çупат).

САНТĂРККА—Çав тери савăннипе манăн сăмах калама ђелхе те çаврăнмаст. Йулташсем! Каламалли пит нумай. Епĕ çакна çеç каласшăн. Пире колхос еçенђе те вĕсем, утарнĕксем, пит пысăк пулăшу пађеç. Епĕр ăна никçан та манас çук. Халĕ ĕнтĕ колхос пит вăйлă ўссе пырат. Кашни кун пекех темиçешерĕн пырса çырăнаççĕ. Хулапа йал çыхăнăвĕ сывă пултăр!..

ПЕТРОВ—Миттĕнкăна хупăннă тесе шутлатăп. (Оркестăр «Интернатсионал» выђат).

ХАЛĂХ (алă çупат).—Ура-а!.. Ура-а!.. Ура-а!..

ПЕТРОВ. (Кессинђен свистук кăларса)—Йулташсем, пайан пиреншĕн пит пысăк праçнĕк! Савăт ĕлкĕрнĕ. Вăл мĕнле ĕçленине кĕрсе курма пултаратăр. (Кăшкăрат). Все по местам, товарищи! Машину в ход. (Савăт виçĕ хутђен) хытă кăшкăртат. Халăх «Интернатсионал» йурласа савăта кĕрет. Унтан оркестăр выђама пуçлат. (Стсенă хыçĕнђе хытă сасăпа, харăс). **Пилĕк çуллăх плана 4 çулта пурнăçа кĕртесси сывă пултăр!**

Ђаршав.

САМОЙЕТСЕМ ПАТЁНЂЕ

ОЂЂЁРК

И. П. ТУМИЛИН

Хай курнипе тата кёнекесем та

...Шура тинёс!.. Нихçан та, нихçан та манма çук ăна. Мён вăй, менђул хăват кăтартман пулĕ вăл çынна. Хăрамалла пек çинђен асăнма та. Хăрамалла... Ăна шурă тинĕс теме те май тар,— ун хумĕсем ытти тинĕсĕнни пекех тăварлă, хура, тиск Ун хумĕсем вăйлă. Ун çинђе çанталăкăн пысăк вăйĕ ахăрса та Вăл çынна аванах шиклентерет, хăратат,тĕлĕнмелле кĕрешӳ пи тинĕс çинђе. Вăл кĕрешӳ çынна савăнтарат. Çын унпа хăй вă хăй ие пуçне танлаштарат. Ăна курса тата вăй хутшăнтарат çы Тинĕс çынна çӳле-çӳле çĕклентерет. Вĕçтерет вăл. Çав вăхăтрах çынна ђăмăртат, асаплантарат, нумайĕшне хăйĕн пысăк аллис хăй айне çавăрса ђикет. Тинĕс тăрăх Арханкĕлскăран Меçене ка пăр. Пире илсе кайакан тинĕс пăрахуђе—пысăк пăрахут «Умба» ц ђĕрсе малалла шăват. Ман ик йулташ: пĕри Ваççа,—пилĕк çулт тăлăх ӳснĕскер, килĕнђен вуннăра ђух тухса тарнăскер, тăван лĕнђе вунă çул пулманскер. Унта-кунта çапкаланса çӳренĕ çын. ханкĕђскра хура ĕçре ĕçленĕ те Меçене савăта ĕçлеме кайат. Тел пођак хĕрĕ Анна, хушамађепе Кинђук. Харккăвра тата Муск арттисен шкулĕнђе вĕреннĕскер, «Çĕнĕ çĕр» острăва кайас ш çурçĕр тăрăх курса çӳреме тухнăскер. Миçене кайакансем нумай. ларса пыракан трӳмра ђиксе тултарнă пек çын. Унта хăшĕ вырт хăшĕ лараççĕ, пурте йăшăлтатаççĕ. Хăшĕ-хăшĕ йурă йурлам ĕлкĕрнĕ акă. Трӳм çĕмĕрлет анђах...

— Елĕк пирĕн аттесем, аннесем тинĕс хумĕсем темиçе ђ çӳле хăпарса шăваççĕ, теђђеç,—тет мана Анна кулса.—Çав пул ши кĕçĕр?..

Ваççапа епĕ кулатпăр.

— Пулсан пултăр. Ăна та куратпăр вара... Лайăх куратпăр!

Хумсенђен хăрас шухăш çук пирĕн. Хăрама мар-ха, вĕсене ђ курас килет, вĕсемпе паллашас килет, тинĕсе çитсе курнăшăн савăнас килет...

Йёри-тавра хуп-хура шыв. Йёри-тавра кёрхи хура пёлётсем хуп
ı тăраççĕ. Пирĕн йĕри-тавра урăх ним те çук. Шыв та пĕлĕт.
ёт те шыв, «Умба» çавсен хушăкĕнҫе çапкаланса пырат.
Малалла шăватпăр. Анҫах тинĕс çинҫе малалли, малалла марри
те паллă мар. Шыв та шыв. Шывăн вĕçĕ-хĕрри курăнмаст ни-
йенҫе те. Пур тĕлте те шыв çеç йавăнса выртат. Таçтан айак-
айакран хура хумсем пĕр-пĕринҫен ăмăртмалла прахут патнелле
ççĕ. Прахут пĕрре çĕкленет, тепре анат. Çав вăхăтрах хăй йĕри-
а хум çине хум кăларса ывăтат. Çапахта-ха вăл вăйлах мар,
а аптратмалла мар...
Пасаширсем хуллен-хуллен лăпланаççĕ. Хăшĕ вĕсем çывăрма.
нă, хăшĕ лараççĕ. Палупă çинҫе çын курăнмаст. Унта тухма
. Прахута ҫалăшшăн çил çаптарат. Йурлă-çăмăр вĕçет...
Хĕле хирĕç çурçĕре йури килекенсем епĕр анҫах пулас. Виçĕ
ăк. Пĕр çын хура сухаллăскер пиртен кулат.
— Есĕр шăнса вилетĕр унта, тет вăл—Çурçĕр вăл малтанлăха
, çынна хытă йуратат...
— Самойетсем пури Меçенре?—ыйтат Анна.
— Пур, пур. Вĕсем хĕлле нумай пыраççĕ унта. Кĕтӳ пек пы-
ə... Еп ҫĕнместĕп. Мана ҫапах та инçе çул шиклентерет. Тата
ĕçе пăрахса хĕле хирĕç çул çине тухни те кӳрентерет. Çапах
ун çинҫен никама та каламастăп. Мĕншĕн тесен, пĕр йенҫен—
ап пурнăçа курма кайатпăр. Тепĕр йенҫен—мана тахçанах
а:
— Ăшă йенне кайма çулла аван, çурçĕре килме хĕлле аван,
çыпăçтарҫĕ.
Старик «хура сухал» пирĕн шухăша сисет. Ун пирĕн телейшĕнех
купăс пур мĕн.
— Кам калама пĕлет?—ыйтат вăл пиртен. Хăй пăртак тăрсанах
а йарăнтарма тытăнҫĕ. Трӳм йанрат анҫах. Ташă кĕввисем
сем сӳтĕлеççĕ кăна. Пирĕншĕн савăнăçлă. Хаваслă. Кун пек
н ма çул çӳрес мар?!
Çавăн пек йурласа, калаçсах тинĕс тăрăх пилĕк сехете йахăн
мăр.
Сасартăк палупă çинҫе пĕр пилĕк ултă хут йанравлă шăнкрав
ç. Еп вăл вăхăтра пĕҫҫенех тула тухрăм. Каç сĕм тĕттĕм. Йĕ-
вра шыв йашăлтатат. Тинĕс тăрăх хура пĕлĕтсем йăраланаççĕ.
е йăлтах хура пĕркенҫĕк витсе хунă. Йĕри-тавра нимĕн те кур-
к. «Умба» çеç хăй тавра çутă пуçтарса пырат. Прахут сăмси
ҫĕрет, шыва ваклат...
— Çил вăйланат, тени илтĕнҫĕ пĕр матрус сасси. Палупă çинҫе
м йăшăлтатма пуçларĕç.
— Çил вăйланат...
Руҫа йертсе пыракан машшинă патĕнҫе ĕçлекенсене «полнăй
тесе сас паҫĕ. Вăл тăвăл çывхарса килнине пĕлтернĕ иккен.
ширсем сасартăк сике-сике тухса палупă çине тулҫĕç. Ҫăнах
л вăйланса килни паллă.

— Тăвăл çыв-ха-рат!—илтĕнҕĕ пĕр сасă.

Тепĕр 10 минутран ахăрма пуçларĕ тинĕс: «УМба»на турпас та пек выҕатма тытăнҕĕç хумсем. Лăплана пуçлавă пирĕн трӳм са тăк тем пулнă пек шавлама тытăнҕĕ. Хăшĕ хăсма, хăшĕ пуç ы нисемпе ахлатма тытăнҕĕç пассашпрсем.

— Иҕук, сана тинĕс çтихнйĕ вăйĕ хăратат пулмалла, кула пуçларĕç мантан Аннапа Ваççа.—Пăхха ес, вĕт йăлт кăвака шуралса кайнă!...

Мĕншĕн кулмалла? Пĕтĕм тинĕс урнă вăхăтра, пĕтĕм пăсс ширсем ахлатса йăнăшнă вăхăтра кулни вырăнлă-и ,вара вăл?! Ку мар хаҕ вилĕм çывхарса килнĕн туйăнат. Хумсем прахута çапа- тинĕсе путарассăн туйăнат. Вĕт хăрушă вăхăт. Пĕлме çук, тен те Амутçен пек пек тинĕсе ӳксе вилме тивет. Тен, пĕлме çук— пире те вунсакăрăмĕш çулта Анкли салтакĕсемпе хĕрлисем çак çапăçнă пек. шывпа çапăçса вилме тивет...

Прахут çинҕе пĕр утăм та утма çук. Прахут пĕрре сăмси ленет, тепре кутăн ывтăнат анҕах. Çил вăйĕ пысăк. Çил вăйĕ та палл[1]) тарана çитнĕ. Хумсем пысăк, хăрушă. Хумсем прахут патне ыткăнса килнĕ пек, хытă килеççĕ. Вĕсем прахут çапăнса пысăкран та пысăк хумсем пулса саланаççĕ. Тинĕс ша Таçт айакра—пĕрре хумсем çинҕе тем çӳлли улăхса, тепре кур айалалла анса выҕакан майак курăнат. «Умбă» унталла шăват. ҕах майак малалла кайнăçем, кайалла тарнă пек туйăнат. Ун п çитиҕҕен палупă çинҕе пăхса пыма çук.—Унта çил, сивĕ. Пите ҕаранмасăр йурлă çăмăр çаптарат. Ух, ку кĕрхи çанталăк!—Ытл тискер, ытла та ним те кăтартмаст. Тарăхтарат вăл çынна. Пра та канлĕ пыма памаст. Ик-виç сехет вăл çаплах прахута сил тăрат, ăна тыта-тыта ывăтма кармашат...

— Прахута ҕарҕĕç, тесе пĕлтерҕĕç, ак. Йакăр йанă. Епĕр рăннă вырăнта тинĕс тарăнĕш çирĕм сакăр меттăр ытларах...

Епĕр палупă çине тухрăмăр. Унта хаҕ çын нумай. Шавл кулаççĕ. Палупă кĕрлет. «Умба» хăйĕн пысăк трупинҕен хуп-хур тĕмпе пăс кăларса çынсен пуçĕсем çине сапа-сапа антарат.

— Тинĕс!.. Тинĕс!—илтĕнет пассаширсем хушшинҕе. Йа пĕĕр сăмах: Тинĕс! Вăл паçăр нумай çынна асăнтарҕĕ пулас, в тĕлĕнтерҕĕ пулас, нумайăшне хăратрĕ пулас. Пассаширсем шинҕе нумайĕшĕ пуç ыратнипе аптранă. Нумайĕшĕ прахут çине нăранпа та палупă çине тухса курайман. Ах, ытла та айван епĕр. Ытла та айван. Ытла та çемçе, ытла та аҕаш. Ав Ва Анна пĕртте ман пек мар. Вĕсем мантан çаплах кулаççĕ.

— Иҕук, ес паçăр хăрарăпа?

— Пит хăрарăм...

— Ес, Ваççа, хăрарăна?..

— Çук, çук! Еп хăраман. Еп вĕт тинĕс çинҕе пĕрремĕш кăна çӳреместĕп... Еп хăраман, ăна ес кăна хăранă...

---

1) Çилĕн ҕи пысăк вăйĕ —12 палл.

Вĕсем кулни ђăн, вырăнлă. Тĕрĕс. Хăрама пире ђăнах та кирлĕ: Вилĕмрен те ан хăра. Савăнса пурăн, савăнса вил. Кĕрешӳ пулпурнăçра, кĕрешӳ. Кĕрешӳрен илемлĕ йапала—урăх çук!..
Ак пирĕн Анна мĕн калат:
— Пăхăр-ха тинĕс хумĕсем çине. Пăхăр. Вĕсем çине пăхма. хăрушă мар, илемлĕ. Анђах çав хумсем çинђе çын пулсан тата. лĕрех пулмалла. Хумсем çынна çапђĕр, ăна хăйсен айне путарђанђах çынни çапах хумсене ытала-ытала иштĕр, иштĕр... Кам. тмĕ ун пек çынна пăхса тăма?.. Вăл вĕт пĕртте хăрушă. с çук, илемлĕ вăл, илемлĕ...
Прахут хумсем çинђе сулланса ик сехете йахăн тăђĕ. Тул кăваа çитрĕ. Тул çутăласса çил те тинĕсе сухаласа ывăнђĕ пулас, ' лăплана пуçларĕ. Епĕр Меçене çитиђђен те шăп выртакан тикураймарăмăр. Кĕрхи çанталăк пире шăп çанталăка курма па-. Йурлă-çăмăр ђарăнмарĕ. Меçене çитес умĕн епĕр çĕр шап-шурă. ъ витĕнсе выртнине куртăмăр. Çĕре курсанах мана Анна йăл ı:
— Куратна ав çĕр, зн хăра тинĕс мар вăл—çĕр, тесе тăрăхласа. ...

Меçене çитсе ђарăнтăмăр....

* * *

Іеçен. Шурă тинĕс оккейана тухнă вырăнта ларакан пĕђĕк. Унта икĕ хăма çуракан савăт ĕçлет. Ĕçлекенсем нумай. Пуін ытла сырйансемпе вырăссем. Тутарсем те пур. Çавсен хушз пĕр-ик самойета та курма пулат.
Зи малтанах паллашнă çамрăк самойет Çтаппан йатлă. Вăл Месавăтра ђылайранпа ĕçлет. Ун йулташĕсем каланă тăрăх вăл нт йуратса ĕçлекен маттур кађђă. Вырăсла аван пĕлет. Ашшĕзем ăçта кайнине маннă. Хăй каланă тăрăх, ун ашшĕсем Оп шынĕсе тухнă вырăналла кайнă пулат...
Іеçенре епĕр ерне ытларах пурăнтăмăр. Меçенре пĕр лайăх лă парттийтсă та, савăт кантурĕнђе ĕçе пĕлекен слушăшђисем к, тенине Арханкĕђскăрах илтсеђђĕ. Вăл ђăнахах та çаплах мĕн. Унта ĕçе пĕлмен çынсем, тата ăçтан килнĕ унтан вырăнăларнăскерсем пырса йăва çавăрнă.
Іеçенре пурăннă вăхăтра пирĕнпе килнĕ Ваççапа каласа ĕненмар ĕç пулса иртрĕ. Унăн хăйĕнђен сакăр çулта килте йулнă : Иван Меçенре савăтра ĕçлет мĕн. Вĕсем пĕр-пĕрне вунă çул и ытларах курман. Пĕр-пĕрне çыру çырман. Пĕр-пĕрен ђĕррине, ıе те пĕлмен.
ıпĕр Иванпа пĕр ирхине хирĕç пултăмăр.
– Йулташ, ес ăçтисем?—тесе ыйтрĕ вăл пăртак калаçнă хыççăн ран.
– Сана мĕн ĕç?—ыйтрĕ Ваççа кулса.
– Çапах, пĕлес килет...
– Аннерен кайса ыйт...

Çапла Ивантан уйрăлтăмăр. Анђах вăл каçпа каллах пирĕн ı çитрĕ.

— Ăçтисем ес, ма каламастăн?—ыйтрĕ вăл каллах Ваççара

— Мĕн ес пит ман çума çыпăçатăн?—терĕ ăна Ваçça.—Ei вăрă-и, йе шулĕк-и?..

— Ес, йулташăм, ахалех ан çиллен. Еп вĕт ахаљ кăна ыйта Сана вĕт ху ăçтисем иккенне калама йывăр мар.

Ваçça кулса йађĕ.

— Мана пĕлес килет пулсан, терĕ вăл.—Еп ђереппăв кĕпе

— Хăш район?

— Пукуславски. Хемăлта йалĕ. Хушамат ман Рухванăв, Ваçça.

— Апла... апла... Епĕр апла, пĕр тăван вĕт...

— Ес... ес... Ес Иван... Иван ес-ши?!

Унтан иккĕшĕ ытакланса ађа пек йĕрсе йађĕç.

Йур çурĕ. Çил çук. Кăшт сивĕтрĕ.

* * *

Еп урампа пынă çĕрте сасартăк икĕ кўлсе тăратнă пăлан ку кайрăм.

— Анна!—кăшкăрса йатăм хам савăнса.—Плансем... Сам сем килнĕ...

Иксĕмĕр те унталла ђупрăмăр. Ик ушкăн кўлнĕ плансем ту. каласа тăраççĕ. Нарттăсем çинђе тийенĕ йапаласем. Унта тир, к Пĕр самойет лавĕ çинђе выртат. Тепри такама хăйне самойет шĕн йатлаçат:

— Самойеђ... самойеђ... Ты вытал, што йа кэкта нипуђ, нипуђ свела... Самойеђ... Кто уттумал.

Вырăсла вĕсем ăнланнăшăн епĕр савăнса кайрăмăр.

— Мĕншĕн есĕр кунта килетĕр?—ыйтатпăр епĕр.

— Как потсему? Покассађ какай самойеђка нарот. И п шхуру... Купить ђто-нипуђ... Шиђ... Ептсана[1]) тата пуђа... (рат пуђа...

Çакăн пек калаçнă хушăра пирĕн пата Çтаппан çитсе тăнă.

— Итле!—терĕ вăл мана васкаса.—Итле. Еп тата виç ı çаксемпе пĕрле ларса кайатăп. Ес килĕшместĕн-и?

— Мĕнле майпа? Ес кунта ĕçлеме пăрахатним вара?

— Пирĕн савăта спвĕтиђђен ремонта ик ернелĕх ђараççĕ.

Епĕр Аннапа иксĕмĕр те савăнса кулса йатăмăр. Самойет çине тинкерсе пăхса тăрат. Лав çинђе выртаканни пирĕн пата ı са пыђĕ.

— Етта твай сопкка?

— Мой.

— Ђђа, ђђа! Ай, хоросса.

— Çтаппан вĕсене хăйсемпе пырас шухăша каласа пıђĕ.

— Хоросса пуђа!—терĕ самойет.

Епĕр вĕсене аллă çухрăма йахăн илсе кайтарма килĕш Йе хамăр йуратнă вырăна çитиђђен...

Виççĕмĕш кун Ваççапа Иванран уйрăлса Меçенрен вакă вăрман
ăх, икĕ пăланпа тăваттăн йур çинђен нарттăпа йĕр туса çурçĕ-
е вĕçтертĕмĕр.

— Йулташусенђен уйрăлнăшăн хуйхăрмастăни?—ыйтрăмăр ха-
хуçаран.

— Насса вĕçте таваришси, вĕçте пут, тесе хуђе вăл...

САМОЙЕТ ЙУРРИ.

Йурт пăлан, йурт хытă, хытă,
Санпала ман пурнăç пытăр,
Санпала тăрантăр хырăм,
Санпала тумлантăр арăм,
Санпала йусантăр çурт,
Йурт планам, йурт!..
Ман çĕршыв кунта пит тикĕс.
Ĕс кунта пуçна ан ус,
Еп сан хуçу ескимос;
Ман лава ес хытă турт,
Йурт пăлан, васкаса та сик ес,
Йурт пăланăм, йурт!..

* * *

Пĕр вăтăр çухрăма йахăн кайсан пĕр уçланка тухрăмăр. Уçлан-
йур тарăн. Йур çинђе мулкађ йĕрри пеккисем палăраççĕ. Кăш
çулсăр-мĕнсĕр вăрмана кĕрсе кайнă пăлан йĕррисем пур. Ан-
ĕсем сайра. Сайра вырăнта анђах...

— Çанталăк сивĕтесрен хăрамастна?—кулса ыйтат мантап Çта-

— Хăрамастăп...

— Ан хăра!.. Ан хăра... Сивĕ пулсан, сивĕ пулат. Ăна та
рса пăх, палласа пăх, унпа пурăнса пăх. Сивĕ те сана мĕне те
вĕренттĕр...

çланкăра пĕр пысăк йурттă курăнса кайрĕ. Вăл шап-шур йурпа
се ларат. Ăна таçта айакра курăнакан йур тĕмисенђен уйăрма та
Ун йĕри-тавра ик-виç парттă лараççĕ, тата лутрарах лапсăркка
ем ђупса çӳрени курăнат. Йурттăран айакрах мар темĕскер
рнисем илтĕнеççĕ. Унта туратлă майракасем урлă-пирлĕ ерсш-
артисем пек пулса, пĕр-пĕринђен уйрăлса ăçта килнĕ унта са-
аççĕ.

ĕсем пăлансем.

пĕр канас шутпа йурттă патнелле сулăнтăмăр. Хуçа пире
н малтанах хăраса кайнă. Çтаппан ăна лăплантарђĕ. Епĕр, вĕ-
н нимле сийен те тăвас çук, терĕ вăл.

– Вăл çапла та, вăл çапла та, тесе çапах хуçа хăй патне
. Вăл пăлансем усракан çын иккен. Ун хăйĕн кăна аллă пăлана
Вĕсен тумтиррисем пурте пăлан тирĕсенђен. Çынни пĕртак
кăмăллăрах. Вăл вырăсла та пăртак ăнланат. Ывăлĕ Архангелђ-
вĕренет мĕн тата. Ун çинђен ђас-ђасах аса илет хăй...

Ку ҫын пире хӑй патӗнҫе выртма ирӗк памарӗ. Епӗр уншӑн
тех те кӑмӑлсӑр йултӑмӑр. Вӑл вара пире пӗр вырӑналла кӑтар
ҫавӑнта куҫса килнӗ самойетсем пур, тесе пӗлтерҫӗ. Епӗр ирӗкс
унталла сулӑнтӑмӑр.

Пӑлан хашлатса йуртат. Малалла йарӑнатпӑр. Хамӑр пурте
хӗрлӗ хӗрелсе кайнӑ, пире сивӗ.

— Мана сивӗ, еп шӑнтӑм,—тет пире Анна.—Ма хуҫа
тиркерӗ-ха...

— Темшӗн тиркерӗ ҫав...

Кулсӑ йаратпӑр. Шӑнсан та кулатпӑр.

Нумайах кайманҫҫӗ ҫӑпах та пӑлан тирӗсенҫен витсе тунӑ
мӑ курӑнса кайрӗ. Инҫе мар ик пӑлан йур ҫавса мӑк ҫисе ҫӳр
Ҫумӑ умӗнҫе пӗр сакӑр ҫулхи аҫа пӑхса тӑрат. Епӗр ҫитнӗ ҫӗре
хирӗҫ пӗр ҫамрӑк хӗр тухса тӑҫӗ. Кайран вӑл Алиссӑ йатлине пе
мӗр. Вӗсем те пире курсан малтанах хӑраса кайрӗҫ. Вара Ҫта
Алиссӑна каллех епӗр нимӗнле сийен те тӑвас ҫуккине ӑнланта
Ӑна илтсен Алиссӑ кулса:—Йурат, йурат! Шӑннӑ пулсан ҫумӑна
рӗр, терӗ анҫах.

Мӗн пек савӑнтармарӗ пулӗ ку сӑмах? Епӗр Меҫенре илнӗ
ласене ӑшӑтса ҫиме лартӑмӑр. Пирӗн хӗрсе Алиссӑпа калаҫу пу
ҫӗ. Алиссӑ сӑмахӗсене Ҫтаппан пире куҫарса та ӗлкӗреймест.
Аннапа Ҫтаппана ыйту ҫине ыйту паратпӑр.

— Мӗн тет вӑл, мӗн тет? Алиссӑ пире пӑхса кулат. Вӑл
тахҫан Меҫенелле пыни ҫинҫен калат мӗн.

— Ма унтан килтӗн?—тесен.—Аннене шеллерӗм тет вӑл. Ун
ше вата Илько уйӑрса йанӑ иккен. Вара вӗсен ҫемйи икӗ
уйӑрӑлса кайнӑ. Алиссӑсен амӑшӗ, шӑлнӗ тата хӑй. Вӗсем ви
Вӗсем хӗрарӑмсем пулсан та ыттисем пекех пӑлан тытса пурӑв

Алиссӑ калат:

— Пирӗншӗн пӑлан пулсан, урӑх кирлӗ мар, самойетсен
ҫавӑ, тет.

Алиссӑ шухӑ, паттӑр хӗр. Вӑл хӑй каланӑ тӑрӑх вунултӑ
Каҫҫа кайманха. Ун пӗвӗ лутра та тӑп-тӑп. Куҫӗсем ҫивӗҫӗ.
сем йалан кулаҫҫӗ. Пӑлан тирӗнҫен ҫӗленӗ кӗрӗке ӑна пушшех
пейлетет. Хитрелетет... Алиссӑна хӗр теме те, арҫын теме те
Ун пурте хутӑш. Вӑл пурнӑҫа пӗртак ӑнланат. Ун амӑшӗ хар
тынҫейрен2) урӑх йапала тытса курман пулсан та вал самой
палламан йапаласене те ҫухлат...

Уйартрӗ. Сивӗ. Ҫил ҫук. Ҫӑлтӑрсем татӑлса анас пек йал
таҫҫӗ. Епӗр пӗррӗмӗш хут «Северное сияние» текен йапалана
тӑмӑр. Уйар пӗлӗт ҫине ҫутӑ ҫулсем тӑсӑла-тӑсӑла ӳкрӗҫ. Ҫав ҫ
пӗр вырӑнтан тепӗр вырӑна куҫкалани ытла та тӗлӗнмелле ҫав. К
ҫав ҫул пеккисем пӗр вырӑнта сарӑлса пӗр пысӑк асамат пек
тӑҫӗҫ.

Ҫакна курсан Алиссӑ амӑшӗ турра пуҫҫапма ларнӑ. Епӗр
кулсӑ йатӑмӑр. Вӑл пире ҫиленсе-и пӗр-ик сӑмах каласа хуҫӗ

ахсене Алиссăран пуçне никам та илтмен. Вара Алиссă кулнă
ех темле салхуланђĕ.

— Сипани вăл,—терĕ Алиççă,—оккеан çинђи пысăк пăрсем çине
л ўкнипе пулат. Пăрсем шукаласа çўрени пĕлĕт çине ўксе, кунта
нат...

— Тĕрĕс! Алиссă тĕрĕс калат!..

— Кала-ха, Алиссă, сирĕн ђăнах турăсем пур-и?

— Атскы[1]).

— Мĕнле йатлă?

— Нума[2]) атски, Ааттам[3]) атски, Çталхван атскы...

Çтаппан хăй йатне илтсен самойетла:

— Çтаппан пур вăл. Ха-ха-ха!—кулса йаđĕ.

* * *

Епĕр самойетсем пăлансене йепле тытнине сăнаса çўретпĕр.
Пăлан курăннă вырăнта йытă та çын анђах. Пăлансем самойет-
пĕр курăнсан нийепле те хăтăлаймаççĕ.

Самойет пăлана курсанах ун патне ђупат. Ытла та тĕлĕнмелле
йетсем хускалкаланинђен! Вĕсем пăлан пĕр-ик утăм сикиђђен
тынçейне хупăрласа илеççĕ. Пăлан хăтăласшăн айаккалла сикет.
х хăтăлмалли çук. Ăна туратлă майракинђен тынçей çавăрса
Çавăнтах пăлан патне пĕр самойет çывхарат. Ыттисем айккинђе
аççĕ. Пăлан антраса сикме пăрахат. Самойет пăлана майракинђен
ăн пăрса ўкерет те—пăлан хатĕр.

Пăлан çĕре ўксенех ун патне çамрăк ađасем ђупса пыраççĕ. Вĕсен
пĕри пăлан урисене тыçейпе çыхат, теприсем пăлан çине улăхса
аççĕ.

Самойет çĕçĕпе пăлан тирне пĕђĕкĕн сўсе, пăлана пырĕ тĕ-
н касат. Пăлан асапланса тапаланат. Ун пысăк хăмăр куçĕсем
куççуљ тухса тулат. Анђах ăна самойетсем сисмеççĕ. Пăлан мĕн
, мĕн вилиђђенех пĕр саста кăлармаст.

Ađасем пăлан вилиђђенех ун çинђе лараççĕ. Пăлан йулашки сыв-
лăпланат ак. Ун куç харшисем хуллен куçĕ çине анаççĕ. Само-
н майраки çинђен тынçейне салтса тепĕр пăлан патнелле ђупат...

— Пăх, ха, пăх, Иљук!—кăшкăрат мана Анна.—Пирĕн Алиссă-
в пăлан тытнă!...

Епĕ, унта кунта пăхкаласа тăраканскер, Анна патнелле утрăм.
ă, Çтаппан тата Алиссă шăлнĕ пăлан сĕтĕрсе килсе ђумă умне
рĕç. Палантан пĕр ђарăнмасăр йун кайат. Йун йур çине хĕретет.
уна çийет, ăна шăнта-шăнта çăтат...

лиссă амăшĕ пăлан тирне сўме тытăнђĕ. Вăл ăна хăвăрт та
йлĕ тăват. Тирне сўнĕ хыççăн пăлан ăшђиккине кăларат, унтан
какайа вакласа çиме хатĕрлет. Сўнĕ тир çине йун пуçтарат,
вакласа хурат...

пĕр ун çине тĕлĕнсе пăхса тăратпăр. Аннапа шăппăн кăна кала-
 вĕсем çинђен. Анђах Алиссă амăшĕ пирĕн çине çаврăнса
кмаст. Вăл ĕçлет, ĕçлет...

Ҫиме ларҫĕҫ.

— Есĕр пирĕнне ҫиместĕр, тет Алиссă кулса.—Есĕр купа тиркетĕр...

Вĕсем ҫĕр какайа йун ҫине пусса ҫийеҫҫĕ мĕн. Ҫиме нумай та хăвăрт ҫийеҫҫĕ. Тăраннă хыҫҫăн йулашкинҫен пӳрнисем ҫумне ҫыпҫăннă йуна ĕмсе ҫăтаҫҫĕ. Пит куҫĕсем йунпа ҫыпҫăнсах йулаҫĕ. Вĕсене ҫăвас шухăш ҫук...

Ҫтаппан пĕрлех ларса ҫирĕ. Пире те хăналантарасшăн пулҫĕҫ те, епĕр килĕшме пултараймарăмăр.

Епĕр Ҫтаппанпа вĕсем ҫисе тăраннă хыҫҫăнах ҫумă айккинелле утрăмăр. Аннапа Алиссăна тем пулнă—пиртен кулаҫҫĕ. Хĕрарăм пур тĕлте те хĕрарăмах ҫав. Самойет хĕрĕсем те арҫынтан кулма хытă йуратаҫҫĕ мĕн. Вĕсем арҫын тумтиррине сăнас тесен каҫҫах кайаҫҫĕ.

Ак пирĕн Алиссă. Вăл хĕп-хĕрлĕ питлĕ, сывă. Ун питĕнҫен хаҫ-хаҫ йун сиксе тухас пек. Ҫапах ун тутине йунпа хĕретес йăла пур. Тутисем ун ҫавăнпа хитре, илемлĕ.

Алиссă нихҫан та пит ҫумаст. Ҫапах та ун ӳҫĕсене таса мар темо ҫук. Пĕр тар шăршипе, ҫу шăрши тата вăхăтпа ҫын орканисăмĕнҫен тухакан усал шăрăш анҫах ăна тасамарлатат. Анҫах ăна Алиссă сисмест, вăл ун пек йапаласенҫен хăнăхнă пулас, вĕсене хисеплемест те пулмалла.

Тумланма Алиссă йуратат. Ун йаланах кĕрĕк ҫинҫен симĕсрех тĕслĕ пиҫихи ҫыхас йăла пур. Ҫав пиҫихи ҫинҫе вара темиҫетӳмме пекки. Тата вăл йаланах кĕрĕкне ҫĕленĕ ҫухне темиҫе аркăллă, темиҫе тĕслĕ тиртен тума тăрăшат. Урине ҫĕркенĕ ҫух темиҫе тĕрлĕ лентăсемпе ҫыхса пĕтерет.

— Йулăр,—тет вăл пире йаланах.—Йулăр пирĕнпе пурăнмă... Пĕрле пурăнар. Пирĕн пурăнăҫа йуратăттăр пулсан, пĕрле ҫӳрер...

Епĕр ăна хамăр паталла ҫĕнсен:

— Сирĕн патăрта пурăнма пĕлместĕп, тет.

Ҫывăрма выртаҫҫĕ. Пурте кĕрĕксене хывса ҫаппа-ҫарамас тирпе хупланаҫҫĕ. Ҫумăран пăс пăсăрланат. Ҫумă палăрми пăспа хупланса ларат. Унта пăҫăланат. Хуллен-хуллен тумласем ӳкме тытăнаҫҫĕ. Вăл тумламсем пит ҫине ӳкеҫҫĕ. Самойет ăна сисмест. Ун ҫумĕнҫе выртакан йытă анҫах ăна ҫулат. Самойетсем тĕлĕкпе аташаҫҫĕ, тутисене выҫатаҫҫĕ.

Ҫывăрнă ҫухне анҫах вĕсен шухăш ҫук. Вĕсен умĕнҫе ҫывăрса вăрансанах—пĕр пек пурнăҫ. Ҫуралса вилиҫҫен тăсăлакан пĕр-пек—ҫапах та хаклă, хăйсемшĕн илемлĕ пурнăҫ. Пĕр пек ҫулла, пĕр пек хĕлле...

Ҫулла ирĕлсе, ăшăнса ҫитмен ҫĕр, йешĕрсе ҫитмен йакĕл*) йешерсе ҫитмен туна пек йăвăҫсем, тата ăшăнса ҫитмен кӳлĕсем, тĕмескесем. Тата пĕртен пĕр тĕслĕ апат, пĕртен пĕр тĕслĕ тумтир, пĕртен пĕр тĕслĕ ҫурт. Пĕртен пĕр пăлан.

Хĕлле улакан, йăнăшакан ҫанталăк. Улакан, йăнăшакан ҫил. Куҫпа пăхма ҫук тăмансем. Куҫпа пăхма ҫук сивĕсем. Кунта та пĕртен пĕр пурнăҫ пăлан...

Вӗсен пурӑнмалла, сывламалла, пурнӑҫран апат тытмалла, пурнӑҫпа ҫапӑҫмалла...

* * *

— Самойет! Ой, самойет! Мӗн ђул ҫӗнӗ пурнӑҫ кӑтартрӑн ес мана? Мӗн ђул савӑнтартӑн? Ман куҫсем сана курсан хытӑ, хытӑ савӑнђӗҫ. Есӗр пурнӑҫпа кӗрешнн вӑл тӗлӗнмелле кӗрешӳ. Вӑл сире пӗрремӗш хут куракан ҫынна хытӑ савӑнтарат. Сире курсан ҫыннӑн ӗмӗр-ӗмӗр пурӑнас килет. Сире пӗрремӗш хут куракан ҫын ватӑ пулсан,—ма еп кайарах ҫуралман-ши?—тесе кӳренет. Ҫамрӑк пулсан, тата темиҫе ҫул, пурӑнӑттӑм, тесе мухтанат. Еп вӗт хаљ ҫамрӑк!.. Самойет, еп сан патна килесшӗн татах ҫунатӑп. Сирӗн пурнӑҫа лайӑхрах пӗлес тесе тӑрӑшатӑп... Есӗр те ак пӗр тӑват-пилӗк ҫултан пирӗнпе ҫыхӑну тытма пуҫлӑр, пирӗнпе пӗрле пурнӑҫ тӑвӑр. Вара пурте пӗрле утӑпӑр, малалла утӑпӑр!—тесе мухтат Ҫтаппана Анна.

— Тӗрӗс, Анна, тӗрӗс...

Самойетсем патӗнђе епӗр виҫ талӑк ђухлӗ пурӑнтӑмӑр. Вӑхӑт иквиҫ сехет пек иртсе кайрӗ.

Пӗр ӑшӑрах вӑхӑтра Алиссӑ икӗ пӑлан кӳлсе тӑратнӑ. Ун патне пырса тӑратпӑр.

— Тепӗр пӑлан кӳлер-и?—ыйтрӗ Ҫтаппан.

— Мӗншӗн?

— Ӑмӑртмалла ђуптаратпӑр...

Алиссӑ килӗшрӗ. Пӑлан пур, Харей*) те пур. Анђах нарттӑ ҫук. Хуйха ӳкрӗмӗр. Вара Ҫтаппан ҫапах май тупрӗ. Епӗр виҫҫӗн Алиссӑ, Анна тата епӗ нарттӑ ҫине хӗсӗнкелесе лартӑмӑр. Ҫтаппан пӑлан хӳринђен тытса пирӗн хыҫран йӗлтӗрпе хӑвалама килӗшрӗ. Пӑлансем йурта пуҫларӗҫ. Ҫтаппан пӑланӗ йӗркеллӗ пынӑ ҫӗртех Ҫтаппана йур ҫине ӳкерсе хӑварнӑ. Хытӑ кулса йатӑмӑр. Ҫапла кулнӑ ҫӗртех Алиссӑ амӑшӗ пире йатлаҫма тухнӑ тата.

— Антсы! Антсык! [1]) Ептсан! Ептсан! [1])—кӑшкӑрат вӑл. Вӑл Алиссӑ шӑлнӗне ђӗнет мӗн. Анђах епӗр ӑна пӑхмастпӑр та. Пирӗншӗн вӑйӑ пултӑр, пирӗншӗн савӑнӑҫ пултӑр...

Калама ҫук сивӗ. Епӗр пурнакан вырӑн пӗр сас-ђӗвсӗр выртат. Сайраран ҫеҫ таҫтан самойетсем пӑлансемпе иртсе кайаҫҫӗ. Плансене самойетсем ирӗксӗр харейпе ђышса малалла ђуптараҫҫӗ. Пӑр пек хытса ларнӑ йур тӑрӑх нарттӑ выљаса анђах пырат. Сивӗ хӗрӗх сакӑр кратӑс. Тулта сӑмсапа та ҫӑварпа та сывлама ҫук. Сурђӑк ҫӗре ӳкиђђен шӑнса хытат.

Епӗр Алиссӑсен ђуминђе выртатпӑр. Ҫтаппанпа Алиссӑ таҫтан вак туратсем пухса килђӗҫ. Вут хутӑмӑр. Ман пуҫа пӗр-пӗр йапала ҫырас шухӑш кӗнӗ. Хам алла ӑшӑта-ӑшӑта сӑвӑ ҫыратӑп.

„Пӑх-ха, пӑх! Кунта куратна,
Кунта вӗт аслӑ шӑннӑ хир!
Пайан кунтан ана йуратрӑм—
Мана вӑл пађӗ пӑлан тир;

Мана вӑл пађӗ пысӑк ҫӗлӗк,
Аш тир пӗркерӗ ман ҫийе.
— Пиншак ҫинђен тӑхӑн-ха кӗрӗк, —
Тесе йӑл кулђӗ самойет.

Пĕҫҫен ларан пĕр ҫывăх йуртта,
Пĕркенҫĕ пăрла шерепе.—
Сивĕ пирки унта еп выртрăм,
Унта еп выртрăм кĕрĕкпех.

Пăх-ха, пăх! Йепле йур урлă,
Сиксе йуртаҫҫĕ ик пăлан,
Ҫавăн ҫинҫен ман пулнă хурлăх,
Ҫавна курасшăнҫĕ йалан.

Сан та, ман та пĕр йевĕр сасă,
Пĕр йевĕр шуйĕ... хĕри, каҫҫи
Лартасҫă те пăлан тыгсассăн,
Йалта йарасҫĕ катаҫҫи...

Пăх-ха, пăх! курар пер хушă,
Пăлан ывăннă ав хашкай.
Харей ăҫта? Ăҫта ҫĕн душă?—
Пĕрре ҫапам еп ҫăвашла

Шăннă хир! Куратна есĕ,
Манатна есĕ ҫак ҫĕре?—
Ку вырăна тепре килсессĕн
Ăш тир пĕркет вăл ҫĕнĕрен!

Аннапа Алисса манран кулаҫҫĕ, Куҫарса муталаннатпăр.

— Шăннă хир, мĕншĕн шăннă хир?—ыйтат манран Алисса.

— Мĕнщĕн тесен, кунта ҫĕр шăнсах выртат, пирти пек ҫеҫексем, ҫеҫкесем ўсмеҫҫĕ.

— Епĕр ним те пĕлместпĕр, тет Алисса,—пирĕн сирĕнпи пек йурăсем те ҫук!..

... Пăлан йуртат.
Пирĕн ҫинҫен кайăксем вĕҫсе иртсе кайаҫҫĕ.
Пирĕн ҫийе йăвăҫсем тайăлаҫҫĕ.
Пирĕн пăлан йуртат...

Алисса ҫакăн майлă сăмахсемпе йурă йурлат. Ун мĕн пур йурри ҫакă. Вăл урăх йурă илтмен, пĕлмест те.

Анҫах хăй мĕнле кĕвĕпе йурă йурласан та вĕсем лайăх тесе те наҫар тесе те тĕлĕнмеҫҫĕ. Хăт мĕнле хитре пултăр, хăт мĕнле илемлĕ пултăр...

Ăҫта кунта йурăсем, ҫеҫексем ҫинҫен калаҫма? Вăл кунта кирлĕ мар пултăр. Самойетсем ăна пурпĕр йуратмаҫҫĕ пек. Вĕсене унпек илем те кирлĕ марп тен...

Ҫĕр тăп-тăрă уйар тăрат. Ҫăлтăрсем пĕр вĕҫĕмсĕр сиксе выҫаҫҫĕ. Сивĕ. Унта-кунта йывăҫсем шартлатса ҫурăлни илтĕнет. Кас-кас таҫта пăлансене хăваласа кăшкăрни, нарттăсем йурпа ҫĕриклетсе ҫухăрни сывлăша ҫурса кайат. Ҫупакан плансем, ҫупса пынă ҫух ҫăварĕсенҫен сывлăш кăларса, сивĕ сывлăша тата ытларах шуратаҫҫĕ. Ҫумăсем таврашĕнҫе пăлансем йур ҫакаласа мăк ҫисе ҫўренисем курăнаҫҫĕ. Ҫумăсенҫе самойетсен шăп калаҫăвĕсем илтĕнеҫҫĕ. Хушăран «Ҫурҫĕр кăвакхуппийĕ «Северное сияние» текен, ҫурҫĕрте уйартарах каҫсенҫе курăнакан ҫутă ҫумăсене йухан ҫутăпа витсе хурат. Хуллен-хуллен пăщăлтатат тунтрă...

1929 ҫ.

Харей—пăлана йурп хăвалама йатарласа тунă вăрăм патак. **Тынҫей**—пăлансене хупăрласа тытмалли каптра. **Атскы**—пур (есть). **Нума, Ааттам**—турă йаҫĕсем. **Йакĕл**—пăлан ҫийекен мăх. **Аптсы**—ывăлăм. **Ептсан**—аҫам.

ИССАЙЁВ МЁТРИ (АВРАЛЪ)

ÇЕРКЕЙ ЙАЛАВИН

«Криттĕкăн тĕп сатаѢĕ—илемлĕ происветĕнин сотершанине формине ăнлантарса парасси».

«Пролеттари литтераттуришĕн» 23 стр.

«Итейлă сотершанисĕр хутошĕствăллă происветени пулма пултараймаст».

Плеххандв.

Унăн ĕмĕрĕ кĕске пулѢĕ, анѢах тăван литтераттурăра нумай вăхăт ççлеймен пулсан та, вăл кĕске вăхăтрах (4—5 çул хушшинѢе) паллă илемлĕ происветенисем, криттĕклĕ статйасем çырса хăварѢĕ. Çавăнпа нимнле криттĕк та, литтераттурă историне çырнă Ѣух, унăн пуйан пултаруллăхĕ урлă, унăн хĕрÿллĕ статйисем урлă каçса кайма пултараймаст.

Вăт мĕн интереслентерет унăн пултаруллăхĕнѢе: вăл хăй пуплитсислă—криттĕкле статйасенѢе çырса кăтартнă тĕп шухăшсене хăйĕн илемлĕ происветенийĕсенѢе пурнăçа кĕртсе пыѢĕ, калавĕсене повĕçĕсене хăйĕн криттĕкле статйинѢи шухăшсемпе тĕрĕслесе пыѢĕ. Çавăнпа пирĕн Ѣи малтан унăн криттĕклĕ статйисене тинкĕрсе, тĕрĕслесе тухма тивет. Мĕнле ăнланнă вăл литтераттурăна? ПуринѢен ытла мĕншĕн тăрăшнă? Мĕнпе, тата мĕншĕн кĕрешнĕ? Урăхла каласан, пирĕн литтераттурăна мĕнле çулпа йарса, вăйлатма тăрăшнă?

1930-мĕш çулта Ѣăваш кĕнеки уйрăмĕ унăн криттĕклĕ статйисене пухса «Пролеттари литтераттурĕшĕн» йатлă пĕѢĕк кĕнеке пиѢетлесе кăларѢĕ. Унта Иссайĕв Мĕтри тăван литтераттурă сатаѢĕсене йепле ăнланни, вăл мĕнле шухăшсемпе, тата мĕншĕн кĕрешни, кашни вулаканах пит аван курăнса тăрат. Тăван литтераттурăн уи Ѣухнехи сатаѢĕсене тĕрĕс ăнланнă писсаттĕл Иссайĕв; литтераттурă, криттĕккă хĕçпăшалне ăсталла ѣамаллине, литтераттурăна мĕнле çулпа илсе пымаллине аван пĕлнĕ вăл—пирĕн хастарлă криттĕк.

«Пирĕн шухăшпа, илемлĕ происветенин сотершанийĕ—вăл итеолоки, происветени маттериалĕнѢе панă итеолоки» тесе астутарат вăл мыта асăннă кĕнекинѢе (12 стр.) «Класлă опѢĕстврăри искуствăна клас çынни тăват, мĕншĕн тесен клас тулашĕнѢе тăракан опйективисăмлă çын çук, тет тепĕр тĕлте (14 стр.)». Искуствăри пурнăç вăл—опѢĕствăри çын пуçĕнѢи итеолокиллĕ присмă витĕр хуçăлса тухнă пурнăç. Çавăнпа илемлĕ происветенин сотершанийĕ те «ахалѢ» пурнăç мар, итеолоки пулса тăрат (18 стр.).

«Итейла сотершанисĕр хутошĕствăллă происветени пулма пултараймаст»—килĕшет вăл Плехханăвпа. (20 стр.). «Çавăнпа епĕр: литтераттурă вăл ахалѢ пурнăç кăна мар, опѢĕствăри пурнăç, классен пурнăçĕ, вăл çеç те мар, тата классен кĕрешĕвĕнѢи орути, тетпĕр» (26 стр.). Тепĕр çĕрте вăл хăй шухăшне

тата тепĕр хут уҫҫăн астутарса акă мен ҫырат: «Искуствă искуствăшăн кăна ан пултăр, пурнăҫшăн пултăр, пурнăҫа лайăхрах оркансатсилеме пулăштăр. Искуствă уттилитарлăхне епĕр, комуниссем, шухăшласа кăларман, вăл ĕлĕкех ҫавăн пек пулнă, халҗ те ҫавах» (27 стр.). «Искуствă пирĕншĕн пурнăҫ кăна мар, **ăна улăштарма пулăшакан йапала та пулса тăрат» (28 стр.).**

Пролеттариллĕ литтературă пуршуйсен (?!) итеолокийĕпе кĕрешес ҫĕрте, кивĕ тĕнҗерен йулнă йăласене пĕтерес ĕҫре, ҫĕнĕ пурнăҫăн никĕсне ҫирĕплетсе пырас ĕҫре—җулҫурт туна ҫĕрте җемĕнт кирлĕ пекех **пиҗĕ кирлĕ вырăн йышăнса** тăрат. Литтературă пит кирлĕ вырăнта тăрат пулсан, ун ҫине пирĕн ытларах ҫаврăнса пăхмалли пуллах. (40 стр. «Поэтсемпе поеҫи ҫинҗен» статйа). Ҫав тĕрĕс маркҫисла шухăша вăл кĕнеки пуҫламăшĕнҗен пуҫласа мĕн пĕтиҗҗенех, кашни странитсăра пекех астутарма ывăнмаст. Конкретлă, уйрăм маттериал илсе, ăна «тĕшлесе» тухса аналĕс пана статйа пит сахал унăн, вăл маркҫисла криттĕкăн тĕп шухăшĕсене сарма тăрăшат, ҫавăншăн кĕрешет, «и с к у с т в ă—и с к у с т в ă ш ă н» текен Фетăрăвсемпеле. Ҫавăнпа вăл тĕп шухăша темиҫе хут тĕрлĕ пуплевсемпеле каласа ăнлантарма тăрăшат. Епĕр те, вăл мĕншĕн тăрăшнине, литтературă политтĕкне йепле ăнланнине кăтартса, ҫутатса парас тесе, «җитаттăсем» ытла та нумай ҫырса илтĕмĕр.

Уншăн вулакан пире ҫиленмĕ тетпĕр, мĕншĕн тесен вăл җиттаттăсем» Иссайёв Мĕтри литтературăна йепле (тĕрĕс) ăнланнине, вăл мĕншĕн тăрăшнине аван кăтартса параҫҫĕ, ку пĕрре, иккĕмĕш—тĕрĕс шухăшсене темиҫе хут асăнтарни—уссинҗен урăххи нимĕн те пулас ҫук. Асăннă шухăшсене тĕрĕс терĕмĕр, вĕсем тĕрĕсне те тĕрĕс, анҗах кунта Иссайёв Мĕтрин тĕрĕс мар, йăнăшрах шухăшсене те пытарса хăварас мар тетпĕр. Пролеттари литтературĕн ҫав тĕри, «пĕтĕм җун хавалĕпе тăрăшса» вăл хăш-җухне ытлашши «тăварласа» шывĕпе пĕрле аҗине те сирпĕтсе кăларат.

«Җăваш илемлĕ литтературине пролеттариллĕ сотершанипе тултарса, пролеттарилле тум (Курсив пирĕн. Ҫ. И.) тăхăнтарни ăна пăҗлантармаст, тата ҫивĕҗ җĕлхеллĕ, вирлĕ опрăслă, етеме ҫĕнĕ хăватпа ҫунатлантаракан сотершанилле литтературă тума пулăшат, җăваш литтературине калама ҫук пуйанлатса, ăна тĕлленмен виҫене хăпартса йама пултарат (11-мĕш стр.). «Литтературă хресҗен тирне сӳсе пăрахни, пролеттари питне тăхăнтарни пулмалла халҗхи вăхăтра (10 стр.). Пирĕн литтературăн формийĕ те сотершанийĕ те **пролеттарилле** пулмалла (12 стр.).

Кунта пирĕн нумайрах җаранса тăма тивет. Ку статйана вăл (полемĕклĕ статйа) Фетăрăвăн «Җăваш литтературине пăҗлантармасăр, унăн хресҗен питне сĕвеймĕн» тенĕ йăнăш шухăша хирĕҫ ҫырнă. Тавлашуллă статйара камăн та пулсан «пĕр хĕрнелле парăнса кайас» хăрушлăх йаланах пулат. Ҫавăнпа йепле хĕрсе тавлашас тесен «вĕҫне-хĕрне пĕлсе» астуса тăмалла. «Хайсен шухăшĕсене тĕрĕсе кăларас тесе, вĕсем иккĕшĕ те йăнăшаҫҫĕ. «Җăваш литтературине пăҗлантармасăр, унăн хресҗен питне сĕвеймĕн (?!)—тесе такама хăратат Фетăрăв. «Пирĕн литтературăн формийĕ те сотершанийĕ те пролеттарилле» пулмалла—тавăрса калат Иссайёв ăна хирĕҫ. Кунта ак ҫакна астумалла: «хресҗен, хресҗен» тетпĕр, анҗах хресҗенĕн пиҗĕ пĕрре ҫеҫ мар, иккĕ, **йалта кулак та тата колхосра ĕҫлекен җухăнпа патрак та пур.** Малтан пыракан җухăн хресҗенсен, колхоҫнĕксен шухăшĕсене, вĕсен итеолокине тейĕпĕр, тĕтĕрĕсрех каласан **хресҗен опрăсĕсемпе, хресҗен сăмахĕсемпе** ҫутатса, кăтартса

пама, вĕсене илемлĕ литтераттурăпа пролеттари çулĕ çине илсе тухма йурати çуки? Йурамаст тесе никам та калама пултараймаст. Анђах вăл мĕнле формă пулат? Пролеттариллĕи йе урăхлаи? В. Краснăвăн «Тăвалла» мĕнле опрăссемпе, мĕнле формăпа çырнă. Йе калăпăр, Патман «Мĕншĕнне» Елкер «Хĕнхур айĕнђе» поемине мĕнле опрăссемпе, мĕнле ђĕлхепе çырнă? Вĕсем пролеттари литтераттурин йе пуршуаллă литтераттурăи? Вĕсем пуршуаллă литтераттурă тесе никам та калас çук. Апла пулсан «хресђен питне» (мĕнле хресђен(?) кăтартакан происветени те пролеттарилле пулма пултарат. Çав вăхăтрах тата, **хресђен опрăсĕсемпе хресђен ђĕлхипе çырнă,** пролеттарилле сотершаниллĕ «происветени те пролеттарилле происветени пулма пултарат. Тĕрĕссипе вăл çапла та, ăна епĕр, хамăр практĕкра кашни утăмрах куратпăр. Çапла ĕнтĕ, Иссайĕвăн «пирĕн литтераттурăн **формийĕ те, сотершани** те пролеттарилле пулмалла» тени тĕрĕс мар. Çавăнпа вăл, тепĕр çĕрте хăйех, иккеленсе пулас, «ђăваш литтераттури пролеттарилле сотершенилле, хресђен формилле пулмалла тени тĕрĕс пулсан та, вăхăтлăха кăна тĕрĕс» тет. Мĕнђул вăхăтлăха пулассине кунта шутласа тăмăпăр, анђах хресђен пурнăçне (ђухăнпа вăтамĕннеи, патракăннеи йе кулаканнеи? Ç. И.) хресђен **опрăсĕсемпе** хресђен ђĕлхи çаврăнăçĕпе кăтартса, ĕçхресђенне ăна сотсиалисăм çулĕпе йертсе пыракан происветенисем пирĕн пурах. Унпала ђăваш литтераттури пĕртте пăђланмаст». Çав вăхăтрах фапрăк савăт пурнăçне, **хула опрăсĕсемпе, хула сăмахĕсемпе** кăтартса паракан происвăтствăллă происветенисем сахал мар пирĕн. «Киввипе çĕнни» В. Красновăн «Шахтор »—Ђалтăнăн, «Савăт шавĕ» Уйăп Мишшин, «Авто-савăт» çавăннах . Асăннă происветенисем (вĕсем тата ытти нумай, кунта пурне те шутламарăмăр вырăн сахаллипе) пирĕн литтераттурăра пурте пролеттарилле происветенисем литтераттурă вăл? пуршуаллăн пролеттариллĕи? Акă мĕн пулатпăр епĕр Вырăссен паллă писсаттĕлĕн Панферввăн «Бруски» йатлă романне илĕр, мĕнле формăпа, мĕнле опрăссемпе, мĕнле сăмах çаврăнăçĕпе çырнă ăна? (Ун пуçĕнђи шухăшсем ђăх навус ђакаланă пек пăтранаççĕ» йе «Çĕнĕ хыпар хывăх- пек вĕçсе саланђĕ йала» тесе çырат вăл). Мĕнле литтераттурă вăл? пуршуаллăи пролеттариллĕи? Акă мĕн вулатпăр епĕр кун çинђен, итлĕр:

„Все более широкие, все более многочисленные **передовые слои крестьянства тянутся теперь к новому идеалу, переходят на позиции пролетариата.** Настроение вот этих крестьян и выражает в своем творчестве Ф. Панферов. Он их представитель в художественной литературе, он вырос на этой социальной базе. **Он усвоил себе социалистические идеалы пролетариата и несет их через свое творчество в крестьянские массы"** „Бруски" умсăмахĕ йе тата: „Большинство писателей СССР **материалы** для своих произведений **черпает из деревни.** Писатели эти, по-своей идеологический—творческой установке, неоднородны, **как неоднородно по своему социальному составу само крестьянство. И деревенская баднота и сельско-хозяйственный пролетарий имеют своих отобразителей в художественной литературе** между тем критики и историки литературы, чуждые марксистскому методу в литературе, продолжают по традиции говорить о писателях из народа вообще, именуя крестьянским **одинаково** и **махрового певца кулачества и пролетарского писателя деревни,** что явно не верно по существу". („О крестьянских писателях" сборник 146 стр.).

Иссайĕвăн çӳлте асăннă кĕнекинђе çуррине йахăн (28 стр.) çавăн çинђен çырнă, çавăнпа кĕскен те пулин ђарăнса тăрас терĕмĕр.

«Шухăша илемлĕ литтераттурă калăпне кĕртесси йывăр ĕç» иккенне те аван пĕлет Иссайĕв. Ун çинђен те вăл пĕр хут çеç мар, **темиçе хут астутарнă «Просветени технĕккă йенђен те, ăшђикĕ йенђен те тĕплĕ тунă йапала пулмалла»** тет вăл кĕнекинђе (45 стр). вăл шухăша хирĕç нимĕн те калама çук, мĕншĕн тесен вăл тĕрĕс шухăш.

Илемлĕ литтераттурăн вăл вулакансене интереслетĕр тесен, илемлĕх кирлех. Малалла епĕр Иссайĕв Мĕтри хăй шухăшне илемлĕ литтераттурă калăпне йепле кўртсе пыни çинђен, унăн калавĕсемпе повĕçĕсенђе мĕнле шухăш ђи малта тăнипе тишкĕрсе тухăпăр.

Иссайĕв нимрен ытла просăллă происветенисем (калавсем, повĕçсем) çырнă. Вĕсенђе пуринђе те тĕп шухăш **йалти клас кĕрешĕвĕ, краштăн вăрçи, киввипе çĕнĕ пурнăç,** анђах просăпа çырма пуçлиђђен вăл сăвăсем те çыркаланă. Пиђетлемен сăввисем çинђен калаçса тăмăпăр. «Сунталăн 1925-мĕш çулхи 3—19-мĕш номĕрĕнђе унăн» «Йуратрăм» йатлă сăвă пиђетленнĕ. Паллах ĕнтĕ, ун ђухне литтераттурă ĕретне хаљ çеç кĕнĕскер, çамрăкла клас кĕрешĕвĕн «мехханĕкне« кирлĕ таран пĕлеймен вăл. Кайарахпа хăйĕн просăллă происветенисенђе клас кĕрешĕвĕ çинђен, краштăн вăрçи çинђен ытларах çырнă пулсан, малта пыракан хресђенсен тĕп шухăшне, вĕсен ĕмĕтне кăтартса пама тăрăшнă пулсан («Çулăмри йал» «Лисук ђăптаçă», «Çĕнелнĕ йăх» спорнĕк, тата ытти те) хăйĕн малтанхи происветенисенђе ыраш пуссине йуратнине, савнипе йунашар тăрса ŧырă вырнине кăтартса парасшĕн».

Йуратрăм пуљ çав
Ыраш пуссине,
Курасах килет
Хăватлă хумне,

Сави те санпах
Вырат йувашар.
Кĕлти те тапах
Тулат йулмасăр.

Ун ђухне вăл хăйĕн тĕрĕс çулĕ просăпа криттĕккăра пулассине тавçăрса илеймен, анђах çав пĕђĕк сăвăра та унăн **илемлĕх сисĕвĕ** пурри палăрат.

Йăлтăрти хĕвел
Хĕртет пурне те.
Вăрттăн та вĕттĕн
Ђĕптет ĕнсерен.

Выљђах, çурла,
Выђасам, савăнăç,—
Кунта каçалла
Тухтăр ана вĕç.

Пĕр пĕрне вĕсем иккĕшĕ те тăрăшса ăмăртулла ĕçленишĕн йуратаççĕи тен?

Анук кĕлтиве
Пĕшкĕнсе çыхат;

Куçĕпе мана
Кулса калат.

Çапах та сăвăç çулĕ унăн пулман, вăл хăйне просăра аван палăртрĕ. Ăна епĕр вăл çамрăк ђухне литтераттурă çине мĕнле пăхнине литтераттурăна мĕнле ăнланнине кăтартма çеç асăнтăмăр.

Ку сăва пиђетленĕ хыççăн ђылай вăхăт (икĕ çула йахăн) вăл илемлĕ происветенисем çырни палăрмаст. «Çамрăк хресђен» хаçат ретактăрĕ пулнипе, вăхăт çуккипе, тата хăйне литтераттурă ĕçне хатĕрленнипе пулас, вăл вăхăтра Иссайĕв хаçат статйисенђен пуçне урăх нимĕн те çырман. Çав çулсенђе пит нумай вулађђĕ вăл, йаланах ун аллинђе кĕнеке шурнал пулђĕ вăл вăхăтра. Илемлĕ литтераттурă ĕçĕ çăмăл ĕç марне малтан, çырма пуçлиђђен, авангарах вĕренмеллине аван пĕлеђђĕ вăл.

1927-мĕш çулта «Сунталăн» 7—8-мĕш номĕрĕнҫе унăн «Рапфак хĕрĕ» йатлă калавĕ пиҫетлеисе тухрĕ. Çав илемлĕ просветенипе Иссайĕв илемлĕ литтераттурăра ĕçлеме пултарнине аван кăтартса паҫĕ. Ун çинҫен криттĕксем калаçма пуçларĕç.

Кĕске каласан «Рапфак хĕрĕн» сотершанине çакăн пек: Çемен Каврилăв (калавăн тĕп керойĕ), типпокрафи çумĕнҫи комсомол йаҫейккин çекреттарĕнҫе ĕçлекенскер, йала ватă амăшĕпе шăлнĕне курма отпăска таврăнаť. Ăна амăшĕ пырсанах хăйĕн нушаллă, хĕн пурнăçи çинҫен, çитмен пурнăçĕ çинҫен тарăхса каласа параť, хăй вăл ватă. Аслă ывăлĕсем, Йакурпа Иван, иккĕшĕ те уйăрăлса тухса ватă амăшне нимĕнсĕрех хăварнă.—Йулашки пĕр михĕ çăнăха илсе тухса кайрĕ» тет амăшĕ Иван çинҫен тарăхса. «Çитменни çине тата уйри тырра пĕр пек уйăрса памарĕ» тет вăл—икĕ çĕмел таçта кайса кĕҫĕç... Амăшĕнне вăрларĕ».

Урăхла каласан Çемен амăшĕ виçĕ çитĕннĕ, вăй питти ывăлĕсем пур çинҫе пĕҫĕк ывăлĕпе—Йармушпа çав тери нушаланса пурăнаť.

— Пире Йармушпа иккĕне нумай кирлĕ мар, çăкăр тăвар пулсан, расхутне тытсан, санран урăх нимĕн те ыйтас çук епĕр терĕм—каласа параť амăшĕ Çемене.

— Сире шуйттан карланкисене тăрантиҫҫен йута кайса парам—тесе алăка шалт! хупса тухса кайрĕ—тарăхаť вăл.

Çеменĕн ватă, йуратнă амăшне шелленипе кăмăлĕ хуçăлаť.

— Курни илтни ман ҫĕрене пĕтĕмпех хускатса йаҫĕ. Тӳсеймерĕм, кăмăл хуçĕлҫĕ» тет Çемен.

Мĕн «курни» çинҫен калаť вăл кунта?

— «Пахҫа картисем ватăлнă çын пек туйаланнă. Сарайăн улăм витнĕ тăрри темиçе çĕртен шăтнă. Кивелнĕ пӳрт тăрри виçĕ çул хушшинҫе малалла ӳпĕнни тӳрех куç умне пулҫĕ».

Ватă амăшĕ нушаллă пурăнни куçа курăнса тăраť, вăл хăй те пулăшманшăн аҫисене çиленсе вăрçаť. Çемен тарăн шухăша кайаť.

— Ман кĕссере йаҫҫейккă укçи мĕнĕпе утмăл тенкĕ укçа пурҫҫĕ. Пӳрте кĕтĕм те аннене аллă тенкине кăларса тыттартăм» тет Çемен.

Çапла вăл ватă амăшне хĕрхенсе йаҫейккă укçине вăтăр тенкĕ (çирĕм тенки хăйĕн пулнă) салатаť.

Вăл хулана таврăнсан вăрман тресҫĕн сарайĕнҫе, лаша вити маҫҫи çинҫе пурнакан поета хирĕç пулаť. Лешĕ ăна сăра лавккине пĕр иккĕшне кĕрсе йавăнтарма ҫĕнет. Инкекне хирĕç вĕсем пивнойран тухсанах райком çекреттарĕ хирĕç пулаť те йаҫейккăн ҫлен укçине вăхăтра паманшăн сана выкăвăр панă, ыран райккома пыр тесе астутарса хăвараť.

-- «Вăл сăмахсене илтсен çӳçĕм вĕрилле тăрса кайрĕ, пĕр сăмах ҫĕнмесĕр малалла утрăм. Вăл кунхине çĕрĕпе çывăраймасť, райккома укçа мĕнле тупса парас шухăш пуçран тухмасť унăн, ирхине кивçен шыраса пăхаť, анҫах темиçе çĕре çитсен те укçа тупаймасť уншăн вара ăна вăтăр тенкĕ ҫлен укçине салатса йанăшăн комсомолтан кăлараççĕ.

Анҫах вăл çеç те мар, ăна тепĕр йăвăрлăх килсе пусаť. Унăн йуратнă рапфак хĕрĕ пут вĕсем иккĕш те пĕр пĕрне хытă йуратнă, анҫах кайран» Çемен комсомол укçине ĕçсе салатнă тесе» унтан писет, ăна курайми пулаť.

— Йутă есё! Йутă! комсомола вăтăр тенкё кёмёлле сутакан мана текех йулташ мар тесе çавранса прахса кайат унпа хирёç пулсан.

Кайран Çемен Мускава кайса Тёпкомра, ёç мёнле пулнине каласа парсан çеç, ăна комсомола хăвараççё.

«Рапфак хёрё» пит тарăн шухăша йаракан проиєветени. Кун пек вăйлă илемлё произветени унăн пултаруллăхёнҏе урăх çук тесен те йăнăш пулмаст. Вăл калаврa автăр, пурнăçра тёл пулакан **пит пысăк** ыйтусене палăртса пултаруллă кăтартса парат. Ун çинҏен 1927-мёш çулта «Сунталăн» 10(40)-мёш номёрёнҏе Патман йулташ пысăк статйа çырнăҏҏё («Йурату ыйтăвё Ҏăваш литтераттурёнҏе» 22—25-мёш стр.) унта Патман, вăл калава тёплён тишкёрсе тухса, Хумма Çеменён «Хёр хăйуллăхё» новеллипе танлаштарса ăна тёрёс аналис парат.

Ҏ. малтан литтераттурăри йурату ыйтăвё çинҏен пёр-ик сăмах: кирли вăл литтераттурăра йе кирлё мари? Çырмаллаи ун çинҏен йе çырмалла мари? Конешно çырмалла, анҏах ăна тёрёс çырса кăтартса пама пёлес пулат. «Тăварне ытлашши йарса» йашкине пăсас пулмаст. Иссайёв Мётри çавна астуса вăл ыйтăва килёшÿллё кăтартса парат, вăл литтераттурăна ăнланат. Литтераттура опҏёствă пурнăçёнҏе мёнле вырăн йышăнса тăнине те аван пёлет. **«Иссайёв писаттёл—опҏественнёк.** Çавăнпа вăл йурату ыйтуне те опҏёствă пурнăçён саккунсемпе çыхăнтарса пырат». (Патман «Йурату ыйтăвё ҏăваш литтераттурёнҏе»).

Мёнтен куратпăр епёр «Рапфак хёрё» автăрё йурату ыйтуне опҏёствă пурнăçё саккунсемпе çыхăнтарса пынине. Акă мёнтен: рапфак хёрё вырăнёнҏе мешҏен хёрё пулнă пулсан, мёнле пăхнă пулёҏҏё йурату ыйтăвё çине». Савни укçа салатни мёне, вăл комсомол ёçне йепле ёçлени мёне çăва патне, епё ăна йуратап урăх нимён те пёлместёп» тенё пулёҏҏе. Çеменён савнийё—рапфак хёрё—апла мар. Вăл Çемене **лайăх комсомолёс пулсан çеç** йуратма пултарат. (Йурату ыйтуне опҏёствă пурăнăçён саккунёсемпе çыхăнтарма пёлни çакă ёнтё вăл) анҏах Çемен комсомол укçине салатнине пёлсен (Çемен ăна «ёçсе йанă» теççё; тата хăй тёплён каласа парайманнипе ăна ăнланаймаççё) Çемен опҏёствăн: йурăхлă çын мар тесе, вăл комсомол йатне йарат тесе, унтан писет. Ку пёр ыйту, анҏах Рапфак хёрне вуласа тухнă хыççăн ытти ыйтусем те сиксе тухаççё, мёншён тесен пёр ыйтăва тепёр ыйту туртса кăларат. Акă вёсем: Çеменён йалта çамрăк шăлнёпе пурнакан ватă амăшне пулăшмаллаи йе пулăшмалла мари? Малалла: унăн амăшё йепле йывăр пурăнат пулсан та, вăл йаҏейккă укçине хысна пурлăхне парса хăварма пултарати çуки? Çемене уншăн айăпламаллаи йе каçармаллаи? т. ыт. те.

Тепле майпа пивнойа пырса кёнипе ăна, есё йаҏейккă укçине ёçкёпе салатса йанă тесе айăплаççё, анҏах ăна вăл ёçкёпе пётермен, унпа ватă амăшне пулăшнă. Çак ыйтусене лартат «Рапфак хёрин» автăрё вулакансем умне. Вăл çеç те мар, райкомăн ку ёçе, тёплён пăхса тишкёрсе тухма кирлё пулни çуки? Ёçне çителёклё пăхса тухмасăр Çемене комсомолтан кăларни тёрёси çуки? тата ыттисем те. Вăт мёнле пысăк ыйтусем сиксе тухаççё вăл калава вулинă хыççăн.

Çăмăл, илемлё ҏёлхепе, килёшÿллё сăмах çаварăнăçёпе, пултаруллă çырнипе тата калавён çÿшетне тума пёлнипе вырăнлă опрăссемпе усă курнипе «Рапфак хёрё» йатлă калавё вулакансене пит интереслетет,. «Пуринҏен мал-

тан ăнланмалла çырма, кĕске çырма, калава йе повĕçе йĕркеллĕ тума, сушета сарăлмашкăн происветенири çынсен характĕрĕсене, кăмăлĕсене кăтартма, ђĕлхене кирлĕ пек выљатма вĕренес пулат тесе çырнăђђĕ. вăл хăйех пĕрре». Вырăс класţĕкĕсене ытларах вуласа вĕренĕр» йатлă статйинђе. («Сунтал» 2—56 номĕрĕ 1929-мĕш çул).

«Рапфак хĕрĕ» йатлă калавĕнђе Иссайĕв литтераттурĕ ĕçне аван пĕлнине нумай вуласа сăмах çаврăнăçне пуйанлатнине куратпăр. Акă примерсем: çĕр çип çапнă пек, таçти айакри, темиçе вун çухрăмри курăнат. Тулă анисем тинĕс пек хумханса выртаççĕ. Çăтмахлă тулă ђăваш ĕçхалăхĕ çулталăкра пĕрре çисе куракан шур тулă, хăй вăйлă пулнипе мухтаннă пек пулса йăвăр пуçахне сулласа ларат. Тулă анисем хушшинђи çулпа вырăссем тĕвесемпе тулă çине пăхса савăнса иртеççĕ. Тĕвисем пуçĕсене, патша ђухнехи стришнасем пек, кайалла йарса хуллен утса пыраççĕ. т. ыт..

Акă тата йала йепле карттинласа кăтартса парат вăл: «Пӳртсем, тĕрлĕ йывăççем симĕс пĕркенђĕкĕ айĕнђе курăннă-курăнми лараççĕ. Пĕр шурă ђиркӳ анђах, хăйĕн икĕ тăррипе пĕлĕтелле хăмсарнă». Йе илĕпĕр ак çак вырăна: авттăрăн Çемен йывăр шухăшне кăтартса памалла. «Çемен хăйĕн шухăшне такама.. Кам та пулса пĕр çынна каласа парасшĕн çуннине епĕ унăн ни йĕреймен ни кулайман хура шăрçа пек йăлтăртататакан куçĕнђен куртăм. Ђĕри пыр тулли тапнă вăхăтра хăй патне йулташ пырса ларнипе Çемен хĕпĕртенĕ пек пулђĕ».

Ĕçлесе ывăннă хыççăн пĕђђен çӳренĕ ђухне, йе ăçта та пулин ларнă ђухне ђас-ђасах пурнăç çинђен шухăшлаттарат. Çитмен çине тата Çемен пĕђђен пурăнат. Çын кăмăлĕ хуçăлнă ђухне, ђĕри куљаннă ђухне çанталăк та салхуллăн тĕксем туйăнат. Максим Корккийĕн «Мортовка» йатлă калавĕнђи керой Власcăв, пĕрре çапла каçпа ĕçлесе ывăннă хыççăн, хăйĕн «ăнман пурнăçĕ çинђен шухăшласа ларнă ђухне ăна̇. ђиркӳ тăрринђи ђансем те çилпе йăнăшнăн туйăнаççĕ, çавăн пекех Иссайĕвăн та.

«Çуллахи шăрăх кунсенђе типокрафинђе кунĕпе ура çинђе тăрса (Çемен типокрафинђе ĕçлет вăл вăхăтра Ç. Й.) питех те канас килеђђĕ вара... Çапла пĕрре вăрман витĕр Çĕлен пек авкаланса выртакан, хăйăрлă çулпа шывлă çырма хĕрне, кĕпер патне пырса тухрăм. Каç пулђĕ. **Йывăр ĕçпе ывăннă çын пек лăпкăђђĕ вăл каç.** Çырмари шыв çинелле пăхрăм. Шыв, темшĕн **хурланнă хĕрĕн хура куçĕ пек** тĕксĕм курăнђĕ мана... Ман йĕри-тавра йăвăç çулçисем, çынсем пăшăлтатнă пек пăшăлтатаççĕ. Таçта-а! инçетре кас-кас, «лĕк-лĕклĕк», кулнă пек илтĕнђĕ. Епĕ шухăша кайса лартăм, пуçа темиçе тĕрлĕ шухăшсем те кĕрсе тухрĕç пулĕ ун ђух».

Унăн ахаљ, те кăмăлĕ хуçăлнă çитменнине тата сисмен çĕртенех ун патне «типсе пĕрĕнсе пĕтнĕ карђăк» пырса ларат. Ват карђăкăн та хуйхи пысăк— выçлăх вăхăтĕнђе унăн ађи вилнĕ». Ун ăшĕнђе тем пек пысăк, лăпкă каç йăвăр хуйхă пулнă... Йуратнă ывăл хуйхи, çавăн çинђен каласа, тата ытларах хурлантарат. вăл ун ђĕрине.

— Пур пĕрех пурин те вилмелле...—тенĕ сăмах ман хăлхана çурса кĕрсе кайрĕ—тет Çемен.

— Çапла асанне, пурте вилетпĕр çав-терĕм. Пĕр тапхăр ђĕнмесĕр ларнă вăхăтра, Çемен пĕлĕт çинелле пăхса илет: «**Лăпкăн-лăпкăн майĕпе шăвакан йăвăр хура пĕлĕтсем мана иртнĕ пурнăçăн хурлăхлă кунĕсене асилтерђĕç**“.

— «Ăшă çил кассăн килђĕ. Çӳлте вилнĕ çын ӳђĕ тĕслĕ уйăх хура пĕлĕт ăшне ђăмрĕ. Епĕ тăрса хуланалла утрăм. Темле тăлăххăн иртеђђĕç кунсем». Çак сăмахсемпе пĕтет «Рапфак хĕрĕн» малтанхи клави. Çак пайне авантарах «тĕпђесе» тухăрха. Мĕншĕн Çеменĕн хуйхи-суйхине кăтартмалла пулнăха автăрăн? Калаври малтанхи ĕçсене аса илсен, вăл ăна мĕншĕн кирлĕ пулни пит аван курăнаť. Малалла Çемен Парттине канаш шкулĕнђе веђђĕр пулнă каç «Рапфак хĕрне» курса йуратаť. Хĕре пĕрре курсанах йуратса кайнине кăтартса паракан сăлтав вăл, çав малтанхи клави. Мĕншĕн пĕрре курсанах йуратнă ăна вăл.

— Ăна та епĕ ђи малтан çав çĕр куртăм. Темшĕн, хам та калама пĕлместĕп, пирĕн куçсем пĕрне-пĕри тĕл пулса хире-хирĕç пăхса тăђĕç...

Мĕншĕн тесен Çеменĕн çул çитнĕ, мĕншĕн тесен **«пĕђђен, тăлăх пурнăçне урăхлатма вăхăт çитнĕ».** Йывăр вăхăтра «ђĕре патĕнђи сăмахсене калаçса савăнма ăна ђи çывăх йулташ кирлĕ. Паллах унăн ытти йулташĕсем те пур, (хăйпе ĕçлекенсем) тата «хваттерсĕр поет» пур, анђах çапах та вĕсене вăл «ђĕрери сăмахсене, шухăшсене каласа параймасť» йулташ, мăшăр кирлĕ ăна. Çавăн çинђен, илемлĕ литтераттурă мелĕсемпе кăтартса параť автăр çав калавăн пуçламăшĕнђе. Ăна вуланă хыççăн никам та «пит хăвăрттăн йуратаť ку хĕрсене çăмăл ăслă çын» теме пултараймасť. Сăлтавне пит аван кăтартса панă авттăр.

Кайарахпа вĕсем, Çеменпе рапфак хĕрĕ, пĕр-пĕринпе ђас-ђасах курăнкалаççĕ, ђĕререн йуратса калаçаççĕ. Çемен «типокрафи çумĕнђи комсомол йађђейкки çекреттарĕнђе пĕтĕм вăйран тăрăшса ĕçленĕ вăхăтра, хăш ђухне ăна савнийĕ те пулăшкалаť».

Малалла ĕç мĕнле пулни çинђен, мĕнпе пĕтни çинђен епĕр малта çырнăђђĕ: ватă, ĕçлеймен тăлăх амăшне шеллесе, комсомол йађейкки укçине «салатнипе», ăна комсомолтан кăларнă хыççăн, рапфак хĕрĕ ăна йуратми пулаť. Çемен Мускава кайаť. Комсомолрах йулмалла тунă хыççăн «вара ĕçлеме те Мускавах йулаť, кайалла пĕртте ђун туртмасť. Мускавранах салтака илеççĕ ăна. Халĕ вăл полккă шкулĕнђе вĕренет,. авттăра çавăнта хăй пурнăçĕ çинђен каласа панă Çемен (çапла прийомпа çырнă калавне,—иккĕмĕш сăпатран).

— Хĕр патне çыру йамарăна —терĕм епĕ.

— Çук, йаман, ăçтине те пĕлместĕп, тен мĕнле те пулсан аслă шкулта вĕренет пулĕ ĕнтĕ, хаљ—терĕ те Çемен ăссăн сывласа йађĕ.

— «Нађђалнĕк сăмахне итлемешкĕн лакĕрĕн пирвайхи линийĕ патнелле утрăмăр». Çак сăмахсемпе пĕтерет хăйĕн илемлĕ, вăйлă калавне Иссайĕв Мĕтри.

1928-мĕш çулта «Сунталăн» 5(47) №-ђе Иссайĕвăн «Отрет» йатлă калав пиђетленет, илемĕ йенђен. Мĕн çинђен тата йепле майпа çырнă вăл калавне? Кĕскен кăна тишкĕрсе тухарха. 1928—29-мĕш çулхи йапала хула пурнăçĕ, çутатса параť автăр вăл калавра, вăл пит аван шухăш.

«Ах, кăçал тырă çимелĕх йулмарĕ. Пĕтрĕ. Пĕтĕмпех илсе кайса пĕтерђĕç». теççĕ çын умĕнђе пуйан хресђенсем. Çĕрле... тĕттĕмрех каç, ытлашши тыррине Кармăшалла ăсатаççĕ».

«Хула, вăл йăвăр вăхăтра, сĕлĕ çăнăхĕ çинђе. Хула паранкă хупписене тасатса çийет. Йал хăй тăвакан йапалисене укçалла сутасшăн мар».

«Хула йала килес кулленхи пурнăçра кирлĕ хатĕрсемпе, тумтирпе тырă улăштарса кайат».

Ђĕрĕк çур кĕрепенке хăйăрлă çăкăрпа, çелеткă хўрипе пурнат хула. Хула çăкăрсăр, вутăсăр ларат. Хутман ђулçуртсене нўхреп шăрши çапса кайнă. Хапрăк-савăтсем те шăпах, кĕрлемеççĕ. Труписем анђах çилпе выçă кашкăр уланă пек уласа лараççĕ.

Салтаксем килнине курсанах йалти пуйан хресђенсем «Отрет килнĕ», Расверскă марши? тесе хăраса ўкеççĕ. Пытарнă тырăшăн шикленет йал... Çĕрлесрен астума çук... Çын курасран шикленет. „Ђухăнсем сиссенех комуниссене пĕлтереççĕ».

Пасарта нумай йапаласене сутма ђарнă пулсан та çăнăх сутаççĕ вăрттăн. Ун пек тавар йађĕсене те улăштарса пĕтерне. Пасар вырăнĕнђе кăлараççĕ. Таварне курма, илме хваттерсене кайаççĕ.

Краççын çук, тăвар çук, çавăнпа «Париш комунĕ» кунне ђаплама пухăннă миттĕнкра (пасар кунĕ), çынсем нумайăшĕ «Çав кирлĕ, тăвар кирлĕ»: тесе шавлаççĕ çывăхра тăракан ђăвашсем. Çавăнпа пĕр тутар «хĕрлĕ тавар лавкки çинђен икĕ аллине те çўлелле çĕклесе çухăрат».

— Тăс! Тăс! Тăс! кирек пĕске. Ты «Париш коммун». Сашђем нам Париш коммун?. Ты нам соль гавай! Пĕске соль кирек! тесе кăшкăрат. Кунта авттăр тутар сăмахĕпе, хресђен уйрăм психолокине пит аван кăтартса панă. «Мана париш комунĕ кирлĕ мар, тăвар кирлĕ»—тет вăл.

Отрет Хусантан лашасем пухма килнĕ. Краштăн вăрçи хĕрсе пынă вăхăт. Уралта Çĕпĕр Колђак аллинђе. Украйнă Теникин аллинђе Пит йăвăр, харушă вăхăт.

Хресђенсене тăвар мĕншĕн çуккине каласа ăнлантарса памалла. Отрет пуçлăхĕ Сасанккин сăмах илђĕ.

— Тăвар пулат—ăнлантарат вăл кĕрлесе тăракан халăха—анђах малтан Колђака айаккарах хуса йамалла. Тăвар çитменни вăл пире йĕри таврах шуррисем, капиталиссен тара тытнă йыттисем хупăрласа тăнинђен килет... Колђак тăвар кăларакан вырăнсене наркăмăшласа, йе çĕтерсе пĕтерне. Колђак кайалла тарнă ђухне тăвар паршĕсене шыва путарнă! Йусама, тума вăхăт кирлĕ, вăй кирлĕ! **Халђ пирĕн пĕтĕм вăйа çăхансене, тăшмансене çĕнтерес ĕçе хумалла. Вĕсене çĕнтерсен çеç елĕр хамăр пурнăçа хамăра кирлĕ пек тума пултаратпăр**—тет Сасанккин.

Хресђен халăхĕ ун сăмахне ăнланат. «Шаплаттарса алă çупаççĕ. Колђак килсен мĕн пуласса сисеççĕ вĕсем. Вăхăтлăха тăвар пулмасан та хамăр влаç».

Кунта авттăр хресђен масси шухăшне, комуниссен тĕрĕс ĕçленине аван кăтартса парат.

Райкком претçетаттĕлĕ (вăл вăхăтра тĕрĕс претçетаттĕл теђђĕç Ç. Й.) Михайлăв йулташ сăмах илсе тăвар çинђен те, фронтри ĕçсем çинђен те каласа ăнлантарса парат халăха.

— Хĕрлĕ Çар Колђака Урал тăвĕ хыçнелле хăваласа пырат. Анђах пирĕн Хĕрлĕ Çар çурран... Лашасем çукпа пĕрех... фронтра Совет влаçĕшĕн, пĕтĕм ĕçхалăхĕшĕн йун тăкакан хĕрлĕ салтаксене—**ађăрсене, шăлнăрсене, пиђђĕрсене** çапăçма пулăшас пулат- тет вăл... Çапла хресђен массин «пайанхи ыйтăвĕпе фронта çыхăнтарса» вĕсене хăйсен йенне çавăрма тăрăшаççĕ комуниссем. Тутар комунис Ахметтăв та çавнах калат. Кунта ĕçлекен халăх **иттернатсио-**

малла шухăша, ĕçхалăхĕн тĕрлĕ натсийĕ пĕрле, пĕр сĕмакра пулса ĕçленине курăтпăр

Влаçран тăвар ыйтасси пĕр ĕç, парасси çăмăлах мар хресçенишĕн. Миттĕнк пĕтсен «çынсен йавăр шухăша кайса тĕрлĕ çĕрелле саланçĕç. Ирхине лашасене вулăса илсе каймалла.

Пуринçен ытла пуйансем лашасене парасшăн мар. Йекким Сахарçа, ĕлĕк лавкка тытнăскер, отрет мĕншĕн килнине пĕлсен çĕрĕпе çывăраймасť». Хаçхи мопилисатсирен йăра (урхамах пек йăрĕ пур унăн) мĕнле хăвараç шухăш Йекким Сахарçăн пуçне шăтарат. Аптăранă йенне вăл сÿнпĕ çĕлĕмне (револютси пуçлансан хуйхăпа туртма вĕренниĕ) çăварне хыпса пÿртĕнçе каллăмаллă уткаласа çÿрет.

Вулсовет претçетаттĕлĕнçе Самăр Çтаппанĕ—вçатăвнĕк ĕçлет. Йекким Сахарçа ун патне çĕрле пĕр çерес пыл илсе кайаť. çавăнпа тепĕр ирхине Самăр Çтаппанĕ (вулсовет преççетаттĕлĕçке?)

— Çук, çук, **Йекким Сахарçă лашине илме йурамасť, йăйăр кирлĕ, племеннăй ăна илмелле мар»!** тесе Йекким Сахарçа хутне кĕрсе лараť.

Ун лашине «племеннăй» тесе хăвараççĕ, кайран отрет пуçлăхне вуннăнвуниккĕн (çухăнсем Ç. Й.) алă пуснă хут пырса тыттарсан» тепĕр вунă минутранах Йекким Сахарçан кăвак йăйăрăн пĕççи çине те **хысна клейми çапăнса лараť.** Тепĕр кунне ирех çывăхри стантсăна икçĕр лаша ăсатнă.

Тĕрĕслĕх çĕнтерет, анçах вулсовет претçетаттĕлие, «вçаткă» илнĕшĕн тата пуйан Йекким Сахарçа вçаткă панӑшăн мĕн тунине кăтартса парайман авттăр, вăл кирлех пулнă калавра.

«Отрет» калав **шухăшĕ тĕлĕшĕнçен** те, çушет тĕлĕшĕнçен те аван происветени. сăмах çаврăнăçĕ тĕлĕшĕнçен йапăх вырăнсем пур.

1929-мĕш çулта Иссайĕв Мĕтри çĕнĕрен çĕнĕ пысăк, илемлĕ происветенисем пиçетлесе кăлараť. «Çулăмри йал» повĕç («Сунтал» 1—2-мĕш 1929-мĕш ç.). «Лисук çăптаçă»,—повĕç. («Сунталта», тата хăй вилсен Тĕпистатра пиçетленсе тухнă «Çĕнелнĕ йăх» спорнĕкĕнçе те (11—85 стр.) çапăннă. Унтан тата: «Сĕреке Ваçки», Хура тинĕс хумĕ» (оççĕрк майлăскер), «Çурхи», («Çĕнелнĕ йăх» спорнĕк кĕне) «Лçапук çырăвĕ» Самарта тухакан «Колхоçнĕк» хаçатра çапăннă (хăш—номĕрне астумастăп) Иссайĕвăн «Çулăмри йалта» «Лисук çăптаçă» повĕçĕсем хаç çеç асăннă происветенийĕсем хушшинçе кăна мар, унăн мĕн пур пултаруллăхĕнçе пит пысăк вырăн йышăнса тăраççĕ. Апла кăна та мар, пирĕн тăван пролеттариллĕ литтераттурăра та паллă вырăн йышăнса тăраççĕ вĕсем. Малтан «Лисук çăптаçă»не пăхса тухăр. Повĕç пуçламăшĕнçе авттăр хăрушă выçлăх çулта хресçенсен нушаллă пурнăçне кăтартса параť. Çухăнсен çимелли те, акмалли вăрлăх та çук.

— Ыраш акма вăхăт çитнĕ. Анçах çынсем темшĕн васкаман. Пĕлĕтелле пăхса тĕлĕннĕ. Уйа кайса çĕре çавса хыпаласа пăхса çÿренĕ. Çăмăр кĕтнĕ. Пархатарсăр пĕлĕт çăмăр паман.

Çынсем выçăпа аптăраса çĕпĕрелле туртăнаççĕ. Хватей те çавăнта кайма шут тытаť. Лисук йатлă хĕраçи унăн Мускавра пĕр пысăк шурă хăмаççин арлакан хапрăкра пурăнаť. Вăл Мускавран таврăннă çĕре, ашшĕсем «пÿрçĕсене питĕрсе, хура çĕр çине вĕри куççуль тăкса» Çĕпĕре кайнă.

Лисук йал варринçи пĕçĕк çырма урлă каçса хăйсен тĕлне çитсен, çÿретисене хăмапа çапса лартнине, пÿрт пуçĕнçи кĕлтесем те тăлăххăн вĕлтĕртетсе

тăнине курсан, пĕр вырăнта хытса кайнă пек пĕр самант ăнтан кайса пăхса тăрат. «Пит тискеррĕн курăнса кайнă ăна тăван кил», анҫах ăҫта кайас тетĕн?

Çав кунхине пуйан Униçĕмĕн çемйи Лисуксен пахҫинҫе паранкă кăларнă. Лисук Униçĕм арăмне—Христука вăл кам иккенне каласа парсан (лешĕ малтан ăна паллайман) вăл вара упăшкипе канашласа Лисука «хĕрхенсе» хăйсен патне усрама илет.

— Хамăр патăрта пурăнтарас. Ашшĕсем те ҫĕрĕ, те вилĕ. Кайнăранпа та ним сас-хура та çук вĕсем çинҫен. Вăл пирĕн патăрта пурăнсан луҫҫĕ; **çĕрне** те пĕтĕмпех акса усă куратпăр, пахҫи те хамăрăн пулат, хăй те пирĕн ĕçе **ĕçлет.** Пире ĕçлекен кирлĕ,—терĕ Униçĕм арăмĕ. Унтан айаккинелле пăхса илҫĕ те;

— Çынсене, **хĕрхенсе, усрама илтĕмĕр тесе калас**—терĕ куçне хĕçҫе. Униçĕм ҫейе, вăл мĕнле тусан мĕн пулассине пит лайăх пĕлет. Унăн ăс çитет. «Пăтранҫăк шывра пулă тытма» вĕреннех вара Униçĕм.

Çакăнтан вара Лисукшăн нушаллă, пурнăç пуçланса кайат. Ăна **çамрăклах** ҫăпта çаптарса, вăрман турттарса асаплантараççĕ.

Çĕнçул каçĕ вĕсен йалне шефа илнĕ типокрафинҫен пынă тепĕр комсомолĕспа Петĕр (вĕсем çтена хаçаҫĕ кăларма, сурхури праçнĕкне ăнлантарса пама пынă вăл йала) Лисукпа паллашаççĕ. Петĕр ăна ăсатма кайсан Лисук хăйĕн йăвăр пурнăçĕ çинҫен каласа парат.

Сăмах майĕн Униçĕм суйа ертел туса, патшалăха уталани палăрат. Лисук комсомола кĕрсен хĕр—уҫҫитлĕ Шикайĕвăпа çывăхах туслашса кайат. Нумай йапала вĕрентнĕ комсомол Лисука, Шикайĕвă (комсомолкка) ăна пĕрмайах пулăшса пынă. Шкулта пионер отреҫĕ тусассăн, йаҫейккă Лисука отретре ĕçлеме хушнă.

Пайан Униçĕме «Шупашкарта суйса нумай укçа илнĕшĕн», суйа ертел тунăшăн тĕрмене хупаççĕ; Петĕрпе Происвотсойус инструктăрĕ йала тепре пырса ҫăн-ҫăн ерттел, ҫăпта çапакан ерттел» уçаççĕ.

Лисук пиҫҫĕшĕ вăрçăран таврăнат, ăна йалсовет претçетаттĕлне суйлаççĕ. Лисук вăл вăхăтра ерттел правлени çекреттарĕнҫе ĕçлет, Вăрăм Павăл патĕнҫе пурнаççĕ. Çăва тухсан пиҫҫĕшпе хăйсен килне куçаççĕ. Йакур та, Лисук та опҫĕствă ĕçне пикĕнсе ĕçлеççĕ. Йал ваҙҙи ăратлă вăкăр илсе килет, çав кайăçунах Лисука хуларан çыру илсе килет. Петĕр Лисука Рапфака кайма Опкомол комантировккă пани çинҫен çырса пĕлтерет. «Тепĕр кунне Лисук ирех, хĕвелтухăçне хĕрлĕ сăн çапсанах, пасара кайакан кӳршĕ çыннипе ларса Шупашкара кайат. Петĕрпе иккĕшĕ Опкомолтан комантировккă илеççĕ те рапфака кайаççĕ. Рапфакăн аслă çурҫĕ **„Хула çĕрпе станок аҫисене" пит кăмăллă** йышăннă

Вулакансем умне ку повĕçпе пит нумай ыйту лартат авттăр; ҫухăн хĕрĕ Лисук выçлăх вăхăтĕнҫе Мускавра тăранса пурăнни, выçлăхпа аптăранă çынсем Çĕпĕрс кайни, йалкулакĕсем ҫухăнсен «тирне сĕвни», суйа ерттел туса ҫухăн аҫи-пăҫисене нушалантарни, хулапа йал çыхăну тытни, (типокрафинҫе ĕçлекен комсомолĕссен хăйсен шефа илнĕ йала пырса пулăшаççĕ), йал çутталла туртăнни (ратио лартни) ҫăваш хĕр-аҫисем малалла вĕренме тăрăшни, çавăнтах тата йалти уҫҫиттĕлнĕтсăсем халăха çутта кăларма тăрăшни, хĕрлĕ улах, веҫҫĕр т. ыт. те. Пĕр сăмахпа каласан Иссайĕв **пĕр происветенипех йалпа хула пурнăçне тĕрлĕ йенҫен çутатса пама тăрăшат.** Паллах, кĕске повĕçре

çав пысăк ыйтусене çителĕклĕн, пултаруллă кăтартса пама май çук, повĕç мар; роман çырсан та вăл ыйтусене кирлĕ таран; илемлĕ никам та çутатса параймĕ. Роман çырма авттăрăн вăхăт пулман, çавăнпа пулас, унăн «Лисук ҫăптаçă» повĕçĕ, хăйĕн сăмахĕпе каласан «илемлĕ литтераттурă калăпне» çителĕклĕ кĕрсе çитеймен; малта асăннă «Пролеттари литтераттурĕшĕн» йатлă криттĕклă статйасен спорнĕкĕнҫе вăл маркçисла криттĕккăн сатаҫҫине аван ăнланнине кăтартат». Маркçисла криттĕклекенĕн сатаҫĕ литтераттурă происветенин сотсиалисăмлă еквивалентне тупнипе çеç пĕтмест, унăн тата происветенин илемлĕхне хак памалла» тенĕ (25-мĕш стр.). «Ку ĕнтĕ—хутошĕствăллă происветенин форми мĕн ҫухлĕ çыпăçуллине кăтартса параси, сотершанипе формăн пĕррелĕхне курасси, сотершани формă ăшне кирлĕ пек шăранса ларайнипе ларайманнине кăтартасси, опрăссем çын ăшĕнҫе «ҫĕлхесене» йантратма пултарассине пултарас çуккине, мĕн ҫухлĕ пултарассине курма пĕлесси пулса тăрат. Акă мĕншĕн епĕр, криттĕккăн сатаҫĕ—сотершанипе формăна ăнлантарса парасси пулат тетпĕр»—тесе хăйĕн малтанхи шухăшне ăнлантарса парат. Пит тĕрĕс ăнланнă Иссайĕв маркçисла криттĕккăн сатаҫине «Лисук ҫăптаçă» повĕçне çак «виçепе» виççе пăхсан (епĕр ун пултаруллăхне тĕплĕн, пур йенҫен те тишкерсе тухма шут тытрăмăр) унта ҫылай çитменлĕхсем палăраççĕ, ăна та тӳррипе калас пулсан. Ку происветенине хăйĕн умне лартнă пысăк шухăша вăл кирлĕ таран, çутатса парайман. Вăл повĕçĕн «историне» епĕр аван пĕлетпĕр, ăна вăл малтан кино карттин тума литреттă çырнăҫҫĕ. Ҫăвашкино темшĕн йышăнман. Кино карттин тунă пулсан унтан пит аван фиҫмă пулмалла. Халĕ те ăна кино карттинă тусан йурăхлă (ун ҫухне те йурăхлăҫҫĕ ман шутпа, еп çаплалла отсăв панăҫҫĕ).

Ку сăмах майĕпе. Кайран вăл унтан **кĕске вăхăтрах** повĕç туса çырнă. Кунта çӳшет йенҫи кăна мар, сăмах çаврăнăшĕ йенҫен те, опрăссем суйлас йенҫен те пысăк «кăлтăксем» пур. Çушет тĕлĕшĕнҫен: **хронолокипе** çырнă, вулакана интереслетекен çыхăнусем çителĕклĕ мар, «схемăлăрах» тухнă. Сăмах çаврăнăшĕ йенҫен, керойсен «ҫун кăмăлне» кăтартса пани йенҫен пăхсан, вăл ку происветенийĕнҫе кăтартса панинҫен ытларах каласа пани нумайтарах. Акă сăмахран илĕпĕр: унăн пуйан Унисĕмĕн усал кăмăлне кăтартса памалла, вăл ун çинҫен çапла каласа парат: хамăр патăртах пурăнтарас, ашшĕсем те ҫĕрĕ, те вилĕ—кайнăранпа та ним сас-хура та çук вĕсем çинҫен. Вăл пирĕн патăрта пурăнсан луҫҫĕ; **çĕрне те пĕтĕмпех акса усă курăпăр, пахҫи те хамăра пулат, хăй те пирĕн ĕçе ĕçлет! Пире те ĕçлекен кирлĕ терĕ** Унисĕм арăмĕ». Çапла малтанах авттăр, керойăн шухăшне каласа панипе, вулакан повĕçне вуласа тухиҫҫенех вăл малалла мĕн хăтланассине пĕлет. Апла тунипе происветени **вулакана интереслеме кансĕрлет.** Ун пек вырăнсем повĕçре сахал мар. Кунта епĕр пурне те шутласа тăраймастпăр. Анҫах, тепĕр йенҫен каласан, илемлĕ килĕшӳллĕ вырăнсем те (танаштарусем, меттафăрсем те т. ыт. те) сахал мар. Акă вĕсем: «Пăрахут сăмсине мăйĕпе тăвалла çавăрса, **мăн кăмăллă хитре хĕр каҫҫă çумне пырса ларнă пек,** пристăҫ çумне пырса ларҫĕ». Çуртри, çĕр çумĕнҫе хăпаймасăр, кукша пуçлă çын çӳç пĕрҫийĕсем пекех вĕлтĕртĕтсе ларнă» т. ыт. те. Тата **Мускавра хапрăкра ĕçлесе таврăннă хĕр-аҫа** Лисук комсомол çинҫен нимĕн те пĕлменни. пуйан Унисĕме «тыткăнне» çакланни унта нуша тӳссе пурăнни темле вулакана ĕненмелле мар. Пĕтĕмĕшпе илсен, повĕçе ытла наҫар теме çук, усăллă, хăй вырăнĕнҫе кирлĕ происветени.

Иссайӗван тепӗр пысӑк происветенийӗ «Çулӑмри йал» терӗмӗр. «Отрет» йатлӑ калавӗнђи пекех кунта та 1918—19-мӗш çулхи краштӑн вӑрçи çинђен çырнӑ. Иссайӗв çырма темӑ тупмасӑр аптӑраса тӑмасӗ,. вӑл пит аван, пуринђен ытла вӑл краштӑн вӑрçи çинђен тата йалти **клас кӗрешӗвӗ çинђен** ытларах çырнӑ Иссайӗв. Вӗсем пысӑк, кирлӗ тытӑмсем. Краштӑн вӑрçи çинђен пӗр вӑл çеç çырман, нумай çыраççӗ ун çинђен, В. Краснов илемлӗ повӗçӗ «Шуррисемпе çапӑçни„, çавӑнах „Улӑпсем“, роман „Ђалтун“ „Тилӗ хыççӑн“ Паймен-„Çӗпӗре“ А. Солӑттӑв «Йӳççе хӑпарат», т. ыт. те.

Анђах мӗн ђухлӗн çырсан та вӑл иксӗлми йаланах «актуаљнӑй» темӑ, ун çинђен халђен çырнӑ та малашне те нумай çыракансем пулӗç. Ун çинђен çырнӑ темӑсене, Хума Çеменӗ пек, «Тухатса лартнӑ çаврашка» теме пултармастпӑр епӗр. Сахал çырнӑ, çителӗклӗ çырман ха епӗр тесен вырӑнлӑрах пулат.

1929-мӗш çулта Паймен вӑл происветенийе тишкӗрсе тухса, «Çулӑмри йал» пирки статйа çырнӑђђӗ. («Сунтал» 4—58-мӗш №-рӗ 1929 ç.) унта йӑнӑш вырӑнсем пур пулсан та, статйине пӗтӗмӗшпе илсен, тӗп шухӑшӗ, те, унӑн вывӑђӗ те, тӗрӗс темелле. «1929-мӗш çул, ђӑвашсемшӗн краштӑнн вӑрçи те, расверсткӑ та, Октапӗр револђутсийӗ те, тен ђӑвашсемшӗн Куçма повӗçӗн тӗп керойӗсенђен пӗри Ç. Й.) кулак çуртне илни Питӗрте хапрӑк-савӑт хуçасене хуса йани тӗшне тӑрат пуљ. Тен Мерђен ӗçӗ те пирӗншӗн Ђаппайӗв ӗçне тӑрат пулӗ?»—тет. Паймен çав статйинђе. Тӗрӗс сӑмах. Çавӑнпа унта епӗр вӑл ыйту çине мар, ӑна йепле катартса, çутатса пани çинђен кӑна калас тетпӗр. Повӗçне «пропортсисӗр (виçесӗр) çырнӑ. Çурринђе пӗр керойӗ тӗвӗлет, тепӗр çурринђе труках тӳшин керой кӑларса йарат» тени те тӗрӗс. Ђӑнахах та, «Тепӗр çурринђен, 6-мӗш пайӗнђен, тин йал çуннине кура пуçлатпӑр» «тенине те килӗшмелле, анђах «Йалапука» «Хӗрлӗ ут» йатлӑ пайсем **ытлашши** тенипе нийепле те килӗшме çук, нимрен ытла «Хӗрлӗ ту» йатлӑ пайӗ ытлашши тени **тӗрӗс мар.** «Йалапукара» йе урӑхла каласан повӗçӗн пуçламӑшӗнђе Иссайӗв вулакансене Куçмана «револђутси çулӑмӗ çавӑрса илиђђен» **вӑл килӗнђе мӗнле** пурӑннине, мӗн çинђен ытларах шухӑшланине, вӑл кам пккенне кӑтартса парат. Куçмана килтисем ђистийех аптӑратса çитернӗ. Вӑл çук та, ку çук, йӗмсем саплӑклӑ, кӗпесем çӗтӗк. Арлама пӗр пӗрђӗ сӳс çук: Ав, Йехрем Иванӗ Иванӗ Йалапукаран пӗр пӑт сӳс илсе килнӗ те, вӗсен кӗпе-йӗмӗ те питӗ пулат ӗнтӗ «тесе йатлаç ӑна килтисем. Малалла вуласан епӗр Куçман» ашшӗ Кермани вӑрçинђен ђирлесе килнӗ хыççӑн, вӑл килте пӗртен-пӗр арçын тӑрса йулнине, ашшӗ хыççӑ Куçман амӑшӗ те нумай пурӑнманнине, вилсе выртнине пӗлетпӗр. пӗр сӑмахпа каласан Куçма мӗнле çемйере çуралса ӳснине, кӑтартса парат авттӑр. Ашшӗ-амӑшӗ вилсен вӗсем **тӑлӑх тӑрса йулаççӗ,** килте вӑл ђи аслӑ, унӑн çамрӑклах килçурт çинђен шухӑшламалла пулнӑ. Кунта авттӑр вӑл ђухӑнне-вӑтамне тӳррипе каласа та, кӑтартса та памасӗ, вулакан хӑй çеç сисме пултарат. **Тӑлӑх йулакансенђен** пуйан пурӑнакансем пинтен пӗрре çеç вӑл. Куçма ђухӑн çып ађи, анђах ӑна килтисем ђистийах аптӑратса çитернипе **кил** çуртшӑн ытларах тӑрӑшнине «ӑна вӗрентекен пулманнипе» йулашкинђен тата шухрах пулса **«йал касса, ашкӑнса,—улах тӑрӑх ђупса çӳренипе револђутси ӗçне сыпӑçайман.**

«Йепле вӑл ђухӑн ывӑлӗ, тӑлӑхскер пулнӑ çӗрте, малтан револђутсишӗн пӗр те тӑрӑшман», теме пӑхӗç хӑш-пӗр вулакансем, ђухан çын ывӑлӗ вӑл револђутси пуçлансанах ирӗккӗн Краснӑй Квартийе каймалла тийӗç хӑш-пӗр

«хайар криттёксем» анҕах ун пек кăшкăрни вырăнсăр пулаť. Револҕутси пуҫлансан йалсенҕе Куҫма пек, пĕр авăха ним ăнланайманнисем сахал пулсан та, пулнах вĕсем. Каласа ăнлантарса паракансем **тăруках** кашни йалтă пулмăн, тёттём кĕтессене октапĕр ҫути ҕасах кĕреймен, **ҫавăн пек йала, ҫавăн пек ҫынна кăтартса** панă Иссайёв хайён керойёпе.

Мĕн майпа апла ҫырнă вăл? Унăн Куҫма кайарахпа **«ҫĕнĕрен ҫуралнине»** кăтартмалла, унăн хресҕенле шухăшне кайран револҕутси шухăшĕ ҫĕнтернипе кăтартмалла, ҫавăнпа вăл, Куҫма акитпункта ҫитсе «унăн куҫĕ уҫăлиҕҕен» унăн **тёттёмлĕхне** кăтартса параť.

Вăл ҫеҫ те мар, авттăр Куҫма ҫпекулҕатсипе вăрттăн тырă сутса хулана кайма пĕр йĕкĕр—ывăҫ хут укҫа тунине те пытармасť. **«Револҕутсийе ăнланса илиҕҕеп Куҫма йĕркеллĕ ҫын пулман»** тийесшĕн вăл. Малалла вара авттăр вăл вахăтра пойĕссем йепле наҕар ҫӳренине, мешеҕнĕксем йепле пойĕса шăна пек ҫыпҫăннине кăтартса параť.

— Улҕăмсем, тăвашсем, кӳртĕрха тархасшăн тесе макăра-макăра ыйтаť пĕр карҕăк вакун алăкĕ умĕнҕе ларакан салтаксене.

Куҫмапа Хĕветĕр те ҫав пойĕс ҫине аран та ҫуран, ирĕксĕр ларса кайаҫҫĕ Йалапукана. Унтан ҫуршар пăт сӳс, ҫуршар пăт тăвар илсе килнĕ ҕухне «Хĕрлĕ ту» стантсине, пойейса кĕтсе, ҕарăнаҫҫĕ. Вĕсем хулара мĕн курнине мĕн илтнине кăтартса памасť пире авттăр (лешсем васканă пулас, авттăр хăй те ҫав васкарах ҫырнă, вăл кашни йĕркерех курăнаť). Ваксалта Куҫма тĕрлĕ плаккатсем вуланă, карттинсем кураť. **Ҫавăн хыҫҫăн сасартăк «халиҕҕен курман, илтмен йапаласем ҫинҕен тăнланаť».**

«Хал) ĕнтĕ самайах уҫăлҕĕ Куҫман куҫĕ» тет авттăр, анҕах вулакан авттăра ĕненесшĕн мар.

Ĕненмелле кăтартса парайман вăл вырăна. Пĕр куҫлăхлă, кăтра пуҫлă ҫын ĕҫлекенсемпе хресҕенсен влаҫĕ ҫинҕен каласа параť. Сывлăша пытарсах итлет Куҫма токлата. Итлет... токлат ун ҕĕринех витет» тет авттăр, анҕах вулакан ҕĕрине витеймест, ҫавă наҕар вара.

Токлат пĕтсен тĕрлĕ ҕĕлхесемпе ҫырнă кĕнекесемпе хаҫатсем салатса панă. Куҫма та илҕĕ пĕр кĕнекине, ҕăвашлине, хуплашки ҫине «Ҕиркĕве патшалăхран уйăрни» тесе ҫырнине. Пурнăҫ мĕн иккенне, тĕрĕслĕх ăҫтине пĕлмен епĕр ку таранҕҕен. Пирте хамăрта иккен вăл тĕрĕслĕх—шухăшлаť Куҫма

Киле таврăнсан вăл ваксалта илнĕ кĕнекине вуласа тухаť те пысăк шухăша кайаť, шухăша кайни ҫеҫ мар «филосовствăваť» тума пуҫлаť: «Хăм! турă! Пур-ши вăл ҕăнах та тĕнҕере турă? Пулсан мĕншĕн илтмест ха вăл ҫĕр ҫинҕе асап куракан ҫынсем хăйне тархасласа ыйтнине? Тата темиҫе пысăк ыйту параť вăл хăйне хăй, унтан ҫавăнтах турра ĕненме пăрахаť. «Ҫук, унашкал турă пулсан та пире кирлĕ мар, кирлĕ мар, кирлĕ мар пире унашкал турă!—сасăпа кăшкăраť Куҫма.

Ун ҫумĕнҕи пойĕссенҕе кăтартнă тăрăх («Йалапука, Хĕрлĕ ту») Куҫма «политтĕк тĕлĕшĕнҕен нимĕн те пĕлмесҕĕ, кунта авттăр ун ҫинҕен» комунис-сене Куҫма ку таранҕҕен пĕр ҫав турă пирки ҫеҫ килĕштермен» тет вăл. Ҫавăн пек «ҫыпăҫайман» ҫийелтен шăйăрттарса кайнă вырăнсем тата тĕл пулкалаҫҫĕ.

«Милтан вăл пуринҕен ытла комунис Васили Петровҕа кăмăламан, кайран

унпа туслашат̆, ун сăмахне итлет, комуниссем ĕç халăхшĕн тăрăшнине сиссе парттине çырăнма шухăшлат̆. «Апла пулсан йурат. Пыр ыран **Райкома** тет ăна Ваççили Петровђђă (Райком мар **Укком** темелле пулнă, мĕншĕн тесен ун ђухне районсем пулман, уйессем пулнă Ç. Й.) Парттине кĕрсен Куçма пикенсе ĕçлеме тытăнат̆, ăна çамрăксен сойусне ваљђи Шуç Михалипе икĕшне Йекким Романђђăнне çуртне туртса илме йараççĕ.

Уккомра ђас-ђасах пулкалат̆, унта сторошиххăра пурнакан 16—17 çулхи хĕре йуратат̆, анђах хĕрĕ ăна «Турра ĕненмест тесе» йуратмаст̆.

Ђашкăрма йалĕнђи клас кĕрешĕвĕ вăйланса пырат̆. Протрасверскă пуçтараççĕ, çăнăх авăртма арман çук, Толђков хуçаран туртса илнĕ армана хута йамалла, анђах машшин ăсти çук. Мерђен, тимрĕçĕ патĕнђе ĕçлекен пленнăй нимĕçе Љђутвике (ун патне тӯрлетме сехетне илме пырсан) арман машшинĕ çинђен систерсе хурат̆. Љђутвик вĕсене арман тӯрлетсе парат̆. Ыттисемпе пĕрле Куçма та фронта кайат̆. Вăл фронта кайсан Аљтиç те, Салаххи тутара, вăл иккунсене вута пăрахса çунтарнăшăн турă нимĕн те тăвайманнипе «турра ĕненме парахат̆», Куçмана йуратманнишĕн çав тери ӯкĕнет.

— Ах, Куçма, ђунăм, пĕлетĕнши ес, еп сана мĕнле йуратнине? Пĕтĕм вĕри ђĕремпе тӯсейми йурататăп, сана Куçма!—тесе куљђанат̆ Аљтиç, анђах Куçма йалта çук, фронтра.

Автăр повĕçне çакăнпа пĕтерет, анђах вулакана повĕç пĕтмен пек тата пулмалла пек туйăнат̆. Мĕнтен килет ку йапала? Повĕçри керойсене, унти ĕççене кирлĕ таран çителĕклĕ кăтартса паманнинђен килет вăл. Клас кĕрешĕвĕ Ђашкăрмара **пит çăмăл** пулса пырат̆, вара, апла пулсан револђутси тума, ђăнахах нимĕн те мар, Толђковсем улпут Йекким Романђĕсем, кулаксем комуниссемпе çу пек калаçаççĕ, хăраса ђĕтресе çеç тăраççĕ «ах, хоспоти, мĕн есĕр, конешнă, лайăх çынсем, ман çемйе-ђимĕрха, ђим, ађамсем, йулташсем, таван-сем, ан çырăрха халех куçаратпăр. Куçаратпăр, тархасшăн ан çырăр», тесе çуртĕнђен пĕр самантрах куçат̆ Йекким Романђă. Ун пекки хăш-пĕр çĕрте пулкаланă пулĕ те, анђах вăл пур çĕрте те апла пулман. Клас кĕрешĕвĕ ун ђухне пит вăйлă пулнăçке. Протрасверскă вăхăтĕнђе те кулаксем тыррисене çĕр айне алтса пытарнă, вăрттăн пысăк хакпа сутнă, протрасверсђăксене ђас-ђасах **тĕттĕм кĕтесре вĕлеркеленĕ те.** «Çулăмри йалта» вĕсем курăнмаççĕ, вĕсене кăтартмалла пулнă. «Йышăнас! йарас! тăвас!» теççĕ те постановлени йышăнаççĕ, армана хута йараççĕ, револђутси тăваççĕ. Повĕçне револђутсин малтанхи çулĕсем çинђен çырнă. Сопытти хыççăн сопытти пулса пынă, çавăнпа унта çитменлĕхсем пур пулсан та, происветенинђе вулама çăмăл. Ђĕлхине те, револђутси ђĕлхипе çырнă. «Пĕр кун иртет, ик кун иртет, виç кун иртет, иртет ерне. Йе тата: «стантса икçĕр лаша вутă турттарма, стантса икçĕр хĕрах çын йур хырма, протрасверскăна пухса пĕтермелле халех т. ыт. те.

«Отретре» **ђаваш ĕçхалăхĕпе тутар ĕçхалăхĕ** пĕрлешсе револђутсишĕн тăрăшнине кăтартнă пулсан, ку повĕçре **тата пленнăй нимĕç** ĕçленине куратпăр. **Тĕрлĕ натси ĕçхалăхĕ пĕрлешсе ĕçленине кăтартса пани пит кирлĕ,** кунта Иссайĕв клас кĕрешĕвĕн тĕввине аван кăтартса парат̆ «Хороший мелниц, вы местный власть и йа вам потђинђу мељницу, для револђутси Лютвик будет делат работу»—тет пленнăй нимĕç Мерђен аллине силлесе. Вăл тимĕрçĕ патĕнђе ĕçлесе пурăнат̆, сехет тӯрлетет. **Рапођђи** иккенĕ паллă. Тутар комуниса—Салаххине те аван кăтартса панă, унтан Аљтис «Турра ĕненместĕне

вара есӗ? тесе ыйтсан сирӗн турра мар хамӑрӑнне ӗненме те вӑхӑт ҫук» тет вӑл тӑрӑхласа.

Кунта пуҫне тата Револҕутсишӗн «ҕунне парса ӗҫлекен» уҕҕитлӗ вӑтам шкул пуҫлӑхне—Мерҕене кӑтартса панӑ. «Револҕутси ҫинҕен вӗрентме ҫӑмӑл мар. Ҕӗмпӗрти ҕӑваш шкулӗнҕе вӗрентмен Мерҕене ун ҫинҕен, унта алкӗпрӑ вӗрентнӗ»... Анҕах револҕутси алкӗпрӑ формӑлисем тӑрӑх пулса пымаст. Мӗн тӑвас? Вӗренес пулат. Вӗренет Мерҕен пӗҕҕен. Револҕутси тума вӗренет. Ҫӗрӗ ҫӗрӗпе вулат. «Кӑпитала ӳпне ӳпӗнтерет» тет авттӑр. Порис Пилҕнакӑн «Голый год» романӗнҕе пӗр керойӗ (Донат пулас хушаматне лайӑх астумастӑп Ҫ. Й.) Ҫапла ҫӗрӗ-ҫӗрӗпе ытти халӑхсен сӑмахӗсене наисуҫ вӗренет. Кунта ҫавӑн майлӑ ҫырма тӑрӑшни курӑнат, анҕах Пелҕнакӑн та, Иссайӗвӑн та вӑл тӗрӗс мар. Ҫӗрӗ-ҫӗрӗпе ӗҫлекен ҫыннӑн «Кӑпитал» вулама мар, ытти ҫӳхерех кӗнекисене вулама та вӑхӑт пулман.

Ҫак ҫитменлӗхсем пулсан та «Ҫулӑмри йал» Иссайӗвӑн наҕар происветени мар, кирлӗ усӑллӑ пролеттарилле происветени. Револҕутсин малтанхи ҫулӗнҕе «хӑй пултарна таран кӑтартса панӑ. Йулашкинҕен Иссайӗвӑн йулашки пеҕӗкрех происветенисем ҫинҕен кӗскен калама тивет («Сӗреке Ваҫки», «Хура тинӗс хумӗ», «Ҫурхи»).

Иссайӗв пур происветенийӗсенҕе те пусмӑрлӑ кивӗ пурнӑҫ йурӑхсӑрлӑхне **илем ӗрлӗхне**, револҕутси хыҫҫӑнхи ҫӗнӗ пурнӑҫ ҫеҫ ӗҫлекен халӑхне ҫӑлӑпӑҫ панине кӑтартса пама тӑрӑшат. Ҫӗнӗ пурнӑҫа, ҫӗнӗ йӗркене ҕӗререн йуратнӑ вӑл, уншӑн, хӑй кӑтартса панӑ керойӗсем пек, ҕунне пама хатӗр. Халҕ ҫеҫ асӑннӑ виҫӗ пӗҕӗк калавӗсенҕе те вӑл ҫӗнӗ пурнӑҫ ҫӑлӑнӑҫ панине, ӗлӗкхи пусмӑрлӑ пурнӑҫ ӗҫхалӑхӗшӗн «тамӑк» пулнине кӑтартса парат: илӗпӗр «Сӗреке Ваҫки» йатлӑ пӗҕӗк калавне: унта вӑл ӗлӗкхи пӗр ҕапла вӑрӑ ҫинҕен, лаша вӑрри ҫинҕен ҫырат: «кама кирлӗ ун пек йапала, кама интереслеме пултарат вӑрӑ пурнӑҫӗ»? темелле пӗр шухӑшласан; анҕах Иссайӗв унта та пролеттариллӗ итеолоки кӗртсе, кивӗ пурнӑҫӑн тискер кӗлеткине кӑтартса парат.

Пӗрре вӑрмана ҫӗр выртмалла лаша ҫитерме кайсан Макҫӑм пиҕҕепе вӗсем (инҫете кайса ҫухалнӑ лашисене) шырама кайаҫҫӗ. Шыраҫҫӗ, шыраҫҫӗ тупаймаҫҫӗ, вара Макҫӑм пиҕҕӗшӗ ывӑнса ҫитет. «Ҫӑва ҫине, ҫӳреҕҕӗрех ҫке. Халҕ лаша вӑррисем ҫук ҫке—ӗлӗкхи мар—тет вӑл. Вут кутнелле кайса лараҫҫӗ те сӑмах хускатса йараҫҫӗ. Ҫавӑнпа Макҫӑм пиҕҕе ӑна, сӑмах майӗ, Сӗреке Ваҫки ҫинҕен каласа парат.

Макҫӑм пиҕҕе «ӳретнӗке хӗненӗшӗн» ҫав лаша вӑррипе пӗрле тӗрмере ларнӑ Лешӗ ӑна хӑйӗн йывӑр пурнӑҫӗ ҫинҕен каласа парат, авттӑр вулакансене каласа кӑтартат. Пӗрре Сӗреке Ваҫкине, лаша вӑрланӑшӑн, пит хытӑ хӗнеҫҫӗ. Пӗр оне сывмар пулса выртнӑ хыҫҫӑн вӑл ҫӳрекен пулат те кайран лаша вӑрлаасса «турра» сӑмах парат. Ытти ҫынсем пек ӗҫлесе тӑранса пурнасшӑн, анҕах ҕухӑнскер, сасартӑк «ҫын пулса ҫитеймест» пулӑшу ниҫтан та ҫук. Мӑнкун умӗн унӑн ҫиме те пӗтсе ҫитет. Кивҫен шырат,—паракан ҫук. Улпут патне те кайса йӑлӑнса пӑхат, анҕах Микулай Микулайҕҕа», **темиҫе ампар тырӑ шӗлсе выртат пулсан та пӗр-икӗ пӑт пама хӗрхеннӗ.** Сӗреке вара никам та кивҫен паманнипе тарӑхса, ҫынсем ӗҫкӗ ӗҫнӗ кун, выҫӑ лариҕҕен ҫакӑнс вилеп луҕҕӑ» тесе вӗрен илет те ҫакӑнат. Ун хыҫҫӑн пӗр аҕи унӑн выҫӑпа аптӑраса вилет, тепри Йакур йатли, Револҕутси хыҫҫӑн ҫын пулат.

Çапла майпа авттăр **ĕлĕкхи пурнăç çынсене йепле пăснине, вĕсем** мĕнле вăрра вĕреннине кăтартса парат. «Кăђухне самани те улшăнђĕ, пурнăçĕ те ваттисем каланă пек пыма пулђĕ» тесе каласа кăтартат Макçăм пиђђе калаври тĕп шухăша.

Хура тинĕс хумĕ» йатлă калавĕнђе ĕлĕк **хĕрарăмсем** пусмăрлăхра пурăннине, вĕсене **Октапĕр Револђутсийĕ çеç çăлăнăç** панине кăтартса парат. Кĕскен каласан калавăн сотершанийĕ çакăн пек: авттăр Крымран таврăнма тухсан, прахут кĕтсе ларнă вăхăтра ăна пĕр хĕрарăм—вытвишенккă—ĕлĕк питĕ нушаланса пурăнни çинђен каласа кăтартат. Ашшĕ-амăшĕсем ăна (Крак хĕрĕ пулнă вăл) ирĕксĕрех вата, пуйан çынна çамрăклах кађђа параççĕ, пилĕк çĕр тенке выђăха сутнă пек сутаççĕ. Унта вăл тĕрмери пек нушаланса пурнат. Октапĕр револђутсийĕ ăна вăл тыткăнран çăлат. Халĕ ĕнтĕ вăл вата партийтса кађђа кайнă, ађапа амăш çуртĕнђе ĕçлесе пурнат. Хĕрĕ комсомолта тăрат, хут вĕренет, çавăнпа вăл «халђхи пурнăçа ĕлĕкхинђен темиçе хут ытла йуратат». Кунта та просветенин тĕп шухăшне, керойиђă сăмахĕсемпе, авттăр хăйех каласа кăтартат, çавăнпа кунта калавăн илемлĕхĕ, интереслĕхĕ ђакат, çавăнпа ку просветенийĕсем ытти просветенийĕсене çитеймеççĕ.

Йулашкинђен «Çурхи» йатлă калавне тишкĕрсе тухар. Мĕн çинђен çырнă вăл калавне, мĕн кăтартса парат вăл çав кĕске просветенийĕне? Тата йепле майпа илемлетнĕ калавне?. Унăн пĕр паллакан Аптул йатлă тутар комунис пур: вăл ăна пĕрре пырса курма хушнипе, авттăр тутар йалне кайат. Çав йалта мĕн курни-илтни çинђен вулакансене каласа кăтартат.

Аптул Тонпасра шахтăра крусђĕк пулса ĕçленĕ. Унтан ђирлесе йала килсе лекнĕ. Йалта вăл ликвитаттăрта тăрат, çирĕммиçĕ çынна хут вĕрентет. Аптулсăр йалта пĕр опђăллă ĕç те иртмест «унăн пур ĕçре те ĕлкĕрмелле, пурне те тумалла» тет авттăр, анђах ăна ĕçре кăтартса паман.

— Миçе çул ĕçлетĕп турра хирĕç, çапах та йалта турра ĕненменни вуна çынтан ытла мар. Мулласем вăйлă ĕçлеççĕ, пирĕн, турăран релики сĕрмĕ, анĕш сĕђĕпе пĕрлех кĕрет çын ђĕрине мур» тесе пăрахат Аптул.

Пĕтĕм йалĕпе те пĕр Аптул çеç ĕçлет (ăна та Аптул хăй çеç каласа парат) **ытти ĕçлекенсене, ытти комуниссене, комсомолĕссене кăтартса паман,** ку вара просветенин пит пысăк çитменлĕхĕ. Ђăнахах та çав, кашни вулкан авттăра çакăн пек ыйтусем пама пултарат: «йађейккă ăçта, комсомолĕсем мĕн ĕçлеççĕ. ытти опђĕствăллă орканисатсисем, ытти çынсем мĕн ĕçлççĕ, мĕнле Аптула пулăшакан çук» тейĕç вулакансем. Вăл ыйтусем, вырнлă ыйтусем. Халђхи вăхăтра пĕђђен йепле паттăр ĕçлесен те, ĕçлекенсен масипе çыхăнса тăмасан пысăк ĕç тума çук.

«Хăйĕн нађар куçĕсене хĕрхенмесĕр, тĕп суккăр пулса ларасран ăрамасăр, тутарла кĕнеке-хаçатсем вуласа парат, ăнлантарат йурлăсене»-тет авттăр Аптул çинђен.

Кайарахпа «пĕрерĕн-пĕрерĕн вунă çын пуçтарăнса» Кăçал «Йалт тăс» (Хĕрлĕ çалтăр») комунă уçаççĕ». Аптулăн темиçе çул пуçа ыраттарса çренĕ шухăшĕ пурнăçа кĕђĕ» тет Иссайĕв, **анђах комунă йепле орканисатсиленине те, комунă пурнăçне те калавĕнђе курмастпăр.** Калава пит кĕске, васкаса çрни, (ăна ексис теме те йурат) кашни йĕркинђех палăрат. Çырма тытăнсан Іссайĕв пултаруллă, илемлĕ çырма та пултарат, ăна епĕр малта асăннă ысăк

происветенийĕсенђе куратпăр,. анђах йулашки виçĕ калавне вăл илемлĕ шăрантарса кăларайман, ăна тӳррипех калас пулат.

Ку статйара епĕр Иссайĕвăн пултаруллăхне, вăл çырнă происветенисене пур йенђен те тишкĕрсе тухас терĕмĕр. — „Определение социологического эквивалента всякого литературного произведения осталось бы неполным, а следовательно и неточным, если бы критик уклонился от оценки его художественных достоинств". тет Плехханăв, çавăнпа кунта происветенисен итейĕпе сотершанине çеç мар, вĕсен илемлĕхне, урăхла каласан, вĕсен формине те кĕскен тишкĕрсе тухас терĕмĕр.

Çамрăк писсаттĕлсене Иссайĕвран вĕренмелли нумай, вĕсен унăн происветенийĕсене вуламалла, мĕншĕн тесен вăл, йал пурнăçне, клас кĕрешӳне, краштăн вăрçине т. ыт. те тĕрĕс кăтартса панă, мĕн çинђен, тата йепле майласа çырмаллине аван пĕлет Иссайĕв писсаттĕл. Çав вăхăтрах тата унăн происветенийĕсенђи çитменлĕхсем те, «çыпăçсах пĕтмен» вырăнсене те астутарса хăварас терĕмĕр: хăш-пĕр происветенин «тентенсти» текенни ытла мала тухса тăрат, хăш-пĕринђе авттăр, происветенин тĕп шухăшне илемлетсе кăтартса парас вырăнне, хăй каласа парат, çавăнпа вĕсен хакĕ ђакат, анђах çапах та, вăл происветенисем усăсăр тесе никам та калас çук, кашнинђех вăл ĕçлекен халăх çĕнĕ пурнăç тума тăрăшнисене, вăл ĕçри йăвăрлăхсене кăтартса парат, çавăнпа Иссайĕвăн пĕтĕм литтераттурăллă пултаруллăхне илсен, вăл çырнă происветенисене тĕплĕн тишкĕрсе тухсан, **вăл тăван литтераттурăшăн тăрăшса, ђуне парса ĕçленине, илемлĕ, пысăк происветенисем çырма пултарнине куратпăр.** Хастарлă криттĕк, револютсиллĕ писсаттĕл пулнă вăл пирĕн пролеттариллĕ литтераттурăра.

ÇИЛЛАПĔКПА ТОНĔК ÇИНЂЕН ТАВЛАШНИ МĔНПЕ СӲТĔЛСЕ ТУХРĔ

К. КЕЛИ

(Творђђĕстбă меттăтне сӳтсе-йавас пирки).

Ку тавлашу ђăваш пролеттари литтераттурĕн творђђĕствă меттăђĕ пирки пуçланмалла тавлашун хăрах йӳппи çеç. Сăвăсене мĕнле технĕкпа çырмалла, тесе тавлашмашкăн пире халђ питех те кирлĕ мар. Сăвă технĕкĕ çинђен пирĕн происветенисене тулашĕпе те, ăшђикĕпе те тишкернĕ ђух асăнмалла пулĕ, тата ку ыйтупа еппоххă, йе уйрăм писсаттĕл-поет çтилĕ çинђен калаçнă ђух тĕкенмелле пулат.

Халђ пуçланас тавлашу пролеттари литтераттурĕн пĕтĕм творђђĕствă меттаđĕ çинђен пулмалла. Ана мĕнле пуçласси çинђен кайран калаçăпăр. Халђ технĕк пирки пуçланнă тавлашу мĕнпе пĕтни çинђен çырас килет ман

Происветенин ăшђикĕпе тулашĕ мĕнле тиалектиклĕ çыхăнура тăнине епĕр пит аван пĕлетпĕр. «Примат содержания», тени искуствă тулашĕ ун ăшђикĕнђен килет тенине пĕлтерет; Происветенин формăллă уйрăмлăхĕсем (технĕккă, тулашĕнђи формă-роман, повĕç т. ыт., шалти формă-моттивсене мĕнле йĕркелени, çӳшеглани, ђĕлхе т. ыт. те)

сотершаниреи килеççĕ. Сотершани, мĕн çинђен çырни, автăрăн палăртас тенĕ тĕп шухăшĕ. Происветени ăшђикĕ ун форми автăрăн пçихолокийĕнђен, пурнăç ăнланăвĕнђен, кăмăлĕнђен килет. Автăрăн пурнăç ăнланăвĕ (мировосренийĕ) хăйĕн вăхăтĕнђи пурнăçра формăланса пыракан ун пçихо-итеолокине палăртаť. Пçихо-итеолоки—класлă каттекори Кашни писсаттĕле, ун пурнăç кăтартăвне кура пĕр-пĕр класăн, йе опђĕствă сийен класлă писаттĕлĕ теме кирлĕ. Классăр писаттĕл çук. Ун происветении çтилĕ тăрăх епĕр вăл мĕнле клас претставиттĕлĕ иккенне пĕлетпĕр.

Сăвă технĕкĕ те таврари пурнăç таппипе килĕшес пулаť. Епĕр ку технĕк çине риттăм (таппи, виçи) йенђен пăхса калатпăр. Револђутсиђен ђăваш халăхĕн массăллă пурнăçĕ вакпуршуаллă пулнă. Ку пурнăç условийĕнђе ђăваш халăхĕн йурă риттăмĕ çуралнă. Пур йурăсен сыпăкĕнђе пекех çиђĕ саскарђĕ, саскарђĕ тулаймасан, йурă виçипе килĕшсе, йурă сыпăкĕ çиђĕ такт тулиђђен тăсăлаť. Илĕр авалрах йурăсене:

«Лут-ра йах-та шĕ-ĕ-шкĕ»...
..Шу паш ка-ар ту-у-йи".

Кашнинђе 7 тулли пусăм (утар с оригинала).

Ђăваш йуррисен кĕввисем тĕрлĕ, анђах вĕсем пурте пекех лăпкă, çемçе; вак пуршуаллă массă творђђĕствинђе, çитменнине ик тĕрлĕ пусмăр айĕнђе пурăннипе хĕсĕннĕ ђăваш ĕçхалăхĕн массинђе, ђи малта, çак риттăм, çакнашкал йурă кĕввисем пуç пулса тăнă.

Малтанхи ђăваш поеђĕ К. В. Иванов çак «натсиллĕ» ђăваш йуррин риттăмне сăвă çине куçарнă. Вăл вак-пуршуаллă поет. Ун итеолокийĕ те çаплах. К. В. Иванов пурнăçа кĕртнĕ сăвă технĕкне епĕр «çилапĕк» тетпĕр, мĕншĕн тесен, вăл технĕк виçи, «çилапĕк» саккунĕпе çеç килĕшет: кашни йĕркере саскарђĕн шуђĕ пĕр пек, пысăк пусăм йĕркен йулашки саскарђĕ çине ўкет. Илер «Нарспи»-рен:

«Пуш уй-ăх-ăн вĕ-çĕнђе
Хĕвел пăхрĕ ăшăтса.
Çилпи ђăваш йалĕнђе
Йур ирĕлђĕ васкаса»...

«Нарспи»—вак-пуршуаллă поемă. Ун автăрĕ—вак-пуршуаллă ђăваш хресђен поеђĕ—вак-пуршуаллă массăра çуралнă йурă виçине хăйĕн поеçине куçарнă, мĕншĕн тесен ку виçе ђăваш халăхĕн вак-пуршуаллă кăмăлне кайнă.

Çакăнта ĕнтĕ **вак-пуршуаллă ђăваш хресђен пурнăçĕпе çиллапек** хушшинђи тиалектĕклă-маттериалисăмла çыхăну, пĕрлĕх (единство).

Автăр Шупуççыннин çилапĕкĕпе çырнă происветенийĕсене («Хитре Ђĕкеç», «Йанрак йанравĕ т. ыт.); Шелепи сăввисем çаплах, 1928-мĕш çулта çырнă «Йăваш Мишук»). Вĕсем пурте пекех вак-пуршуаллă. Çакăнтан шутласан епĕр сотершанипе формăн тиалектиклă çыхăнăвĕ, [redacted] пĕрлĕхĕ пуррине пит аван куратпăр.

Окťапĕр револђутсийĕ хыççăн сăвă форми кайа, сотершани мала тухрĕ. Рекконструкси тапхăрĕ пуçланнă вăхăтра «çиллапек форми вак-пуршуаллă сотершанипе пĕрле «криçĕсе» кĕрсе ўкрĕ. Ку вак-пуршуаллă пурнăç картисем ишĕлсе пырса, пĕрлешўллĕ пурнăç пуçланса мала тухнинђен килђĕ. Совет хуçалăхĕн йусану (востановительный) тапхăрĕнђе вак-пуршуаллă пурнăç условисем аванђђĕ. Окťапĕр хыççăн, истори хушнипе, сотсиалисăмла пурнăçпа йунашарах аваллăхран йулнă вак-пуршуаллă хресђенĕн екжономĕкле пурнăçĕ те сарăлса пыђĕ. Ку вăхăтра, паллах, «тратитсипе» куçнă çиллапĕк вакпуршуа поеçин технĕкĕ сене:

Ку поеçипе йунашарах Окťапĕрте çуралнă пролеттари поеçийĕ ўссе çĕнтерсе пыђĕ. Ђăваш пролеттари поеçийĕн технĕклă форми çиллапĕк пулма пултарайманнине истори ђасах кăтартрĕ: Шăтса тухрĕç «ирĕк

риттăмсем», тонĕккă, т. ыт. те. Малтанах Октапĕр револђутсине пеххил лесе çырнă пролеттари сăввисенђе «Ирĕк риттăмсем» йышлăђђĕ, сотсиалисăмла строиттĕлствăн планлăхне кĕрсен «тонĕк» çĕнтере пуçларĕ. Ку вăхăтра, ђи малтан, сăвă йакалăхĕ, витерӳллĕхĕ, сăнлăхĕ çинђен калаçа пуçларăмăр. Пролеттариллĕ ђăваш поеçин «натсиллĕхĕпе» килешекен форми çинђен калаçнă ђух тавлашу тонĕкпе çиллапĕк çинђен пуçланђĕ. Ли каларĕ:

«Çиллапиккă» ђăваш поеçине саламла «Тонĕккă» ăна лупашканалла тӳнтерсе йарса натси куђттуринђен кăларса пăрахса Çиновйĕв каланă йăнăш çулпа йарĕ те кайран ђасах пĕтерсе те лартĕ» терĕ.

Тиалектĕклă пурнăç историне ăнланманнипе Ли пит йăнăшсем турĕ: 1) формăсем пурнăç сотершанийĕ—килĕшсе улшăнсах пыраççĕ; ун шухăшĕпе çиллапĕк улшăнми, пĕтми формă; 2) тонĕккă ирĕксĕр пурнăçа кĕреймĕђђĕ, вăл «натси куђттурипе» килĕшнипе çеç кĕнĕ формă; 3) Ђăваш поеçишĕн мар, ђăваш пролеттари поеçишĕн тăрăшатпăр епĕр; 4) пролеттари тиктаттурĕн условийĕсенђе «натси куђттурĕ» нихăш йенђен те (литтераттурă йенђен, паллах) пĕтме пултараймаст, сотсиалисăмла сотершанипе пулса ӳссе пыма çеç пултарат.

«Тонĕккăшăн» тăрăшакансем ма тӳрре тухрĕç? Вĕсем калани пурнăçа кĕнинђенех паллă: «çиллапĕк» сайралнă çемĕн сайралат. Хăй те Ли-Шупуççынни вак пуршуаллă поеçирен уйрăлнă пирки çиллапĕкрен **уйрăлсах** пырат. Вулăр «Тинĕс», «Аврорă» сăввине т. ыт. те. Тĕслĕхшĕн:

„Çапла йунлă саманра „Аврорăн йађĕ
«Кранитланă Невара „Ĕмĕр сӳнме ђапланђĕ.

Йунашарах Шелепин «Сунтал» йатлă сăвви. Ун поеçийĕ те «криçĕсе» кĕрсе кайрĕ, анђах вăл вак-пуршуаллă кăмăлтан уйрăлайманнипе «çĕнĕ темăсене» çулăхсан «аптрат».

„Сунтал, „Çавасем туптан,
„Ма шаккан?— „Ывăнсан канан.
«Пăртак кан—(?) „Ехĕ, (?)
„Мĕншĕн пит васкан? „Апла иккен сан ĕçĕ...
(„Сунтал" 7(61) №—1931).

Çырма аптрани кунта питĕ аван курăнат: кирлĕ мар, пустуй пуплени аптранине кăтартат. Шелепине ку «криçĕсран» тухма йăвăртарах—пролеттари пурнăçне сăнаса вĕренсе пымалла.

Епĕр тавлашнă вăхăтра:

«...Çиллаппĕккăпа çеç епĕр малалла кайаймăпăр. Пурнăç ритми (таппи К.) улшăнса пырат, çĕнĕ формăсем, вутлă хĕмлĕ çаврăнăçсем кирлĕ, çĕнĕ технĕккă çиçтеми кирлĕ», тенĕђђĕ.

Ку паллах, тонĕк-пуç пулса тăракан сăвă технĕкĕн çиçтеми пулмалли, тенине пĕлтермест.

Мĕншĕн епĕр тонĕк технĕкĕ çинђен маларах хурса каласма пуçларăмăр?

1. Мĕншĕн тесен ку технĕккă ђăваш ђĕлхин уйрăмлăхĕпе, ун саккунĕпе пит аван килĕшет—ăна пурнăçа кĕртме тăрăшмалла. (Вăл кĕђĕ ĕнтĕ—истори хушнинђен иртмелли пулмарĕ).

2. Тонĕк çиçтеми пур сăвă технĕккисенђен те çаврăнăçлă, пурнăçăн тĕрлĕ тапписене кăтартма пултаракан технĕккă. Унпа пирĕн револђутсилле, сотсиалисăмлă пурнăçпа стройккине кăтартнă çĕрте усă курмалла. Ак сăмахран: «Похоронăй марш» сăвăшăн, «амфипраххи» пит килĕшӳллĕ виçе пулнă. «колодни ки», йе «Ленин йуратнă йурă» виçи те çав амфипраххийех. Технĕккăллă формă сотершанипе килĕшсе пулнă.

Ку сăвăсене:

«Ах, ты, суккин сын камаринский мужик» виçипе—хорейпе—çырнă пулсан çынсем, хурланас вырăнне, хăшпĕрисем ташша йама та пул-

Ку тавлашуран «тонĕкçĕсем» çĕнтерсе тухрăмăр, тени—«уçă алăка çĕмĕрсе кĕнипе» мухтанни çеç пулаŤ. Епĕр çĕнтермен, епĕр Ђăваш литтераттуринЂе палăрнă «тонĕккă», истори çулĕн тиалĕктĕклă саккунĕ хушнă тăрăх, пирĕн поеçире пĕр тапхăра, пысăк вырăн йышăнмаллине çеç палăртнă. Ку—пĕрре.

Епĕр тонĕк виçипе пирĕн поеçире пуç пулса тăмалла, теместпĕр: Формă йенЂен ăмăртуллă çырма çеç пултаратпăр.

Тонĕккăпа çыракансем пурте пирĕншĕн усăллă мар. Ку технĕклă формăпа пит контр-револЂутсилле, реаксилле поемă та çырма пулаŤ. ЂППА хăйĕн ретĕнЂе таракансене **формă йенЂен мар, сотершани йенЂен орканисатсилесе пыраŤ.** Пирĕншĕн хутте мĕнле çыр, анЂах происветени: сотершани йенЂен, ĕçхалăхĕшĕн усăллă пултăр, ĕçхалăхĕн пурнăç ăнланăвне, пролеттари итеолокийĕпе килĕштерсе орканисатсилесе пытăр, ĕçхалăхне сотсиалисăм тума пулăшатпăр, ун класлă кĕрешĕвĕнЂе ун аллинЂи хĕçпăшал пулса тăраŤ. Çав вăхăтрах формă йенЂен çыпăçуллă, илемлĕ, сотершанипе килĕшсе пулнă, ĕçхалăхĕн ăнланăвĕшĕн витерӳллĕ, ăнланма çăмăл происветени пултăр.

ТворЂЂĕствă меттăтне сӳтсе-йавма вăхăт çитрĕ. Мĕншĕн çитрĕ ку вăхăт?—Ку вăхăт—классен кĕрешĕвĕ çивĕЂленнинЂен килЂĕ. Рекконструкси тапхăрĕнЂе ку кĕрешĕве пирĕн пушшех **çивĕЂлетме тăрăшмалла.** Классен кĕрешĕвĕ литтераттурăра вăйланЂĕ. Ăна татах вăйлатмалла. Пролеттари тиктаттурĕ çирĕпленнине кура ун клас тăшманĕсем ,«пролеттари» происветени йаЂĕпе хăйсен сийенлĕ, совета хирĕçле кăмăлсене литтераттурă урлă, вăрттăн палăртма тытăнЂĕç. Çапла Рсайăн «пролеттариллĕ» происветенисем «Пушар» «Аслати умĕн» «О, Хĕвел»; Вантерĕн «Вĕренӳ çулĕпе» т. ыт. тухрĕç.

Ĕç происветени ăшЂикĕнЂе çеç мар, ун меттăтĕнЂе те: «Йеркĕн» поемă, «Поетпа миççионер» хытăрах каласан «Пайанхи поемă» та, çийелтен пăхсан пролеттарилле происветенисем пек курăнаççĕ, анЂах мĕнле çырни (**меттăт**) йенЂен пăхсан, вĕсем... сийенлĕ те...

Кекел вĕрентнĕ тăрăх, майпа (метод-па) пурнăç ăнланăвне (Мировоззрение-не) уйăрса пăхма йурамаст. Вĕсен тиалĕктекле пĕрлĕхне асра тытмалла.

Пролеттари литтераттурĕн творЂЂĕствă меттăЂĕ мĕнле пулмаллине епĕр халех калама пултараймастпăр, анЂах Ђăваш литтераттуринЂе тухнă, паллах пролеттариленмен происветенисене тишкĕрсе тухса «пролеттари литтераттурĕн творЂества меттăЂĕ мĕнле пулмалла марри» çинЂен тискуççи уçма пултаратпăр.

Сăмахран пысăк поемă «Йеркĕне илер. Ун меттăЂĕ—пирĕн меттăт мар, ăна пурте ăнланатпăр, анЂах тишкĕрме тытăнмастпăр. **Ун меттăЂĕ** тăрăх пирĕн поетăн класлă «мировоззрение»не тупмалла. Ун меттăЂĕн уйрăмлăхĕсене астуса, прахăçласа (кирлĕ мар пулсан) хамăра кирлĕ меттăтăн канвине тупса формалама тăрăшар.

Меттăт—автăр происветенине мĕнле формăпа çырни, пирĕншĕн усăллă, йе сийенлĕ геройсене мĕнле кăмăлпа кăтартни, пурнăçăн усăллă, йе сийенлĕ йенĕсене ытларах астуни, çутатни, кăмăллани, т. ыт. те.

Ленинкрат, 25-мĕш çенŤапĕр, 1930 ç. **Кели.**

Ретаксирен. Ђăваш литтераттуринЂе творЂЂĕствă меттăЂе тăрăх сăмах хусканманпа пĕрех. ЂППА йулашки сйесĕ те кун пирки çаплах каласа хăварЂĕ. Пирĕн творЂЂĕствă меттăЂĕн ыйтăвĕсемпе тĕплĕ паллашса, пролеттари литтераттурин пĕртен пĕр тĕрĕс меттăЂĕпе, тиалектĕклĕ маттериалисăм меттăЂĕпе лайăх усă курса ĕçлеме вĕренмелле. Пайан çапăнакан статйа—Келин асăннă сйес хыççăн, хăй вилес умĕн çырнă йулашки статйисенЂен пĕри. Ăна вăл сăмах хускатас майпа çырнă. Пурне те ку статйара, çителеклĕ, тĕрĕс, татăклах каланă теме çук-ха.

ПИССАТТĔЛСЕН АЛÇЫРĂВĔСЕНЕ ПУХСА ПЫРАССИ

Н. ВАÇАНККА

Ђăваш пролеттари писсаттĕлĕсен альманахĕнђе йатарласах епĕр «Литтераттур архивĕ» йатлă уйрăм тума йышăнтăмăр. Ку уйрăм ђылай пысăк вырăнах йышăнмалла пек туйăнат.

Унта пирĕн вилнĕ паллă писсаттĕлсен пиђетленеймен просветенийĕсем, литтераттур тĕлĕшĕпе, йе опђалахри паллă ĕçсем майĕпе çырнă çырăвĕсем токкумĕнтсем, пиокрафиллĕ маттерйалсем пиђетленмелле. Паллах, ку уйрăмра вилнĕ писаттĕлсен алçырăвĕсем кăна пулмалла мар, халĕ пурăнакаписен те, литтераттур ĕçĕнђен урăх çĕре куçнисен токкумĕнђĕсем, асаилўсем те кĕме пултараççĕ.

Хăшпĕрисем пирĕн хушăра ку ĕçе хирĕç пулма та пултарĕç. «Пирĕншĕн писсаттĕлсен пĕтĕмĕшпех пиçсе çитнĕ просветенийĕсем çеç паха. Унăн хут таткийĕсем, çырăвĕсем пире кирлех мар. Литтераттур ĕçне вĕреннĕ ђухне те писсаттĕлсен пурнăçĕсемпе (пиокрафийĕсемпе) паллаштарасси те ытлашши ĕç çех», теме те пăхаççĕ вĕсем. «Нарспи» çинђен вĕреннĕ ђухне унăн автăрĕ (ăна çыраканĕ) К. В. Иванов мĕнле условире ўссе, мĕнле ĕçлени тата ытти те пире пађах кирлĕ мар «Нарспине» ил те, тĕплĕрех вуласа сăнаса тух, вĕрен..! теме пăхаççĕ ун пеккисем. Камсем кун пек калани çинђен халĕ сăмах хускатса та тăмăпăр, ĕç çинђен ытларах çырăр.

Пирĕншĕн çакă питĕ паллă: «Нарспи» просветенийĕ вĕреннĕ ђухне автăрăн пурнăçĕпе (пиокрафийĕпе) паллаштарма кирли кирлĕ марри кăна мар, пире урăххи те питĕ инттереслентерет. Епĕр писсаттĕлĕн ĕçĕ мĕнле майланса пынипе (протсесĕпе)—К. В. Иванов «Нарспи» патне йепле çулпа пынипе (мĕнле меттăтпа ĕçленипе) паллашасшăн.

Епĕр писсаттĕлĕн творђĕствине вĕрентнĕ ђухне пиокрафине те паллаштарма кирли çине те «таса искусства» теореттĕкĕсем йеннелле сулăнакан меншевикла Переверçĕв профессăрпа ун хыççăн тапăлтатса ђăваш литтераттури пирки çухаракан М. Фетоpов пек («Халăха вĕрентес ĕç» шурналти 6—7 номĕрĕсенђи статйасем, ЂАПП пленăмĕнђе каланисем) пăхмастпăр. Пађах урăхла калатпăр епĕр. Сăмахран акă совет литтераттури паллă пролеттари писсаттĕлĕ Фурманăв Мĕтри польшевик пултарулăхне илер. «Ђаппайĕв» йатлă просветенине вуланă, веренне ђухне епĕр нийепле те автăрĕ Фурманăв Мĕтри кунçулĕпе, вăл Ђаппайĕв тивисçинђе кăмиссар пулнипе интересленмесĕр иртейместпĕр. Ахађрен мар ку писсаттĕлĕн тиевникĕсене, çырăвĕсене тем пекех хак хурса вулатпăр, уйрăм кĕнекесем туса кăларатпăр.

Литтераттăр пултаруллăхĕпе тĕплĕ паллашмашкăн унăн çырăвĕсем, статйисем, тневникĕсем те пулăшаççĕ. Шкулта литтераттур вĕрентнĕ ђухне писсатĕлĕн происветенине пăхса тухнă хыççăн унăн пĕтĕм пултарулăхĕ çинђен калаçса илни, пиокрафипе паллашни вĕренӳ ĕçне пĕрре те кансĕрлемест, пулăшат кăна.

Литтераттур тĕпђевçĕсем пĕр-пĕр происветени çинђен, йе литтераттăр пирки хăйсен сăмахне татса калас умĕн çак асăннă пиокрафиллĕ маттерйалсене йатарласах пăхса тухаççĕ. Çаксене асра тытса, епĕр литтераттур арххивĕ пирки сăмах хускататпăр.

Писсаттĕлсен йулнă алçырăвĕсем пире писсаттĕл мĕнле сотсиаллă условисенђе ĕçлесе ӳссе пынине, мĕншĕн çав тĕп шухăша пăхăнса, мĕнле майсемпе çавнашкал происветени çырма пултарнине кăтартаççĕ. Ку маттериалсем тăрăх епĕр «талант» тени мĕн иккенне, писсаттĕлĕн ĕçĕ «таса сывлăш хăвађĕ» тени, «ултă çунатлă çерахвимсем» Пушкинсемпе Лермăнттăвсен «тути-çăварĕсене пырса перĕннипе» мар, хура тарпа, темиçе хутђен саваласа йакатса çеç пулса пыракан ăсталăх иккенне куратпăр. Çине тăрса вĕренсе, хăнăхса пырсассăн çеç пулакан ĕç вăл писсаттĕлсен ĕçĕ. Пĕр происветенийе писсаттĕл темиçе хутђен йусаса, çĕнетсе çырнине, маттериалĕсене темиçешер çул пухса çырма хатĕрленсе тăнине куратпăр. Çак ăсталăх мĕнле аталанса пынине, хăйсем мĕнле майсемпе ĕçленине кăтартас тесе, совет писсаттĕлĕсем темиçешерĕн пĕрлешсе кĕнекесем те кăлараççĕ. (Как мы пишем).

Ку таранђен те епĕр ђăвашсен илемлĕ литтераттурĕн историне çырман-ха. (А. Солăттăв йулташа ЂППА историне çырса, хăйĕн ЂППА сйесĕпленăмĕсенђи токлађĕсемпе пĕрлештерсе кĕнеке кăларма сĕннĕђђĕ ЂППА правленийĕ, тата К. И. Çамиссарăв пĕр 4—5 çул ĕнтĕ çавăн пек кĕнеке çырма токăвăрсем тăват çеç.). Шкулсенђе ђăваш литтераттурине вĕренмешкĕн çавăнпа та ђылайах канçĕр. Литтераттур архивĕ йатлă уйрăм пире ку йенђен те ђылайах усă памалла. Литтераттур ĕçне вĕрентекенсем унти маттериалсене сăнаса пырĕç, литтераттур историне çыракансем те кирлĕ пек маттериалсене суйласа илĕç.

Пĕр йенђен пирĕн халĕ писсаттĕлсен алçырăвĕсене, тĕрлĕ маттериалĕсене пĕр-пĕр уђрештени çумĕнђе пухса тирпейлесе пырасси çинђен сăмах татмалла.

Ђăвашсен тĕп арххивĕнђе, муçейре, вырăнти çĕршыва сăнаса тĕпђекен ушкăнра, Ăслăлăхпа Тĕпђев инçтитутĕнђе, ЂППА («Канаш» ретакси çумĕнђе). ВОПИ ђăваш уйрăмĕнђе (Хусанта), Шупашкарти ђăваш Петинçтитуђĕн ђĕлхепе литтераттур кăпинетĕнђе йе урăх çĕрте те усрамалла вĕсеен. Пирĕн вилнĕ писсаттĕлсенђен йулнă маттериалсем, токкумĕнтсем уйрăм алăсенђе, тĕрлĕ шкулсенђе сапаланђăк выртаççĕ. Çавăн пирки те литтераттур тĕпђев ĕçне тытăнас тесессĕн пĕр-пĕр пĕђĕк ыйтупах Шупашкарĕ, Хусанĕ, Улђйанăвскĕ, Пушкăрт республĕкĕ (Ĕпхӳ) т. ыт. вырăнсене çаврăнас пулат. Çак ĕçе пирĕн çăмăллатмалла, литтераттур архивне майласа йамалла. Çакна та манас пулмаст—хăшпĕр çĕрте пирĕн арххив пеккисем тĕплĕ усранаймаççĕ, вуткăвар, шыв-шур аллине лекесси те пулма пултарат. «Канаш» хаçат кантурĕ çуннă ђухне кăçал ђылай хут тавраш̆ĕ çунса карĕ. Унта ЂППА-па «Сунтал» ретаксин хăшпĕр маттериалĕсем те пĕтнех, пахарах алçырăвĕсем те лекме пултарнă.

Тепёр йенђен—ку маттериалсене пухăннă май йёркелесе, вăхăтра хак хурса, пиђетлесе пымалла. Çавăнпа та, епёр алђманахра «Литарххив» йатлă уйрăм туса, нумёрсерен паллăрах маттериалсене пиђетлесе пырас тетпёр. Ку уйрăмра писсаттёлсен пиђетленеймесёр йулнă просветенийёсене, çырса пётереймен сыпăкёсене, тневникёсене, паллăрах çырăвёсене, токкумёнтсене кёртсе çавăнтах вёсене хак парса пымалла. Паллăрах асаилўсем те çак уйрăмах кёрёç.

Çакна та асăнма тивёç пулё тетёп ку статйара. Вилнё писсаттёлсене аса илтерекен йапала тесе унăн кашни кирлё мар хут таткине, мёп-пур çырўне, йапалисене (ђёлёмне, перине) пухса ку арххива кёртсе пырас çук. Вёреннё ђухне те поета пытарнă тăприне ђаваласа ларса вёренмелле тăвас мар.

Хусанкай поет авă хăйён «Слакпуç масарё» йатлă сăввинђе К. В. Иванăв пирки.

«Пайтах етемшён
Хаклă çак тăпра»

тет. Ăна епёр, паллах, хёресё-кăлканё мёнё арххива сётёрсе килсе хурас çук. Мёншён тесен тăпри пирки те епёр, поеђён тупăкё çине ларса, поетне тупа туса сăмах парса:

«Сана пытарнă
Слакпуç масарё
Таса **Мекке** пек вырăн
Ђăваша»

тесе, поетсене, пётём ђăваш халăхне унта пуççапма çўреме ђёнес çук, Хусанкайла («Мекке вырăн Слакпуçне» асăннă май—кăçал екскурççине кайсассăн Шăпђăк й-ш К. В. Иванов пуç шăммине Шупашкара илсе килнё терё пулас. Хаклă тăпри пушанса йулнă иккен!)

Вилтăпри кăлкансемсёрех маттериалсем пирён сахал пулас çук. Ђăвашсен малтанхи писсаттёлёсен Феотăрăвăн («Арçури» авттăрён), Тайăр Тимккин, К. В. Ивановăн т. ыт. револђутси хыççăн ёçленё ђăваш литтераттуринђе палăрма ёлкёрнё йулташсен маттериалёсем пурри паллах. Çеçпёл М. Тал-Мăрса, Ахах, Кели, Иссайёв М., Ехмин маттериалёсем пуррине епё хам та лайăхах пёлетёп. Çак статйана çырса ларнă вăхăтрах акă Канаш районёнђен Н. Волккăв уђитлёрен çыру илтём. Унта вăл Çеçпёл М. Шăхасанта вёреннё ђухне кăларнă «Звездочка» шурналне тупни çинђен, ку шурнала кёнё Çеçпёл М. сăввисемпе статйисем çинђен çырат. 1917-мёш çулсенђе Çеçпёл поет мёнле çырни, политтёк тёлёшёпе мёнле сывлани пирёншён пађах интереслё мар тейейменёр. Çеçпёлён çавнашкал Тетёç çеминаринђе вёреннё ђух кăларса тăнă шурналсем пулма кирлё. Ăна та тупса парса «Алђманаха» вулакансем пире «Литарххива» пуйанлатма пулăшёç.

«Литарххива» пиђетленекен маттериалсене питё лайăх тишкёрсе вуласа пыма сёнетпёр. Вăхăтра шайрăксене, çитменлёхсене, мён килёшнине т. ыт. те пёлтерсе пырасса шанса,ёçе тытăнатпăр.

Çеçпĕл Мишшин усранă маттериалĕсем.

Çеçпĕл пирĕн—револютси хыççăнах палăрса тухнă талантлă револютсиллĕ поет. Çак хастарлă çамрăк поетăн проиветенийĕсем ђылайĕшĕ пиђеглепсĕмесĕр йулнине тата усранайманнине те епĕр пĕлетпĕр. Унăн пиокрафийĕ те пайан кунђен çырăнман. Пултаруллăхĕ пирки те епĕр çителĕклĕ сўтсе-йавса сăмах татман. Ун пирки литтераттур тĕлĕшпе ĕçлекен комуниссем хушшинђех икĕ тĕрлĕ хаклакансем пулђĕç.

Çеçпĕл М. сăввисен кĕнеки тухсассăн «Халăха вĕрентес ĕç» шурналта пĕр К. Т. тесе алă пуснă йулташ Çеçпĕлĕн сăввисене пĕтĕмĕшпех шовинисла упатăђниђђĕстваллă сăвăсем, кĕнекине кăларма та кирлĕ пулман тенĕ пекех çырнăђђĕ. Ку статйа хыçне ретаксирен пĕр сăмах та хушса каламан, ку ретаксин хаклавĕ те К. Т. йулташăннипе пĕр иккенне кăтартат. (Ретактăрĕ ун ђухне Алентей йулташђĕ пулас)..

Нумай пулмаст «Канаш» хаçатра **И. Куçнетсовăн** Çеçпĕл Мишши çинђен пађах урăхла хаклавлă икĕ статйи тухрĕç. (Унрам кĕнекере те тухаççĕ вĕсем). Унта вăл Çеçпĕл М. ђăн-ђăн револютсиллĕ поет иккенне кăтартса татăклăнах хак парат.

Тепĕр йенђен тата халђхи вăхăтра Çеçпĕл Мишшине ђăваш литтераттуринђе кулаксен, натсионалисăмла пуршуаçин акĕнђĕсем пулса тăракан Хусанкайсем хăйсен йалавĕ туса хума тăрăшни те сисĕнет. Çеçпĕле вĕсем хăйсен картишне тăратасшăн. Анђах та, ђĕсем ăна нийепле те хупласа туса çитерейкеççĕ. Паллах, епĕр Çеçпĕле вĕсемпе пĕр йĕр çине тăратса пахаламастпăр. Çав хушăрах ăна пролеттари поеђĕ, пĕтĕмĕшпех пирĕн тесе йышăнмастпăр. Унăн йăнăшĕсене хавшак йенĕсене те лайăхах курса хак хуратпăр.

Çеçпĕл Мишши пултарулăхне çителĕклĕ хак хуманнисем тата ăна хăйсен йалавĕ тума пăхакансем те автăрăн «тĕнђе курман» происветенисене, т. ыт. асăнаççĕ. Хăйсен хаклавне вĕсем çĕнĕ маттериалсемпе çирĕплетесшĕн. Ђăваш ђĕлхине, литтератуурине вĕрентекенсем те Ç. М. пиђеглемен маттериалĕсемпе интересленеççĕ, пиокрафине ыйтса çырусем çыраççĕ.

Ђăнах та, Çеçпĕл Мишшин происветенисем пит сахал пиђеглепђĕç. Пĕр сăвă кĕнеки кăна тухрĕ. Çеçпĕл пурнăçĕ çинђен çырнă маттерйалсем те сахалран та сахал. Çеçпĕл М. кĕнекине ретаксиленĕ май епĕ çырнă кĕске умсăмахпа асăрхаттарнисем, «Ĕçлекенсен сасси» (Мускавра тухса тăнă) шурналта «Çамрăк хресђен» хаçатра, «Сунтал» шурналта çырнă статйасем тата И. Куçнетсовăн статйисем кăна темелле. Хумма Çеменĕпе Кели çырнисем пулма кирлĕ. Маттерйалсем усранман, тата пиђеге тухман пирки Çеçпĕле епĕр çителĕклĕ пĕлместпĕр те. Мĕнле условире вăл ўснĕ? Литтераттур çулĕ çине мĕнле тухнă? Мĕнле меттăгна литтераттур ĕçне верĕнсе ĕçлесе пынă? Мускавра темле курсра пулнă пек калаççĕ—хăçан, мĕнле курсра пулнă? Харккăвра хуńĕксен шкулĕнђе нумай вĕреннĕ-и? Пиђетленмен руккописĕсем нумай-и, ăçта вĕсем? Мĕн пирки тĕрмере ларнă? Сывлăх нађаррипе Крыма кайнăскер йепле тайпа Хĕрлĕ çара лекнĕ? Мĕншĕн çакăнса вилнĕ? Çак ыйтусем çине татăклă ответ параймастпăр. Пире интереслекен ыйтусем тата та сахал мар. Йулнă доккумĕнтсем, происветенийĕсем, унпа çывăх пулнă йулташĕсен çырăвĕсем

пире Çеçпĕл пурнăçĕн хăшпĕр йенĕсене, асăннă ыйтусем тăрăх та ҫылайах çутатса пама пултараççĕ.

Анҫах, ку статйара та çакăн çинҫен асăнмасăр хăварас килмест. Çеçпĕл просветенийĕ енҫен киле йулнисем пĕтĕмĕшпе пĕрех вута, йе урăх ирсĕртерех çĕре те кайнă.

Украйнăра çÿренĕ ҫухнехи маттерйалĕсем, йулташĕ украйинĕс Покрышҫă Хветĕрĕ пĕлтернĕ тăрăх, çак'нса вилнĕ хыççăн ырăнти атминистратсиллĕ оркан аллине лекнĕ. (Ҫерникăври арххива, атминистратсиллĕ оркăнсене темиçе çыру йарса пăхнă пулин те, вĕсем тупăнмареç. Вĕсене çине тăрсах тупма тăрăшмалла.

Халĕ акă алҫманаха Çеçпĕлĕн пирĕн алла лекнĕ хăшпĕр маттериалĕсене кĕртетпĕр.

1. Тневникĕн пĕр пайĕ—Çеçпĕлĕн кĕрешÿ çулне çутатса памалла токкумĕнт пулма кирлĕ. Кун тăрăх епĕр Çеçпĕл Мишши хăйĕн паллăрах утăмĕсем пирки тневникĕ çырса пынине куратпăр.

Çеçпĕл М. ҫан-ҫăнах комуниссен парттинҫе тăрса, Ҫăваш Опĕçтăвком ҫлене пулса ĕçленине, хăй çамрăк, оппăтсăртарах пулнине, мĕнле условире ĕçленине куратпăр.

2. Ака çинҫе» йатлă сăвви, вăл «Канаш» хаçата пиҫегленнĕ, анҫах спорнĕке кĕмен.

3. Шăхасанта вĕреннĕ ҫухне Çеçпĕл Мишши пуçарнипе вĕренекенсем алăпа çырса кăларса тăнă шурнал хуплашкин ÿкерҫĕкĕ—Ку Çеçпĕл Мишшин хутошнĕк пулнине, класçĕк писсаттĕлсене вулама йуратнине кăтартат. Йултăшĕсем каланă тăрăх—вăл шкулта вуламан кĕнеке хăварман, хăйĕн те кĕнеке нумай пулнă. Тĕрмере ларнă ҫухне те питĕ кĕнеке ыйтатҫĕ. (Епĕ ун ҫухне кĕнеке куçаракан комисçире Шупашкарта ĕçлекелерĕм).

4. Украйнăра çÿренĕ ҫухне плокнот çине çыркаланă хут таткисем. Кунта Çеçпĕл Мишши Украйнăра ҫухне те ҫăвашсен автономийĕнҫи пурнăçпа, пуринҫен ытла литтераттур, пиҫет ĕçĕпе питĕ интересленнине куратпăр. Пĕр саметкинҫе («Украйнă» тесе пуçланат) Мишша тневник çырнă ҫухнехинҫен ҫылай улшăннине, шанҫăка çухатнă çын виçипе виçсе çырнине сисетпĕр. Украйнăра махносем вăхăтĕнҫе татăк çăкăр тупасси, ҫан та хĕн пулнă ĕнтĕ. Анҫах ăна малалла асăнакан çыру пире урăххине те кăтартат.

5. **Çеçпĕл М.** Шупашкара, **А. Ластăҫкĕн** патне çырнă çыру. Кунта та Мишша ҫăваш çĕршывĕшĕн çуннине, Хĕрлĕ çарта пулнине, çар ҫаçĕсенҫе çитменлĕхсем пуррипе ÿпкелешнине, хăй утса тухнă угма çулĕ (кун-çулĕ) çине çавăрăнса пăхса, хăйĕн йăнăшĕсене туйса илме хăтланнине куратпăр. Тăвата уйăх хушши хĕрлĕ салтаксемпе никампа та ҫĕререн каласманни, çар ҫаçĕн хăшпĕр çитменлĕхĕсем тăрăхах çарти йĕркесем пирки тĕрĕс мар вывăт туса калани те («вăрăпа кăна пурăнаççĕ» тени) Çеçпĕл Мишши ку вăхăталла ҫылай улшăнннине, шанҫăксăрлăх çулĕ çине сулăннине кăтартаççĕ. Çак çыру хыççăнах вăл çартан майласа тухнине кăтартакан хут пур (комисçи çарта тытма йурăхсăр тенĕ). Кайран Покрышҫă Хĕветĕрĕ патне, Остĕр районне йала пурăнма куçнă.

Йалта мĕнле пурăнни, ăна мĕн мăйкăç патне илсе çитерни çинҫен урăх ҫухне. ытти токкумĕнтсем тупăнса пынă май çырăпăр. Халĕ асăнна токкумĕнтсемпе паллашар-ха.

Çеçпĕл Мишши шкулти шурнал ретактăрĕ.

Шăхасанти второкласни шкулта вĕреннĕ ђухне Çеçпĕл Мишши хăйĕн йулташсемпе алăпа çырса шурналсем кăларнă.

Унта вăл ретактăрĕ пулнă. Тата Тетĕçри çеминарире те çавах шурнал кăларса тăнă. Ку шурналсем çине хăй вырăсла та ђăвашла та сăвăсем çырса кĕртнĕ. Шурналăн 1-мĕш № малтанхи хуплашкин ӳкерђĕкĕпе çеç паллашар. Ун тăрăх епĕр Çеçпĕл Мишши хутошнĕк пулнине карттинсем ӳкернине тата пысăк писсаттĕлсен сођинениййĕсене вуланине, хăй пиплиоттĕкĕнђен йулташĕсене вулама парса тăнине куратпăр.

1-ый год издания.

ЗВЕЗДОЧКА

1917 год
№ 1

Иллюстрированный журнал литературы и школьной жизни

Сотрудникам, присылающим статьи для напечатания в журнале, редакция награждает рисунками, хорошими картинками **Мих. Кузьмина.**

Главная контора и редакция—3-й класс.

Открыта подписка на журнал „Звездочка“ 1917 год с приложением 10 картинок школьных художников, выходит еженедельно (32 № за учеб. год) с рисунками школьных художников.

Подписная цена: „Зв“ со всеми приложениями: В III классе без доставки в школу 2 л. бумаги, с доставкой 2,5 листа писчей бумаги в месяц. В год 10 копеек или 15 листов бумаги. С пересылкой во все места школы 10 коп. в год. Допускается льгота и рассрочка платежа. При подписке 3 копейки или 2 листа бумаги, остальные после.

ОБЪЯВЛЕНИЕ

Нужен переписчик хорошо и чисто пишущий.

Цена по соглашениям.

Адрес: **III класс.**

Нужен почтальон для редакции журнала «Звездочка». Оклад приличный.

Адрес: **III класс.**

Предлагаю любителям чтения книг из собственной библиотеки собр. сочинений М. Горького, С. Надсона, Мамина - Сибиряка, Сервантеса и др.

Журнал «Вестник самообразования».

М. КУЗЬМИН

АКА ÇИНЂЕ

Кăвак-çут кăваккăн, кăвак кантăк витĕр
Сарă сĕтел урлă урайне ўксен—
Атте „тăрах“, терĕ, ыйăхран вăрантăм,
Карăнса еп тăтăм ăш тўшек çинђен.

Кăвак кантăк витĕр урамалла пăхрăм
Çўлте кăвак пĕлĕтсем ђупаççĕ.
Хăвăрт сиксе тăтăм, тумлантăм та тухрăм.
Çăл шывпе пит çурăм. Усăлђĕ пит-куç.

Аттесем кĕлетре тыр вăрлăх тийеççĕ
Епĕ те тытса кўлтĕм ака-пуç.
Акă аттепе тухса кайрăмăр акана
Кăриклатса йулђĕ вырăсла хапха...

Пĕр тĕле çитсессĕн кăвак кантăк витĕр,
Савнă сарă хĕр пăхрĕ, йăл-л! кулђĕ.
Ђĕре хăвăрт сикрĕ, иртсе кайас пулђĕ
Савни кантăк витĕр çаплах пăхса йулђĕ

Крымра ђух çырса пынисенђен.

Тинĕс ахăрса карĕ. Хўме пек, хўме пек хумĕсем шавласа çыран хĕрне вăйлăн пырса çапăна-çапăна саланаççĕ. Тинĕс, ес вăйлă. Ху хумусен вăйлă хăйуллă йурри сассипе ман ђĕрене вăй кўрт. Ђĕре çунтăр. Ђĕлхе вĕçне кăварлă сăмахсем килђђĕр. Вара епĕ хам ђăваш çĕрне кайсан, хам вăйа, ђĕре вăйне ђăваш çĕрне парăп. Кăварлă сăмахăмпа çамрăк ђунсене вăратăп. Пурте „тĕнђе курђђăр“ Çут тĕнђе илемне пĕлђђĕр. Евпаттори.

Кивви çĕтет, çĕрсе çĕтет кивви
Ђĕре кĕтет хĕвеллĕ ĕмĕре.
Ыран килес çĕн кун йурри кĕвви
Ман ђĕрене çапла килсе тивет.

Çĕр иртсен—ирхи кун хĕвел тухăç йенђен (йенђен) уйартса — сывлăма шăрçа пек шăратса кĕмĕл саслăн вилсен,—ман йуратнă çĕршыв вилĕмрен ђĕрĕлни, вăл асаплă хĕрес çумĕнђен çăлăнни пур йенђен те сават куçăма.
16-VI—21 ç. Евпаттори

Украина! Мĕн ђул еп сан çинђен пĕђĕк ђух шухăплаттăмђĕ, сана курас килеђђĕ, сан çыннусемпе курса калаçас килетђĕ. Хаљ куртăм ĕнтĕ. Ех, Украина, еп выçă ђух, пĕр çын пĕр татăк памарĕ, пĕр ыр сăмах каламарĕ. Çĕр шывăм! Хаљ пĕлтĕм, сана йуратма пĕлмен епĕр Çавăнпа сан хўттў айĕнђен саланса пĕтмелле пулђĕ пуљ.

Дер. Крихаево, Черниг. губ.
3/III—22 г

Киев. 15 дек. 1921 г.

Тов. Ласточкин.

Так хочется узнать, как ты живешь, где работаешь. Несколько писем написал в Чебоксары, но никто не ответил. Ничего не знаю о Чебоксарах, каково истинное положение вещей, напиши т. Л., не поленись. Хочется надеяться, что ты не будешь сердиться, что я так просто обращаюсь в тебе. Ведь когда то мы были так близки. Никто мне не был так близок, как ты, никто не принимал во мне столько участия. Думаю, что ты и теперь такой-же. Прости еще мне—я забыл твое имя и отчество, Антон Семенович или наоборот т. Ласточкин, умоляю тебя напиши мне обо всем. Не к кому, кроме тебя, обратиться с этой просьбой.

Какие и кто такие теперь члены Обисполкома. Где находится Григорий Иванович, Сергей Андреевич (Коричев) и т. Шевле. Как живет Дан. Семенович. Если можешь сообщи, где Токсин и Александр Иванович. Хочется узнать издается ли газета „Канаш" и как его адрес. Какие чувашские журналы издаются, или же по случаю этого бедствия (голода Н. В.) замерла вся культурная жизнь. Существует ли теперь редакционно—переводческая комиссия (как ее адрес и кто председателем). Если «Канаш» существует, кто редактор. Так много вопросов задаю тебе, тов. Ласточкин, но умоляю тебя не оставить этих строк без ответа.

Я с августа м-ца нахожусь в Красной армии. Раздет, разут я и голодаю так же, как и вы, служу рассыльным при канцелярии одного военого учреждения. Подметаю и мою пол, рублю дрова, топлю печи, бегаю целый день с пакетами, как собака. Так изо дня в день и не с кем поговорить. Стосковался по книгам Так далек тепер от меня мир искусства. Кажется воспитание сказалось: я вышел в жизнь совершенно не способным к ней. Здесь кругом воровство, живут только воровством. Никогда я не предполагал, что так обстоят дела в военных ведомствах.

Вот уже четыре м-ца, как я поступил в Красную армию и за это время я ни с кем не говорил, разве только о самом необходимом. Больше молчу. Кажется, что и говорить разучусь скоро.

Тов. Ласточкин, буду надеяться, что ты напишешь мне. Как был бы я тебе благодарен.

Твой Миша.

Ношу фамилию Сеспель, а не Кузьмин как прежде. Пусть хоть фамилие напоминает мне родину, думаю себе.

г. Киев.

Окружной склад т/т материалов Управления Связи Кр. арм. Киевского воен. Округа. Лабораторная улица № 7

Красноармейцу команды склада Михаилу Кузьмичу Сеспель

ДНЕВНИК 1920 г.*).

10 ноября.

Какое невыразимое, скверное самочувствие! Я—весь в раздражении и бессмысленное существо. Невольно разбираю какие условия окружают мою материальную жизнь. Десятилетняя болезнь в конец разрушает мой организм. Скоро я буду накануне смерти. Каково это чувствовать, когда хочется жить художественной жизнью, что либо оставить от своего существования чувашской национальной культуре. Более месяца не был в бане и не менял белья. От меня несет ужасной вонью. Во всем теле невыразимый зуд. По телу ползают вши. Эти вши они одни могут управлять движением моего мышления, от одних этих вшей зависит весь душевный мир, душевный импульс. Во время работы в учреждении не имею возможность раздеться—нет рубашки, а которая на теле, вся истлена. Тесная квартира вся забросана хламом. Спим с братом на голых досках поедаемые клопами. Хожу в рванной одежде, а если это может являться причиной того или иного отношения ко мне окружающих людей! Ужасно! Какое избитое интеллигентское слово—слово ужасное—для выражения чувств, но это слово от всего моего организма, от каждого атома моего тела. Смотрю и вижу, что кругом такие же ответственные работники как я, живут в хороших квартирах, одеваются в теплые шубы, катаются на лошадях и держат себя так, словом они богом поставлены на занимаемые ими должности. Тысячи чертей! Неужели я наивно ошибался до сих пор, думая, что коммунист должен жертвовать для общества всем своим спокойным существованием, своим личным благосостоянием. Я знаю, глубоко уверен, что в данный момент достижение личной материальной обеспеченности справедливыми путями—абсурд, потому я ненавижу, презираю всеми силами души всех своих партийных товарищей одетых в теплые шубы, сапоги и т. д. и выглядывающих с противным буржуазно-дворянским достоинством. Когда миллионы красноармейцев терпят холод и голод, неужели я вправе пользоваться материальным довольствием. Нет! тысячу раз нет, но не вижу я ни одного идейного работника, понимающего так эту истину. Было бы легко мне переносить тяжелые условия существования, если бы все теперь претендующие на название идейных работников жили в таких же условиях. А теперь как мне тяжело! Ужасно! Теперь я знаю силу факта—зуд. Он может управлять всем существом человека (какая смешная ребяческая философия), но изменить условия существования возможно только преступлением. Презираю, ненавижу преступников.

11 ноября—четверг.

Сегодня я избран членом Областного Исполнительного Комитета Советов РК и К депутатов ЧАО. Теперь я буду терпеливо переносить физические страдания от тяжелых условий существования. Хочу работать с удвоенной энергией. Хочу я жить! Хочу бессмертия!

---

*) Тневникăн хăшпĕр тĕлте ăнланмалла мар, ҫĕлхе тĕлĕшĕнҫен тĕрĕсех мар вырăнсем те пур. Вĕсене авттăр ҫырнă пекех хăваратпăр.

12 ноября.

Пред новым для меня великим делом отправления пролетарского правосудия, когда мне предстоит стать во главе Ревтрибунала—меча классового правосудия, направлять по верной цели удары карающей руки пролетариата,—заползает змеей в мою душу неуверенность. Что я если не справлюсь с возложенными на меня громадными задачами! Что, если я не оправдаю оказанной мне партией доверия?

Коля (Барабанов) своими мудровствованиями сеет в моей душе безнадежье. „Исполком Советов поручил это дело тебе случайно за отсутствием достойных людей, вовсе не оттого, что к тебе кто-либо питает доверие..." Может быть он прав? Иногда мне кажется, что его слова не представляют сомнения. Они то являются причиной, рождающей во мне беспокойство. Коля доказывает, что я бездарен, никуда не годен. Как не хочется чтобы в эти дни, когда я пред великим делом больше всего нуждаюсь в товарищеской поддержке—не вызывали во мне безнадежность, колебаний. Нет, я коммунист! Для коммуниста нет невозможного. А все таки как я начну работу и как закончится она—моя деятельность—на поприще пролетарской юстиции.

12 ноября.

Как преступо в эти дни множества работы отвлекаться мальчишескими чувствами, но нет-нет и захочется отдаться мечтам, личным переживаниям. Смешны для меня сентиментальности, для советского работника и коммуниста они преступны. Между тем как тисками истомы иногдя нежданной сжимается сердце. хочется мечтать, мечтать, а я... так неотвязчив ея образ, такой нежный, привлекательный. Хочется думать и думать о ней без конца. Бессознательный восторг рождает ея милый образ и желание хоть в мечтах почувствовать сладость жгучести ее взгляда. Но я забываю, что мое тело скоро может стать трупом, что я гнию, почему неоправдываемая дерзость с моей стороны мечтать о счастливо-солнечном мгле блаженно-жгучих мук под ея взглядом, в которых бы горели огни сочувствия, желания меня...

Какая космическая трагедия—сознавать, когда хочется чтобы сердце звучало миллионами вечно-блаженных мелодий великого восторженного счастья строительства, борьбы, счастья от любимой женщины—сознавать, что тело твое разлагается как у трупа и нечем его остановить...

18—четверг.

Прошлой ночью мне исполнилось 21 лет. Хочется без конца размышлять о пройденном пути. Двадцать один лет тому назад я появился на свет, как много времени прошло с тех пор, как я родился в бедной в маленькой избушке; чего-чего не было на свете с тех пор: даже избушки той не осталось следа; сколько пережито, как мало сделано. Ухожу мыслями в прошлое... Мне двадцать один год. Двадцать один год тому назад в такую же ненастную осеннюю ночь я родился среди крестьянской нужды, горя... и мне кажется странным все начало.

Прошлая жизнь моя разделяется на 3 периода—1-ый до 1911 года июня м-ца, протекавшее хотя и в ужасной бедности, но светлое, яркое детство. 2-ой же период—начавшийся жестоким ударом, ужасной драмой в семейней жизни, потерей отца—период мрачный и самый мрачный в моей жизни, полный материаль-

ного и духовного гнета буржуазного общества—закончил я 1918 год началом третьего периода, вступлением моею в компартию, когда я почувствовал себя так вольным, сильным, свободным от всех семейных, религиозных и общественных предрассудков, вместе с пролетариатом я почувствовал себя властелином жизни, С тех пор мое сознание ясно. Мысли могучи—я—коммунист!

Ч леном Исполкома своей области, председателем Революционного Трибунала, деятелем пролетарской юстиции вступаю в 22 год своей жизни. Карьеризма, бесчестности нет в моей натуре. Надеюсь—никогда не замарать звания коммуниста, но пожелаю себя вступая в 22-ой год—больше **смелости** в жизни! Обещаю себе встретить и 23-ий 4-ое ноября 1921 года достойным коммунистом.

(*Малалли çитес кĕнекере*)

Вулакан! Аљманахра писсаттĕлсен алçырăвĕсене пухса пырасси çинђен хускатнă ыйту тăрăх хăвăн шухăшна пĕлтер. Хăвăн патăнта, йе йулташусенђе Çеçпĕл Мишшин йе ытти писсаттĕлсемпе поетсен алçырăвĕсем пулсассăн, вĕсене «Трактăр» аљманах ретаксине йама ыйтатпăр. Кам писсаттĕлсен пурнăçĕпе вĕсем ĕçлени çинђен пĕлет—асаилўсем, статйасем çырăр.

Писсаттĕлсен маттериалĕсене пухни литтераттур ĕçне вĕренме пулăшат. Ку пĕр-ик çын çеç тумалла ĕç мар. Çавăнпа та ку ĕçе вулакан йулташсен, пĕтĕм ĕçхалăх массин хутшăнмаллах.

РЕТКОЛЛЕКИ: А. Солăттăв, В. Краснов-Асли, Н. Ваçанкка И. Илларионăв—Йăван Муђи, Мĕтри Ваçлейĕ.

ТУПМАЛЛИ

Стр.

1. А. СОЛĂТТĂВ—Умсăмах 3
2. В. КРАСНОВ-АСЛИ—«Тăвалла». *Роман* 5
3. ЙЕХРИМ ИВАНĔ—Ватă шахтор. *Сăвă* 32
4. АЛАКĔР ВАÇЛЕЙĔ—Комсомол. *Сăвă* 34
5. Н. ПАТМАН—Воплă çинђен. *Калав* 37
6. А ПЕТТОКИ—Çирĕм иккĕ. *Поемă* 64
7. М. ЙУМАН—Колхос новеллисем:
   - Ĕç уççи 75
   - Йукйел упăтисем 79
   - Çилус нўхрепĕ 84
   - Алă хыпанĕ 88
8. Н. ПИКТЕМИР—Икĕ тимрĕç, пĕр така. *Сăвă* 93
9. В. АХТУПАЙ—Пиђет лаççинђе. *Сăвă* 94
10. НАМАНКАН—Ĕçхалăха ђараймăн, пуршуаçи. *Сăвă* 95

ПЙЕССĂСЕМ

11. Ç. ЙАЛАВИН—Савăт сасси 97

ОЂЂЕРКСЕМ

12. И. ТУМИЛИН—Самойетсем патенђе . . . . . .

ТЕОРИПЕ КРИТТĔККĂ

Ç. ЙАЛАВИН—Иссайĕв Мĕтри çинђен 128

14. КЕЛИ—Çилапĕкпе тонĕк çинђен тавлашни мĕнпе сўтĕлсе тухрĕ 145

ЛИТАРХИВĔ

15. Н. ВАÇАНККА—
   - а) Писсаттĕлсен алçырăвĕсене пухса пырасси. 149
   - у) Çеçпĕл Мишшин усраннă хăшпĕр маттериалĕсем . .
   - ы) Çеçпĕл М.—шкулти шурнал ретактăрĕ, «Ака çинђ » сăвă, Крымра ђух çырса панисем, А. Ластăђкин патне çырнă çыру, 1920-мĕш çулхи тиевникĕн пĕр пайĕ 157